К 83.39(=Чув)6
К78
Ч-41441


Г.В. Краснов

ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ ВĂРÇĂ ОЧЕРКĔСЕМ



Национальная библиотека ЧР
4-041441

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока



Обязат. экз.
К 88.3.39(=4Чув)
К 78

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙĔН
ВĔРЕНТӲ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
ФЕДЕРАЦИН ВĔРЕНТӲ АГЕНТСТВИ
«И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ»
профессиллĕ аслă пĕлӳ паракан федераллă патшалăх вĕрентӳ учрежденийĕ

Г.В. Краснов


ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИНЧИ ВĂРҪĂ ОЧЕРКĔСЕМ

Шупашкар 2007

ББК Ш 44(2) (= 635,1) {6}* 44х201
К 78

Рецензенты:
д-р филол. наук, профессор Г.И. Федоров
канд. филол. наук, доцент А.И. Мефодьев

Печатается по решению Ученого совета Чувашского государственного университета имени И.Н. Ульянова



Краснов Г.В.

К 78 Очерки о войне в чувашской литературе. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2007. – 282 с.

ISBN 978-5-7677-1044-9

Рассмотрены художественные очерки чувашских писателей о Великой Отечественной войне. Прослеживается развитие жанра очерка в чувашской литературе в предвоенные, военные годы. Особое внимание уделено очеркам о тружениках тыла. Раскрыты особенности чувашского очерка о войне.

Для научных работников, аспирантов, преподавателей, студентов факультетов журналистики и филологии.

Научный редактор: профессор А.П. Данилов

Ч – 41441
НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ISBN 978-5-7677-1044-9

ББК Ш 44(2) (= 635.1) {6}* 44х201
© Краснов Г.В., 2007

КӲРТĔМ

Литература тĕпчевĕнче очерк жанрĕн теорийĕ тата жанр аталанăвĕн историйĕ çинчен çырнă ĕçсем йышлансах пыраççĕ. Тĕслĕхрен, литература теоретикĕсем Р. Уэллекпа О. Уоррен каланă пек пулсан, жанр вăл литература произведенийĕсен ушкăнĕ, çав ушкăнра вара вĕсен тулаш енне (калăпăшне, структурине) тата «ăшчиккине» (кăмăлтуйăм, вырăнĕ-шухăшĕ, тепĕр майлăрах каласан — теми тата вулаканĕсем) теори енчен палăртаççĕ.

Литература аталанăвĕн историйĕ çакна кăтартса парать: уйрăм жанр шăпи общество пурнăçĕпе тата илемлĕ литературăн эстетикипе тачă çыхăннă; çав жанр уйрăм тапхăрти литература процесĕнче мĕнле вырăн йышăнасси вара унăн шалти структуринчен, тĕллевĕсенчен тата вăл общество пулăмĕсемпе еплерех çыхăнма пултарнинчен килет. Çакна та асăрхаттармалла: жанр литература аталанăвĕн кашни çĕнĕ тапхăрĕнчех улшăнса çĕнелет, çакă çав тапхăрта çуралнă кашни произведенирех палăрма пултарать. Çыравçăсем хăйсем те жанра кашни хăй пултарнă таран çĕнетеççĕ, çав хушăрах литератор пултарулăхне те пурнăçран уйăрма çук. Кунсăр пуçне, тесе палăртать В.Е. Хализев литература тĕпчевçи, «жанрсен истори калăпăшĕ те тĕрлĕрен. Пĕрисене сăмах искусствин историйĕн пĕтĕм талккăшĕпех асăрхатпăр (тĕслĕхрен, ĕмĕрĕмĕр чĕрĕ юптарăва авалхи Греци Эзопĕнчен тытăнса паянхи С.В. Михалков пултарулăхĕнче куратпăр); теприсем историн уйрăм тапхăрĕсемпе çеç çыхăннă (вăтам ĕмĕрсенчи литургиллĕ драма). Тепĕр майлă каласан, жанрсем е кирек хăш вăхăтпа çыхăннă нумай енлĕ, е пĕр-пĕр вырăнпа, вăхăтпа çыхăннисем çеç пулаççĕ»[1].

Вĕçĕнчисен йышне шăпах литературăн чи «ватă» жанрĕсен шутĕнчи илемлĕ очерка та кĕртме пулать. Унăн ата-

ланăвĕ пурнăçра çĕнĕрен çуралса пыракан, халиччен пачах тĕпчемен пулăмсемпе тачă çыхăннă, жанр историйĕ вара пурнăçăн çĕнĕ енĕсене тĕпчес ĕçре тĕп вырăн йышăннинне кăтартса парать.

Очерк жанрĕн историйĕпе теорине тĕпчекенсем вăл яланах пĕр пек аталанса пыманнине, тапхăрăн-тапхăрăн вăйланнине е пусăрăннине палăртаççĕ. Аталанăвĕ çĕкленĕ-çĕклене кайни ялан тенĕ пекех обществăпа политикăллă тата социаллă пулăмсем çивĕчленнипе, хĕрӳленнипе пĕр килсе пынă.

Очеркпа унăн тĕсĕсен теорийĕн проблемине, вăл еплерех çуралса аталаннине нумай-нумай наука ĕçĕсенче тĕпченĕ, доктор е кандидат диссертацийĕсем çырнă. Паллăраххисем çаксем: В.А. Богдановăн «Очерк жанрĕн проблеми 1840—1860 çулсенчи демократилле литературăра» (1967 ç.); Н.М.Глушковăн «Вырăс совет очеркĕ. Жанр уйрăмлăхĕ. Тĕсĕсем. Историйĕн ыйтăвĕсем» (1972 ç.) т.ыт.те.

Вĕсенчен очерк жанрне чи тĕплĕн пăхса тухнисен шутне, паллах, Н.М. Глушков ĕçне кĕртме тивет. Вăл 1917 çулчченхи тата совет саманинчи очеркистикăна тимлĕн тишкерет, систематизацилет, çĕнĕ шухăшсем чылай кĕртет. Çав хушăрах тавлашуллă ыйтусем пуррине те пытармасть.

Маларахри ĕçсенчен очерк тата унăн тĕсĕсен теорине аталантарма М. Горький И. Жига патне 1929 çулхи августăн 15-мĕшĕнче янă çыру, çавăн пекех И. Жигăн, Б. Агаповăн статйисем пысăк пулăшу панине палăртмалла. Ку ĕçре В. Овечкин, Е. Журбина, М. Щеглов, М. Черепахов, В. Канторович, В. Алексеев тата ыттисен тӳпи те пысăк.

Илемлĕ очеркра чăн пулни тĕп вырăн йышăнать текен шухăш ăна М. Горький ырланă хыççăн анлăн сарăлать. XX ĕмĕрĕн малтанхи вунă çуллăхĕсенче вырăс тата ытти нацисен литературисенче те очерк чăн малтанах унăн витĕмĕпе аталанса пырать. М. Горький очерка «Наши достижения» журналта, статьясемпе рецензисенче, çырусенче вăйлă пропагандăланă. Ку вăл XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсемшĕн чăнах та питĕ кирлĕ пулнă. «Наши достижения» журнала мĕнле çырмалли çинчен» ятлă статйинче М. Горький журнала мĕнлерех очерксем кирли çинчен акă мĕнле ăнлантарать: «Пире чи кирли — чĕрĕ очерк, вăл ĕненме тата ăнланма çăмăл фактсемпе пуян пултăр. Очерк

шăнăрĕ, май килнĕ таран, яланах чĕрĕ çынсем пулмалла... Пирĕн илемлĕ литературăн капăрлăхĕнчен ирĕклетнĕ, чăн пулнă, хĕстерсе якатнă, çăмăллатнă очерксем çырмалла».[2] Писатель очерк çине çапла пăхни ун чухнехи пурнăçпа тӳрремӗнех çыхăннă. Вулакансен анлă аудиторийĕпе калаçнă май, М. Горькин вулакансенчен чылайăшĕ сахал вĕреннине шута илме тивнĕ. Çамрăк литератор-очеркистсен задачине паллă писатель «вĕсен ĕçĕ пирĕн тавралăх чатăрĕ çинчи пылчăка тата иртнĕ ĕмĕрсен тусанне çуса тасатассинче»[3] курнă.

М. Горький очеркист ĕçне питĕ хисепленĕ, очерк çырассине вăл пысăк та япаллă ĕç тесе шутланă. Çакна вăл хăйĕн талантлă очеркла произведенийĕсемпе кăтартса панă. А.М. Шумский тĕпчевçĕ, М. Горький-очеркист пултарулăхне хакланӑ май, çапла çырнă: «Хăйĕн очеркĕсемпе, вăл шутланă пек, вулакана пурне те кăсăклантӑракан хыпар çеç пĕлтермест, пирĕн пурнăçри киввипе çĕнни çинчен хăй мĕн шутланине нимĕн пытармасăр калать. Вăл пурнăçпа уйрăлми çыхăннă хăй сăнлакан çынсен хăтланăвĕсене ырлать, çитменлĕхĕсемшĕн вĕсене критиклет, сĕнӳсем парать, хушать, çирĕпрех ыйтать. Хăйĕн шухăшĕсемпе туйăмĕсене вăл автор каланисенче пĕлтерет, унăн шухăшĕсемпе туйăмĕсем яланах çĕкленчĕклĕ те пăлханчăклă, вĕсем хаваслăхпа, хăпартланупа, тĕлĕннипе, хушăран е тарăхнипе, е тунсăхпа, е хуйхăпа тулса ларнă».[4]

Литература тĕпчевçисенчен ытларахăшĕ очерка илемлĕ литература жанрĕсен шутне кĕртет, çавăнпа вăл илемлĕ литература произведенийĕсен законĕсем тăрăхах аталанать, тет. Çавна май Горькин тепĕр шухăшне те аса илерха: очерк «тĕпчев ĕçĕпе калав хушшинче» вырнаçнă, тесе çирĕплетнĕ вăл. Писатель каланине кашни тĕпчевçĕ хăй евĕрлĕ ăнлантарма пикенет. Е.И. Журбина çапларах калать: «Горький мĕнле тĕпчев çинчен асăннине уçăмлăрах ăнлантармалла. Искусствăн кашни произведенийĕ пекех, очерк жанрĕ çын пурнăçĕпе çыхăннă. Енчен те сăмах литература жанрĕнчи тĕпчев çинчен пырать пулсан, Горький ăнлантарнă тăрăх, ку — çын çинчен вĕрентни, çут çанталăка тĕпчени мар, паллах, (çав вăхăтрах кирек мĕнле наука материалĕсем те илемлĕ очерка кĕме пултараççĕ тата çынна лайăхрах пĕлме пулăшаççĕ)».[5]

Горький сăмахĕсене икĕ тĕпчевçи те «тĕрлĕрен» ăнла-

нать пулсан та, мĕн асăрхатпăр: иккĕшĕ те очеркăн икĕ ен пуррине йышăнаççĕ — пĕри илемлĕх меслечĕпе, тепри наука енчен тĕпченипе çыхăннă. Апла тăк, нимĕн иккĕленмелли те çук: очеркра сăмах искусствипе тĕпчев меслечĕ пĕр-пĕринпе уйрăлми пĕрлешнĕ. Çакна кура очеркăн хăйне евĕрлĕ ен пур теме пултаратпăр-и? Е. Журбина шухăшĕ тăрăх, «очерк пурнăç çине мĕнле пăхнипе уйрăлса тăрать. Енчен те ăна наука литературипе танлаштарас пулсан, вăл унран сăнарлăх енĕпе уйрăлса тăрать, енчен те калавпа, повеçпе, романпа, поэмăпа танлаштарас тăк, очерк сăнарĕсем публицистикăлла çивĕч тĕпченипе палăраççĕ».[6]

Н.М. Глушков шухăшĕпе, очерк хăйне евĕрлĕхĕ «ытларах унăн сюжечĕпе композицийĕнче палăрать. Уйрăм çынсен шăпипе, характерсен хирĕçĕвĕпе çыхăннă илемлĕ литературăн сюжет-интриги (сюжет-пулăмĕ) очеркра урăхларах сюжетпа ылмашăнать, çав сюжета тĕпчев е публицистика идеи аталантарса пырать».[7]

Атăлпа Урал хушшинчи наци республикисен литературинче те юлашки çулсенче илемлĕ очерксене тарăнраххăн тĕпчеме тытăнчĕç. Кунта пушкăрт публицистчĕн Раиф Амировăн «На стремнине» монографине уйрăмах палăртмалла. Тутар литературин тĕпчевçисем те илемлĕ очеркпа халĕ хытах интересленеççĕ.

«Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче чăваш литературин ӳсĕмĕсем палăрмаллах пысăкланаççĕ. Çав ӳсĕмсене палăртнă май эпир чăваш прозин иккĕмĕш пусалăхĕнчен тухнă писательсене: Мĕтри Исаева, Кели Кĕркурине, Максим Чалдуна, Куçма Пайраша, Леонид Агакова, Нестер Янгаса т.ыт. те ăшă кăмăлпа аса илетпĕр, — тесе палăртать Илья Тукташ 1940 çулта тухнă «Чăваш совет прозин антологийĕн» умсăмахĕнче. — Вĕсем чăваш литераторĕсен ватă гвардийĕ çумне хутшăнса тăван литература ӳсĕмĕшĕн чун-чĕререн ĕçлесе, ăна татах та пуянлатма, татах та вăйлатма, татах тарăнлатма тăрăшрĕç».[8] Статья авторĕ хăй те халь çеç асăннă писательсен шутнех кĕрет.

Чăваш литератури хăйĕн аталанăвĕнче виççĕмĕш пусăма куçни çинчен пĕлтерет И. Тукташ. Халĕ ĕнтĕ эпир «пирĕн литература çамрăк, писательсем ӳссе тĕрекленеймен, литература чĕлхи пиçсе çитеймен» теме пултараймастпăр, тет вăл. Чăваш совет литератури, ытти тăван халăхсен литератури пекех, пĕтĕм ĕç халăхĕн тивĕçлĕхĕ пулса тăрать. Чăваш литератури нациллĕ рамкăсене çеç шăнă-

çаймасть ĕнтĕ, вăл пĕтĕм çĕршыв умне тухмалăхах ӳссе хăватланнă. Писательсем те хăйсен чыслă ĕçĕн ăсталăхне кунран-кунах ытларах та ытларах вĕренсе пыраççĕ. Чăваш литературине çӳлерех асăннă тапхăрта пурнăçа тĕплĕн те тарăннăн, пур енчен те ĕнентерӳллĕн çутатса паракан; çав вăхăтри çынсен сăнарĕсене, вĕсен чунĕсемпе чĕрисене, кăмăлĕпе шухăшĕсене кăтартакан; тăван çĕршыва юратма, ăна кашни самантрах тăшмансенчен сыхлама вĕрентекен произведенисемпе пуянланать.

Пирĕн совет литературинче уйрăмах патриотизм теми пысăк вырăн йышăнать. Производство предприятийĕсенче малта пыракансем çинчен пĕлеççĕ-и вулакансем, хайлавсенче çĕнĕлле йĕркеленĕ уй-хирсен ударникĕсене кураççĕ-и, совет çамрăкĕсемпе — комсомолецсемпе, учительсемпе, летчиксемпе, пограничниксемпе тата ытти геройсемпе паллашаççĕ-и, вĕсен пурин те пĕртен-пĕр кăмăл, пĕртен-пĕр таса юрату — хăйсене çуратса ӳстернĕ тăван çĕршыва юратни.

30-мĕш çулсен вĕçнелле чăваш литературине талантлă çамрăк писательсен çĕнĕ отрячĕ хутшăнать. Вăл çамрăксем — совет самани çуратса ӳстернĕскерсем, аслă юлташĕсем вĕрентсе çитĕнтернĕскерсем. Вĕсем хăйсен пултарулăх çулĕ çинче вăйланнăçем вăйланса пыраççĕ. И. Тукташ вĕсен ячĕсене те асăнмасăр хăвармасть: Аркадий Эхель, Ехрем Еллиев, Мĕтри Кипек, Хветĕр Уяр, Алексей Медведев, Куçма Чулкаç, Александра Лазарева, Илпек Микулайĕ. Çамрăксем чăваш литературине хăйсен творчествипе çĕнĕ сывлăш кĕртеççĕ, çĕнĕ пурнăçри çĕнĕ çынсен сăнарĕсене калăплаççĕ. Çапла майпа чăваш писателĕсен организацийĕ кунран-кунах халăх хушшинчен çĕнĕ вăйсем илсе тĕрекленсе пырать. «Пирĕн литература — суйласа илнĕ çынсен тивĕçлĕхĕ çеç мар. Пирĕн литература — пĕтĕм халăх литератури. Тăвасса та ăна пĕтĕм халăх тăвать. Эпир, писательсемпе поэтсем, çав халăхăн ывăлĕсемпе хĕрĕсем.кăна», — тесе аса илтерет тепĕр хут И. Тукташ.

30-мĕш çулсенчи пурнăç пулăмсенчен çав тери пуян, çав тери нумай енлĕ. Çав пурнăçа тăвакан этем те хăйĕн характерĕпе кăмăлĕ тĕлĕшĕнчен калама çук интереслĕ. Кунта М. Горький сăмахĕсене илсе кăтартни питĕ вырăнлă. «Пурнăç этеме нихçан та халь эпир пурăнакан кунсенчи пек нумай ăса вĕрентме пултарайман, этем хăй те

нихҫан та халь эпир пурнакан кунсенчи пек интереслĕ пулман», — тенĕ вăл. Çак нумай ăса вĕрентекен пурнăҫа, хăйĕн туйăмĕпе тата шалти хирĕҫĕвĕсемпе тухса тăракан кăсăк этемсене эпир литературăра тĕссĕр кичем сăрăсемпе сăрласа кăтартма пултараймастпăр, тесе асăрхаттарать паллă писатель. Вулакансем писательсенчен пурнăҫа тĕплĕрех те тарăнрах, унăн мĕн пур енĕсемпе туртăмĕсене нимĕн пытарса хăвармасăр кăтартса паракан произведенисем кĕтеҫҫĕ. Писателĕн вулакана яланах хисеплемелле. М. Горький кун пирки çапла каланă: «Пирĕн çĕршывра пире вулаканăн, ытти çĕршывсенчипе танлаштарсан, хăйне хисеплеттерме тарăннăн никĕсленĕ право пур, мĕншĕн тесен вăл, истори аталанăвĕпе танлаштарсан, пурнăҫа килсе кĕнĕ çамрăк яшă кăна, çавăнпа кĕнеке уншăн вылямалли тетте мар, çынсем тата пурнăҫ çинчен мĕн пĕлнине малалла анлăлатмалли меслет», — тенĕ. Çак сăмахсене пĕр самантлăха та манас пулмасть.

Пирĕн литература сарлака çул çине тухса тăчĕ, тет малалла И. Тукташ. Вăл ар кĕлеткине ӳссе çитсе граждан лăх прави илчĕ. Эпир хамăра хамăр текех «çул шутне кĕмен ачасем» теме пултараймастпăр. Капла калани писательсене кӳрентерни кăна пулĕччĕ. Çавăнпа та аслă çул çине тухнă чăваш литературинче кашни хăйне тивĕҫ вырăнта пулмалла. Литература вăл — фронт. Фронтра вара кашни боецах хăйĕн вырăнне пĕлет. Литературăра та кашни писателĕнех хăйĕн вырăнне пĕлмелле. Писатель вăл вырăна шыраса тупаймасть пулсан, ăна литература йышăнма пултараймасть. Литературăна кĕрешӳ фрончĕпе танлаштаратпăр пулсан, çакна та астумалла: вăрçă фронтĕнче пĕр пехота кăна пулни çителĕклĕ мар. Унта артиллери те, кавалери те, пулеметчиксем те, снайперсем те кирлĕ. Литература фронтĕнче те кашни писателĕн хăйне расна хĕç пăшал пулмалла. Вăл унпа «пĕр пуля сая ямасăр» ĕçлеме пĕлмелле. Çав «тĕп хĕç-пăшалсенчен» пĕри — илемлĕ очерк. Чăваш литературинче очерк çырса курман писатель пулман. Ку вăл писатель ялан малтисен ретĕнче утнине пĕлтерет.

Чăваш литературин тĕпчевçисем те очерк çинчен нихçан та манман. Вĕсĕн шутĕнче М. Сироткин, Е. Владимиров, В. Родионов, Г. Федоров, Ю. Артемьев, Г. Хлебников, И. Одюков, В. Канюков, В. Станьял, В. Эзенкин т.ыт.те. Анчах та вĕсенчен нихăшĕ те очерка ятарласа,

тĕп вырăна хурса тĕпчемен, литературăн ытти жанрĕсене е произведенийĕсене тĕпченĕ май çеç вĕсен очерка та хушăран тенĕ пек пăхса тухма тивнĕ. Çапах та çак пысăк та хастарлă ушкăнран В.Г. Родионова уйăрса палăртас килет. Юлашки çулсенче вăл чăваш литературин аталану историне маттурланса тĕпчет, çавна май илемлĕ очерк жанрне те хăйĕн куçĕнчен вĕçертмест.

Очерк жанрĕ чăваш литературинче XIX ĕмĕр пуçламăшĕнче никĕсленме тытăннă тесе палăртнăччĕ маларах. XX ĕмĕрĕн 20—30-мĕш çулĕсене чăваш очеркĕ вăйлăн аталаннă тапхăр теме пулать. Çав вăхăтра очеркăн пур тĕсĕсем тенĕ пекех вăй илеççĕ.

Çав çулсенчех Европăра, уйрăмăн илсен Германире, фашизм çуралса тĕрекленме тытăнать. Гитлер сĕмсĕрленсе 1939 çулта Польшăна тапăнать, иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçарса ярать. Фашистсем, вăрçа пур енчен те вăйлăн хатĕрленнĕскерсем, çĕршыв хыççăн çĕршыв парăнтараççĕ, пĕтĕм Европăна хăйсен аллине илме тĕллев лартаççĕ. Польшăна çĕнтернĕ хыççăн Гитлерăн çарĕсем Совет Союзĕн хĕвел анăçĕнчи чикки тăрăх вырнаçма пуçлаççĕ. Пирĕн çĕршыв умне калама çук хаяр хăрушлăх сиксе тухать.

Гитлер Хĕвел тухăçĕнче Японипе, Европăра Италипе килĕшӳсем тăвать. Берлин-Рим-Токио пĕрлешӳ халĕ Европăна çеç мар, пĕтĕм тĕнчене хăратма тытăнать. 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ирхине Гитлер фашисчĕсен 170 дивизийĕ Хура тинĕсрен тытăнса Балтика тинĕсĕ таран сарăлса выртакан Совет Союзĕн чиккине сĕмсĕррĕн, вăрçă пуçарни çинчен пĕлтермесĕр харăссăн тапăнать. Çапла вара Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланать.

Ку монографире автор совет писателĕсемпе пĕрле чăваш писателĕсем те Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине пĕр çын пек пулса хутшăннине, совет халăхĕсем хăйсен ирĕклĕхĕшĕн тата Гитлер пусмăрне лекнĕ çĕршывсене ирĕке кăларассишĕн паттăррăн кĕрешни çинчен çапăçусен хирĕсенчех çырнă очерксене пăхса тухнă.

Монографи виçĕ пайран тăрать: «Вăрçă умĕн», «Вăрçă çулĕсенче», «Тылра та фронтри пекех хĕрӳллĕ».

Пĕрремĕш пайĕ

ВĂРÇĂ УМĔН

1

1920—1930 çулсенчи чăваш очеркне тишкеререх пăхсан, çав тапхăрта çар темипе çырнă илемлĕ очерксем йышлăланнине асăрхатăн. Кун сăлтавĕ ахальтен килмен: Граждан вăрçи хыççăнхи çулсенче тата Германире фашизм влаçа тытса илсен, çĕршыв ĕç çыннийĕсене, çамрăксене патриотла воспитани парасси тĕп тĕллевсенчен пĕри пулса тăрать. Чăваш писателĕсем çакна лайăх ăнланаççĕ, парти обкомĕ пуçарнипе Хĕрлĕ Çар ретĕнчи чăваш салтакĕсем хушшинче воспитани ĕçне вăйлатас шутпа чăваш çамрăкĕсенчен ятарлă чаçсем йĕркелеме тытăнаççĕ. Тĕслĕхрен, Туркестан çар округĕнче çарпа политика ĕçне лайăхрах вĕренес енĕпе пуçланнă ăмăртура чăваш пехота дивизийĕ чи лайăх кăтартусемпе палăрма тытăнать. Дивизие пултаруллă командир, Граждан вăрçин геройĕ, çирĕм сакăр çултах 2-мĕш Амур Çарĕн командующийĕ пулнă С.П. Павлов комбриг ертсе пырать. Сергей Павлов совет правительстви хушнипе Инçет Хĕвел тухăç Республикипе Япони хушшинче мир тăвасси пирки ирттернĕ калаçусене хутшăннă, пирĕн çĕршыв позицийĕсене хŭтĕленĕ. Писательсем С. Павлов дивизине шефа илеççĕ, ку вĕсен дивизи умĕнчи яваплăхне ŭстерет, çар пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен паха очерксем çырма хистет. Писательсем Вăтам Азире кăна мар, Чăваш Республикинчен çамрăксем салтака кайнă ытти çар округĕсенче те тăтăшах пулма тăрăшаççĕ.

Самана вара хăрушăлансах пырать. «Сунтал» журнал П. Львов очеркĕнче чикĕ леш енчи çĕршывсенче çар техники йышланса пыни çинчен хыпарлать.

1927 çулта, тĕслĕхрен, Францире самолетсен шучĕ 1923 çулхи 1542-рен 5400-е çитет. Италире вĕсен шучĕ — виçĕ хут, Англире — пилĕк хут, Америкăри Пĕрлешнĕ Штатсенче — ултă хут, Японире виçĕ хут ӳсет. Пирĕн çĕршывра кашни пин çынран çарта тăватă çын службăра тăнă пулсан, Бельгире — 8,3 çын, Италипе Францире — 7-шер çын, ытти хăш-пĕр çĕршывсенче татах та нумайрах шутланнă. «Вăрçă ан тухтăр тесен мĕн тумалла?» — тесе ыйтсан, очерк авторĕ çар техникине тимлĕн вĕренме, хуласемпе ялсенче пурăнакансемпе çар вăййисем ирттерме, кашни каччăпа хĕре пăшалпа тĕл пемешкĕн хăнăхтарма тата кашнинех «Хĕрлĕ чăваш» самолет тума йĕркеленĕ фонда укçа хывма сĕнет.[9] Журналăн çак номерĕнчех ял ачисем винтовкăран тĕл пеме вĕренни çинчен Н. Шупуççыннин очеркĕ пичетленнĕ.

Писательсем çĕнĕ очерксенче совет çыннисем заводсемпе фабрикăсенче, стройкăсенче, колхозсенче тухăçлăрах та тухăçлăрах ĕçленине сăнласа кăтартаççĕ. Кунĕпе тухăçлă ĕçлерĕн — тăшмана пысăк сиен кӳтĕн, теççĕ вĕсем. Акă, А. Талвирăн «Çичĕ çăл çывăхĕнче» очеркĕ. Унти ĕçсем Уралти чугун çул станцийĕнче пулса иртеççĕ. Очеркăн тĕп геройĕ Микка ялтан хăйĕн юлташĕ патне пырать. Анчах пĕчĕк станцăра та çĕнĕ çынна йăпăр-япăр шыраса тупма çук. Ун вырăнне вăл ют çĕртех ырă кăмăллă çынсемпе паллашать. Çав хушăрах савăнтарман хыпар пĕлет: Европăпа Ази чиккине палăртса çĕкленнĕ Урал тăвĕ çинчи пĕчĕк станцăран унăн юлташĕ Теодор Твенеш, маневр паравозĕн машинисчĕ, ĕçлеме Свердловска куçнă иккен. Пĕр уйăх каялла Теодор ун патне çак пĕчĕк станцăран çыру çырнăччĕ, хăй патне килме чĕннĕччĕ. Мĕн тумалла халĕ? Микка пурнăçри пăтăрмахсенче йăпăр-япăр çухалса каякан каччă мар, пурнăç нуши-масине тӳссе курма ĕлкĕрнĕ вăл. Свердловска та шикленмесĕрех çитет, Теодор Твенеше те шыраса тупать, хăйне килĕшекен ĕçе вырнаçать, хăй пекех ĕçчен те хастар хĕрпе Асьăпа туслашать.

Хăюлăхĕпе паттăрлăхне кăтартма та вăхăт çитет Миккан. Анăçра хаяр вăрçă кĕрленĕ чухне вăл та, ытти çитменлĕк пекех, ĕçе тĕплĕ тума, çĕршыв хăватне ӳстерме

тăрăшать. Фашистсем Тăван çĕршыва тапăнсан, тӳрех вĕсемпе çапăçма тухса кайма хатĕр. Çав хушăрах, унта лекеймесен, чугун çул çинче хастарланни те кирлĕ. Вăрçăра кам çĕнтересси чугун çулсем мĕнле ĕçленинчен те нумай килет.

«...Ĕçе пынă Микка сасартăк Луковкин машинист маневр паровозĕ çинчен çĕре сиксе аннине, стрелка уçма мала чупса кайнине асăрхать. «Пулать те вĕçкĕн», — тесе, Микка Луковкин хыççăн пăхса илнĕ — стрелка уçма та хăй чупрĕ пулать, кочегарне ямарĕ, те маттурлăхне кăтартасшăн? Паровоз пĕр тикĕс стрелкăран иртнĕ, станци территорине кĕнĕ, тата хăвăртрах шăва пуçланă. Ун хыççăн тăрса юлнă машинист стрелка балансирне каялла çавăрса хунă та паровоз хыççăн чупнă. Тепĕр чух Луковкин чип-чиперех çитсе ларнă-и, тен, те, халĕ шăннă çĕр ирĕле пуçлани хупланă, шăп паровозпа танлашсан сылтăм ури шуçса кайнă та, тендер кустăрми айне пулнă. Кăна аякран курса тăнă Микка çийĕнчех мĕн пулнине те тавçăрса илеймен, куçĕсем алчăраса кайнă, мĕн пур вăйпа Луковкин патне чупма тăрсан тин, тăруках сывлăш çавăрса ярайман пирки, пӳлĕнсе чарăннă та хăйсен кӳрши инкеке лекнине тавçărнă. Çавăнтах рельс тăрăх юнлă йĕр кайни курăннă. Микка Луковкин патне хашкаса çитнĕ. Ун шучĕпе паровоз çинче помощник е кочегар пулмалла. Анчах мĕншĕн-ха вĕсем малаллах каяççĕ, тухтăр патне васкаççĕ-ши? — тесе, Микка суранлă Луковкин патне пĕшкĕннĕ, кĕсйинчен пĕчĕк тутăрне кăларса юнне чарма тăнă. Луковкин ун куçĕнчен пăхса илнĕ те çӳç-пуçа вирелле тăратакан хыпар пĕлтернĕ. «Паровоз çинче никам та çук», — тенĕ унăн кăмрăк пек хуралса кайнă тутисем. Урăх вăл нимĕн те калайман — тăнне çухатнă. Микка тинех ăнланса илнĕ: акă мĕншĕн чарăнман вăл пĕчĕк паровоз, пĕрмаях малалла шунă. Хĕртнĕ тимĕр çине пуснăн сиксе тăнă Микка. Станцăри стрелочниксем илтчĕр тесе, кăшкăракăшкăра чупнă, карттусне тытнă аллипе чарăну сигналĕ парса пынă, шпалсенчен такăннă.

Станци вĕçĕнчи пост стрелочникĕ Микка тревога

панине пĕчĕк паровоз иртсе кайсан тин курнă, çавăнпа та тепĕр инкекрен хăтарас пирки нимĕн те тăвайман.

Микка юнашар çул çинче вагонсем тавра списчик çӳренине астунă, кăшкăрнă, хăй патне чĕнсе илнĕ, ăна юн юхтарса выртакан машинист патне чуптарнă, тухтăра чĕнме хушнă. Унтан стрелочник будкине чупса кĕнĕ те çийĕнчех инкек пулни çинчен диспетчĕре пĕлтернĕ, малалла мĕн тумалли çинчен калаçса татăлнă. Будкăран чупса тухнă çĕре машинистсăр паровоз станцăран перегона тухса куçа курăнми пулнă. Пост çывăхĕнче хитре «ФД» чашкăрса тăнă. Микка ун патне чупса пынă, паровозăн пăхăр таткисене чӳпĕкпе тасатса тăракан Храмцова перегон çине аллине тăсса кăтартнă. Ку вăхăтра пур çĕртен те вĕçĕмсĕр чанкăртатма тапратнă сигнал сассисем илтĕнсе кайнă.

— Помощнике кантура ятăм, кочегар та çук, — пĕлтернĕ машинист, — мĕн тăвас?

— Атя, Васильч, эпĕ кочегар пулăп, — Храмцов хыççăн Микка та локомотив будкине улăхнă.

— Паровоз çинчен сикме хăрамăн-и? — Микка куçĕнчен пăхнă старик, — лилипута хуса çитсен санăн сикес пулать-çке.

— Çук, Васильч, хăрамастăп. ...

Реверс умне тăнă Храмцов вăрăммăн гудок панă. Паровоз тапраннă. Вĕсем тухăмра сăртлă вăрмана ӳкнĕ перегона тухнă. Микка топкăри кăмрăка пăтратма тытăннă, хутран-ситрен, çаннипе тарланă çамкине шăлса илнĕ май, будка кантăкĕ çине таяннă, малалла пăхнă. Машинистсăр паровоз чылай аякка кайнă мĕн — курăнман. Тăхăр километртан разъезд пулнă. Вĕсене хирĕç платформа çине жезл тытнă карттуслă дежурнăй тухса тăни диспетчер çул уçса панине пĕлтернĕ. Храмцов платформăна кисрентерсе хăварнă май ярса тытнă жезл çумне çыхса панă хут таткине сӳтсе вуланă та Миккана панă.

«76-мĕш километрта çул юсакансем рельсăсене сӳтнĕ. Диспетчер сире çак перегонра хăваласа çитме ху-

шать. Машинистсăр паровоз 8 сехет те 07 минутра иртсе кайрĕ. Хăвăртлăхĕ 40 километртан ытла мар. С.П. Данилин», — вуланă Микка.

Разъездран çул кăшт сылтăма пăрăннă. Микка малалла пăхма пуçланă. Тата кăшт кайсан хайхи упа пек лутра паровоз та курăннă. Микка машинист хушнă май паровозăн кĕреш пек тăсăлса выртан хуранĕ умне тухса ларма хатĕрленнĕ. Машинистсăр пĕчĕк паровоза хуса çитнĕ-çитменех унăн тендерĕ çине сикме авăрланнă. Храмцов ăна локомотива мĕнле чармаллине кăтартса панă.

— Асту, хытă тыт, ӳксен тормоз парасса ан кĕт вара! — кăшкăрса каланă старик, — кун пек хăвăрт пынă чух паровоз умне сикесси питĕ те хăрушă, иккĕленен тĕк, ан та хăтлан!

Микка машинистсăр паровоза перегонра чарăймасан, вăл рельса сӳтнĕ участока çитсе çул çинчен сиксе тухассине астунă. Паровоз пăрахăçа тухса çул çинчи пĕтĕм поездсене пĕр кунлăха чарса лартма пултарнă. Çук, юрамасть, халь тин иккĕленме юрамасть тесе, Микка будкăран тухнă.

Паровозăн тăрхала хуранĕпе юнашар тăсăлса кайнă тăвăр площадка пур, Микка çав площадка тăрăх тимĕр хăлăпран тытса малалла утнă. Ăна труках хивре çил лăскама пуçланă, паровоз çинчен ывăтса хăварма тăнă. Микка çиле парăнман. Малтанласа вăл питне тендер енне туса ларнă, машинист çине пăхса пынă. Çул хĕррипе телеграф юписем каялла чупни курăннă, варинке тăрăллă тусем те сиксе тухнă. Унтан сасартăк тĕттĕм пулса тăнă: туннель тапраннă. Микка тимĕр тыткăча хытăрах ярса тытнă, шăнса кӳтнĕ аллисем шанчăксăра тухасран хăраса, вĕрме тытăннă, чавсипе тĕрекленнĕ. Сĕм-тĕттĕм туннельри çул хĕрринче хунар çутти курăнса кайнă. Микка куçĕсем пысăкланнă: паровоз хыçне çын мĕлки юлнă. Туннельри хуралçă пуль тесе, Микка малалла çаврăнса пăхнă. Умри тĕттĕмлĕхе çутатса çĕр çинчех çаврака çăлтăр выртни курăннă. Паровоз шăп çав çăлтăр çине çул тытнă. Пыра-киле çăлтăр пысăкланнă, тăваткаллана пуçланă, унтан хăйĕн формине

йăлтах çухатнă. Паровоз вĕтĕ вăрманлă уçланкăна тухнă. Тепĕр километртан штукатурка тунă стена пек шапшурă виадук — вăрăм кĕпер пуçаннă. Ун тăрăх хайхи путишле паровоз пыни те курăннă. Храмцов гудок панă, кĕпер çинчен тухнă-тухманах машинистсăр ыткăнакан локомотива хăваласа çитнĕ. «Ку лилипутăн кăмакинчи кăмрăкĕ епле çунса пĕтмест-ши, çав-çавах хытă пырать, е анаталла кайма пуçларăмăр-и?» — тенĕ Микка. Вăл будкăри машинист сикме сигнал парасса кĕтнĕ, «ФД» умĕн чĕтренсе пыракан аял тендер çине пăхса илнĕ. Çан-çурăмĕ çӳçеннине астунă, чĕри те тахăшĕ пырса чышнăн хирĕнсе тапнă, «ФД» пĕчĕк паровоз хăвăртлăхĕпе кăшт çеç ăна тĕртĕнсе пĕр тикĕс пыма пуçланă. Микка икĕ паровоз та пĕр-пĕринчен кăкарса янăн килĕшӳллĕ пынине туйнă. Машинист икĕ гудок панă. Микка пĕвĕпе кăмрăк ещĕкĕ пек пĕчĕк тендер çине ӳпĕннĕ. Иккĕленсе тăман. Сикнĕ...»

А. Талвир очеркĕнчен ку сыпăка юриех пысăккăн илтĕмĕр. Чугун çул çинче ĕçлекенсен пултарулăхне, халăх пурлăхне упрассишĕн вĕсем пурнăçне те шеллеменнине, çав хушăрах çул çинче темĕнле пăтăрмах та, темĕнле инкеклĕ ĕç те пулса иртме пултарасса лайăх кăтартса парать вăл. Микка — чугун çул ĕçне чунтан юратакан специалист, ăста машинист. Мирлĕ ĕçрех епле паттăр вăл. Çавăн пек хăюллă та паттăр çамрăксем кирлĕ Хĕрлĕ Çара. Вĕсем тискер фашизма нихçан та парăнмĕç, ирĕклĕхшĕн юлашки юн тумламĕ юлмиччен тăшманпа çапăçĕç. Тăван çĕршыв Миккана та, ун пек яшсене те яланах шанма пултарать. Ирĕклĕх çыннисем вĕсем, ирсĕр тăшмана чунтан курайман çамрăксем.

«Каçхине Çичĕ çăл çыранĕ хĕрринчи çурта, Храмцов старик патне, унăн кӳршисем, хăйпе пĕрле ĕçлекен машинистсем, кочегарсем, станцăри стрелочниксем пухăнчĕç. Хăнасене тарават Кузьминишна нӳхреп-рен хăй тăварланă хăярне илсе кĕрсе лартрĕ. Çурт хуçи праçникрен «пытанса юлнă» эрех кĕленчине туртса кăларчĕ. Çĕнĕ кĕпеллĕ Ася час-часах кухньăна чупрĕ, апат-çимĕç турилккисене йăтрĕ, кĕрекере вăтаннăн ларакан Микка çинг савăнса пăха-пăха илчĕ.

Хăнасем пирвайхи черккене Храмцов старик сывлăхĕшĕн ĕçрĕç. Иккĕмĕш тост — Миккашăн пулчĕ. Ватă машинист ун умĕнче хăюлăхне кăтартнă çамрăк çине пăхса çакнашкал «сăмах тытрĕ»:

— Ну, йĕкĕт ... Микка ачам, эпĕ ватă çын ĕнтĕ, хам пурнăçра чылай куркаланă, темиçе крушенире пулнă, анчах сан пек ырă кăмăллă, хăюллă çынна курман вара. Саншăн эпĕ хамăн чи хаклă япалама та хĕрхенмĕттĕм...

— Хĕрне те-и?! — кăшкăрса ячĕç хăнасем.

— Ася каччи пулма тивĕç-и?!

— Кала, кала, Васильч!

Ася пуçне вăтаннипе ашшĕ кăкăрĕ çине хучĕ, çурăмĕнчен çупăрласа савтарчĕ, халиччен калама хăйман япала çиеле тухнăшăн савăнчĕ».[10]

Вулакансене вăрçа хирĕçле воспитани парас ĕçре писательсем малараxри çулсенче çырнă очерксем те, Граждан вăрçи çинчен аса илнĕ май 30-мĕш çулсенче çуралнă илемлĕ çĕнĕ очерксем те хăйсен усăллă ĕçне тунă. Çавăн пек очерксен шутне Максим Чалдунăн «Левентей масарĕ» очеркне те кĕртмелле. Граждан вăрçине Çĕпĕрте хăй хутшăннă тата унта пурăнакан чăвашсене лайăх пĕлнĕ май Чалдунăн писатель сумкинчен çĕнĕрен те çĕнĕ материалсем тухса пыраççĕ. Ахаль çынсем каласа панисене çырса хунă материалсем мар вĕсем, писатель хăй алла пăшал тытса шуррисене хирĕç партизансемпе пĕрле паттăрăн çапăçнă чухне пухăннă материалсем. Вулакансем унăн очерк-калавĕсене чăтăмсăрăн кĕтеççĕ, кĕнекисене алăран ямасăр вулаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсенчен кашниех тăван çĕршыва чунтан юратма, тăшмансене курайми пулма тата вĕсемпе паттăрăн кĕрешме вĕрентеççĕ. Акă, унăн нумай-нумай очеркĕсенчен пĕри — «Левентей масарĕ». Писатель очерка тӳрех вулакан чунне тыткăнламалла пуçлать, танлаштарусемпе, сăпатлантарусемпе анлă усă курать. Тепĕр чухне ун чĕлхинче питĕ ăнăçлă гиперболăсем е литотăсем тĕл пулаççĕ. Иронисене те кăмăллать вăл, чăваш вулаканĕн чунне ирони килĕшнине, унпа пĕлсе, вырăнлă усă курсан, вулакана хăвăн майлă хăвăрт çавăрма май

пуррине, ăна та çырса кăтартакан пулăмсем пирки хăв майлă шухăшлаттарма май килнине ăнланать. Ку вăл — писатель ăсталăхĕ.

«Çĕпĕр тайги пек нумай кайăк-кĕшĕклĕ вăрман те пур урăх çĕрте, те çук ... Эпĕ ăна пĕлместĕп. Раççейре пурăннă чух пирĕн вăрман пекки пурччĕ те, анчах унта мулкачран пуçне урăх нимĕн те пулман. Хĕл каçиччен пилĕк мулкач тытнă Левентей сунарçă. Çапах нумай, тесе тĕлĕнетчĕç вара Усăлă чăвашĕсем», — тесе пуçлать очерка калуçă. Анчах ку уншăн çителĕксĕртерех-ха, вăл вулакана пĕтĕм чунĕ-мĕнĕпех хăй майлă çавăрасшăн, вара очерк сюжетне йĕркелеме те, композици пайĕсене пĕр-пĕринпе тачăрах çыпăçтарма та меллĕрех. Чăнах та вăрманта вунă мулкачран ытла пулман пуль ...Пиллĕкĕшне сунарçă Левентей тытнă, тепĕр пиллĕкĕшĕ тепĕр çул валли ратлăх юлнă, пĕлтерет малалла калуçă.

Çĕпĕрте тем тĕрлĕ кайăк пур. Сунарçăсем пуринчен ытла хаклăрах тăраканнисене тытма тăрăшаççĕ, çавăнпа мулкач унта питех пысăк хисепре мар. Левентей те халĕ Раççейри вунă мулкачлă вăрманта мар, вĕçĕхĕррисĕр Çĕпĕр тайги ăшĕнче пурăнать. Унта вăл шутсăр сумлă кайăк-кĕшĕк хушшинче хуçа пулса çӳрет. Мĕнле кайăк тытас тет — çавна тытать, хăш кайăкăн ашне пĕçерсе çиес тет — çавна пĕçерсе çиет... Левентей сунар законне питĕ лайăх пĕлет, çавăнпа та, çăва тухсан, пĕр кайăка та тивмест. Ăнсăртран курсан та: «Кай, кай! Куç умĕнче ан çӳре ... Ачу-пăчусене пăх, тăрант!» — тесе хăратса ярать. Вăхăт çитсен, Левентей те, ытти нумай-нумай арçын пек, Сăвăр ятлă йыттипе сунара çӳреме пуçлать.

Сунарçăсем хыçĕнчен тата тепĕр тĕрлĕ «сунарçăсем» пыраççĕ. Вĕсен пăшалпа йытă вырăнне кĕсйисенче укçа, лашисен çурăмĕсем çийĕсенче витри-витрипе эрех. Вĕсем кайăк-кĕшĕксене персе тытас вырăнне пăшаллă сунарçăсене укçа парса, эрех ĕçтерсе тата тĕрлĕ майсемпе улталаса илеççĕ. Пăшалпа çӳрекен сунарçăсен çийĕсенче çĕтĕк-çурăк пиншаксем, сăхмансем, кĕрĕксем. Лешсен çийĕсенче — упа, кашкăр, çӳлевĕç тирĕсенчен çĕленĕ тумтирсем.

— Хе-хе-хе! Эсир, пăшалпа çӳретĕр пулсан та,

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
Чувашской Республики
Ч-41441

пирĕн чухлĕ кайăк-кĕшĕк тытаймастăр, — тесе кулаççĕ вĕсем лешсенчен куç умĕнчех.

Малалли ĕçсем питĕ хăвăрт пулса иртеççĕ. Çĕпĕрте те Раççей центрĕнчи пекех ял çыннисем икĕ ушкăна пайланнă: пуянсем, чухăнсем. Левентей пуян пулман, ялта çĕре кĕме куштансене вара аллă е çĕр тенкĕ укçа, е пĕр-ик витре эрех парса ĕçтермелле пулнă. Раççейрен аран Çĕпĕре çитсе ӳкнĕ Левентей çапах та куштансене парăнасшăн пулман, ялтан вунă çухрăмра ларакан утара вырнаçнă, çурт лартнă, арăмĕпе — Кĕтернепе — икĕ ача çуратса ӳстернĕ: хĕр тата ывăл. Хĕрĕ яла кайча тухнă; ывăлне, Кĕçтене, 1914 çулта тĕнче вăрçине тытса янă. Икĕ çул çурăран унтан сывах таврăннă вăл, анчах каллех Колчак çарне тытса кайнă. Çавăнтан вара çак утарта Левентейпе карчăкĕ иккĕшĕ çеç пурăннă. Ывăлĕнчен сас-хура пулман...

Пĕррехинче, сунара кайсан, Левентей умне сасартăк виçĕ юланут тухса тăнă. Вĕсенчен пĕри — Кĕçтен, унăн ывăлĕ. Савăннă ашшĕ, ывăлне хирĕç сăмах тупса калаймасăр, чылайччен юпа пек хытса тăнă.

— Çитрĕн-и, ачам! Пуçпех таврăнтăн-и? — тесе ывăлĕн аллисенчен ярса тытнă.

— Пуçпех мар, атте, çула май çеç кĕрсе тухас терĕмĕр.

— Ăçта? Хăш хулара пурăнатăн? Мĕншĕн çыру ямастăн?

— Хăш хулара? Атте, эсĕ хăш хулара пурăнатăн, эпир те çав хуларах пурнатпăр. Ак кусем ман юлташсем, — савăнăçлăн кулса, юлташĕсем çине аллипе тăсса кăтартнă Кĕçтен.

— Мĕнле-ха апла? Сана вĕт Колчак салтака илчĕ?

— Илессе илчĕ те — тытса чараймарĕ. Сăнчăрĕ начар. Халĕ ĕнтĕ эпĕ Колчак çарĕнче мар.

— Ăçта тата?

— Ĕçлекенсемпе хресченсем патĕнче. Халĕ эпĕ салтак мар, хĕрлĕ партизан.

Кĕçтен ахаль партизан та мар, отряд командирĕ иккен. Çавăнпа та Левентей шуррисен отрячĕсем ăçта çӳренине пĕлсе, партизансене систерсе тăрать.

Ку кĕркунне ялсенчен сунарҫăсем пымарĕҫ. Кайăк-кĕшĕк пуҫтаракансем те курăнмарĕҫ. Левентей вара ҫав ҫул кайăк-кĕшĕк нихăш ҫулхинчен те нумайрах тытрĕ. Халĕ вăл малтанхи пек тĕттĕм ҫын мар, ывăлĕ ăнлантара-ăнлантара хăварни ăна чылай ăслăлатрĕ. Тит Иванчă, пуян, Левентей тирĕсене йӳнĕ хакпа илсе каясшăн пулсан та, хальхинче вăл килĕшмерĕ:

— Пит йӳнĕ паратăн.

Пуян хурахсемпе хăратма тытăнчĕ.

— Камсем, тетĕн-и? Леш, салтакран тарса юлнă ҫынсем. Халĕ вĕсем пĕр кĕтĕве пуҫтарăннă та ялти пуян хресченсене ҫаратса ҫӳреҫҫĕ.

Левентей тӳссе лараймарĕ. Тепĕр хут Тит куҫĕнчен шăтарас пек пăхса илчĕ те:

— Эсĕ ху чăн-чăн хурах! Ĕмĕр-ĕмĕр пире, сунарҫăсене, улталаса, ҫаратса, хырăмна ӳстерсе пурăнатăн. Тухса кай кунтан! Унсăрăн эпĕ халех пыршă-пакартуна юхтарса кăларатăп, — тесе хаярăн кăшкăрса, пăшалне ярса тытрĕ Левентей.

Ҫакăн хыҫҫăн Тит, ҫĕлĕкне хăпăл-хапăл тăхăнса, тулалла тухрĕ, лаши ҫине утланчĕ те, хыҫалалла ҫаврăнса пăхмасăрах, утартан тарчĕ.

Кун хыҫҫăн Левентей куҫĕсем тата анлăрах уҫăлчĕҫ: хăш енче тĕрĕслĕх, хăш енче ултавлăх? Ҫав тĕрĕслĕхе лайăхрах ăнланнăран вăйĕ те хушăннă пек туйăнчĕ Левентейĕн, кăмăлĕ те ҫирĕпленчĕ. Ҫакна тĕрĕслесе пăхма темиҫе кунранах май тупăнчĕ. Ун патне, утара, шурă казаксен отрячĕ кĕрлеттерсе ҫитрĕ. Командирĕ, аллинчи нухайккипе юнаса, Левентей умне пырса тăчĕ. Левентейрен вăл партизансем ҫинчен ыйтать, старик вара:

— Сирĕнсĕр пуҫне урăх никам та килмен ман утара, — тесе тавăрать.

— Ха-ха-ха! Куҫ уммĕнчех суять, ваше высокородие! Виҫĕм кун ҫеҫ эпĕ пултăм. Манран пĕр кун малтан ҫеҫ бандит отрячĕ выртса тухса кайнă ун патĕнчен, — тенĕ сасă илтĕнет.

Левентей сасă еннелле ҫаврăнса пăхрĕ те, такана хырăмлă, кĕреҫе сухаллă, усăнчăк туталлă Тит Иванча курчĕ. «Ав, мĕн йĕрлесе ҫӳренĕ ун чухне вăл: кайăк-

кĕшĕк тирĕсем мар, партизансен отрядне», — тесе шухăшларĕ Левентей хăйĕн ăшĕнче.

Казаксем хĕнеççĕ — Левентей каламасть. Персе пăрахассипе хăратаççĕ — Левентей шарламасть. Казаксем ăна чышкаласа, тулалла илсе тухаççĕ, кедр çумне вĕренпе çыхса хураççĕ.

— Ну, калатăн-и хурахсем ăçтине?

Левентей чылайччен шухăша кайса тăрсан:

— Сăмахпа каланипе эсир тупас çук вĕсене, эпĕ хам ертсе каям сире, — терĕ.

Казаксем çавăнтах Левентее салтаççĕ, унтан лашисем çине утлана-утлана лараççĕ. Левентей пăшалне çурăмĕ хыçне çакрĕ те йĕлтĕр çине тăчĕ. Левентей малта, ун хыçĕнче çирĕм юланут казаксем тин çунă юр çийĕн тайга ăшнелле кĕрсе кайрĕç. Нумай вăхăт иртсен пĕр тарăн çырман чăнкă хĕрне пырса тухрĕç.

— Çитрĕмĕр, акă çак çырман леш енче. Ав, куратăн-и, пĕр çӳллĕ кедр тӳпенелле кармашать, çав кедртан пĕр вунă хăлаç сылтăм енче утар пур, çав утарта отряд тăрать, — тесе аллине тăсса кăтартрĕ Левентей.

Офицер, бинокльне куçĕсем тĕлне тытса, кедр еннелле пăха пуçларĕ. Казакĕсем те пăхаççĕ. Левентей, хăй çине никам та пăхакан çуккине курса, пуçĕнчи çĕлĕкне пусарах лартрĕ те, уринчи йĕлтĕрĕсем çине хытă тăрса, çырма тĕпнелле ярăнса анса кайрĕ. Хыçĕнчен Сăварĕ те юртрĕ. Казаксем, Левентей тарнине кура, кăшкăрма пуçларĕç. Çавăнтах пăшал сассисем кĕрлесе кайрĕç.

... Кăшт вăхăт иртсен, утар патне вăтăр-хĕрĕх юланутлă партизансем пырса çитрĕç, унта мĕнле инкек пулса иртнине пĕлчĕç. Тепĕр тапхăртан казаксем хыççăн чашкăрса тухнă партизансем шуррисем каяллла таврăннине асăрхарĕç, пăшалĕсене хатĕрлесе, пысăк йывăç тĕлĕсене пытана-пытана тăчĕç.

— Отряд, пли! — тени вăрманта янраса кайрĕ.

Малта мĕн пуласса кĕтмесĕр килекен казаксем лашисем çинчен кĕлтесем пек сирпĕне-сирпĕне анаççĕ. Пĕр самантра тенĕ пекех казаксем пурте ӳксе пĕтрĕç. Тăшман отрячĕ арканчĕ.

«Кĕçтен партизансене пухса ашшĕне шырама кайрĕ.

Левентейпе Сăвăр çырма тĕпĕнче пĕр-пĕринчен аякра мар выртаççĕ. Кĕçтен ашшĕне утара илсе таврăнмарĕ. Ăна вĕлернĕ çĕртех шăтăк алтрĕç те тирпейлесе пытарчĕç.

Ĕлĕк ăна Кедр варĕ тенĕ. Халĕ ĕнтĕ, Левентее шурисем персе вĕлернĕренпе, ăна Левентей масарĕ теççĕ».[11]

Кĕске, пысăках мар очерк. Анчах унăн патриотла воспитани пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк. Тăшмансене Кĕçтен çеç мар, Левентейпе арăмĕ те чунтан кураймаççĕ. Темĕн тĕрлĕ асаплантарсан та вĕсем шурă офицерпа казаксене парăнмаççĕ. Левентей чеелĕхĕ тăшмана тĕп тума пулăшать. Вăл вилет, анчах партизансене сутмасть.

Вырăс совет очеркĕ те иртнĕ ĕмĕрĕн 20-30-мĕш çулĕсенче питĕ вăйланать. Очеркистсем хушшинче уйрăмах М. Кольцов хăйĕн ăсталăхĕпе, очеркĕсен çивĕчлĕхĕпе уйрăлса тăрать. Унăн питĕ ăнăçлă сăнарĕсемпе танлаштарăвĕсен шутне «Класри çичĕ кун» очеркĕнчи шкул директорне сăнласа кăтартнине кĕртмелле. Шкул директорĕн ĕçĕ пирки: «Трамвай кондукторĕн ĕçĕ — икĕ сменăллă шкул директорĕн ĕçĕпе танлаштарсан, тĕлĕкре курман кану кăна»,[12] — тет вăл. Шкул çинчен малалла çырнă май, Кольцов ĕненмелле чăн-чăн тĕрĕс сăнар тупать: «Хăш-пĕр ĕç пўлĕмĕсем — улах вырăнти ирĕклĕ пысăк утравсем евĕрлĕ. Ку вара — çыран еннелле шавласа килекен тинĕсĕн тăвăллă хумĕн ăшĕнчен çĕкленсе тăракан чакăл ту пек. Пўлĕм алăкĕ чĕрĕ япала евĕрлех пĕр минут лăпланмасăр уçăлса-хупăнса вылянать».[13]

Ку сăнара кĕнекесенче тупман, ăна литература опытĕнчен те илмен, çавнашкал пайăрăмсем тупма Кольцова унăн талантлăхĕ, пурнăçа тарăннăн тĕпчени, хăй те очеркри ĕçсене хастарлăн хутшăнни пулăшать. Çав хушăрах Кольцов очеркĕсем унăн талантлăхĕпе тата вĕсем тăрăх 20-30-мĕш çулсенчи пулăмсене питĕ лайăх пĕлме май пуррипе кăна илĕртеççĕ-ши? Паллах, апла мар. Очерксен пĕр пайĕ халĕ те пурăнать. Çўлерех асăннă тапхăртах Кольцов «Пĕчĕк хулара» очеркра вырăнти кадрсене питĕ тимлĕ пăхса ўстересси çинчен ыйту çĕк-

ленĕ. Енчен те çынна Мускавра е край центрĕнче те пулин асăрхаман пулсан, ăна тăван хулинче те сахал хисеплеççĕ... Çапла вара упалла шухăшлаççĕ: «Сĕре лайăх çын пулсан, пирĕнпе пĕрле провинцире тунсăхласа пурăнмĕччĕ...»

Чикĕ леш енчи çĕршывсем çинчен çырнă очеркĕсем форма енчен урăхларах унăн. Вăл произведенисенче очеркпа памфлет енĕсем пĕр-пĕринпе ирĕклĕнрех çыхăнаççĕ. Тĕслĕхрен, «Испанири çуркунне» кĕнекин пĕрремĕш страницисенчех Испанири 1931 çулхи буржуалла революцие апрельте «çĕнетсе улăштарнине» çырса кăтартни памфлет страницисене аса илтерет. Республика правительствин ĕçĕсене Кольцов иронияллĕ стильпе çырса кăтартнă май, правительство ĕçĕсем, тĕпрен илсен, банкетсемпе чаплă апатланусем ирттернипе çыхăннă, тесе палăртать. Малтан автор çав банкетсене килĕштернĕ пек туйăнать: «Республикăна ырлакан ăслă та хăюллă тата ăна чунтан парăннă мĕн чухлĕ испана асăнмаççĕ пулĕ каçсерен çав политика банкечĕсенче! Банкечĕсене хăйсене мĕн чухлĕ ирттереççĕ тата! Примо Риверăпа Берингер диктатурине çапса антарса испан обществи хăçантанпа кĕтнĕ банкетсем ирттерме ирĕклĕх илме пултарнă. Çав банкетсем халĕ хаваслă çил-тăвăл пекех кĕрлеççĕ. Шампань эрехĕ чăшлатать, магний çатăртатса çунать, ирхи хаçатсем хрусталпе тата чечексемпе илемлетнĕ юр пек шурă сĕтел çиттисене, республикăна чунтан парăннă фраксемпе, смокингсемпе хупăрланă сĕтелсене ӳкернĕ сăн ӳкерчĕксемпе тулса лараççĕ».[14] Тăрăхласа çырни пĕрремĕш предложенирех сисĕне пуçлать. «Асăнмаççĕ пулĕ» тени ăслăлăхпа хăюлăх çинчен каланин пĕлтерĕшне пĕтерсе хунă пекех туйăнать. Малалла автор «диктатурăна çапса антарса» тата «банкетсем ирттерме ирĕклĕх илме пултарнă» (пĕлтерĕшĕ енчен вĕсем пĕр-пĕринчен мĕн тери уйрăлса тăраççĕ!) сăмах çаврăнăшĕсене юнашар лартни те ирония вăйлатать. Чăнах та, мĕншĕн кирлĕ пулнă революци? Банкетсем ирттерме май илмешкĕн «пĕтĕмпе аркатма» кирлех-ши? Тепĕр пайăрăмĕ те интереслĕ: Кольцов, хăвăрт тупăннă «ăслă та хăюллă» республиканецсене питлесе, вĕсен ячĕсене

асăнмасть, вĕсем уншăн «республикăна чунтан парăннă фраксемпе смокингсем» кăна.

Çав кĕнекерех пичетленнĕ акă тепĕр очерк. Унта Кольцов çĕршывра чăн-чăн революци юхăмĕ аталанни, испан хресченĕсем хăйсем шанакан оратора епле тимлĕн итлени çинчен каласа кăтартать. Очеркра урăхла кĕвĕ, урăх стиль: «Халăх çийĕн ăнланмалла мар хумсем куçаççĕ. Унта темĕскер пăтратать... Çынсен ушкăнĕ сарăлма талпăнать, вăл куклене-куклене илет. Сасартăк тинех паллă пулать: çуратас умĕнхи хускануссем иккен вĕсем. Çара çĕрĕн хĕрлĕ лаптăкĕнче тĕттĕм, хутла пĕлмен испан батракĕсем, хăйсем кĕрешекен класс пулнине ăнланса илсе, хăйсен партине çуратаççĕ».[15]

Çӳлерех илсе кăтартнă икĕ тĕслĕхе танлаштарса пăхсан, Кольцовăн пĕр произведенийĕнчех памфлет енĕсемпе очеркăн сăнарлă, хумханчăклă, поэтикăлла енĕсем пĕрлешсе кайнине, сăнар епле майпа тĕп идейăна пăхăннине, ăна уçса панине куратпăр. Памфлетлăхсăр, пурнăçа тĕрĕс сăнлакан кĕнеке очеркĕсем Испани буржуаллă революцийĕн тĕп енĕсене кăтартса парайман пулĕччĕç. «Испанири çуркунне» кĕнекене паян вуланă май, вăл хăйне евĕрлĕ истори документчĕ пек çеç мар, чăн-чăн политика очеркĕ мĕнле пулмаллине курнипе те усăллă, хаклă.

Памфлетпа очерк енĕсене пĕрле тухăçлă усă курни Кольцовăн «19 хула» кĕнекинче те палăрать. Çав очерксене публицист XX ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсемпе 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче çырнă.

«Европа тăрăх çӳресе танлаштарусем туса пăхсан пирĕн гулливерла утăмсене асăрхатăн», — Маяковский çапла каланине чикĕ леш енĕ çинчен очерксем çырнă чухне пĕтĕм чунĕпе йышăнать Кольцов. Политик тата литератор, Михаил Кольцов 19 сыпăкран тăракан кĕнеке çырать, кашни сыпăкĕ — пĕр-пĕр хула çинчен çырнă очерк. Кунта журналист тата писатель хула кварталĕсене сăнланисем, обществăн паллă çыннисемпе калаçнисем, пейзажа ӳкерсе кăтартнисем пур, çапах та кĕнекен тĕп содержанийĕ — обществăри пулăмсене хак пани. Кашни хулапа паллашнă май çав хула вырнаçнă çĕр-

шывсене те, общество системине те авантарах ăнланатăн; киввине те, çĕннине те. Çаксене пурне те ирĕклĕн çырса кăтартнă, кашни очеркрах хула пирки çеç мар, анлăрах — çав хула çĕршывĕ çинчен те сăмах пырать. Вулама çăмăл, материала вулакана ăнланмалла вырнаçтарнă, çапла тунинче литераторăн питĕ пысăк ĕçĕ палăрать.

«Испанири çуркунне» тата «19 хула» кĕнекесем Кольцовăн политика очеркĕсен характерне ăнланма май параççĕ, анчах ку çеç мар-ха. Асăннă произведенисенче эпир памфлет енĕсене куратпăр. Кольцовăн очерк-памфлетсем те пур. Ун пеккисен шутне, тĕслĕхрен, «Пуанкаре — вăрçă» кĕрет (1930). Ку произведенире маларах французсен буржуалла деятельне Клемансона «тигр» тесе ят панă пулсан, Кольцов Пуанкарене «шакал» тесе чĕнет тата очеркне палла ученăй Брэм çак тискер кайăк пирки каланă сăмахсене кĕртет. Çавăн пекех вăл Библи сăнарĕсемпе усă курать. Очеркра вĕсем çивĕччĕн тата ĕненмелле вуланаççĕ. Автор çирĕплетсе каланă тăрăх, çак легендăсене тĕппи таранах пĕлмен çын та мифологие очерксене кĕртнин политикăлла пĕлтерĕшне лайăх ăнланать.

Тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсемпе çырнă очеркĕсем çав темăпах И. Эренбург хайланă произведенисене çывăх. Çак писательсен çулĕсем пĕр-пĕринпе пĕрре çеç мар хĕресленнĕ. И. Эренбург очеркĕсен кĕнекисенчи «Вăхăт виçи» (1930), «Англи» (1930), «Вăраха кайнă татăлу» (1934), «Çĕрле чикки» (1936) хайлавĕсенче Кольцов çитсе курнă хуласем çинченех сăмах пырать. Тепĕр чухне сăнласа панă пулăмĕсем те пĕр йышшисемех. 1931 тата 1936-1938 çулсенче, Испанири чи хĕрÿллĕ тапхăрта, икĕ писателĕ те унта çитсе курнă, очеркĕсене те час-часах пĕр пулăм çинченех çырса хăварнă. Тĕслĕхрен, Кольцовăн «Женева — мир хули» (1932), Эренбургăн «Çумăр тата Женева» (1935) очеркĕсенче вăрçă пуçланнассине чарса лартассишĕн вăйлăн кĕрешме пултарайман Нацисен Лигине хытă сивленĕ.

Эренбург очеркĕнче дипломатсен сăмахĕсене чарăнма пĕлмен çумăрпа танлаштарнă. Кольцов очеркĕнче

хулана килсе вăхăт ирттерекен дипломатсенчен тупăш илсе пурăнакан Лозаннăпа Женева çыннисенчен пĕрмай пĕр-пĕринпе хирĕçнĕшĕн кулнă, питленĕ. Икĕ очеркĕнче те иронияллĕ ячĕсен пĕлтерĕшне хăйсемех уçса параççĕ. Женева çумăрĕ çут çанталăк пулăмĕ çеç мар, Женевинче вара (апла пулсан, Нацисен Лигинче те) вăрçа хирĕç кĕрешнĕ пек ячĕшĕн кăна хăтланаççĕ. Очерксенче Эренбургпа Кольцов çивĕччĕн кулма-тăрăхлама тĕрлĕ меслетсем тупаççĕ.

«Енчен те кунта халĕ вăрçă налогĕсене ӳстернĕрен, хĕç-пăшал нумайлатнăран юнлă çĕнĕ тĕнче вăрçин хаярлăхĕпе халех хытă асапланакан кашни миллион çынран ĕç çыннисен чăн-чăн пĕр представителĕ килсен те мĕн пулса иртĕччĕ-ши?»[16]

Чăнах та çапла пулас тăк, Кольцов очеркĕн ирониллĕ ят пулмастчĕ, Женева та чăн-чăн мир хули пулатчĕ. Анчах... кунта çаплах-ха пуху йĕркине çирĕппĕн йышăнса хунă чухнехи пек лару-тăру. Ватă джентельмен шăмăллă пенсне тăхăнса ярать, креслинчен кăштах çĕкленет те председатель сĕтелне кĕмĕл мăлатукпа çăмăллăн шаккаса илет. Мăлатукĕ, пĕлес килет пулсан, ахаль мăлатук мар. Чи хаклă мăлатук. Гендерсон мистера ăна Амстердам ювелирĕсем туса панă: шаккăр, çавна илтсе пур çĕршывсем те хăйсен хĕç-пăшалне наци хăрушсăрлăхĕпе шайлаштарса чакарччăр! Куратпăр: ахаль çынсем çинчен çырнă чухне Кольцов çăмăллăн тăрăхлас стильтен пăрăнать, публицистика стилĕ çине куçать. Кĕмĕл мăлатуклă господин çинчен каланă чухне вăл унран тăрăхласа кулать. Апла пулсан, вăл та Эренбург пекех хăйне евĕрлĕ стилист, стиль уншăн пысăк пĕлтерĕшлĕ.

Илья Эренбургпа Михаил Кольцов, тĕнчери лару-тăру çинчен политика очерк-памфлечĕсем çырса, тĕнче вăрçи умĕн капитализм тĕнчине талантлăн тата тĕрĕс сăнласа кăтартнă.

Иккĕмĕш тĕнче вăрçи пуçланас умĕн совет писателĕсем çарпа оборона литературине йĕркелеме тăрăшнă. Çавнашкал литература шутне Горький публицистики, Вишневскипе Тихонов, Павленкопа Эренбург произ-

веденийĕсем кĕреççĕ. Çак ретре М. Кольцовăн чикĕ леш енчи лару-тăру çинчен çырнă хĕрӳллĕ очеркĕсем те тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ.

Чăваш писателĕсем те литературăра çарпа оборона тематикине сарсах пыраççĕ. Пĕтĕм Союзри очеркистсен 1934 çулта пулса иртнĕ канашлăвĕнче тата унăн умĕн «Литературная газета» тата «Наши достижения» журнал ирттернĕ дискуссисем чăн-чăн очерк оперативлă пулнине, вулакансем ăна питĕ йышлăн кăмăлласа вуланине палăртнă. Очерк вулакан кăмăл-туйăмне тивĕçлĕ витĕм кӳме пулăшать. Чăваш писателĕсен ассоциацийĕн IV съездĕнче: «Енчен те чăваш совет очеркĕ 20-мĕш çулсенче литературăра хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнман пулсан, халĕ эпир ку енĕпе пирĕн çитĕнӳсем пуррине палăртма пултаратпăр», — тенĕ. Çав вăхăтрах съездра хăшпĕр очерксем çак тарана çитсе те вĕтĕ темăллă, схемăллă пек çеç пулнине асăрхаттарнă.

Çар çинчен çыракан хастарлă очеркистсен шутне чăн малтанах Митта Петĕрне кĕртмелле. 1929-1931 çулсенче вăл тăван ялĕнче хăй йĕркеленĕ колхозра председательте ĕçлет, ял çыннисем çинчен очерксем çырать. Чăн пурнăçри çынсен сăнарĕсене калăплать, ĕлĕкхипе танлаштарса ушкăнлă ĕçри çитĕнĕвĕсене кăтартать, вĕсен ăс-тăнĕ, шухăшĕ-ĕмĕчĕсем çĕнелсе улшăнни çинчен калать. Уйрăм хуçалăхпа пурăннă Мĕкĕтепе Карачăм пĕрлешнĕ хуçалăхра телей тупаççĕ. Митта Петĕрĕ хăй тĕрĕссине çырнине вулакансене ĕнентерме танлаштарусемпе, сăпатлантарусемпе, метафорăсемпе уйрăмах «Кирилле» (1934), «Ĕне çинчен» (1932), «Юлташ йăмăкĕ», «Янăравлă сасă», «Сакăр ывăл ашшĕ», «Сад варринче», «Ултă çунатлă çилармань» (1937), «Сахрун салтак ачисем», «Ача çуралнă», «Иккĕмĕш ывăл», «Хĕр калавĕ» (1938), «Куçма кум», «Хĕвеллĕ кун» (1938), «Пăр», «Арăмĕпе упăшки» (1940) очерксенче анлăн усă курать. Çакна палăртмалла: малтанхи очерксенче колхоз тĕрлĕ ĕçсен фонĕ çеç шутланнă пулсан, каярахри очерксенче вăл пурнăç пулăмĕсене аталантаракан вăй пулса тăрать.

1932 çулта Митта Петĕрĕ хăйĕн ирĕкĕпе салтак ши-

нельне тăхăнать те виçĕ çула яхăн Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрать. Çартан таврăнсан та вăл час-часах тĕрлĕ чаçсене кая-кая çӳрет. Хĕрлĕ Çара кайичченех Митта Петĕрĕ Тăван çĕршыва сыхлас темăпа кăсăкланма тытăнать. Акă «Пушар» очерк. Çĕнĕ колхоз аталанса, вăй илсех пырать. Председателĕ, Кавĕрле, Хĕрлĕ Çарта пулнă питĕ хастар çын, ялти çамрăк яшсене Хĕрлĕ Çар çинчен ырласа каласа кăтартать, Хĕрлĕ Çар шăмшака çирĕплетет, çĕннине нумай вĕрентет, ӳсĕмсем патне чĕнет. Хĕрлĕ Çарта пулман яшă çын — каччă та мар. Пурин те Тăван çĕршыва вăйлатма тăрăшмалла. Унăн чикки урлă пĕр тăшман та каçса кĕме ан пултартăр. Анчах тăшман çывăрмасть. Çавăнпа ялсенче те çар вăййисем çине-çинех ирттереççĕ. Чикĕ леш енчи тăшман çинчен хаçатсенче те вуласа пĕлме пулать, унăн сĕмсĕрле ĕмĕчĕсем çинчен районтан килнисем те питĕ ăнланмалла каласа кăтартаççĕ. Анчах тăшман кунта та, чăваш ялĕсенче те, пур. Вĕсене пĕлме, курма йывăртарах. Темĕнле шухăшсем явăнаççĕ-ха эсĕ паллакан, анчах килĕштерсех кайман çын пуçĕнче? Тепри çынсен куçĕ умне те курăнса каймасть, çĕрлесенче çеç вăрттăн çӳрет, пытанса пурăнать, анчах çĕнĕ пурнăç тăвакан çынсене питĕ хытă çыртма хăтланать.

Çавсенчен пĕрне, Хĕлимун Хĕлимунчăна, кăтартса парать Митта Петĕрĕ «Пушар» очеркра. Ялтан тарса кайнăскер, тарса килнĕскер вăл. Çĕнĕ пурнăçшăн кĕрешекен, Хĕрлĕ Çаршăн тăракан колхоз председательне Кавĕрлене кашкăр пек кураймасть. Çавна пĕтерме улталаса Тараса хĕтĕртет вăл. Икĕ сăн-пит куратпăр эпир «Пушарта». Çурт çумĕнче чаршав... Шап-шурă чаршав карăнса тăрать. Шурă чаршав ăшĕнче Кавĕрле канлĕн канать хĕрӳ ĕçсенчен. Ула-чăла пĕлĕт сăнĕ шатраллă пичĕ çине ӳкнĕ. Çутă сăн. Савăнăçлă сăн. Сывă кăкри унăн тикĕссĕн сывлать. Тепĕр сăнĕ хăрушă. Çурла уйăх çуталсан курăнса каять вăл. Татăк-кĕсĕк пĕлĕтсем хупăрласан çав сăн та, аллинчи çĕççи те курăнми пулать. Пĕрре уйăх çутинче палăрать ун сăнĕ, унтан каллех çухалать. Те уйăхĕ пытанмалла ашкăнать çĕçĕллĕ Тараспа, те Тарасĕ унпа пытанмалла выляннă пекех хăтланать.

Çутă сăн çумнерех шăвăнать Тарас. Вĕçлеке çĕçĕллĕскер, анчăк пек кармашать Кавĕрле чаршавĕ патнелле. Хăшĕ хăшне? Вăранма ĕлкĕрĕ-ши председатель? Тарас пуçĕнче урнă шухăш туй туса алхасать: «Вĕлеретĕп. Эс çук пулатăн, Кавĕрле».

Çав хушăра Кавĕрле канлĕн çывăрать-ха. Калуçă икĕ çын шухăш-кăмăлне икĕ енлĕн, хире-хирĕç тытса пырать. Председателĕн савăнăçлă сăнĕ яланхи пекех илемлĕн, яланхи пекех ăшă кăмăллăн курăнать. Хальтерех сиксе тăрса, «Тараса алă панă май: «Мĕнле ĕçсем, Тарас пичче? — тесе ыйтасшăн туйăнать. — Çавна турăмăр... Кăна. Ыран тата тепĕрне туса хурăпăр. Ĕнерхине начартарах тунă иккен те, юрĕ... Вĕренмелле, вĕренмелле-ха! Акă эсĕ илемлĕ çамрăклăхна тарçăра пурăнсах ирттерсе ятăм, тетĕн, Тарас пичче. Асаплă пулнă сан пурнăçу. Текех апла пулмĕ, ĕçлеме кăна ан ӳркен. Санăн вăй пур. Харсăрлăху çителĕклĕ. Анчах тăтăшрах сыпкалатăн, çавă çеç сана кансĕрлет... Пăрахма пулать ăна, Тарас пичче. Ĕçке ĕçпеле улăштарма пулать».[17]

Анчах Тарас шухăшĕ улшăнман-ха: «Пурпĕрех! — сывласа илчĕ вăл. — Пурпĕрех вĕлеретĕп... Мĕншĕн пĕлмесен те... Лешĕ (Хĕлимун Хĕлимунчă) те тĕрĕс калать, те суя... Те эсĕ те суятăн».[18] Çук, çăмăл мар мĕн вĕри чĕре çине алăри вĕçлеке çĕççе çĕклеме, иккĕлене пуçлать Тарас. Кавĕрлене лайăхрах курасшăн вăл. Куçĕсене ахаль çеç хупăнтарнă сăнлăн выртать Кавĕрле... Унăн сăнĕ шухăша ярать. Хальтен-халь çумма ларса ĕмĕтлĕн ĕнентерсе калаçассăн туйăнать: «Пултаратăн эс, Тарас пичче. Сана юрататпăр. Анчах хăш-пĕр чухне шанчăксăртарах тыткалатăн эсĕ хăвна ху. Хунчку пăсать-и-мĕн санăн кăмăлна? Эсĕ пирĕн çын. Паллах, вăл — санăн хунчку... ывăлун куккăшĕ... арăмун тăван тетĕшĕ... Çапах та эс пулас пурнăç çынни. Хунчку — пĕтнĕ этем, пулас пурнăçшăн юрăхсăр мĕлке...»

Иккĕлентерме тытăнтарать калуçă Тараса: «Каялла шăвăнчĕ çĕçĕллĕ Тарас. Лупас арки айне чĕркуçленчĕ. Урнă шухăш тепĕр хут алхасма пикенчĕ унăн пуçĕнче:

«Каплипех хăварма юрамасть. Каплипех вăл сыввăн юлсан, мĕн калĕ мана хунчкам?.. Мĕн калĕ Хĕлимун?» — ниçта кайса кĕме аптăрать Тарас. Акă, «сиксе тăчĕ çĕçĕллĕ Тарас. Тарăхуллăн харсăрланчĕ. Чаршав патнерех шăвăнма хăтланчĕ. Çук. Такамран вăтаннă пек пулчĕ вăл, — никам та çук-çке. Такамран намăсланчĕ. Кĕсйине хăвăрттăн хыпашларĕ Тарас, шăрпăк кăларчĕ... Кивĕ лупасăн хăршанкă улăмлă арки... Уяр çанталăк. Ой! Хăрушă каç... Каçĕ тискер... Урамри лăпкăлăха çурса çухăрчĕ сас... Каçхи илемсĕр, уяр çанталăкшăн хăрушă сас.

— Пуша-а-арр! Пуша-а-а-аррр!»[19]

Вĕлерме хăяймасть Тарас Кавĕрлене, çапах та унăн килне вут чĕртсе хыптарать. Пӳрт вырăнне — никĕсĕ çеç, тăм кăмака тăлăххăн тăрса юлать.

Очеркра çĕнĕ пурнăç тăвакансен, вĕсен тăшманĕсен тата иккĕленекенсен кăмăл-туйăмне автор питĕ ĕненмелле, каçхи пейзажпа, синтаксис фигурисемпе вырăнлăн усă курса сăнласа кăтартать. Çĕнĕ çул çине тăнă хресченсене тăшмансем текех хăратаймаççĕ:

«— Ан пăшăрхан, старик! — терĕ Шутлаев председатель ашшĕне. — Хамăр сывă-ха. Акă Кавĕрле. Акă Якку... Амăшĕ ак. Пурсăр та сывă. Акă Куçма... Капрал... Эпĕ ак... Пурсăмăр та сывă. А, çурт. Çак мăшкăл çине тарăхса тытăнсан, ялта çук лайăх çурт лартса парăпăр сана...»

Очерк малашлăх путланнипе мар, ăна вăйланма çут çанталăк та пулăшасса ĕненнипе вĕçленет: «Тул çутăлма пуçларĕ. Юнтапа сăрчĕ енчен шурăмпуç ярăмланса килни палăрать».[20]

Патриотизм, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва хӳтĕлес темăна 1930-мĕш çулсенче хăйĕн пултарулăхĕнче хускатман чăваш писателĕсенчен никам юлман тесен те йăнăш пулмасть. Акă, Г. Савкайăн «Пурăнатпăр пурнăçа» очеркĕ. Ăна автор ĕлĕкхипе хальхине уççăнах, илемлĕх меслечĕсемпе анлăн усă курса танлаштарса çырнă.

«Пурăнатпăр пурнăçа!» — тенĕ Егор Иванчă. Чĕрне вĕççĕн утса, икĕ аллине çурăм хыçнелле тытса, тилĕнни пек чее куçĕсене кăшт чалăштарса, шĕвĕр сăмси тăрăх

пăхса çӳренĕ вăл. Ял тыткăнра пулнă, ял Егор Иванчăран именнĕ, шикленнĕ...

— Пурăнатпăр пурнăçа! Çапла вĕт, юлташ! — терĕ тет пĕрре Егор Иванчă Петюка, хулпуççинчен шарт! çапса илсе. «Юлташ» сăмаха юриех палăртарах каланă пекки тунă вăл.

— Эсĕ манăн юлташ мар, — тесе тавăрнă Петюк хуçана хирĕç.

— Мĕншĕн тата? Ха?! Хальхи саманара «юлташ» теççĕ вĕт-ха, — шăл витĕр кулса илнĕ вара Егор Иванчă.

— Мĕншĕн тесен эсĕ — хуçа, эпĕ — сан тарçу. Хуçапа тарçă юлташлă пулма пулатараймаççĕ вĕсем, — тенĕ ăна Петюк.

— Вăт, ху ман сĕтел хушшинче, манпа пĕрле чей ĕçетĕн пулин те мана юлташу вырăнне хумастăн.

— Сĕтелĕ санăн, тĕрĕс... Хуçа сĕтелĕ...

— Мĕн тăватăн эсĕ ху сĕтелӳпе? Санăн аçу та, асланаçу та — пурте çапла, сан манерлех ирттернĕ ĕмĕрсене... Каланă вĕт: «Патшаран патша çуралать, улпутран — улпут, кĕлмĕçрен — кĕлмĕç», — тесе. А эсĕ — çук çын ывăлĕ... Хуçана лайăх итлесен, унăн сăмахĕсене кĕрĕшсе пурăнсан тин çын пулăн эсĕ. Ăнлан, тавçăрса ил çакна! — тенĕ вăл Петюка.

Çакăн пек пурăннă Петюк: кĕлмĕçрен — кĕлмĕç... Анчах пурнăç ĕлĕкхи мар халĕ, урăхларах. Çакна Петюк курать, унăн хуçи те суккăр. Вăхăт çитет — Петюкăн ят тухать. Çапах та хуçа хăйне çаплах ĕлĕкхиллех тытать-ха, Петюка Хĕрлĕ Çара ăсатнă чух та вăл хăйĕн йăлине пăрахмасть-ха: хăйне пысăка хурать, витленĕ евĕр кулкаласа калаçать, çĕнĕ влаç сăмахĕсемпе усă курма та манмасть: «Ну, Петюк, сана салат çиме илсе каяççĕ... Юрать, кай. Таврăнсан хăвăн хуçу патне — Егор Иванчă патнех — таврăн. Ĕç çителĕклĕ ман. Кам ĕçлет — çав çиет».

Петюк сăмах та чĕнмен. Вăл хăйне хăй çеç каланă: «Чим-ха, тăхта эсĕ, тăранми кĕлетке»...

Хуçи кулянса юлнă: «Шалккă, — тенĕ вăл. — Вăкăр пек маттур та ырми-канми ĕçчен çынна Хĕрлĕ Çара илсе кайрĕç. Пăсăлса таврăнать ĕнтĕ унтан, паллах...»

Сисĕмлĕ пулнă вăл: Петюк, чăнах та, Егор Иванчă кăмăлне каймалла вĕренмен Хĕрлĕ Çарта. Унта чи пахи — дисциплина. Петюк икĕ çул хушшинче пĕрре те дисциплинăна пăсман, çав хушăрах Тăван çĕршыв вĕсемшĕн, рабочисемпе хресченсен пурнăçне улăштарассишĕн, лайăхлатассишĕн мĕн тери пысăк вăй хунине Хĕрлĕ Çарта питĕ лайăх курнă, Тăван çĕршыва тăшманран кашни утăмра куç пек упрамаллине, хŷтĕлемеллине ăсĕпе те, чунĕпе те туйнă, ăнланнă. Хуларан пĕрпĕр спектакльпе килнĕ артистсен ăсталăхĕпе киленсе, савăнса çеç пурăннипе пĕлĕве, культурăна ŷстерме çуккине чухлама тытăнать Петюк. Егор Иванчăшăн мар, хăй пек хресченсемшĕн мĕнпур вăя, пултарулăха, хастарлăха памаллине ăнкарать, çав ял пуянĕн тарçинче ĕçлесе ухмахланнине аякран лайăхрах курать вăл, хăйне Егор Иванчă Хĕрлĕ Çара мĕнле сăмахсемпе ăсатнине аса илет те, çĕршыв умĕнче пысăк парăма кĕнĕ евĕр, çар техникине татах та тăрăшарах вĕренет. Киле таврăнсан ялта пачах çĕнĕлле пурăнма тытăнмалла, ыттисене те хăй тавра пуçтармалла. Пĕр çын сурать — типсе пырать, çĕр çын сурать — кŷлĕ пулать. Еплерех тĕрĕс сăмахсем каланă ăслă пуçлă, пурнăçа темĕн тĕрлĕ чăтса курнă ватă çынсем. Петюк та Хĕрлĕ Çарта темĕн те курчĕ, темĕн те чăтрĕ, темĕн те вĕренчĕ. Асĕ те пысăкланчĕ унăн, тавра курăмĕ те анлăланчĕ. Пĕлет халĕ: ялта йĕркеленĕ колхоз мĕн чухлĕ тĕреклĕрех, Тăван çĕршыв та çавăн чухлĕ вăйлăрах; Тăван çĕршыв мĕн чухлĕ вăйлăрах, тăшман та унран çавăн чухлĕ шикленерех парать. Ку вăл — пурнăç законĕ, тĕрĕс пурнăç йĕрки — вăт мĕнпе хăратмалла тăшмана. Тăван çĕршыва хăватлă хĕç-пăшалпа, тухăçлă та тулăхлă тырăпа çеç хŷтĕлеме пулать. Кашни утăмра сыхă пулмалла! Акă мĕнле Хĕрлĕ Çар салтакĕн тивĕçĕ. Çакна лайăх пĕлет Петюк. Г. Савкай хăйĕн очеркĕнче Петюкпа пулса иртнĕ çав сыхăлăха ĕненмелле кăтартакан пĕр пулăма сăнласа кăтартать.

«...Тĕттĕм, йĕп чиксе куç курми тĕттĕм каç. Пĕлĕтсем хупăрласа килнĕ. Çиçĕм çиçсе тăнă. Петюк постра тар складне хуралланă. Сасартăк чăш-ш-ш! тунă та, пĕр самантранах аслати шартлаттарса çапнă. Петюк

ăнсăр пулнă... Ăн кĕрсенех сиксе тăнă та татах склад тавра пăхса çаврăннă. Сасартăк ăна склад çийĕнче пĕчĕк çулăм чĕлхи вĕлтлетсе сикни курăнса кайнă. Ку — çиçĕмрен тивнĕ çулăм пулнă мĕн. Çиçĕм складăн черепицăллă çивиттине пĕр енчен çĕмĕрсе, тепĕр енчен тухса кайнă иккен! Çав самантра пĕтĕм склад тĕппипех пĕлĕте çĕкленсе саланса кайма пултарнă. Анчах Петюкăн шикленме вăхăт пулман. Вăл тӳрех караул начальникĕ патне сигнал панă.

— Тревога!»[21]

«Черепица айĕнчи йывăç стропилăна çулăм хыпса илнĕ, — пĕлтерет Савкай. — Караул персе çитнĕ, вара тар склачĕ çинчи пушара вăхăтра сӳнтернĕ. Петюк часовой вилĕмрен хăтăлнă, юлташĕсене те, вун сакăр паттăр хĕрлĕ армееца вилĕмрен çăлнă. Çакăншăн Петюка полк командирĕ пĕтĕм полк умĕнче тав тунă, ятран çырнă кĕмĕл сехет парнеленĕ.»[22]

Илемлĕ очерк хăвăрттăн аталанни пĕрремĕш пилĕк çуллăх çулĕсемпе тачă çыхăннă. 1929 çул совет очеркĕн историйĕнче çак жанр вăйлăн аталанма тытăннипе палăрса тăрать. Хаçатсемпе журналсене чăн-чăн очеркăн вăйлă хумĕ капласа хурать. Çак хум театр сценине те çавăрса илет, унта «сцена очеркĕсем», «завод çĕнтерĕвĕсен хроникине, тĕслĕхрен, Н. Погодинăн «Темп» (1929) хроникине кăтартаççĕ. «Очерк фрончĕ кинона та кĕрсе каять».[23]

Очерк çакăн пек хăватлăн аталаннин сăлтавĕ пур. Совет очеркĕ хăй çуралнă-çуралманах литература жанрĕ пек аталанма пуçлать. Çав жанр çĕршывăн политика, хуçалăх, культура пурнăçĕпе çирĕп çыхăнать. Малтанхи, çĕнелӳ тапхăрĕнчи вунă çул пĕрремĕш пилĕк çуллăхăн аталанупа хăватлăх масштабĕсене курман пекех, совет очеркĕ те 1929 çул хыççăн тарăнланса, сарăлса аталанать. Çавнашкал курăмлă пысăк утăмсем тума очерка çĕнĕ пурнăç сĕткенĕпе çуралса ӳснĕ çĕнĕ культура кадрĕсем, çамрăк пролетари писателĕсем те пулăшаççĕ.

1929 çултах «Правда», «Комсомольская правда» хаçатсем, «Работница», «Сибирские огни» тата ытти ха-

çатсемпе журналсен редакцийĕсен çумĕнче очеркистсен ушкăнĕсем йĕркеленеççĕ. 1929 çултах Горький пуçарнипе «Наши достижения» журнал тухма пуçлать. Çак журнал вулакансене çĕршывра пулса иртекен улшăнусемпе, тĕпрен илсен, очерксем урлă паллаштарать. Çав вăхăтрах М. Горький заводсемпе фабрикăсен историйĕпе паллаштаракан кĕнекесем çырса кăларассине йĕркелесе ярать. Жанр енчен пăхсан ку кĕнекесем пысăк калăплă очерксем шутланаççĕ. Вĕсене çырас ĕçе Б. Галин, Я. Ильин, К. Паустовский, З. Рихтер, М. Шкапская тата ыттисем те хастарлăн хутшăнаççĕ. Халиччен нихçан очеркпа аппаланман писательсем те очерк жанрĕпе çывăхланаççĕ. «Искусствăн тĕп задачисенчен пĕри, — тесе çырать «Литература хаçатĕнче» А. Луначарский, — пирĕн çĕршыва хăйĕн çинчен каласа кăтартасси. Статистика çĕнĕлĕхĕсем çинчен писатель пери, художник кисчĕ пек ниепле те туллин те илемлĕ мелсемпе каласа параймасть. Çак енĕпе ĕçлесси тĕнче пĕлтерĕшлĕ чаплă ĕç пулса тăрать».[24]

Пирĕн «çĕршыва хăй çинчен каласа кăтартас шутпа», рабочисене, пионерсене, колхозниксене çынсен тĕлĕнмелле ăнăçлă ĕçĕсемпе уйрăм ушкăнсен тата çынсен паттăрлăхĕпе паллаштарас тесе, совет очеркисчĕсем шахтăсене, стройкăсене, завод цехĕсемпе колхоз фермисене туха-туха каяççĕ. Вĕсем Кара-Кум пуш хирĕ урлă каçаççĕ, Чукоткăна çитеççĕ, Памир тăвĕсем çине улăхаççĕ.

«Очерксен анлă юхăмĕ, — тесе çырать М.Горький 1930 çулта, — ку таранччен пирĕн литературăра палăрман пулăм. Хăйĕн çĕршывне пĕлес ĕç пирĕн патри пек хăвăрт та ăнăçлăн нихçан та ниçта та пулса иртмен. Очеркистсем нумай миллионлă вулакансене вĕсен вăйхавалĕпе совет çĕршывĕн калама çук анлă талккăшĕпех мĕн-мĕн туни çинчен каласа параççĕ».[25]

Шăпах çавнашкал очерк шутланать те ĕнтĕ Г.Савкайăн «Пурăнатпăр пурнăçа!» хайлавĕ. Унăн тĕп геройĕ Петюк, Хĕрлĕ Çартан çĕнĕ пурнăç вăйĕпе авăрланса тавраннăскер, Анăçра хăватланса пыракан фашизм çинчен те, ăна хирĕç кĕрешме промышленноçе вăйлăн аталан-

тарнисĕр пуçне ялсенче çĕнĕлле хуçалăхсем йĕркелесе тĕреклетмеллине те ăнланать. Хастарланать вăл Хĕрлĕ Çарта, çивĕчленет. Çавăнпа яла таврăнсанах «Авангард» колхоз йĕркелет. Пĕрремĕш хут пĕрлешӳллĕ хуçалăхра вăйлă тыр-пул ӳстерсе пуçтарса кĕртнĕ хыççăн пухăннă аслă пухура Петюк (халĕ вăл Петĕр Матвейчă ĕнтĕ) хавхаланса çапла калать:

— Паян лайăх акă, ыран тата лайăхрах пулĕ. Капла марччĕ, капла пулман вĕт, кашниех пĕлетпĕр. «Кĕлмĕçрен кĕлмĕç çуралать», — тетчĕç ĕлĕк кулаксем. Çук, ку тĕрĕс мар пирĕн çĕнĕ саманара. Вăл ĕлĕк çапла пулнă. Пăхăр халĕ эсир Петĕр Матвейчă, Павăл Митрăч, Лука Митрофанчă тата ыттисем çине те. Халĕ пирĕн «Авангард» колхоз ĕçченĕсем, тăрăшса ĕçлекенсем, пурте пуян çынсем пулчĕç ĕнтĕ. Кунашкал вăйпа, йывăр килсен те, нименле тăшмана та парăнмастпăр.

Чунĕпе çĕкленнĕ 65 çулхи старик Васили Семенчă та пухура çапла каласа хурать:

— «Ватă çын — тăватă çын шутне тăрать», — тетчĕç те ĕлĕк, апла мар çав: çамрăксем пирĕнтен ирттереççĕ акă! Тахçанах хырçă-марçăна тӳлесе татнă — мансах кайрăм, палли те пулмарĕ. А ĕлĕк ай-яй аватчĕç пире. Сĕветчĕç виçĕ хут тире. Совет влаçĕ пулсан та чухăнсемшĕн колхоз тăвиччен йывăрлăхсем пĕтменччĕ.

Харăссăн алă çупаççĕ старик сăмахне.

— Пурăнатпăр пурнăçа! — тенĕ пекех пулчĕ ку старик сăмахне хапăлласа алă çупса яни».[26]

Патриотизм теми чăваш очеркистикинче вăйланнă — çемĕн вăйланать. Чăваш çамрăкĕсем Хĕрлĕ Çара ят тухсан çеç мар, хăйсен ирĕкĕпе те кайма тытăнаççĕ. Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăшманпа кĕрешме вĕренеççĕ, командирсем пулса тăраççĕ. «Таврăнсан» тесе ят панă хăйĕн очеркне Владимир Бараев. Илемлĕ публицистика мелĕсемпе усă курса, ку очеркра автор совет саманинче çын мĕнле улшăннине, вăл, тӳрĕ çултан пăрăнса, улталакансен çулĕ çине лекнине, ӳсĕрпе ашкăнса тĕрмене çакланнине, унта вăл мĕнле воспитани илнине, чунне темĕн тĕрлĕ усалсенчен тасатса киле çĕнĕ йышши моральпе пуянланса таврăннине кăтартнă. Очерка ав-

торпа очерк геройĕ хушшинче пулса иртнĕ калаçу тытăмĕпе йĕркеленĕ. «Эпĕ, ристан пулнăскер, тĕрмерен таврăнатăп, — паллаштарать хăйпе Арсени поезд вагонĕнче пĕрле ларса пыракан калавçă-автора. — Эпĕ пĕр çула яхăн пултăм тĕрмере. Ярасса мана пилĕк çуллăха янăччĕ. Шухăшламан эпĕ унта лекессе, тĕрме тени ман асра та пулман. Анчах ĕмĕр тăршшĕ вĕрен тăршшĕ мар, пурнăçа пурăнса ирттересси те хир урлă каçасси мар, тенĕ ваттисем. Çак сăмахсене вĕсем темиçе çĕр çул хушши сăнаса пынă тăрăх, математикăри формула пек тĕрĕс каланă... Мана эрех ĕçсе хулиганла ĕçсем туса çӳренĕшĕн хупрĕç. Тĕрĕс хупнă. Халĕ шухăшлатăп та акă, йĕрĕнес килет хам пурнăçăмран. Темĕн те хăтланнă вĕт эпĕ. Шухăшласа пăхсан: пĕр енчен, кулассăм килет, тепĕр енчен, — йĕрессĕм килет. Пулать вĕт-ха!»[27]

Унăн арăмĕ те пур иккен, ывăлĕ виççĕ тултарса тăваттă çине пуснă, ман атте Совет Союзĕн Геройĕ, тесе калама хăнăхнă. Автор-калавçă пăртак тĕлĕнет: епле-ха вăл пилĕк çул вырăнне пĕр çултанах таврăнать?

— Пирĕн тăван çĕршывра таса ĕçрен чысли нимĕн те çук, — ăнлантарать ку. — Лагере çитсен пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме тытăнтăм. Эпир пĕр пысăк шыв çинче сулăсем çыхаттăмăрччĕ. Ĕç ăнать хайхи ман. Нормăна иквиç хут ытларах тултарма пуçларăм... Тăват çĕр тенкĕ илеп уйăхне. Стахановец, рекордист теме пуçларĕç. Стена хаçачĕсем çине ман çинчен статьясем çыраççĕ. Пĕрре сăн ӳкерчĕке кăларчĕç. Апат-çимĕç аван, ĕçле кăна. Пурăнсан-пурăнсан хам пурнăçăм çинчен, ĕçри çитĕнӳсем çинчен Мускава, Кремĕле çыру çырма шухăш тытрăм. Çырса ятăм. Халь ак хăвах куран, сан умăнта тăратăп. Тăван аттерен те хаклă пулчĕç Кремĕлтисем.

Çакăн пек кăткăс проблемăсем хускатма та хăю çитереççĕ чăваш очеркисчĕсем. Çавăнпа вулакансем те вĕсен хайлавĕсене кăмăлласа кĕтсе илеççĕ, юратса вулаççĕ, пурăнма вĕренеççĕ. Ку енчен илсен, çакнашкал очерксен воспитани ĕçĕнчи пĕлтĕрĕшĕ питĕ пысăк пулнă ун чухне.

«Çапах та, тĕрлĕ çынсем пулĕ унта?» — тесе ыйтсан, Арсени çапла хуравлать:

— Пур, анчах сайра тĕл пулаççĕ иртĕхекенсем. Иртĕхме памаççĕ унта. Пур çав пурнăç юлашкисем, телей ăçта иккенне ăнланайманнисем... Тӳрĕ ĕçлесшĕн мар вĕсем. Айăплă çынсене, айăпне кура ĕнтĕ, çĕнĕ ĕçе пĕтĕм чĕререн юратса тунипе юсасси пирĕн çĕршыв политики, тĕнчере пĕр политика вăл. Вăт, çавна тавçăрса илейменнисем те пулкалаççĕ хушăран.

Очеркри ĕçсене паянхи куçпа пăхсан, вĕсене илемлетсе çырни сисĕнет. Анчах литература тĕпчевçисем калани те, историксем вĕрентни те пур: хăш вăхăтри пурнăç пулăмĕсене çырнине тишкеретĕн, вĕсем çине çав вăхăтри куçпа пăхса хакламалла. Яланах мар, паллах. Çапах та — нумай чухне. Акă, очерк геройĕ Арсени тĕрĕсех калать:

— Ĕлĕкхи каторгăри ĕçсемпе хальхи лагерьсене танлаштарсан — пин çул утса çитме çук улшăну! Ĕлĕкхи каторжниксем сăнчăрланă алли-урипе вун пилĕкшер, çирĕмшер çул хушши пĕр ĕç туса ларнă. Сăмахран, кирпĕч хăйрама хушнă пулсан, вăл мĕн срукĕ тухичченех хĕртнĕ кирпĕчсем хăйраса ларнă. Хăшĕ тата алтнă шăтăксене тепĕр хут тултарса каллех алтнă. Кайран каллех тăпра тултармалла пулнă, унтан каллех, каллех... Çакăн пек ĕçре ухмаха ерекенсем, хăйсене хăйсем вĕлерекенсем те сахал мар пулнă.

«Халь таврăнсан ăçта ĕçлес тетĕр?» — тесе ыйтсан, Арсени малтанхинчен те интересленсерех тавăрать: «Ворошилов патне çыру çырас тетĕп. Ман тăванăмсем Инçет Хĕвел тухăçĕнче, Хĕрлĕ Çар ретĕнче, — манăн та çавăнта каяс кăмăл пур. Хасан кӳлли патĕнче çапăçнă чухне каясшăнччĕ. Ыйăх килми пулчĕ. Çĕр çывăраймастăп. Тухса тарас терĕм те пĕрре, кайран хамах айăпласран хăрарăм. Питĕ каяс килетчĕ. Çав тискер йытăсене тулласа тăкас килетчĕ, икĕ тăванăмпа пĕр рете тăрса арăслан пек çапăçас килетчĕ. Нумай шухăшларăм эпĕ хам çинчен... Иртнĕ пурнăçăма çĕнĕрен пăхса тухрăм. Асаннепе пĕрле ыйткаласа çӳренине, çумăрне-мĕнне пăхмасăр кĕтӳ хыççăн сĕтĕрĕннине аса илтĕм. Капиталистсен шахтинчен хăрах куççăр таврăннă атте аса килчĕ... Лутра пӳрт умĕнче йĕрсе ларакан анне куç умне

шăвăнса тухрĕ. Колчака хирĕç çапăçма хăй ирĕкĕпе кайнă тăван пичче аса килчĕ... Вăл офицерпа хире-хирĕç тытăнса çапăçнине, çав вăхăтра унăн паттăр кăкăрне темиçе казак сăнни пĕр харăссăн тăрăннине те асăма илтĕм... Сахал мар ятларăм хама хам... Халь ĕнтĕ, эрех тинĕсĕ урлă чăмса каçас пулсан та, пĕр çăвар сыпас çук. Эрех ĕçнĕшĕн никама та ылтăн мăйрака лартман... Куран пуль, халь эпĕ вĕр-çĕнĕ червонец пек таврăнатăп. Пĕр сăмахпа каласан, хама хам Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулма тивĕçлĕ çын тесе шутлатăп... Ывăлăма валли выляма-лли тупăсем, тĕрлĕрен хĕç-пăшалсем туянтăм, — вăл чемоданне уçрĕ, унта пĕчĕк тупă, танк, винтовка, наган, самолет, темĕн те пĕр пур. Ачине те вăл пĕчĕкренех çарти пек вĕрентсе, Хĕрлĕ Çара тивĕçлĕ çын ӳстерсе пама шутлать».[28]

Тепĕр хут тĕл пулсан, автор-калуçăна хăна çуртĕнче Арсени шурă хут тыттарать. Акă мĕн çырнă пулнă унта:

«Арсений В. юлташ.

Сирĕн икĕ тăванăр Инçет Хĕвел тухăçĕнчи полкра чи кăтартуллă танкистсенчен пĕрисем пулса тăраççĕ. Вĕсем Хасан кӳлли патĕнче Япони йыттисене аркатса тăкнă вăхăтра та хăйсен паттăрлăхне, юратнă çĕршывăннешĕн тумлам юн юлмиччен çапăçма хатĕррине тата çар ĕçĕнчи маçтăрлăхĕпе пултарулăхĕсене лайăх кăтартса панă. Эсир Ворошилов юлташ патне çырнă çыру тăрăх, районри Çарĕç комиссариачĕ сире тата сирĕн ĕçĕрсене пĕлсе, тивĕçлĕ характеристика парса, хăвăрăн тăванăрсем патне яма хирĕçлемест.

Районти Çарĕç комиссарĕ капитан Архипов».

— Каян эппин?

— Каятăп! — терĕ вăл, хĕвел пек çуталса».[29]

Пачах урăхла геройсемпе тĕл пулатăн К. Пайрашăн «Лида йăнăшĕ» очеркĕнче. Ку очеркра писатель республикăра хальтерех аталанма пуçланă промышленность специалисчĕсене сăнласа кăтартать. Очеркра икĕ çын, икĕ инженер. Очерк вĕçĕнче виççĕмĕшне куратпăр. Хуларан инçех мар, паллă аслă шыв хĕрринче канмалли çурт вырнаçнă. Çурчĕсене йĕри-тавра вăрман хупласа

тăрать. Тĕмĕсем хушшинче, вăрман сайраланнă май, симĕс сăрăпа сăрланă тенкелсем лартса тухнă. Çав тенкелсенчен пĕрин çине интеллигентлă хĕрарăм ларнă. Пуçĕнчи шлепкине вăл хăйпе юнашар тенкел çине хывса хунă. Çак майпа унăн яка тураса кăпăшлантарнă сарă çӳç пĕрчисем хутран-ситрен çăмăл çилпе варкăшса тăнă. Чĕркуççийĕ çинче хĕрарăмăн çурмалла уçса хунă кĕнеке выртнă.

«— Сывă-и, гражданка?

Хĕрарăм çаврăнса пăхрĕ. Сăнран вăл ватах кăтартмасть, çамки çийĕн картланман.

Хĕрарăм хăй патне кĕтмен çĕртен пырса тăнă арçынна пăхкалама пуçларĕ. Арçынĕ симĕс коверкотран çĕлетнĕ гимнастеркăпа галифе, хром атă тăхăннă. Кăкăрĕ çинче Хĕрлĕ Ялав орденĕ. Сăнран, чуххăмăн илсен, хĕрарăмран кăшт çеç кăна аслăрах курăнать.

— Канатпăр-и? — ыйтрĕ орденлĕ çын, хĕрарăм çывăхнерех пырса.

— Çапла, эсир те-и?

— Эпĕ те, пĕр кунлăха... Анчах ыранлăха юлма кăмăл пур, вырăнĕ питĕ илемлĕ кунта, пăхса çаврăнтăм... — орденлĕ çын хĕрарăм çумне юнашар пырса ларчĕ.

— Каçарăр, мĕнле сирĕн хушамат, ят? — паллашнă май ыйтрĕ хĕрарăм.

— Сосин Николай Петрович, — вăл та хĕрарăм вулакан Фурмановăн «Чапаев» романне темиçе те вуланă иккен, вуланăçемĕн аса килеççĕ мĕн вăрçă кунĕсем. Мĕншĕн тесен вăл та Чапаев дивизийĕнче шуррисемпе çапăçнă.

Хĕрарăм Сосин çинчен илтнĕ-ха, вăл парти ĕçĕнче ĕçлет. Пĕлет: Сосин хулана килни нумаях та пулмасть»,[30] — çапла пуçланса каять кану çуртĕнчи приключенияллĕ паллашу. Пайраш «Лида йăнăшĕ» очерка приключени меслечĕсемпе анлăн усă курса çырнăран çăмăллăн вуланать вăл. Очерк темине те çавăнпа малтанах уççăн уйăрса илейместĕн, авантюрăллăрах япала ку, тесе те шутласа илетĕн малтан. Анчах тĕрĕсех-ши ку? Автор юри, ятарласа усă курмасть-ши кунашкал сюжет-композицине?

«Хĕрарăм Сосин çумне юнашартарах сиксе ларать.

— Каçарăр, Сосин юлташ, тĕл пулнă чух сăмах майĕн ыйтса пĕлес килет сирĕнтен, ман упăшка та Чапаев дивизиийĕнче командир пулнă, сирĕн пекех Хĕрлĕ Ялав орденĕ илнĕ, палламан-и эсир ăна?

— Хушамачĕ?

— Кравков, Михаил Ермолаевич.

— Çук, урăх полкра пулнă пулĕ вăл, эпĕ... кавалеринче пулнă.

— Чăн, пехотăра пулнă.

— Апла пулсан, каçарăр, гражданка, пĕлейместĕп... Кстати, мĕнле сирĕн ят?

— Лидия Ивановна.

— Упăшкăр ăçта ĕçлет сирĕн?

— А... вилнĕ вăл. Шуррисем вĕлернĕ ăна...»

Çапла паллашаççĕ пĕр паллă завод инженерĕпе Лидия Ивановнăпа Сосин Николай Петрович. Лидия Ивановна хăй ăшĕнче шухăшлама юратакан çын пулнă. Хăй ĕçне юратнă майăн кирек ăçта кайсан та хăй ĕçĕ çинченех вăрттăн шутласа çӳренĕ вăл. Калас пулать, çавнашкал характер Лидия Ивановнăна хăйĕн ăслăлăх ĕç майĕпе питех те килĕшӳллĕ пулнă. Чăн, пур чухне те мар, анчах хутран-ситрен кĕтмен çĕртенех ун пуçне çĕнĕ шухăшсем пырса кĕнĕ. Çав çĕнĕ шухăшсенчен хăш-пĕрисене Лидия Ивановна хăй ĕçлекен заводра пурнăçа кĕртнĕ те ĕнтĕ.

Майĕпен Сосин Лидия Ивановна хими заводĕнче ĕçленине пĕлет, иккĕшин хушшинче килĕшӳлĕх туйăмĕ те çуралнă пек пулать вĕсен. Сосин каланине ĕненес пулсан, унăн арăмĕпе ачисене те шуррисем персе вĕлернĕ. Арçынна Лидия Ивановна сăнĕ, тепĕр енчен, унтан та ытларах, Лидия Ивановна инженер пулни тата унăн ĕç вырăнĕ интереслентерчĕ. Тепре ăна курма кайсан, вăл питĕ хаваслине курчĕ. Мĕншĕн? Мĕнле сăлтавпа?

«— Мĕнрен килет çакнашкал улшăну сирĕн, Лидия Ивановна?

— А-а, пĕлетĕр-и, паянччен мана пĕр япала калама çук хытă шухăшлаттарнă; кăнтăрла та, каçхине те

тухман пуçран. А, пĕлетĕр, шутлама яланах пĕччен лайăх, çынсем хушшинче шухăш сӳрĕлсе каять...

— Ыйтса пĕлме юрать-и, мĕн çинчен шухăшланăха эсир?

— О-о, секрет вăл. Ун пирки çур çул шутланă эпĕ...»

Калаçу малалла аталанать, авантюрăллă-приключениллĕ сюжет та ерипен çăмха пек сӳтĕлсе пырать. Пĕрпĕрне кăмăллаççĕ Лидия Ивановнăпа Сосин. Николай Петрович мăшăрлану пирки те сăмах хускатать. Лидия Ивановна, завода таврăнсан, хăйне лабораторире пулăшакан Никита Сергеевича секретлă япали çинчен каласа кăтартать: вĕсем пĕрле ĕçлеççĕ, вĕсен пĕр-пĕринчен пытармалли нимĕн те çук.

— Эпир сĕннĕ, тĕрĕсрех каласан, эсир шутласа кăларнă аппарата йышăннă, Мускавран пĕлтерчĕç.

— Неуштă?.. Ĕненес килмест...

— Ĕненĕр. Тата... производство пирĕн асланмалла теççĕ, çитмен приборсем шăпах килсе çитрĕç, çĕнĕрен те нумай, хăшне-хăшне хам та курман.

Çĕнĕ приборсене ĕçлеттерме тытăнаççĕ, Лидия Ивановнăн çĕнĕ шухăшĕсене тĕрĕслеççĕ. Çамрăк хĕрарăм канма та пĕлмест. Вăл ашшĕнчен империализм вăрçинче тăлăх юлнă, Граждан вăрçинче упăшкине çухатнă. Тарăхнă вăл тăшмана, анчах ăна тĕттĕм пуçпа тавăрма çук. Çавна астуса, Лида, кайран пулсан та, вĕренме тытăнать. Рабфак пĕтерсе тухсан, аслă шкула вĕренме кĕрет, хими институтне пĕтерни пилĕк çул çитет ĕнтĕ. Пайраш хăйĕн очеркĕнче çĕнĕ çитĕнӳсем, çĕнĕ хăватсем патне чĕнет, хавхалантарать. Совет патшалăхĕ вĕрентсе кăларнă çеç мар, ĕçлеме те пĕтĕм условисем туса панă. Мĕншĕн савăнса ĕçлес мар ĕнтĕ? Тăван çĕршыва çирĕпленме, ӳсме, сарăлма пулăшас шухăш кăна пулнă Лида пуçĕнче. Вăл хăйĕн ĕçĕнче пысăк ӳсĕмсемех тума пуçлать. Сыхлăх енĕпе тунă унăн хаклă ĕçĕсене чылайăшне йышăннă ĕнтĕ. Вăхăт çитсен, тăшмансем тапăнма тăрсан, вĕсемпе Хĕрлĕ Çар кирлĕ пек усă курĕ.

Юлашки кунсенче Сосин авторитечĕ татах ӳсрĕ. Çумăр шапăртаттарса çунă каç унăн Лидия Ивановна хваттерĕнчех çывăрма юлма тиврĕ. Çĕрле вăл вырăн çин-

чен анчĕ, пĕр самант Лида сывланине итлесе тăчĕ. Шăрпăк çутса пăхрĕ, каçалахи калаçăва аса илчĕ.

— Çапах та, çак халь кинора кăтартнă шпионсем хăйсен пурнăçне карта çине лартма мĕнле хăрамаççĕха? — ыйтрĕ Лидия Ивановна киноран таврăннă чух.

— Шпионсем вĕсем чи хаяр тăшмансем, вĕсен пурнăçĕ, кирек мĕнле пулсан та, карт вăййи çинче... Виличчен парăнмасть тăшман, а пирĕн задача ... вĕсене вăхăтра сиссе, сăтăрла ĕçсем тăвиччен çапса хуçасси пулса тăрать. Кстати, — шăппăнрах каларĕ Сосин, — кунта та пулнă вĕт вĕсем.

— Пулнă çав, — сассине шăппăн кăларчĕ Лида та, — ăнланăр, паллана çынсемех пулнă хушăран, халь те çŭç вирелле тăрать...

— Яланах тимлĕ пулас пулать, Лидия Ивановна.

Çапла асăрхаттарчĕ çамрăк хĕрарăма Сосин, хăй вара, кил хуçи вăранмасăр çывăрнине курсан, чĕрне вĕççĕн канмалли пŭлĕме тухрĕ, алăкне хупрĕ, электричество çутрĕ. Хăвăрт сĕтел çинче ухтарма пуçларĕ — нимĕн те тупаймарĕ. Комод çинче портфель выртнине асăрхарĕ, пырса илчĕ — каллех çавăрттарма пуçларĕ, пĕр хут туртса кăларчĕ, тепре, тата тепре. Лида хучĕсем çинчен шурă хут татăкĕ çине хăвăрт темĕнле цифрăсем çырса илчĕ, темĕн ŭкерчĕ. Унтан Лида хучĕсене каллех портфеле хурса, çырса илнĕ хутне хутлатса хĕвне чикрĕ. Электричествăна сŭнтерчĕ, чĕрне вĕççĕнех çывăракан пŭлĕме тухрĕ. Лида нимĕн те сисеймерĕ.

Приключениллĕ сюжет аталанать. Пĕррехинче Никита Сергеевичпа Лида Сосин докладне итлеме кайрĕç. Ăста калаçнăшăн халăх хыттăн алă çупрĕ Сосина. Пĕр Никита Сергеевич кăна ал çупмасăр ларчĕ. Темшĕн питĕ тимлĕн сăнарĕ вăл Сосина. Кашни çаврăнăмне, алли-семпе сулнине, сассине, пит-куçне, çŭçне, пуринчен ытла çамки çинчи паллине пăхрĕ.

— Хм... Çамки çинчи палли çакăн пекехчĕ-ха ун. Тем тесен те çавă... Хушамачĕ урăх... улăштарнă пулмалла, — Никита Сергеевич залран Сосин тухасса çынсенчен юлса кĕтсе тăчĕ, Лида — урамра.

— Воскресенский! — чĕнчĕ Никита Сергеевич.

Сосин, астуса илейменнипе, йăлт! çаврăнса пăхрĕ.

— Значит, çавах, - шутларĕ Никита Сергеевич, кĕçех тăшман тетчĕ ăна вăл, анчах сăмаха часах урăх еннелле çавăрса ячĕ. — Чимĕр-ха, Сосин юлташ, ман сирĕнтен пĕр-ик сăмах ыйтса пĕлмелли пур...

— Тархасшăн.

— Хăш çулта, кам панă сире орден?

— Фрунзе, а эсир мĕн?..

— Суятăр, хушамат та сирĕн Сосин мар!

Сосин Никита Сергеевич çине урса кайнă пек сиввĕн пăхса илчĕ те, хирĕç сăмах чĕнмесĕр, залран хăвăрт тухса утрĕ.

Тепĕр кунĕнче ирхине Никита Сергеевич сасартăк çухалнă. Следстви органĕсем унăн килне кайса ухтару тунă. Унта вĕсем акă мĕнле документ тупнă:

«Паянхи пекех хĕвеллĕ ăшă кун... Кĕтмен çĕртен Чапаев вилнĕ тенĕ хуйхăллă хыпар килсе çитрĕ... Кайрăмăр наступление. Пĕр яла канма çитсе чарăнтăмăр. Ял вĕçне ик енчен те çирĕп дозорсем тăратрĕç. Кĕçех, мĕн ку?.. — шуррисен кавалерийĕ хупăрласа илчĕ имĕш пире. Эпĕ Кравков командинченччĕ... Кăшт çеç çитеймерĕмĕр ял хыçне пытанма — пулемет касса кайнипе юлташсем ӳкме пуçларĕç. Мана пĕçĕрен тиврĕ, Кравкова хулран пулас... Иксĕмĕр те çĕре тĕшĕрĕлсе антăмăр. Шурă офицер юланутпа хăваласа çитсе, Кравков тапкаланнине кура, лаши çинчен ялт! сиксе анчĕ те Кравков еннелле хĕçĕпе сулса ячĕ. Унтан, Кравков кăкăрĕ çинчи Хĕрлĕ Ялав орденне вĕçертсе илчĕ, хутсем... çав вăхăтра тепĕр офицерĕ пырса çитрĕ.

— Разделались, господин Воскресенский? — тесе чĕнчĕ вăл.

— Готово! — терĕ ку.

Юланут çине утланиччен ман патăма та пырса пăхрĕ. Эпĕ вилнĕ пек пулса выртрăм. «Йытă!» — тесе мана аттипе çăвартан тапса хăварчĕ, икĕ шăл халĕ те çук çавăн хыççăн.

Юн юратакан çын тăранма пĕлмест. Урăх тумтир тăхăнса, Кравковăн Хĕрлĕ Ялав орденĕпе капăрланса сăтăр тума çеç килнĕ вăл кунта. Эй, мухтавлă чекист-

сем! Хăвăртрах татăр унăн пуçне! Халех! Тăшман пĕтмен, тумтирĕ кăна урăх унăн. Сыхă тăр кашни сехет, кашни минут!

Сăмах кам çинчен пынине пĕлме хушаматне каласа парам: суя хушамачĕ Сосин. Чăннипе, шурă офицер — шпион Воскресенский».[31] Çак хутпа пĕрлех следстви органĕсем пакет тупнă. Хуплашки çине «НКВД» тесе çырнă пулнă.

Тепĕр кунтан Никита Сергеевич ӳчĕ тупăннă. Хула çывăхĕнчи пĕчĕк вăрманта унпа юнашар юн кӳлли тăпрапа çăрăнса хытса ларнă, вăл чĕре тĕлĕнчи пуля шăтăкĕнчен юхса тулнă. Паллă, ку ĕç пĕр çын аллинчен пулнă япала мар. Сосина арестлесен (юлташĕсене хупнă сас пур), унăн хваттерĕнче тĕрлĕ шпионла документсем тупнă. Лидăран вăрласа çырса илнĕ секретлă документсемпе сведенисене халăх тăшманĕ Сосин (вăлах — Воскресенский) кирлĕ çĕре ăсатма ĕлкĕреймен пулнă.

Ĕнер Никита Сергеевичăн чечек лартнă вил тăпри умĕнче пĕр сехете яхăн ĕсĕклесе йĕчĕ вăл. Вăхăтсăр вилсе выртнă юлташĕ умĕнче те, çĕршыв умĕнче те хăйĕн айăпĕ пуррине ăнланать Лида. Мĕн тăваççĕ-ши ĕнтĕ Лидăпа? Ыран унăн ĕçне пăхса тухмалла. Каçарĕç-ши Лидăна?

Пайраш çĕнĕ интеллигенци сăнарĕсене, вĕсем хушшинче тавлашуллă ыйтусем çуралнине чăваш очеркистикинче чăн малтан кăтартаканскнчен пĕри. Унăн приключениллĕ-авантюрăллă очеркĕсене вуланă май чăваш писателĕсем те сюжет тата композици поэтикине никĕслеме тытăннине куратăн.

Граждан вăрçи теми Атăлпа Урал хушшинче пурăнакан халăхсен литературинче пуринче те ерипен çар, оборона темипе ылмашăнать. Тĕслĕхрен, пушкăрт литературинче М. Гафурин «Харсăр каччăсем» очеркĕ хыççăн пулас хĕрлĕ армеецсен сăнарĕсем курăнма тытăнаççĕ (Г. Салям, Г. Амир, А.Вали т.ыт. очеркĕсемпе тĕрленчĕкĕсем). Г. Амирăн «Тăван çĕршыва хӳтĕлеме», «Акă кам килет» очеркĕсенче вулакансем çар комиссариачĕсенче совет влаçĕн çулĕсенче ӳссе çĕнĕ воспитани

илнĕ çамрăксемпе паллашаççĕ. Г. Амир танлаштарса пăхма тутар писателĕн Г. Ибрагимовăн «Хĕрлĕ çурт умĕнче» очеркĕн сыпăкне илсе кăтартать: унта тутар йĕкĕчĕсем ĕлĕкрех вăхăтра тутăрсем вĕçтерсе хурланса юрлаççĕ, вĕсен тăванĕсем çамрăксемпе хуйхăрса, мĕскĕнленсе, вĕсене шеллесе сывпуллашаççĕ. Г. Амир вара хĕвел шевлисемпе хĕртĕннĕрен бронза тĕсĕ çапнă ӳт-тирлĕ, сарлака кăкăрлă, çивĕч куçлă, мускуллă яшсем призыв комиссийĕ «çара кайма юрăхлă» тесе каласса чăтăмсăррăн кĕтнине хавхаланса сăнласа кăтартать. Пулас салтаксен савăнăçлă кăмăлĕ, вĕсем Тăван çĕршыва тăшманран хӳтĕлеме чунтан хатĕрленни çарта условисем лайăхланнинчен тата вĕсен пĕлӳ шайĕ ӳснинчен килнине ăнлантарать: «Салтака çĕршыв историйĕпе, географийĕпе лайăх паллашнă çамрăксене илеççĕ».

Çак шухăшах А. Валин «Икĕ ăсату» очеркĕнче те тĕп вырăнта тăрать. Ĕлĕк çамрăксем мулла вĕрентсе янине итленĕ: «Турă ячĕпе, ачамсем. Шăпунтан тарса пытанаймăн. Пур енĕпе те патшана пăхăнса унпăн тăрăшăр». Çакăн пек ăс парса ăсатни патша çарĕнче «чĕлхесĕр» пулма çеç вĕрентнĕ. «Тимурбулат агай вăрçа тухса кайнă чухне пирĕн апат-çимĕç çур хĕле пурăнса ирттерме те çитейместчĕ. Анчах халĕ Якуп çара кайнă чухне 200 пăт тырă, 40 пăт пахча-çимĕç, 100 пăт çĕр улми илсе хăварчĕ», — тет очерк персонажĕсенчен пĕри. Колхозниксем вĕсене: «Çĕршыв чиккисене çирĕп сыхлăр. Киле çĕнĕ пĕлӳсемпе, пысăк культурăллă çынсем пулса таврăнăр», — тесе ăсатаççĕ.

Çамрăк писательсемпе журналистсем, Хĕрлĕ Çара е çуллахи лагерьсене лексен, республикăри журналсемпе хаçатсен редакцийĕсене Хĕрлĕ Çар кунĕ-çĕрĕсем çинчен, ĕнерхи хресченсемпе рабочи, интеллигенци ывăлĕсене çĕнĕ çĕршыва хӳтĕлеме вăйлă воспитани пани çинчен очерксемпе репортажсем çине-çинех ярса тăраççĕ. Çавăн пек пурнăçланса пыраççĕ А.М. Горький писательсем умне кăларса тăратнă çĕнĕ задачăсем. СССР писательсен союзĕн правленийĕн пĕрремĕш пленумĕнчех вăл 1934 çулхи сентябрĕн 2-мĕшĕнче çапла калать: «Эпир халех хастарлăн хутшăнма тивĕç тепĕр ĕç

пур — çĕршыва тăшманран хӳтĕлесси. Эпĕ сире пурне те, уйрăмшарăн та çак ĕçе хутшăнма чĕнетĕп. Питĕ кирлĕ ĕç ку».

Хӳтĕлев темине анлăлатас енĕпе 1936 çулхи январьте ирттернĕ çар писателĕсен канашлăвĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнă. Хĕрлĕ Çарта салтаксемпе офицерсем çĕршыва тăшманран хӳтĕлеме епле хатĕрленнине, çак темăна анлăлатас тĕлĕшпе мĕн-мĕн тумаллине, çав вăхăтра ку тема питĕ яваплă шутланнине çирĕппĕн палăртнă, ăна яланах пичетре çутатса тăмаллине кăтартса хăварнă.

Субоцкий докладчик, тĕслĕхрен, çĕршыва хӳтĕлес темăна пур темăсенчен те мала кăларма, ăна тĕнчери пăлхануллă лару-тăру вăхăтĕнче тĕп вырăна лартма чĕнсе каланă. «Хӳтĕлев литературин çитменлĕхĕ мĕн шутланать? — тесе ыйтнă та вăл хăех хурав панă: — Хĕрлĕ Çар çинчен çырнă паха произведенисем çителĕксĕр пулни. Шел пулин те, писательсенчен нумайăшĕ халиччен çырма хăнăхнă очерксен темисенчен хăтăлаймаççĕ. Хĕрлĕ Çар çинчен анлăн, тарăннăн, ĕçе лайăх пĕлсе тата юратса çырмалла, унăн тĕлĕнмелле лайăх енĕсене пĕлсе, кăсăклăн тата ăнланмалла уçса кăтартмалла».

1930 çулсен пуçламăшĕпе варринче оборона теми совет литературинче çĕршыва тăшманран хӳтĕлеме хатĕрленес ĕçре вулакансемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕн аталанса пыма тытăнать.

Çар çинчен çырнă очерксенче те писательсемпе журналистсем 30-мĕш çулсенчи халăх хуçалăх аталанăвĕнчи чи хĕрӳллĕ те чи кирлĕ темăсене тупса çутатса пама тăрăшнă пекех вăй хурса интереслĕн, илĕртмелле çырса кăтартма тăрăшаççĕ. «Çарти стахановецсем», «Боец-отличниксем», «Боец-ударниксем» — çакнашкал ятсем парать хăйĕн очерк-репортажĕсене çамрăк пушкăрт писателĕ А. Кирей (Кирей Мэргэн). Çара кайма хатĕрленекен çамрăк ударниксен Ĕпхӳ-Мускав-Ĕпхӳ маршрутпа ирттернĕ походĕнче разведчик ăсталăхĕпе мала тухнă Закир çинчен А. Бикчентаев çырать. Çамрăк салтак пурнăçĕнчи çĕнĕлĕхсене Г.Амир «Ямиль» очерк-новеллăра сăнласа парать. Тăван çĕр тăрăх иртнĕ сал-

так-йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ вăхăтĕнче Ямиль хĕрлĕ армеец сасартăк чирлесе ӳкет. Анчах вăл арăмĕ патĕнче сывалма юлма килĕшмест. Мĕншĕн тесен отряда финиша чи кĕске çулпа мĕнле ертсе тухмаллине вăл çеç пĕлет.

Германири влаçа Гитлер тытса илни, Япони фашизм енне куçни, вĕсен çумне Рим пĕрлешни вăрçă хăрушлăхне хытах ӳстерет, халăхсене миршĕн кĕрешессине вăйлатма, тăшмана хирĕç хăюллăн тăмашкăн малалла тата тăрăшарах вĕренме хистет. Çĕр чăмăрне хăйсем хушшинче пайлама ĕмĕтленекенсем совет чиккисен сывăхĕнче — Китай çĕрĕ çинче — Япони самурайĕсем чĕртнĕ вăрçă вучĕ сарăлса пынине ырлаççĕ. Хĕвел Тухăçĕнчи чикĕсем тавра лару-тăру çивĕчленнине çĕршыв тимлĕ сăнать, Япони енчен вăрçă пуçланма пултарасса та Москавра шута илме пуçлаççĕ. Çавна май «Владивосток» очеркра акă мĕнле асăрхаттарса çырнă: «Владивосток çĕршыва хурçă паракан Челябинскпа Харькова, çĕршывăн çĕр кăмрăкĕн центрне Донбаса, пирĕн тĕп хулана Мускава, колхозсемпе совхозсене тухăçри тăшмансенчен сыхлать. Владивосток яланах — постра».

П. Павленкон «Хĕвел тухăçĕнче» (1936) романĕнче Хĕрлĕ Çар самурайсемпе мĕнле çапăçма пултарнине кăтартса панă. Пушкăрт писателĕ А.Вали «Хĕвел тухăçĕнче çырса пынисем» хайлавĕнче (1935) фактсемпе пулăмсене хăюллăн çутатса панипе хăй вăхăтĕнче вулакансене нумай калаçтарнă, асăннă романран та уйрăлса тăнă. Çак икĕ произведение, тĕпрен илсен, мĕн сывăхлатать-ха? Чăн малтанах: пулас вăрçăна çийĕнчех путарас тесе çĕкленнĕ çирĕп кăмăл-туйăм кашни çынна тăшманпа паттăррăн кĕрешме хатĕр пулмаллине асăрхаттарать. А. Вали очеркĕнче çакăн пек атмосфера çамрăк салтаксене Инçет Хĕвел тухăçнелле турттарса каякан поездрах çуралать. Çар службине мĕнле ирттернине кăтартса пама очерк авторĕ çамрăк салтаксен çар вĕренĕвĕ епле пынине, вĕсен çар ăсталăхĕ епле ӳссе çирĕпленнине лайăхрах çутатма май паракан тапхăрсене суйласа илет. Çамрăк салтаксен çулталăкри чи паллă пулăмĕсем çинчен очеркăн пысăках мар сыпăкĕсен ячĕсенченех

пĕлме пулать: «Карантин», «Кĕтмен хăнасен хваттерĕ», «Фин вăрçса пăхасшăн», «Ытти кунсенчен нимĕнпе те уйрăлман кун», «Эпир çĕнтертĕмĕр», «Çĕнĕ çамрăк салтаксем килсе çитрĕç». Çак вăхăтра очерк геройĕ çамрăк боецран кĕçĕн командир, çĕнĕрен килнĕ çамрăксен воспитателĕ пулса тăрать. Очеркра П. Павленко романĕнчи хăш-пĕр сыпăксем евĕрлĕрех ӳкерчĕксем пур. Инçет Хĕвел тухăçĕнче çак писательсем пĕр вăхăтрах пулнă, курасса та пĕр пек событисенех курнă пулас. Тĕслĕхрен, очеркра та, романра та китайсем пирĕн енне яппунсем хĕсĕрленĕрен чикĕ урлă тарса каçаççĕ. Китай партизанĕн Ю-Шаньăн («Хĕвел тухăçĕнче») тата Фин («Çырса пынисем») сăнарĕсем пĕр-пĕрне питĕ çывăх. Ахальтен мар пулĕ, — пĕрешкелтерех сыпăксемпе çăмăлтарах та-ха — П. Павленко романне пушкăрт вулаканĕсем валли А. Вали куçарса кăларать. Çак произведенисен вĕçĕсем те пĕрешкелтерех: критика палăртнă тăрăх, яппунсемпе çапăçнине Павленко пурнăç пулăмĕсем çинче никĕсленнĕ фантастика евĕрлĕрех вĕçлет, А. Вали сăнласа панă вĕренӳсем вара чăн-чăн вăрçăна аса илтереççĕ.

«Тăван çĕршыва хӳтĕлес тата паттăрлăх темисем, — тесе çырнă çав çулсенче П. Павленко, — халăхсен историйĕпе пĕрле çуралчĕç. Çак тема никĕсĕ çинчех эпос аталаннă. Салтак сăнарĕ халăх асĕнче яланах чыспа мухтав сăнарĕ шутланнă, паттăрла çапăçусен хирĕсем вара — масарсем мар, наци вăйĕпе патшалăх мăнаçлăхĕн палăкĕсем пулнă». Çавăнпа вăрçă пуçланас умĕнхи хăрушă çулсенче литература халăхăн историри паттăрлăхĕпе кăсăкланни питĕ вырăнлă шутланнă. 1939—1940 çулсенче хаçатсемпе журналсенче вулакана халăх историйĕпе паллаштаракан материалсем нумай пичетленнĕ: халăх эпосĕ «Салават-батыр» (М. Бурангул çырса илнĕ), С. Злобинăн «Салават Юлаев» романĕн сыпăкĕсем, халăх эпосĕ «Акбузат», кăшт каярах — çав ятлă оперăн либретти (авторĕ паллă драматург С. Мифтахов). «Саубан-батырăн геройла сăнарĕнче либретто авторĕпе композиторсем халăх хăватне, ăна тăшмансем нихçан та çĕнтерме пултарайманнине — хаяр аслатиллĕ вăхăт умĕнхи идейăна ĕненмелле уçса кăтартнă» (1938). Тăшмана

хирĕç çапăçма хатĕррине палăртса чан çапнă пек илтĕнет 1941 çулта пичетленнĕ «Салават пушкăрт чаçĕсене чĕнсе калани». Ун хыççăнах пичетленнĕ М. Гафурин «Эпĕ — патриот» сăвви те вăйлăн янăраса каять; вăрçă çинчен, вырăс-яппун вăрçи пирки те бантсем çапăнаççĕ.

Çав произведенисемпе пĕрле çамрăк писателĕн Гайнанăн «Халăх — юланут» очеркĕ пичетленнĕ. Ку очерка автор этемĕн çывăх юлташĕ — ут — тата çапăçури унăн вырăнĕ çинчен калакан халăхăн ĕмĕрхи легендисене кĕртни те шăпах вăхăтлă пулнă. 1939 çулта пĕрремĕш хут пичетре курăнсан, вăл икĕ çул хушши хаçат-журнал страницисенчен кайма пĕлмест.

Нэсера аса илтерекен хитре сăрăсемпе сăрланă унта пушкăртсен сăпки шутланакан Урал çут çанталăкне. Урал «океан шывĕ пек тулăх, çав хушăрах çиçĕм пек ялтăр çутă та кăра». Уралăн йăл кулли — миллион паттăр çуначĕсемпе вăйĕ тата хăвачĕ, курайманлăхĕ — вĕçĕ-хĕррисĕр тăшмансем валли. Урал — «пуян, мăнаçлă тата илемлĕ». Çавнашкал çут çанталăкăн таса сывлăшĕнче çеç очерка питĕ меллĕн кĕрсе вырнаçнă ут-юлташ çинчен çуралнă чаплă легендăсем.

Урал çут çанталăкĕн илемне аса илтерни, ирĕклĕ çыннăн савăнăçне çут çанталăк илемĕпе танлаштарни, тĕнчере этемĕн çав ирĕклĕхне тапăнакан усал вăйсем пурри çинчен асăрхаттарни çав çулсенче уйрăмах кирлĕ пулнă. Халăхăн хăрушлăхсем çинчен ниçан та манма юрамасть, ирĕклĕхе хŭтĕлеме яланах хатĕр пулмалла унăн. Тăван тавралăха тăшманран хŭтĕлеме пулăшакан утсем çинчен легендăсем хăйсен пурнăçне çав ăслă та шанчăклă утсемпе çыхăнтарнă халăхра çеç çуралма пултарнă.

Легендăри Турат ăйăра халăх паттăр ятне ахальтен паман, вăл лашасем вăрласа тарнă хурахсен ертŭçине хăй çинчен сирпĕтсе хăварса ирĕке тарса тухнă та кĕтĕве хурахсенчен хăтарма паттăрсене вĕсен лагерьне ертсе таврăннă, кĕтĕве çăлма пулăшнă. Турат ăйăрпа Салават лаши Акбузат çинчен хывнă легендăсемпе усă курса, писатель юмахри батырсен хастарлăхĕпе çитес вăрçăра тăшмана çĕнтерме вăл пуçланичченех пулас пушкăрт

салтакĕсене хавхалантарать. Утă çулнин мирлĕ поэтикине сăнланă май автор чаплă батырсен хăйпе юнашар пурăнакан мăнукĕсене кăтартать. Вĕсем ташланă чухне «аттисен кĕллисем айĕнчен вут-хĕм сирпĕнет», вĕсен «юррисем сăрт-тусене кисретеççĕ».

Очеркист çавăн пекех лашасен Хĕрлĕ Çар маневрĕсем пек ирттернĕ кăтартуллă ăмăртăвĕсем çинчен çырать: чи йывăр упражненисене лашасемпе пурнăçлакан çамрăк каччăсемпе хĕрсен вăййисемпе кавалеристсен ăсталăхĕ хушшинче уйрăмлăх çукпа пĕрех. Командир ролĕнчи Алтыншин сăнарĕ çак туйăма татах та хытăрах вăйлатать.

Тăван çут çанталăк илемĕ те, мирлĕ ушкăнри ĕç хаваслăхĕ те, халăхăн пултарулăх творчествинче тăван çĕршыва тăшманран хÿтĕлени çинчен мухтаса юрланă идея пушкăрт халăхĕ умĕнче совет влаçĕн çулĕсенче кăна яр-р! уçăлнă, çавăнпа: «Пушкăртсем, — тесе шухăшлать каçхи кăвайт умĕнче очерк авторĕ, — ирĕкленнĕ çĕршывра çеç тупнă телее, шăпине тăшман аллине нихçан та памĕç». Тăшмана хăратмалла, вирлĕн асăрхаттармалла илтĕнеççĕ çак сăмахсем: «Енчен те вăл çак телей патнелле аллине тăссан, ирĕке юратакан пĕтĕм пушкăрт халăхĕ — ватти те, çамрăкки те, хĕрарăмсем те, ачасем те — çунатлă лашисене йĕнерлĕç те ытти тăванла халăхсемпе пĕрле пĕр рете тăрса Тăван çĕршывшăн çапăçма тухĕç, тăшман çинелле çиçĕм пек ыткăнĕç!»

Яш каччăсем, Хĕрлĕ Çар командирĕ пулас шутпа, чăваш ялĕсемпе хулисенчен çар училищисене, çар курсĕсене вĕренме каяççĕ, офицер ятне илсе, çар подразделенийĕсене ертсе пыма тытăнаççĕ. Акă М. Кибекĕн «Лейтенант ывăлĕ» очеркĕнче Хĕрлĕ Çартан çамрăк лейтенант тăван яла курма килет. Темиçе çул каялла Виктор пĕрле вĕренекен хĕрпе Ленăпа шкултан таврăннă чухне малашне ăçта вĕренме кĕресси çинчен канашласа утнă. Хĕр медицина институтне вĕренме кĕме шутлать. Малтан Викторăн та ĕмĕчĕ хĕрĕнни пекех пулнă иккен, анчах халĕ вăл шухăшне улăштарнă: «Врач пулас ĕмĕте хăвартăм эпĕ. Халĕ артиллери училищине каяс тетĕп. Хамăр шкул директорĕ те çар училищине кайма

канаш пачĕ. Юлашки кунсенче ун пирки нумай шухăшларăм эпĕ. Ман сывлăх çирĕп, эпĕ шкулта чи лайăх физкультурниксенчен пĕри. Çавăн пек çамрăксен сыхлăх ĕçне тĕреклетессишĕн хастарлăн кĕрешмелле. Вара эпĕ хĕрлĕ командир пулма шухăшларăм». Лена яланах Викторпа пĕрле вĕренме, ĕçлеме шухăшланă пулин те, юлташĕ хăй валли «ăшă вырăн» шыраса мар, çĕршыва, тăван халăха вăй çитнĕ таран усă пама ĕмĕтленнине шута илсе, унпа урлă сăмахсăрах килĕшет. Килĕшет çеç мар, кĕркунне ăна Киев хулинчи артиллери училищине вĕренме ăсатать, çывăхри станцăна çитиччен те колхозри чи лайăх лашапа хăех леçет: «Вăл лашана тиха чухне Виктор хăй пăхатчĕ. Ялтăркка хура пулнăран ятне те уйăнне «Çĕлен» тесе хунăччĕ». Лена ăнланакан хĕр, тĕнчере мĕн пулса иртнине лайăх пĕлет, савнийĕпе уйрăлма тивет пулин те ку ĕç çавăн пек пулмаллине те чухлать. Виктор та лайăх ăнлантарнă ăна: Хĕрлĕ Çара çамрăк командирсем те нумай кирлĕ, офицерсемсĕр чăн-чăн çар пулаймасть, тăшманпа тивĕçлĕн кĕрешме пултарулла, харсăр, вăйлă çар кирлĕ. Анăçра Гитлер фашизмĕ хăпартланса пынине пĕлмен çын та çук халĕ. Çав хăрушă вăй Хĕвел тухăçнелле хускалма хатĕрленнине те пурте тенĕ пекех пĕлеççĕ. Камăн хŭтĕлемелле çĕршыв чиккине çав хăрушă фашизмран? Паллах, Виктор пек çамрăксен. Хăрушлăха хирĕç хăюллăн пăхма халех вĕренмелле. Çавăнпа каять Виктор Киеври çар училищине.

Икĕ çамрăк чун разъезда çитичченех тепĕр икĕ çултан тата тĕл пуласси çинчен калаçса пыраççĕ. Лена ун чух та, юлташĕн савăнăçлă кăмăлне хуçас мар тесе, çул тăршшĕпех шŭт тукаласа, çăмăллăн калаçса пынăччĕ. Çапах та, тусĕ вагон чŭречинчен юлашки хут ал тутрипе сулсан, унăн куçĕ тĕксĕмленсе килчĕ...

Очерк йĕркеленĕвĕнче, чăваш писателĕсен чылай хайлавĕсенчи пекех, приключениллĕ, авантюрăллă сюжет сисĕнет. Ку меслет М. Кибека килĕшет, вăл унпа пĕлсе, перекетлĕн усă курать. Вулакансем те кунашкал очерксене кăмăллаççĕ, юратса вулаççĕ. Приключениллĕ сюжет очерк сăнарĕсене лайăхрах уçса пама май парать,

хайлав идейине те вулакансене авантарах ăнлантарма пулăшать. Çав хушăрах очеркри ĕçсем кал-калах пулса пымаççĕ-ха. Пурнăç хăçан пĕр тикĕс иртĕ ĕнтĕ? М. Кибек произведенийĕнче те çавăн пекех. Виктор училищĕре хĕрлĕ командира вĕренсе тухма пĕтĕм пултарулăхне парать. Училище çуллахи лагере кайса çар вăййисем иртерме хатĕрленет. Ун пек вăййасемсĕр çар техникине пĕтĕмпе алла илейместĕн, ытти енчен те... Шăпах çак вăхăтра Виктор мучĕшĕн хĕрĕнчен сыру илет. Унта Лена ывăл ача çуратни çинчен тата ăна Виктор çумне çыртарни çинчен пĕлтернĕ. Мучĕшĕн хĕрĕ, Виктор вĕренме кайсанах, ялти учитель Петр Тарасов Ленăпа çӳрени çинчен те сырса пĕлтернĕччĕ. Çырăва яракан хĕр элек сарма юратнине пĕлнĕ пулин те, Виктор, çав сăмахсене ĕненсе, Лена ачин ашшĕ хăй мар пуль тесе шухăшлать. Анчах кунашкал усал хыпар та ăна вĕренӳре малта пыма чăрмантараймасть. Хастарлă вĕреннĕшĕн ăна лейтенант званийĕ параççĕ, часах унăн çĕршыва хӳтĕлекенсен ретне тăмалла. Унччен пурне те тенĕ пекех килĕсене отпуска яраççĕ.

...Ялăн аслă пĕви патĕнче чарăнса тăчĕ вăл. Шыв хĕррине çитичченех тăсăлакан йывăç пахчине курсан татах Ленăна аса илчĕ. Пайтах çывăрмасăр, чие тĕмĕсем хушшинче шăпчăк юрланине итлесе çĕр каçнă çав пахчара. Ыталанса та сахал мар çӳренĕ йывăççен сулхăнĕнче.

— Вĕсем çĕнĕ пӳрт лартнă, — терĕ вăл, тимĕр витнĕ пысăк çурта курса. — Пиччĕшĕ Аркадий инженера вĕренсе тухнă тетчĕç, ялта электростанци тутарать тесе пĕлтернĕччĕ училище.

Виктор уçнă хапхаран кил карти еннелле пăхрĕ. Çак вăхăтра урамалла анчах утма вĕреннĕ ача тайкаланса тухрĕ. Вăл Виктор умне пырса тăчĕ те ун çине тĕлĕнсе пăхрĕ.

Ачан хура куçĕсемпе кăтра çӳçĕсене, кулнă чухне пит çăмартийĕсем çине тухакан путăксене, хăлхи çуначĕпе витĕнсе тăракан тур паллине курсан, Виктор телейлĕн кулса ячĕ.

«Ман пекех, куçĕсем, сăн-сăпачĕ — пурте манăн. Пĕчĕк чухне эпĕ те çавăн евĕрлĕ пулнă ĕнтĕ. Епле юра-

тать пулас ăна Лена, шухăшларĕ вăл, ачан илемлĕ таса тумтирне курса».[32]

Лена та ялта канмасăр тенĕ пек ĕçленĕ. Колхоз правленийĕ ăна бригадира лартнă. Каçхине ĕç вĕçлесе киле таврăнсан, пӳртри арçынсен сассисем тĕлĕнтерчĕç Ленăна. «Мана курайман çынсем Виктора ман çинчен элеклеме килнĕ пулĕ», — шутларĕ вăл.

Пӳрте кĕрсен, Гриша ачи Виктор арки çинче выляса ларнине курсан, вăл савăннипе тата кăмăлĕ тулса çитнипе кăшт çеç йĕрсе ярайман. Каярахпа çеç, пӳртре иккĕшĕ кăна юлсан, Лена хĕпĕртесе, çав хушăрах шухăшлăн каларĕ: «Хамăр çĕршывра ача çуратакан хĕрарăмсене пурте хисепленине пĕлетĕп пулин те, хăшпĕрисем хам çине тăрăхласа пăхнă пек туйăнатчĕ. Эс килессе кĕтнипе, туй ялта туса ирттернĕ хыççăнах мана та хăвпа пĕрле илсе каясса шаннипе çеç чăтса пурăнтăм. Çар училищинче çăмăлттай пулма мар, çемье ыйтăвĕ çине те ытти общество ĕçĕ çине пăхнă пекех тарăннăн пăхма вĕрентеççĕ, — терĕ пичче. — Вара сана шанма пĕр самантлăха та пăрахмарăм».[33]

Тĕрĕсех каланă Ленăна пиччĕшĕ. Ваттисем те йăнăшман: ĕçлекен пурне те тупать. Виктора та командирсем тĕрĕс вĕрентнĕ: паттăрăн таçта та ĕç ăнать. Халăх пиллĕхĕ вутра та çунмасть, шывра та путмасть. Халĕ вăл хăй командир, училищере вĕрентнĕ пекех Ленăпа мăшăрланса ăна ывăлĕпе пĕрлех хăйĕн çĕнĕ гарнизонне илсе каять. Тĕреклĕ çемье — тĕреклĕ çĕршыв. Салтак та вутра пиçĕхет, çумăрпа чӳхенет, çилпе типет, шартлама сивĕре уçăлать, çавăнпа паттăр пулать. Викторăн та шухăшĕсем анлăланаççĕ: паянтан пуçласа ăна тăван ялĕ те, хăй чупса ӳснĕ тайлăк çырмаллă урамĕ те, ял çыннисем те ытти чухнехинчен хаклăрах, çывăхрах туйăнаççĕ. Малашне унăн юратнă мăшăрне те, тĕнчере уншăн чи хаклă тĕпренчĕк-çынна Гришăна та хӳтĕлемелле.

М. Кибекшĕн те, ытти писательсенни пекех, патриотизм теми чи çывăх тема пулса тăрать. Çĕршыва тăшманран паттăррăн хӳтĕлес идея унăн «Кăзăл Аватра», «Кочетков капитан», «Цыганок курсант», «Çумăрлă

каç» (1938), «Ĕмĕтпе пурнăç», «Хисеплĕ вахтăра», «Санинструктор» (1939) тата ытти очеркĕсене пĕр пĕтĕме пĕрлештерсе тăрать.

2

Ку таранччен сăмах, тĕпрен илсен, çамрăксем Хĕрлĕ Çара кайма епле хатĕрленни çинчен пычĕ. Заводсемпе фабрикăсенче рабочисем цехсене аслăлатаççĕ, çĕнĕ оборудовани вырнаçтараççĕ, вĕсен хăватне ӳстереççĕ, Хĕрлĕ Çара мĕн кирлине вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пама тăрăшаççĕ. Çав вăхăтрах çамрăк рабочисем Осоавиахим курсĕсене çӳреççĕ, хăйсене Хĕрлĕ Çар боецĕсем пулма хатĕрлеççĕ.

Çамрăк Хĕрлĕ Çар рабочисемпе хресченсен ачисенчен тухнă яшă командирсемпе вăйланса пырать. Чăваш очеркистикинче салтаксемпе пĕрлех çамрăк офицерсен сăнарĕсем курăнма тытăнаççĕ. Çар кружокĕсен ертӳçисен сăнарĕсемпе пĕрлех чăваш журналĕсемпе хаçачĕсенче хĕрлĕ армеецсен хастар сăнарĕсем калăпланаççĕ. Писательсем илемлĕ очерксенче ун чухнехи тĕнчери ларутăрăва вăрçă мĕнешкел пысăк инкек кӳме пултарнине, ăна епле майпа пӳлсе лартма май пуррине кăтартса параççĕ, пирĕн çынсене Тăван çĕршывăн хăватне ĕненнисĕр пуçне çав хăвата пĕрмай ӳстерсе пыма кирлине ăнлантараççĕ, çĕршыва хӳтĕлес пултарулăх та çирĕпленсе пытăр теççĕ. Тăван çĕршыва юратни, мирлĕ пурнăçа, этем тивĕçлĕхне, паттăрлăха, Хĕрлĕ Çара чунтан-чĕререн хисеплени палăрса тăрать. «Çич ют çĕрĕнче — инкек-шырлăх, совет çĕрĕнче — телей-ырлăх, çĕршывăмăр-аннемĕр — пуриншĕн те пĕртен пĕр. Тăван çĕршывсăр çын юрăсăр шăпчăкпа пĕрех: унăн савнăçĕ те, хуйхи те çук. Аçу-аннӳ ани-çаранне нихçан та ан ман. Пурăнсан, Тăван çĕршывшăн пурăнас, ăна усă тăвас. Кам çĕршыва юратать, вăл тăшмана кураймасть», — акă мĕнлерех шухăшсемпе ĕçсем тĕп вырăн йышăнаççĕ очерксенче.

Маларах асăннăччĕ Митта Петĕрĕ хăйĕн ирĕкĕпе 1932 çулта салтак шинельне тăхăнса виçĕ çула яхăн Хĕрлĕ Çарта пулни çинчен. Унтан таврăнсан та çар ча-

çĕсене кая-кая çӳреме чарăнмасть вăл. Çавна май унăн пултарулăхĕнче çар теми тĕп вырăн йышăнма тытăнать. Тĕслĕхшĕн — «Сыхлар!» очеркĕ. Часах çар гарнизонĕнче партконференци пуçтарăнмалла. Унта Тимофей Мертлинăн Хĕрлĕ Çар историйĕ çинчен доклад тумалла. Мертлин хăй çинчен çеç шутлама, хăйшĕн çеç вăй хума хăнăхман. Халĕ каçсерен доклад çырса ларнă май, тинех хĕрлĕ комиссар хăйĕн çинчен шухăшла-шухăшла илет. Очеркра калавçă та, калуçă та пур. Шалти монологпа вырăнлă усă курать автор, вулакансене çак меслетпе Мертлинăн Хĕрлĕ Çара лекичченхи пурнăçĕпе паллаштарать. Çăмăл пулман унăн пурнăçĕ. Çирĕм çул каялла амăшĕ йывăрлăхсене чăтаймасть — вилсе каять. Пĕчĕк Тимофей кĕтӳçе пулăшаканĕ пулма кĕрĕшет. Епле майпа чĕрĕ юлчĕ вăл выçлăх çулĕсенче — çак тарана çитичченех тĕлĕнет. Чĕрĕ юлчĕ çеç мар, юри тенĕ пекех çирĕп сывлăхлă, кулак ывăлĕсенчен кая юлмасăр ӳссе пычĕ. Унтан — империализм вăрçи, ашшĕне вăрçа ăсатни, пыйтăллă окопсем, Граждан вăрçин çулĕсем. Çĕнĕ çар, ăна Хĕрлĕ Çар тесе ят пани. Ялсенчен килекен çĕнĕ çамрăк салтаксем, çĕнĕ командирсем. Тимофей та командир, вăл çамрăк боецсене вĕрентет. Юнашарах — çапăçусенче пĕрле çапăçса пиçĕхнĕ юлташĕсем — пĕри командир, тепри комиссар. Ун тавра çĕрçĕр хĕрлĕ боец, çĕр-çĕр тĕрлĕ шăпа... Тахçан-тахçанах Мертлин ятсăр тăлăх ача, хушаматсăр кĕтӳç ачи пулнă... Çапах та пурнăçăн лайăх енĕсене шырама чарăнман, революци хыççăн ял пурнăçĕн пăтранчăкĕнче çухалса кайса та курнă, çапах та кулаксем патнелле мар, хăй пек чухăнсем еннеллех туртăннă...

Комиссар пӳлĕмĕн çутă кантăкĕсем ир енне çеç сӳнеççĕ, Мертлин доклад çырать. Унтан калавçă сăмах илет. Вăл ун чухне вун ултă çулта çеçчĕ-ха, тет вăл. Ун сăмахĕсене лайăх астăватăп, сивĕ çумăрсенче шăлсем пĕр-пĕрне лекейместчĕç, кĕтӳçĕн ниçта пытанса та хӳтĕленме май килмен... Унтан унăн ашшĕ Крепков (Чăваш çĕрĕн кăнтăр енчи Граждан вăрçин паттăрĕ) хĕрлĕ армеецĕсемпе пĕрле ялтан тухса каять. Хĕрлĕ разведчикпа ăнсăртран тĕл пулни Мертлин пурнăçне

пĕтĕмпе улăштарса ярать. Вăл хушăпе хĕрлисем валли çăкăр çителĕклĕ тупать, унăн аппăшĕнчен кулакан шурă гвардеец винтовкин хуçи пулса тăрать, вара хĕрлисем патне каять. Салтаксем ăна пеме вĕрентеççĕ. Тимофей ун пирки çапла шутлать: «Пăшала тытнă пек тытма пĕлмесен — лайăх рычаках пулмасть-ха». Ун хыççăн шурă гвардеецсемпе ытла та хăрушшăн, ытла та хаярăн тытăçса илни. Йывăр аманни. Пĕтме патне çитнĕскере Максимов командир вилĕмрен çăлса хăварать, лазаретра ун валли вырăн тупать. Юнашарах çавăнта ашшĕ выртать иккен, вăл та йывăр аманнă, аран-аран сывлать, ăна çăлаймаççĕ — вилет. Мертлин лазаретра вун çичĕ кун йăванса выртать, çапах та çамрăк организм вилĕме çĕнтерет-çĕнтеретех... Ăна вăхăтлăха киле канма каймашкăн билет çырса параççĕ, анчах ялта лăпкăлăх тупаймасть вăл — каллех хăйĕн командирĕ пулнă çынна Максимова тĕл пулать. «Халех хĕрлĕ командирсем хатĕрлекен курса каймашкăн хут çырса паратăп», — тесе малалла вĕренме сĕнет вăл. Мертлин хуравĕ кĕске те ăнланмалла:

— Тăшмансен тăшманĕ пулма яланах хатĕр!

Гарнизон конференцийĕнче калаçма доклад хатĕр.

Çапла сăнласа кăтартать Митта çĕнĕ çар моралĕ епле çуралнине. Хĕрлĕ Çарта салтаксемпе командирсен халĕ пачах çĕнĕлле хутшăнусем йĕркеленеççĕ. Кунта текех аслине пуç çапса, пуçа мăнкăмăллăн каçăртса, командир умĕнче пуçа усса е чĕтресе тăни çук. Хурçă дисциплинăна чышкăпа хăратса мар, çынна хисепленипе йĕркелесе тытаççĕ. Хĕрлĕ боец та хăратнăшăн мар, хăйĕн чун туртăмĕпе çапăçма тата çĕршыва хŭтĕлеме вĕренет.

Хăйĕн очеркĕсенче Митта Петĕрĕ «пурнăçра чи кирлĕ сĕнŭсем парать». «Эпĕ яланах, — тесе çырнă вăл, — манăн ĕç вулакансемшĕн усăллă пултăр тесе тăрăшнă: очеркăмсем нихçан та вĕрсе хăпартнă хăмпăсем евĕр ан пулччăр».[34]

Çак шухăшах И. Тукташăн «Шурă Роза» (1938), А. Медведевăн «Унăн хĕр тусĕ» (1938), А.Захаровăн «Лейтенант» (1938), А. Филипповăн «Карттус», Б. Шаш-

ковăн «Комбриг калавĕ», Л. Агаковăн «Çунатлă хĕр» очеркĕсем пирки те каламалла.

Пурнăç материалне, чи кирлине, нумай-нумай материалсем хушшинче шыраса тупма пĕлни ахаль çĕртех романтикăлăха асăрхама, нимĕнпе те уйрăлса тăман çĕртех паттăрлăх «самантне» курма пулăшать. Ахальтен мар Короленко «çав паттăрлăх микроскоп витĕр те пулин асăрхамалăх кашни чунра тенĕ пекех пур, çавă вара пурнăçра халиччен сисмен пулăмсене, тепĕр чухне явленисене питех те трагедилле туйса палăртма май парать»[35] тенĕ. Романтикăлăх, паттăрлăх енĕсем хальтерех çеç асăннă кашни очеркрах пур. Писательсем çарти кашни çынна уйрăммăн та, йышлăн та тĕпчеççĕ, массăсем уйрăм çынсенчен тăнă пирки вĕсене сăнласа кăтартмалли принципсемпе анлăн усă кураççĕ. Массăсен пĕлтерĕшне, паллах, пĕлеççĕ: салтак массисем уйрăм çынсенчен тăраççĕ, çав хушăрах кашни уйрăм салтак та кăткăс чунлă. Эпир паттăрлăх тесе калаçакан япала геройсен çеç пулмасть. Чăваш писателĕсен творчествине тишкеререх пăхсан, вĕсем масса тесе салтак массине калаççĕ. Апла пулсан, сăмах салтак массинчи çын пирки уйрăм этемĕн эстетики евĕрлĕ тесе шутлаççĕ.

Писателе çар пурнăçĕнчен уйăрса илнĕ «юратнă» герой е тăшман мар, уйрăм çын та пĕтĕмĕшле мар, чăн малтанах кирек мĕнле хĕрлĕ армеец ăс-тăнĕнче паттăрлăха епле кăтартма пултарни çинчен мĕнле шухăш çурални кăсăклантарать.

Очерксенче паттăрлăх самантчĕсене сăнласа пани салтак пурнăçĕнче паттăрлăх кăтартма мĕн тери кăткăс пулнине пĕлме çеç мар, совет халăхĕн пурнăçĕн тĕп енĕсене асăрхама май туса панă: паттăрлăх вăл, тĕслĕхрен, пурнăçри чи яваплă, чи йывăр вăхăтра хăвăн кăмăлтуйăмна социаллă тĕрĕслев умĕн пĕтĕм анлăшĕпе кăтартма пултарни. Çар вĕренĕвĕ вăхăтĕнче чи яваплă саманта батальон командирĕ Кочетков капитан хăйне тивĕçлĕ вырăнта пулма пултарни ăна çав вăхăтра хăйне шăпах кирлĕ пек тытма пĕлмешкĕн, хăйĕн хăюлăхĕпе тавçăрулăхне, çар ĕçĕн илемне кăтартмашкăн тата герой ку-

çĕсенче вутлă-çулăмлă хĕлхем чĕртме вăй тупса памашкăн пулăшать. Çавсем май параççĕ те ĕнтĕ ăна «тăшман» йышăннă территори патне вăрттăн çывхарас тĕллевпе лашаллă разведчиксене учĕсен урисене çемçе пушмаксем тăхăнтартма хушмашкăн. «Карттус» очеркра вара пирĕн пограничниксем, тăшмана улталас шутпа, карттусĕсене шертесем тăррине тăхăнтартаççĕ, хăйсем пытанса ларнă çĕртен сасартăк сиксе тухса тепĕр вăрттăн çулпа пыракан яппун самурайĕсене хупăрласа илеççĕ, вĕсене парăнтарса тискер ĕçе тума чăрмантараççĕ.

Илья Тукташăн «Шурă Роза» очеркĕн геройĕсем вулакансене романтикăллă туйăмĕсемпе, Тăван çĕршыва хŭтĕлес ĕçе пĕтĕм чун-чĕрисемпе парăннипе илĕртеççĕ. «Эпĕ сан пата хамăн чĕреме шанса, ăна вутпа çуннă пек хĕрŭллĕскерне, аллăмсем çине хурса тенĕ пек килтĕм», — тесе ăнлантарать хăйĕн савнине Ахмет пограничника Лена тухтăр. Ахмет вара, юратнă хĕрĕ заставăна ĕçлеме килнĕшĕн çав тери савăннăскер, виçĕ тĕрлĕ юратупа хавхаланнине пĕлтерет: Ленăна, пиччĕшне тата Тăван çĕршыва юратать. «Малтан çак заставăра çĕршыв чиккине Ахмет пиччĕшĕ Петюк хŭтĕленĕ пулнă. Анчах чикке пăснă йышлă тăшманпа çапăçнă чухне юлашки гранатăпа вăл хăйне те, тăшмансене те сирпĕтсе ярать. Петюк вилет, анчах кĕтмен «хăнасене» чикĕ урлă каçармасть. Çакăн хыççăн чикке хŭтĕлеме пиччĕшĕ вырăнне хăйĕн ирĕкĕпе унăн шăллĕ Ахмет килет. Çапла çуралать çĕршыв чиккинче чăваш пограничникĕсен династийĕ».[36] Çавăнпа Ахметпа Лена пĕрле пурăнма тытăннă пĕрремĕш кунах паттăр Петюк вил тăпри çине чечексем хураççĕ. И. Тукташ пограничниксем çинчен çĕкленŭллĕ кăмăлпа çырать. Ун шухăшĕпе, çĕршыв хуралçисем пурнăçлама пултарайман пĕр ĕç те çук. П. Миттапа И. Тукташ очеркĕсенче ытлашши нимĕн те çук, чĕлхине те вĕсенне «телеграф» стилĕ уйăрса тăрать. Лирика вырăнне хайлавсенче сводка, рапорт, тревога сигналĕ йышăнаççĕ. А. Медведевăн «Унăн хĕр тусĕ» очеркĕнче те лирика нумаях мар. Малтан заводра фрезеровщика вĕренекен Виктор савнийĕ Таня унпа пĕрле

Инçет Хĕвел тухăçĕнчи заставăна пыма килĕшмест, цехра вăл ватă рабочисен ĕç меслечĕсене алла илет, ударниксен ăмăртăвне хутшăнать, смена нормине майĕпенмайĕпенех 150, 200, 250, 300 процента çити тултарма пуçлать. Юлашкинчен çак кăтартăва 350 процента çитерет. Ĕçри çитĕнӳсемшĕн Таньăна фрезеровщиксен бригадирне лартаççĕ, çамрăк работницăсен вĕрентекенĕ туса хураççĕ. Тепĕр тапхăртан Виктортан черетлĕ çыру килет. Çырăвĕ, çитменнине, ахаль çыру мар. Пĕр вăхăтрах вăл хавхалантарать те, пăшăрхантарать те. Чикке пăсакансен шучĕ ӳсет те ӳсет — ку, паллах, пăшăрхантарать. Çырăвĕ чăн-чăн кĕнеке пек пуçланать: чикĕре виçĕ пограничник хуралта тăнă чухне, çав шутра Виктор та пулнă, пулеметлă тăшмансен ушкăнĕ тапăнать. Пограничниксене те тăмран çăрса туман: вĕсен пулемет, гранатăсем, минăсем, сигнал хатĕрĕсем пур. Туять Таня, чикĕре Виктора çăмăл мар. Виктор çырура каллех ăна хăй патне пыма чĕнет, кун пирки вăл застава начальникĕпе те канашласа пăхнă иккен. Вăл килĕшнĕ, çĕршыва хӳтĕлекенсен йышĕнче Таня валли те вырăн тупăнать тенĕ. Хĕр тинех иккĕленме чарăнать, çирĕп шухăш тытать: каймалла! Иккĕн çăмăлтарах пулать. Тĕрĕсрех калас пулсан, Викторсăр пурăнма кунта кичем те, тунсăхлă та...

Республикăри писательсен союзĕн правленийĕ çулсерен ирттерекен конкурс итогĕсем очеркистсене савăнтараççĕ: 1936 çулта премисем калавçăсене те, романистсене те мар, очеркистсене памалла тунă. Конкурса хĕрĕх ытла çын хутшăннă: писательсем, журналистсем, педагогсем, колхозниксем, Хĕрлĕ Çар командирĕсем, летчиксем т.ыт. те, çĕршывăн пур кĕтесĕсенче пурăнакан чăвашсем те. Çывăхри тата инçетри облаçсенче пурăнакан литераторсем тăван чăваш литературине чунтан юратнине, пурте вĕсем литературăн пур жанрĕсене те аталантарассишĕн тăрăшнине, унăн ӳсĕмĕсемшĕн хĕпĕртенине, пахалăхĕ ӳснĕшĕн кăмăллă пулнине кăтартса панă. Пĕрремĕш вырăна никама та пама йышăнман. Иккĕмĕш премие жюри М. Данилов-Чалдуна «Тайгара» очеркшăн, виççĕмĕшне Белорус çар округĕнчи

А.Филиппова «Карттус» очеркшăн, Б. Шашкова «Комбриг калавĕ» очеркшăн, тăваттăмĕшне А. Медведева «Унăн хĕр тусĕ» очеркĕшĕн памалла тунă.

Литература журналĕсенче чăваш очеркистикине вăйлатасси çинчен статьясем пичетленсех пыраççĕ. Ку питех те кирлĕ ыйтăва сӳтсе явмашкăн писательсем активлăрах та активлăрах хутшăнаççĕ. Канашлусенче, ятарлă пленумсенче те очеркистсен ăсталăхне ӳстерес ыйтăва пĕрре çеç мар лартаççĕ: очерк çыракансем «вĕрекен пурнăçран кая ан юлччăр, пĕрмай çав пурнăçран малта пыма тăрăшчăр» (Сунтал. 1935. 3 №). Писательсем Г. Успенский, В. Короленко, М. Горький, В.Маяковский, М. Зощенко, А. Барбюс тата ыттисен очеркĕсене чăвашла куçараççĕ. Чăваш илемлĕ очеркĕсене Г. Кели-Кузнецов (1929), А.Отачкин (1930), С. Ялавин (1931) хăйсен критика статйисенче тишкереççĕ. Л. Агаков очерксенчен чылайăшĕ схемăллă пулса тухнине палăртса çапла çырать: «Машинăсем хăйсем тĕллĕн, çынсемсĕр тухăçлă ĕçлеме пултараймаççĕ. Вĕсем çинчен çырнă чухне çав машинăсене ĕçлеттерекен çынсене малти плана кăларса тăратмалла». Малалла вăл çапла сĕнет: «Тĕрĕс, хăш-пĕр çитĕнӳсем пур пирĕн. Ӳсетпĕр эпир. Эпир кунсерен тенĕ пекех малалла кайса пыратпăр. Анчах йывăрлăхсем те пур. Очерксем пире савăнтараççĕха, мĕншĕн тесен вĕсем чăваш литературин вăйĕ пухăнса пынине, анлăланнине кăтартаççĕ. Очерк илемлĕ литературăна çывăх, унăн ӳссех пымалла.»[37] Таньков «Очерк калав патне куçмалли кĕпер. Очерксемпе калавсен чĕлхипе стилĕ илемлĕх енчен пуян, тĕрĕс тата уçăмлă пулма тивĕç»[38], — тесе çырать. Вăл очерксем çырас ăсталăха паллă вырăс писателĕсенчен, уйрăммăн илсен, Лариса Рейснертан вĕренме сĕнет. Рейснер Граждан вăрçи çинчен çырнă илемлĕ очерксемпе чапа тухнă (1918—1919). Михаил Кольцов каланă тăрăх, Рейснер революцин пĕрремĕш кунĕсенчех, рабочи класс çĕнтеричченех, унпа хăйĕн шăпине тачă çыхăнтарнă интеллигенцин пĕрремĕш ушкăнне кĕрет. Унăн çар очеркĕсен темисем — Сĕве хулин «юмахла эпопеи, çав хула патĕнче чехословаксен корпусĕ арканчĕ, çав хула патĕн-

чен тăватă еннелле революциллĕ наступленисен хумĕ сарăлса кайрĕ, Энзелире Англи чаçĕсем революцие парăнчĕç...».[39] Сĕве патĕнчи çапăçусене чăвашсен пулас паллă писателĕ Василий Краснов-Асли хастарлăн хутшăннă, ун çинчен вăл «Шуррисемпе çапăçни» кĕнекере пичетленнĕ çар очеркĕсенче тĕплĕн çырса кăтартнă (1927). Çак хаяр çапăçусенех П. Ермолаев «Шуррисем Тĕрлемесре» очеркра сăнласа панă. Очерка çапла вĕçленĕ: «Тĕрлемес патĕнчи çĕнтерӳ пирĕн тăшмансен вăйне вунă хут ӳстернĕ пулĕччĕ тата вырăс контрреволюцине шанчăк парса унăн çунатне сарĕччĕ. Вĕсем Хусана хăйсен аллинчех хăварĕччĕç. Хусанран вĕсем Атăл тăрăх тăвалла улăхса нумай-нумай хула тытса илнĕ пулĕччĕç, унтан Мускавпа Петроградра пăлхавсем çĕклĕччĕç. Анчах ку план шуррисен пурнăçланаймарĕ. Тĕрлемес патĕнче эпир сахал мар çухату тӳсрĕмĕр, шуррисем вара унта мĕн пуррине пĕтĕмпех çухатрĕç».[40] Çак пулăмсенех П. Хусанкай «Трактор» альманахра пичетленнĕ «Улмуççиллĕ Тĕрлемес» публицистикăлла поэмăра сăнласа кăтартнă (1933). «Тĕрлемесри улмуççи» лирикăллă анлă монолог, пурнăçа пĕр улăштармасăр тенĕ пек çырса кăтартнă поэма.

Произведени те, сăнар та, ытах вĕсене пĕрешкел илсе пăхсан, — субъективлă япаласем. Анчах та «çав япаласене» тăвас тесе çеç путланса ларас тăк субъективлăх абсолютлăн курăнма пуçлать. Художник ĕмĕтĕнче çуралман пĕр ен те, пĕр йĕр те пăрăнса урăх çул çине тăни пĕрре те пулман-ха, тенĕ Добин. Чăваш писателĕсен 1930-мĕш çулсенчи çарпа патриотла очеркĕсенче сăнарсем пуçра çуралнинчен тытăнса калăпланса çитичченех çыравçă-художник шухăшланă пек пиçсе çирĕпленсе пыраççĕ. «Сывлăшра», «Пурнăçланнă ĕмĕт» тата «Иккĕмĕш тĕлпулу» очерксенче А. Лазарева вăрçă пуçланиччен çĕршыв çийĕнчи пĕтĕм тавралăха сыхлама вĕренекен чăваш хĕрĕ-летчикĕсен сăнарĕсене сăнласа парать. Виçĕ очерка тепĕр майлă очерксен ярăмĕ теме те пулать. Чăваш очеркистикинче ку çĕнĕ япала мар. XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчех Игнатий Ивановпа И. Юркин очерксен пĕрремĕш ярăмĕсене çыраççĕ. Унтан Г. Ти-

мофеев «Тăхăръялта» сакăр вуннăран та ытларах очеркран йĕркеленĕ ярăм пичетлесе кăларать. Вĕсене пĕрпĕринпе çемье тата этнографи ыйтăвĕсем çыхăнтарса тăнă, А. Лазарева очеркĕсене пĕр героиня — Санюк сăнарĕ пĕрлештерет. Пĕрремĕш очеркĕнче Санюк, ял хĕрĕ, хăйĕн вăрăм мар ĕмĕрĕнче пĕрремĕш хут сывлăшра хурçă кайăк вĕçнине курать. Тимĕр кайăкран хăраса унăн амăшĕ ытти карчăксемпе пĕрле утă купи айне пытанать. Санюк вара, ялти чи хитре хĕрсенчен пĕри, самолет пĕрре кăтра пĕлĕтсем айне кĕрсе çухалнине, тепре çав пĕлĕтсем айĕнчен ĕрлеттерсе тухса таса тӳпере çунаттисене кайăк пек сарса мăнаçлăн вĕçнине куçне сиктермесĕр сăнать, пуçĕнче хăюллă ĕмĕт çуралать: «Пулса курасчĕ пĕрре çав тимĕр кайăк пек!» Очеркри ĕçсем герой-калавçă ятĕнчен аталанса пыраççĕ. Санюк — харсăр хĕр, хăйĕн ĕмĕтне пурнăçлама вăл хулари шкула кайса кĕрет, тăван ялне курма таврăнсан, савăнăç куççулĕсене шăла-шăла типĕтсе амăшĕ çапла калать: «Телейлĕ эсĕ, хĕрĕм. Эпĕ те телейлĕ. Ĕлĕкхисем хăрушă тĕлĕк пек туйăнаççĕ, çавăнпа вĕсене пĕтĕмпе хăвăртрах манса каяс килет. Халĕ ĕнтĕ эпĕ те ярапланран утă купи айне пытанмастăп, санпа пĕрле ларса вĕçме те хатĕр».[41]

Иккĕмĕш очеркĕн тĕп персонажĕсем Алеша авиаконстукторпа Санюк тантăшĕ Ростов хулин хĕрĕ Тамара. Сывлăшра пурте пĕр тан, вĕçевре туслăх тата хытăрах çирĕпленет. Çĕр çинче те, вăрманти аслă уçланкăра парашюта салатса пуçтарма вĕреннĕ чухне, туслăхран хакли нимĕн те çук. Тамара унашкал вăхăтра ялан Кольăна аса илет. Шкулта вĕреннĕ чухне вĕсем иккĕшĕ пĕрле утнă вырăнсене хăçан та пулин çӳлтен сăнаса пăхма ĕмĕтленнĕ. Вăл Харьковран çыру илет. Коля инженера вĕренсе тухнă, заводра шăпах Санюкпа Тамара вĕçекен самолетсене тăвать.

Çак «çунатлă» очерксем чăваш очеркистикинче çĕнĕ ят çуратаççĕ, вулакансем умĕнче Александра Лазарева талантне уçаççĕ. Вĕсенче хаçат хыпарĕсемпе литература портречĕ, авторпа калавçă сăнарĕсем, лирика пейзажĕпе сăнарлă танлаштару, автор шухăшĕпе персонажсен

чĕрĕ чĕлхи пĕр-пĕрне чăрмантармасăр питĕ лайăх пĕрлешсе вырнаçаççĕ.

Тамара ĕмĕтленнисем те пурнăçланнă, Кольăна вăл ача чухнех çапла сĕннĕ: «Каятпăрах. Ӳссен сывлăша вĕçсе улăхатпăр та çак уçланкăсене, пире чечексем парнеленĕскерсене, çӳлтен пăхса юрататпăр, яланлăхах хамăр асăмăрта хăваратпăр. Станцăна та куратпăр çӳлтен. Хамăрăн çамрăк ĕмĕтĕмĕрсене пурнăçлама поездпа каяс тесе иксĕмĕр те шăпах çав станции чупса çитрĕмĕр-çке».

Виççĕмĕш очеркĕ «Иккĕмĕш тĕл пулу» ятлă. Вăл та ял каччисемпе хĕрĕсем çинченех, вĕсем те, çĕнĕ условисем пулăшнипе, летчика вĕренсе тухаççĕ, кăвак тӳпе хуçисем пулса тăраççĕ. Очеркра Санюкпа Пантелей туслăхĕ çинчен сăмах пырать. Пантелей пĕррехинче Санюка пушартан туртса кăларать те хула больницине леçет. Йывăр туйнă ун чухне Санюк хăйне. Автор очеркра паллă мар ĕçĕн вăрттăнлăхне уçса парас меслетпе ăнăçлăн усă курать. Пантелей кĕтмен çĕртен больницăран çыру илет, медсестра унта Санюк вилни çинчен пĕлтерет. Темиçе çул иртнĕ хыççăн, Санюк летчика вĕренсе тухсан (Санюкăн çамрăк организмĕ больницăра чире çĕнтерет, хĕр хăйĕн юлташĕпе Арукпа летчиксен шкулне те вĕренме кĕме пултарать), клубра çĕнĕ çул каçĕ пулать. Кӳршĕ чаçрен летчиксем шеф-концертпа килеççĕ. Санюк клуба çĕнĕ платьепе, çĕнĕ туфлипе пырать. Ăна, сарă кăтра çӳçлĕ, юрăçăнни пек хитре саслă хĕре, шухăшлă сăнлă, кăкăрĕ çине орден çакнă летчик асăрхамасăр пултараймасть, хĕре ташша чĕнет. Тĕлĕнмелле! Паллашаççĕ те — Пантелей! Акă вĕсем виççĕн пĕр самолета пĕрле вырнаçса лараççĕ, сывлăша çĕкленеççĕ. «Эпир виççĕн, виççĕмĕр те пĕр ялтан, тантăшсем — пĕрле выляса ӳснĕ. Çак çутă тĕнчере пирĕн пек çывăх туссем урăх çук та пулĕ — чи хаваслисем эпир, чи телейлисем: пĕр-пĕрне хамăр пурнăçпа паллаштаратпăр, служба мĕнле иртни çинчен каласа кăтартатпăр. Çапла, пурнăçра эпир савăнăçне те хурлăхне сахал мар курнă, анчах та тунсăх туйăмсем иртеççĕ, ун вырăнне телейшĕн кĕрешсе тунă ӳсĕмсен хаваслăхĕ йышăнать».[42]

Анчах та таса тӳпе аслатиллĕ çумăрăн хура пĕлĕ-

чĕсемпе капланма тытăнать. Çакна писательсем те сисеççĕ. Çакăн çинчен каласа парать А. Эсхель хăйĕн «Герой калавĕ» очеркĕнче. Очеркра автор сăнарĕ палăрманпа пĕрех, унта калавçă вырăнне очерк геройĕ хăй, танк ротин командирĕ, яппун самурайĕсемпе паттăррăн çапăçнăшăн Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçнĕ Е. Винокуров капитан йышăнать. Винокуров Хĕрлĕ Çара кайиччен Шупашкарти пĕр заводра слесарьте ĕçленĕ, унта ăста ватă Сапожников патĕнче тимĕрçĕ ĕçне вĕреннĕ. Халĕ вăл тăван хулана кĕске канăва килнĕ, хăйне Тăван çĕршыва хŭтĕлеме, мирлĕ пурнăçа сыхлама çирĕппĕн хушса янă тăван завод коллективĕпе тĕл пулать. Капитан çĕршыв еннелле хаяр тăшман хускалса килнине пытармасть, вăл тăшман тискерлĕхне хăй тŭссе курнă. Хасан кŭлли патĕнче Винокуров тăшманăн танкне пĕтерет, хăйĕн ротипе Ятсăр сăрт тŭпине йышăнать. Çав тŭпе тăрринчен самурайсен çĕрĕ темиçе çухрăма яхăн ал тупанĕ çинчи пекех курăнать. Тăшмансем те унăн танкне снаряд лектерсе чарса лартаççĕ, пехота салтакĕсем ăна пур енчен те хупăрласа илеççĕ, юлашкинчен, совет танкисчĕсем ниепле те парăнманнишĕн тарăхса, броньăллă танка чĕртсе яраççĕ. Винокуров çапах та тăшман енне куçмасть, пĕтĕм экипажĕпе çунакан танкран тухать те Ятсăр сăрта хамăрăн тĕп вăйсем килсе çитичченех хăйĕн аллинче тытса тăрать. «Халхин-Гол пуш хирĕсенче эпир тухăçри тăшман вăйне тĕрĕслесе пăхрăмăр, халĕ анăçрипе — хаяртараххипе, хăрушăраххипе — тытăçма хатĕрленетпĕр». Салтаксен паттăрлăхĕ ŭснĕçемĕн ŭсет, ăна çак тĕслĕх те лайăх кăтартса парать: самурайсемпе çапăçнă чух пĕр танк механик-водителĕ вилсен, унăн ашшĕ Украинăран вăтам ывăлне — тракториста — Винокуров ротине илсе пырать те çапла калать: «Кирлĕ пулсан, Тăван çĕршыва сыхлакансен ретне эпĕ хам кĕçĕн ывăлăмпа пĕрле тăратăп».[43]

Тепĕр тĕслĕх. Винокуров танк ротинче чăвашсемпе украинецсем тăшмана хирĕç пĕр çемье çыннисем пек çапăçнă, çавăн пек салтаксен туслăхне эпир Леонид Агаковăн «Пулеметчик юрлать» очеркĕнче те куратпăр. Пĕррехинче, кĕр енне кайсан, Митяй Кубальченко

ялне Киевран темиçе музыкант пырса тухнă. Вĕсем капелла валли лайăх сасăллă çамрăксене суйласа çӳренĕ. Колхоз председателĕ, Тарас Бульба евĕрлĕ ватă партизан, хăйĕн капмар мăйăхне шăлса илнĕ те, тӳрех тăлăх Лизавета ывăлĕн ятне асăннă. Музыкантсем, ун патне кайса, çамрăк каччăна (унăн ашшĕ те, аслашшĕ те чаплă бандуристсем пулнă) темиçе юрă юрласа пама ыйтнă. Каччă пĕр-ик çаврăмне юрласа парсанах музыкантсем пĕр-пĕрин çине калама çук савăнăçлăн пăхса илнĕ...

— Який могучий, тенор!..

— Це вже клад!

— Треба забраты его, треба забраты... — тесе калаçма тытăннă вĕсем. Çавăнтах хăйсене сассипе тĕлĕнтернĕ каччăна Киева чĕннĕ, унăн умĕнче малашне епле анлă çул уçăлассине, вăл пысăк театрсенче юрлакан пулассине каласа панă.

Анчах Митяй Кульбаченко вĕсене итленĕ-итленĕ те — «килĕшместĕп» тесе, пуçĕпе сулса илнĕ. Митяйăн пĕр-ик уйăхранах Хĕрлĕ Çара каймалла пулнă. Вăл темиçе çул ĕмĕтленсе пурăннă ун çинчен. Кашни кĕркунне, хăйĕнчен аслăрах хлопецсем ушкăнĕ-ушкăнĕпе Хĕрлĕ Çара тухса кайнă чух, вăл çав телейлĕ çынсем çине хурланнă пек пулса пăхса юлнă. Час-часах, хăйсен хатинче çакăнса тăракан пĕр сăн ӳкерчĕке илсе, ăна пăхапăха тăнă. Сăн ӳкерчĕк çинче унăн аслă пиччĕшĕн — ирĕклĕ Украинăшăн Петлюра бандисене хирĕç çапăçса вилнĕ хастар пулеметчик Алеша Кубальченкăн сăнĕ пулнă.

— Хăçан эпĕ те пичче пек пулăп-ши? — тенĕ çамрăк Митяй.

Юлашкинчен кĕтнĕ вăхăт çитнĕ. Киевран музыкантсем пырса кайнă çул Митяй, хăйĕн çар билетне савăнăçлăн тапакан чĕри тĕлне тытса, призыв комиссийĕ умне кĕрсе тăнă. Комисси ăна нумай та пăхса тăман, мĕнщĕн тесен Митяй çара кайма юрăхлă пулни уççăнах курăннă: тĕреклĕ, патвар, хулпуççисем — аршăн сарлакăш.

— Паллах, юрăхлă, — тенĕ ватă тухтăр, куçлăхĕ

витĕр Митяй сине кăмăллăн пăхса илсе. Çав вăхăтрах сĕтел хушшинче хутсене пăхкаласа ларакан комисси председателĕ сăмах хушнă:

— Кульбаченко юлташ, — тенĕ вăл, — сирĕн вĕт льгота пур, аннĕр ватă, çемьере сансăр пуçне ĕçлекен никам та çук... Çавăн пирки мĕн шутлатăр эсир? Закон тăрăх юлма пултаратăр...

— Комиссар юлташ! Мана нимĕнле льгота та кирлĕ мар.

— Аннў пирки мĕнле вара?

— Аннен çулĕсем нумай пулин те, вăл ĕçре хăшпĕр çамрăксенчен ирттерет-ха. А манăн Хĕрлĕ Çара темле пулсан та каясах килет.

Председатель комиссин ытти членĕсемпе темскер калаçса илнĕ.

— Илетпĕр, — тенĕ комиссирисем.

Митяй çак паллă та савăнăçлă кун хыççăн икĕ çул Инçет Хĕвел тухăçĕнче совет çĕршывĕн чиккисене Япони самурайĕсенчен сыхласа пурăннă. Ку хушăра вăл сывлăх енчен татах çирĕпленнĕ, кĕлетки те малтанхинчен паттăрланнă, тавра курăмĕ те пур енчен аталаннă.

Л. Агаков Хĕрлĕ Çарта çамрăксем çар вăййисем ирттерсе кĕлеткисене тĕреклетнине, çар техникине тăрăшса вĕреннине, çĕршыва тăшманран куç пек сыхланине ĕненмелле кăтартса парать. Очерк авторĕ хăй те çарта пулнă, çар пурнăçне лайăх пĕлет. Очеркра вулакансем автора та, калавçăпа калуçăна та аван кураççĕ. Ку писатель очеркĕн сюжечĕпе композицине ăста йĕркелеме, очерк идейине туллин уçса пама, сăнарсене пур енчен те лайăхрах çутатса пама пулăшать. Митяй пултаруллă спортсмен, çар округĕн кашни ăмăртăвне хутшăнать, ялан тенĕ пекех малти вырăнсене йышăнать. Вăл — снайпер, винтовкăпа хуть хăçан та 30 очкоран кая мар çапса кăларнă, пулеметпа пенĕ чухне те мишене çав тери шăтарса пĕтернĕ. Политзанятисене те чунтанах килĕштернĕ вăл. Çавăнпа политрук ăна ку енĕпе виçĕ хĕрлĕ армееца шефа илме сĕннĕ. Клубри салтаксен кăçĕсенчен пĕри те Митяй хутшăнмасăр иртмен. Икĕ хут-

чен Владивостока хĕрлĕ армеецсен пултарулăхĕн смотрне кайнă, унтан парнесемпе тавръннă. Çавăн пек пурăннă Митяй Инçет Хĕвел тухăçĕнче. Çак вăхăтра вăл нихçанхинчен те лайăхрах туйса илнĕ: тăван ялĕнчен, Тăван çĕршывран хакли тĕнчере нимĕн те çук. Тăван амăшĕ, юлташĕсемпе тусĕсем те — чи хаклă çынсем уншăн. Митяйшăн çеç мар, ытти салтаксемшĕн те. Вĕсене тăшманран хŷтĕлессинчен хисеплĕ ĕç урăх çук та иккен.

Часах Митяйпа юлташĕсен те киле таврънма вăхăт çитет.

— Ну, сыв пулăр, ачамсем, — терĕ вĕсене комиссар, пĕрин хыççăн теприне ал парса. — Колхозра та, производствăра та кунти пекех ĕçлĕр.

— Тăрăшăпăр, — пуриншĕн те явап пачĕ Митяй.

— А эсĕ... — комиссар Митяй çине пăхрĕ, — юрлама ан пăрах. — Юрă вăл — пурнăçра питĕ кирлĕ япала.

— Юрать! — кăмăллăн кулса илчĕ Митяй.

Пурнăç нихçан та тикĕс килмест. Ку очеркра та — çавăн пекех. Ялтан Хĕрлĕ Çара пынă çамрăксен шухăшĕ мĕн тери улшăннине, вĕсен патриотла туйăмĕ малалла аталанса çирĕпленнине, вăйланнине салтаксем киле тавръннă чухне çул çинче пулса иртнĕ кĕтмен пăтăрмахлă ĕçсем аван кăтартса параççĕ. Ку хайлавра та эпир чăваш очеркĕсене чылайăшне хăйне евĕрлĕ сăнласа панине асăрхатпăр. А. Лазарева очеркĕсенчех сисĕннĕччĕ вăл: паллă мар пулăмсен вăрттăнлăхĕ сасартăк, кĕтмен çĕртен уçăлни.

Пĕр станцăра, поезд чарăнсан, юнашарти çŷллĕ хырсем хыçĕнче оркестр выляни илтĕнет. Кăшт тăрсан çав енчех йышлă халăх «урра» кăшкăрса ярать. Митяй мĕн пулни çинчен ыйтсан, ватă железнодорожник çапла ăнлантарать: «Хĕрлĕ Çартан пирĕн йĕкĕтсем тавръннă, заводри рабочисем вĕсене хирĕç кĕтсе илме тухнă». «Апла иккен, — Митяй та хăйне тăван ялĕнче кĕтсе илесси çинчен шухăшлать: — Эх, вĕсем те савăнаççĕ ĕнтĕ!.. Епле пулсан та, хамăр колхоз ятне çĕртмен вĕт эпĕ».

Акă, вăрттăнлăх сасартăк уçăлни патне çитет калуçă.

Поезд тапрансанах купене хашкама ернĕ Алесь сиксе кĕрет. Тӳрех аллинчи хаçата Митяйа тăсса парать: «Тыт, вула часрах!» Митяй хаçата хăвăрт çавăрса тытать те, унăн куçĕсем малти страницăн сулахай кĕтессинче шултра сас паллисемпе пичетленĕ телеграмма çине ӳкеççĕ: «ТАСС. Японецсем ним намăса пĕлмесĕр Совет территорийĕ çине тапăннă. Хасан кӳлли патĕнче вăйлă çапăçусем пыраççĕ!..»

Телеграммăна вуласа тухсанах Митяй, хаçата аяккалла хурса, темиçе самант нимĕн чĕнмесĕр ларчĕ. Унăн сăнĕ хăвăртах темле улшăнчĕ, ялан савăнăçлă куçĕсем тĕксĕмленсе хаярланчĕç. Чӳрече хыçĕнче малтанхи пекех тайга, çӳллĕ мар сăртсем мĕлтлетеççĕ. Н-да, терĕ пусăрăннă сасăпа Митяй, шухăша кайнă Алесь еннелле çаврăнса, самурайсем, провокаторсем...

Темиçе минут хушшинче вĕсен пуçĕсенче çав тери вăйлă шухăш юххи хăвăрт-хăвăрт шуса иртрĕ. Тепĕр чух этем кĕске вăхăтрах темĕн чухлĕ вăхăтшăн шухăшласа ирттерет! Пирĕн туссен те çавнашкалах пулчĕ çак минутсенче, тесе пĕлтерет калуçă. Сасартăк ним чĕнмесĕр ларнă Митяй хуллен кăна юрлама пуçларĕ, унтан кăкрине сывлăш ытларах туртса кĕртрĕ те хăйĕн шухăшĕсене каласа паракан сăмахсене хыттăн юрласа ячĕ. Унăн юррине те илсе кăтартас терĕмĕр эпир, мĕншĕн тесен Митяйпа унăн тусĕсен чунне лайăх уçса пама пулăшать вăл.

Мы и прежде умели неплохо
Посчитаться с врагами в бою.
А теперь до последнего вздоха
Будем драться за землю свою.

Юррăн иккĕмĕш çаврăмне Алесьпе пĕрле вагон илтмелле юрларĕç.

Весь народ встанет грозно и смело,
Как орел на защиту гнезда.
Никогда нас рабами не сделать
Никому, ни за что, никогда!

Вĕсен юрри пур итлекенсен кăмăлĕсене хускатса ячĕ. Юррăн малалли сăмахĕсем вара пĕтĕм вагонри çын-

сен чĕрисене çавăрса илчĕç, малалла пĕтĕм вагон юрлама тапратрĕ...

Не скосить нас саблей острой,
Вражьей пулей не убить ...

Тепĕр станци çывхарни сисĕнчĕ. Митяйпа Алесь пĕр-пĕрин куçĕсенчен пăхрĕç те, пĕр-пĕрин шухăшĕсене сăмахсăрах ăнланса, хăйсен чемоданĕсене алла илчĕç. «Атя, кайăпăр... — терĕç вĕсем пĕр харăсах. — Каялла, границăна!» Çапла уçăлать автор вăрттăнлăхĕ. Калав сюжетне самай çивĕчлетет вăл, композицине кăткăслатать, вулакансене хытăрах интереслентерет. Тăван кил туртăмĕнчен чылай вăйлăрах пулса тухать Тăван çĕршыв туртăмĕ, унăн шăпи хаклăрах çалтаксемшĕн. Хăйсен чăçне каялла çитсен, вĕсене комиссар штабра тĕл пулать те питĕ тĕлĕнсе каять.

«Эсир мĕншĕн кунта?» — ыйтать вăл.

«Комиссар юлташ, — пултараймастпăр... Эпир таврăнтăмăр. Çул çинче хаçат вуласа пĕлтĕмĕр те... Хамăрăн чикĕсемшĕн çапăçма таврăнтăмăр».

Ку сăмахсем комиссара савăнăçлăн пăлхатса ячĕç. Вăл хăй вĕрентсе ӳстернĕ патриотсене пĕтĕм чĕререн юратса ытала-ытала чăмăртарĕ.

«Спасибо, юлташсем! Эсир кун пек туни çинчен эп хамăрăн командующине пĕлтеретĕп... Халь кайса канăр, ыран ирех эпир çапăçусен районне тухса каятпăр!»

... Тепĕр вунă кунран, Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусем пĕтнĕ хыççăн, Мускаври темиçе хаçатра Митяй сăнĕ пичетленсе тухнă. Унăн айне çапла çырнă: «Отважный пулеметчик М. Кульбаченко своим пулеметом у высоты почти неприступной уничтожил более 50 японских самураев». Çакăн пек чăн-чăн портретлă очерксемпе пуянланать чăваш очеркистики Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи умĕн.

Хасан кӳлли патĕнче пур халăх ывăлĕсем те паттăрăн çапăçнă. Мари литераторĕсем те ку темăна асăрхамасăр хăвармаççĕ. Н. Игнатьевăн «Вăй пĕтмен-ха» портрет очеркĕнче самурайсемпе хаяррăн çапăçса паттăрлăх кăтартнă Алкеч Ятманов шăпине сăнласа панă.

Алкеч Пригорин пулеметчика пулăшаканĕ пулнă. Пĕррехинче вĕсен взвод командирне, йывăр аманнăскерне, госпитале ăсатаççĕ. Шăпах çав вăхăтра вĕсене, пысăках мар сăрт тӳпинче выртаканскерсене, самурайсем хупăрласа илеççĕ. Тăшман йышĕ Хĕрлĕ Çар салтакĕсенчен тăватă хута яхăн ытларах пулнă. Самурайсен темиçе атакине путлантараççĕ хĕрлĕ армеецсем. Анчах вĕсен йышĕ чаксах пырать, самурайсен йышĕ хушăнать. Вăт хăçан кирлĕ çирĕп характер, чăтăмлăх, юлташсене шанни, — мĕншĕн тесен часах взвод йышăннă сăрт патне полкăн икĕ роти килсе çитмелле. Сăрта самурайсене йышăнтарсан, вĕсем сăрт тавра сарăлса выртакан пуш хире темиçе çухрăм таран алă çинчи пекех курса тăрĕç. Пырха ун чухне çав сăрт патне, çапăçса çитмешкĕн кăна çухату мĕн чухлĕ тӳсме тивет, унтан — сăртне каялла тавăрмашкăн мĕн чухлĕ? Сăрчĕ стратеги енчен питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ: кам унăн хуçи пулать, юнашар выртакан симĕс оазис та унăнах шутланать. Пуш хир пулсан та кирлĕ япала сахал мар тупăнать унта. Уйрăмах тăшманпа тăшман тĕл пулнă чухне...

— Банза-ай! Банза-ай! Русс! Рук верх! — çухăрашаççĕ аялта.

Самурайĕсем курăнмаççĕ, кĕлеткисене йĕплĕ курăк унтан та кунтан чикнине пăхмасăрах хăйăрлă çĕр çумне лăпчăннă, пĕр вырăнта тăпланса выртмаççĕ, пуçĕсене çĕклемесĕр çӳлеллех шăваççĕ. Пĕр сантиметр, икĕ сантиметр... Пригорин пулемечĕ те шăпланнă — пуля ленти пĕрре персе илмелĕх çеç ĕнтĕ унăн. Иккĕшĕн те икшер граната пур, вĕсене иккĕшĕ те пĕрерĕн икĕ енне хунă. Алкечпа Гриша Пригоринăн вĕсем пур-ха хĕт, пĕрер гранатине тăшман еннелле ывăтма, тепĕршер гранатине самурайсем хупăрласа илсен вĕсен ушкăнĕ варрине пăрахса тăшмана та, хăйсенĕ те сирпĕтсе яма пултараççĕ. Винтовкăллисен мĕн тумалла? Приклачĕпе самурайсене пуçран шаплаттарма çеç пултараççĕ. Хăшĕ-хăшне? Хăшĕ тигр пек маларах сиксе ӳкет, çавă тăшманне хăй айне лутăркаса чикме пултарать. Самурайсен пăшалĕсене те тытса илме пулать — вĕсемпе те пеме вĕрентнĕ çамрăк боецсене.

Таçтан яппун самолечĕ вĕçсе килнĕ те Пригоринпа Ятманов выртакан сăрт çийĕн темиçе хутчен вĕçсе çаврăннă — пĕрре те пемен, пĕр бомба та пăрахман. Летчикĕн хаяр сăнне те, хаяр куçне те курса юлнă Гришăпа Алкеч.

Кун хыççăн бомбăллă-пулеметлă аэроплансем вĕçсе килеççĕ е танксем кĕрлеттерсе çитеççĕ.

— Алкеч, гранатусене хытăрах чăмăрта! — тенĕ пулеметчик.

— Эп чăмăртанă! — тенĕ Ятманов.

Н. Игнатьев çырса кăтартнă Пригорин вырăспа Алкеч çармăс сăнарĕсем куç умне чĕррĕн тухса тăраççĕ. Вĕсем пулеметпа самурайсене пĕрре çеç мар çунтарнă. Паян та яппунсем сăрт айккинче, аялта, хĕрӳ çатма çинчи пекех ташланăччĕ-ха. Çавăнпа тăшман халĕ уйрăмах хаяр: чĕррĕн тыткăна илесшĕн вĕсем Хĕрлĕ Çар пулеметчикĕсене...

Сасартăк пуш хир çийĕн темĕн хыттăн шаплатни янраса кайнă. Яппун аэропланĕ, хӳринчен çăра тĕтĕм кăларса, хăйăрлă пуш хирелле тăрăннă. Çав тĕлтех утлă кавалери ыткăнса çывхарни курăннă. Кăна сăрт айккинчи самурайсем те асăрханă, командирĕ приказ панипе пурте пĕр çын пек харăссăн сăрт тăрринелле унăн сĕвекрех енĕпе чупма, теприсем хытăрах шума, виççĕмĕшĕсем васкаса упаленме тытăннă. Хĕрлĕ кавалерирен сăрт тĕпĕнче те, айккинче те çăлăнса юлаймăн. Пулемет часах тăкăртатма чарăннă, унтан гранатăсем çурăлма тытăннă.

Алкеч Ятманов ури хырăмĕ тĕлĕнчен темĕн хыттăн çатăрт! чĕпĕтсе илнине çеç астăвать. Юн нумай юхнипе тăнне çухатнă вăл, анчах тăнне çухатиччен икĕ гранатине те хăйне пуçĕсене каçăртса пăхакан хĕсĕк куçлă самурайсем еннелле ывăтма ĕлкĕрнĕ. Сăрт тăрринчи çĕр кисренсе илнĕ, тăшман кĕлеткисем хăйăрлă çĕрпе пĕрле аялалла сирпĕннĕ. Хĕрлĕ кавалеристсем хăватлăн ур-ра! кăшкăрни те илтĕнсе кайнă...

«Ятманов лазаретра тăна кĕнĕ. Ăна унтан хăвăртрах госпитале ăсатнă, хирургсем унăн уринчен икĕ пуля

тата темиçе граната ванчăкĕ туртса кăларнă. Юлташне, Рязань вырăсне Гришăна, урăх курайман вăл. Пригорина тăшман пульли гранатине ывăтма чĕркуççи çине çĕкленсен пуçĕнчен тивнĕ. Гранатипе темиçе самурая тĕп тунă вăл, анчах хăй те пулемечĕ çине пуçĕпе тăрăннă.»[44] Ятманов тăван ялне уксахласа таврăнать, анчах пурнăçа питĕ юратаканскер, хăйне валли ĕç тупас тесе, счетоводсен курсне вĕренсе пĕтерет. Счетовод ĕçĕпе те лăпланмасть вăл, ялта Осоавиахим уйрăмне йĕркелет те пушă вăхăтра Хĕрлĕ Çара каймалли çамрăксене çар ĕçне вĕрентме тытăнать: çарта мĕнле ăмăртусем ирттереççĕ, çавсене пурне те тенĕ пекех тăван ялĕнче йĕркелет. Çак ĕççене тума ăна çарта чухне эрнесерен питĕ ăшă çырусем çырса тăнă Маюкын хавхалантарать те, пулăшать те. Маюкын халĕ Алкеч мăшăрĕ. Çамрăк, хастар хĕрарăм ялти хĕрсене хăй тавра пуçтарать, упăшки ертсе, кăтартса пынипе вĕсене пăшал пеме, сурансене çуса тасатма, аманнă çынна пĕрремĕш пулăшу пама вĕрентет.

Удмурт тата ирçепе мăкшă литературисенче кунашкал очерксем сахалтарах пичетленнĕ пулин те, вĕсенче те çамрăк очеркистсем ӳссе пыраççĕ, патриотизм темине çине-çинех хускатма тытăнаççĕ.

Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусем, Хĕрлĕ Çар Хĕвел анăç Украинăпа Хĕвел анăç Белоруссие йышăннă чухне Н. Тихонов, А. Сурков, П. Павленко, А. Твардовский, Вс. Вишневский, С. Диковский, М. Чумандрин, К. Симонов тата ыттисем те фронт пичетĕнче хастарлăн ĕçлени совет литератури фашизмпа кĕрешме тăрăшса хатĕрленнине кăтартса паракан лайăх тĕслĕх пулса тăрать. Самурайсене çапса аркатни, вĕсене каялла хăваласа яни çинчен пур наци литературисем те çыраççĕ. Пушкăрт хаçачĕсемпе журналĕсенче кун çинчен очерксем, калавсем, сăвăсем, репортажсем пичетленеççĕ. 1939 çулта патриотла темăпа ирттернĕ конкурс çĕршыва фашизмран хӳтĕлемешкĕн ĕç çыннисене тивĕçлĕн хатĕрленме пулăшакан очерксем çуратать, пушкăрт литературине çĕнĕ вăйсем явăçтарать. Конкурса очерксем çеç мар, ытти жанрсемпе çырнă хайлавсене те йышăнаççĕ. Н. Каримов очеркист тата драматург «Оборона литературине уйăх-

серен вăйлатса пырар» статьяра çак темăпа çырнă произведенисене тĕплĕн тишкерет, малашне тумалли ĕçсене палăртать. Инçет Хĕвел тухăçĕнчи ĕçсем çинчен сахал мар очерк пичетленет: «Икĕ геройăн икĕ çĕнтерĕвĕ», «Пограничник паттăрлăхĕ», «Самурайсене вĕрентрĕç», «Хасан кӳлли патĕнче», «Хасан паттăрĕсем» т.ыт.те.

«Красная звезда» хаçатран С. Вирончăн «Украинăри тата Белоруссири çĕнтерӳллĕ çапăçусем» репортажне пушкăртла куçарса пичетлеççĕ. С. Кудаш Тăван çĕршывĕнчен вăйпа уйăрнă украинецсемпе белоруссем çĕнĕрен пĕрлешни çинчен «Тĕлпулу» ятлă публицистикăллă-сăвăллă очерк çырать. Испанири ĕçсем çинчен Г. Салям «Сеньор тата ачаллă хĕрарăм», Р. Ригмати «Тереза, Испани хĕрĕ» балладăсем хайлаççĕ. Ку произведенисен геройĕсене пĕр шăпа пĕрлештерсе тăрать. Нумаях пулмасть çеç вĕсем мирлĕ ĕçре вăй хунă: строительсем, учительсем, уй-хир ĕçченĕсем пулнă. Анчах та фашистла Германи енчен килсе çапнă хăрушă инкек вĕсене салтаксен ретне тăма хистенĕ. Вĕсем мирлĕ ĕçре мĕнле тăрăшса ĕçленĕ, Испанин ирĕклĕ çарĕнче те çавăн пекех пĕтĕм вăя хурса çапăçнă.

Совет очеркистикинчи вăл вăхăтри чи чаплă произведени — М. Кольцовăн «Испани дневникĕ». «Çак кĕнекене вуланă май эпĕ ялан тенĕ пекех икĕ художник çинчен шутларăм. Пĕри — вĕри чунлă, питĕ сисĕмлĕ, пĕр самантрах темĕн тĕрлĕ шухăшлама пултаракан çиçĕм пек ăс-тăнлă; тепри лăпкăрах чĕреллĕ, тарăн шухăшлă, сипетлĕ, «вăхăта чарса лартма пултаракан» çын. «Испани дневникĕн» авторĕ çак икĕ художнике пĕр этеме пĕрлештернĕ», — тесе çырнă Валентин Катаев «Литература хаçатĕнче» (1938, июнĕн 15-мĕшĕ). Вăл çак сăмахсемпе Кольцов кĕнекин чи паха енĕсене палăртса хаклама пултарнă.

«Дневник» пĕр вăхăтрах самай паллă илемлĕ тата публицистикăллă произведени пулса тăрать, унта автор хăйĕн журналист тата писатель талантне пĕтĕмпе тата туллин уçса панă. «Дневник» совет очеркĕн историне тивĕçлĕн кĕрсе вырнаçать: унăн хăш-пĕр пайĕсем —

пысăк пахалăхлă очерксем, çав вăхăтрах кĕнекере ытти жанрсемпе çырнă хайлавсем те пур: статьясем, корреспонденцисем, фельетонсем. Çав хушăрах вăл пĕр пĕтĕмлĕ произведени, ăна çырма Кольцов очеркăн тĕрлĕ тĕсĕсен: çул çӳрев очеркĕн, портрет-очеркăн, очерк-памфлетăн тата ыттисен çитĕнĕвĕсемпе усă курнă. Кĕнекене цемент пек çирĕппĕн çыпăçтарса тăраканни материалсен пĕрешкел тĕллевĕсем çеç мар, ĕçсем хронологи йĕркипе пĕрин хыççăн тепри аталанса пыни те мар, — чăн малтанах, мĕнле автор тата вăл кам пулни. Çапла майпа Кольцов хăйĕн дневникĕнче автора произведенин активлă персонажĕ туса хурать. «Дневникăн» тĕп геройĕ Испани халăхĕ пулнине асра тытса, хăйне кăшт аяккарах шутарас тĕллевпе вăл унта пуçĕнчен шутласа кăларнă Мексика коммунисчĕн Мигель Мартинесăн сăнарне кĕртет. Ăна автор хăйĕн хăш-пĕр ĕçĕсене, шухăшĕсене парать. Автор тата унăн йĕкĕреш хăраххи, Мексика коммунисчĕ, — иккĕшĕ те «Дневникăн» активлă персонажĕсем. Шухăшласа кăларнă сăнар очерк жанрĕнче пĕтĕмлетӳсем тума ытларах майсем туса парать.

Кольцов хăйĕн очеркĕсенче урăх меслетсемпе те усă курать. Кольцовăн ытти нумай очеркĕссм пекех, «Дневник» — анлăлатнă лирика монологĕ, «пурнăçран çырса илнĕ поэма» (В. Катаев). Очеркăн ку енĕсем уйрăмах Франции чĕнсе каланинче палăраççĕ «Франци, ăссăрланнă çĕршыв, мĕне кĕтетĕн эсĕ... Мексика та испансене хĕç-пăшал ярса пама хатĕрленет, эсĕ вара çаплахха мĕшĕлтететĕн!»[45] Çав уйрăмлăхах автор анăç демократийĕ мирлĕ Мадрид çинс бомбăсем пăрахнине сăнласа панинче те, пĕрремĕш кĕнекин юлашки йĕркисенче те палăрать: «Алăри сехет йĕпписем вунă сехет те хĕрĕх пилĕк минут кăтартаççĕ. Тепĕр сехет те вун пилĕк минутран ноябрĕн 7-мĕшĕ çитет. Çук, ку çĕрле сана пăрахса хăварма юрамасть, савнă Мадрид».

Лирикăллă монолог тĕллевне кура унăн енĕсем те улшăнаççĕ. Пĕр тĕсĕнче шанчăкпа йӳçĕ ӳпкев асăрхатăн; тепринче публицистла çирĕплетсе калани сисĕнет; виççĕмĕшĕнче — çепĕç юратупа шухăшлă туйăмсем. «Ис-

пани дневникĕнче» Кольцовăн нумай очеркĕсен уйрăмлăхĕсене курма пулать.

Ирĕклĕ лирикăллă монолог хронологипе географи рамкисенчен тухма пулăшать. М. Кольцов кĕнеки Испанири граждан вăрçин малтанхи тапхăрĕ çинчен кăна мар. Вăл тĕнче вăрçи умĕнхи Европăри политика пурнăçĕн картинин сарлака панорамине ӳкерсе кăтартать. Унта писатель-журналист Англипе Франци политикине хак парать. Кĕнекере историллĕ танлаштарусем, Мускав сăнарĕ пур. Çав сăнарпа М. Кольцовăн малтанхи кĕнеки, «19 хула» ятлăскер вĕçленнĕччĕ («Мускав хăйĕн ырă ятне улăштарать» очерк). Мускав сăнарне публицист «Дневник» пуçламăшĕнчен тытăнса вĕçне çитиех кăтартса пырать. 1936 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче Кольцов хăйĕн дневникне çапла çырса хурать: «Вунă сехет те çирĕм минут. Апла тăк, Мускавра халĕ çур çĕр иртни пĕр сехет те çирĕм минут. Унта, урамсенче, аслă уявăн юлашки теттисене тăрăшса çакаççĕ. Картишсене тасатакансем юлашки çӳп-çапăна шăлса пуçтараççĕ, тен, Пысăк театрта концерт та вĕçленме ĕлкĕреймен-ха».[46]

Мадридри лару-тăру çав тери йывăр. Тăшман унăн хĕрринчи урамĕсене йышăннă ĕнтĕ. Германипе Итали самолечĕсем хула çине бомбăсем пăрахаççĕ. Каллех йывăр вăхăтра писатель шухăшĕсемпе Мускавра çӳрет. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче вăл дневникне çапла çырса хурать: «Çак вăхăтра Мускавра ноябрь парачĕ хĕрсе пырать. Иртсе пыраççĕ ĕнтĕ е иртсе те кайнă çар академийĕсен колоннисем, Пролетари дивизийĕ... Хĕрлĕ площаделле кĕреççĕ, тен, Истори музейĕн икĕ енĕпе площаде кĕрлеттерсе те тухнă танксем, танксем».[47] Çапла вара «Дневник» тăршшĕпех Испани тусĕн — Совет çĕршывĕн сăнарĕ курăнса пырать. Çулталăк иртсен, ноябрĕн 6-мĕшĕнче, Кольцов дневникĕнче çакăн пек çырма тытăнать: «Ман кантăксенчен пĕри Мускав еннелле тухать. Кунтан çурçĕр-хĕвел тухăçнелле тӳп-тӳрĕ каяс пулсан, Мускава çитме виçĕ пин çурă километр çеç. Халĕ урамра каç пулать, çапах та эпĕ пĕтĕм линие вĕçне çитичченех ку-

ратăп. Куçсемпе эпĕ çав лини тăрăх миçе хутчен вĕçсе тухман-ши?»[48]

«Халĕ урамра каç пулать», — çак сăмахсене Кольцов ахальтен çырса хуман «Дневникне». Пĕтĕм чĕререн Тăван çĕршыва юрататăн пулсан, ăна чунтан парăннă тăк çанталăк тĕттĕмлене пуçланă пулсан та ăна куратăнах. Çав шухăша пĕлтересшĕн пулнă ĕнтĕ автор «Дневникне» каç пулса килни çинчен çырса хурса. «Каç пулса килни» — чăннипех çапла пулнă ĕнтĕ — мĕншĕн тесен таса çанталăкра вăл Мускава виçĕ пин çурă километртан та чиперех курать.

Кольцов-очеркист ăсталăхĕн тӳпи тесе 1937 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче çырнă очеркĕнчи Тăван çĕршыв сăнарне калама пулать. Ун çинче чарăнса тăриччен çакна палăртмалла. «Испани дневникĕ» М. Кольцовăн «Правда» хаçатра пичетленнĕ корреспонденцийĕсемпе очеркĕсен никĕсĕ çинче пухăнса çĕкленнĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисене испан хаçачĕсем те куçарса пичетленĕ. Анчах «Правдăра» çутă кун курнă очерксенчен чылайăшĕ «Дневника» кĕреймесĕрех юлнă. Писатель кĕнекине стильпе çыхăннă очерксем çеç кĕнĕ. Тĕслĕхрен, Кольцов 1936 çулхи октябрĕн 14-мĕшĕнче Испанири вăрçăллă лару-тăрăва тишкерекен статья пичетлесе кăларать. Статьяри хăш-пĕр шухăшсене вăл «Дневника» кĕртет, статйи вара, очерк стилĕпе пĕр килменскер, кĕнекене кĕреймесĕрех юлать. Çав вăхăтрах пĕр кун хушшинче çырнă «Хыр тата пальма» очерк, «Правда» хаçатра 1937 çулхи апрелĕн 30-мĕшĕнче пичетленнĕскер, уйрăм очерк пулсан та, кĕнекене йĕркеллех кĕрсе вырнаçать. Ку очерк, лирикăллă монолог пулнă пирки, Кольцовăн политика пейзажĕ ăсталăхне курма май парать. Çакна «Дневника» рецензиленĕ чухне А. Толстойпа А. Фадеев та асăрханă: «Кольцовăн хăйне манерлĕ пейзаж тăвас ăсталăх пур, унăн пейзажĕ пĕр вăхăтрах япаласене те кăтартать, çав япаласем çине лирикăллă туйăмпа пăхтарать, çав япала урлах пĕтĕм лару-тăрун политикăлла характеристикине сăнласа парать» (Правда. 1938. 334 №. Декабрĕн 4-мĕшĕ).

Мĕнре-ха «Хыр тата пальма» очерк тупсăмĕ? Мĕншĕн Кольцов пирĕн ахаль хыр çинченех çав тери çĕкленӳллĕн çырать? «Мĕнешкел хитре йывăç-çке хыр! Тӳррĕн, яштакан ӳссе каять вăл çӳлелле, çак хăватлă йывăç!». Пирĕн çурçĕр пальми-хырĕ çинчен Кольцов Тăван çĕршыва кĕске вăхăтлăха килсен çапла аса илет. Трагедилле темăпа Гейне çырнă сăвва, Лермонтов куçарнăскерне, сăвăри ĕмĕрлĕх уйрăлу темине хирĕç Кольцов туслăхпа патриотизм темине кăларса тăратать. Çавăнпа мар-ши Одинцово поселокĕнчи пионерсем Испани ачисем çинчен пăшăрханса калаçаççĕ, вĕсене хăйсем патне килме чĕнеççĕ: «Хĕлле эпир вĕсене Кавказра усратпăр. Унта ăшă, унта пальмăсем, тигрсем, — вĕсем мĕн юратаççĕ — пурте пур».

Кольцов очеркра пирĕн çĕршыв пуянлăхĕ çинчен çырать. Пирĕн хырсем те, пальмăсем те пурри çинчен, пирĕн пурнăçра чи кирли — «хăвна хăв ирĕклĕн те шанчăклăн тытма пултарни» пурри çинчен пĕлтерет. Произведени тытăмĕнче чи ăнланмалли очерк пуçламăшĕ пулса тăрать: «Кунта çурăм çинче выртнă чухне çутă, таса тӳпен пысăк лаптăкĕ курăнать, унта йывăç тăррисен мĕлкисем вылянчăклăн авăна-авăна илеççĕ. Мĕн тери хитре йывăç вăл — хыр!» Кунта — тăван, мирлĕ çĕр çинче çут çанталăк парнеленĕ ахаль хыр та илемлĕрен те илемлĕ сăнар евĕрлĕ курăнать. Пейзаж çинчен кăна та мар, хыр çинчен çеç те мар сăмах пырать кунта, — ку вăл Тăван çĕршыв çинчен çырнă очерк. Вăл Кольцова килĕшнĕ питĕ хитре те инçетри Испанири мар, хыр пек вăл — сăпайлăрах, ансатрах — çутта юратакан, яштака тата пуçне нихçан та каçартман çирĕп йывăç евĕрлĕ.

Тӳпе вара — çап-çутă, лутăрканман, — Тăван çĕршыв тӳпинчен лайăхраххи урăх ниçта та çук. Çакăнта тепĕр тӳпене, Мадрид тӳпине сăнласа панине аса илес пулать, — ăна лăпкă, хрусталь пĕве çине пăхнă пек пăхма пулать ... «Вăл йĕри-тавралла çутă шевлесем сапалать, анчах çав шевлесем вилĕм сапаççĕ. 1936-1937 çулсенче Мадридра хĕл ирттернĕ çын яланах Веласкеспа Рибера картинисем çине ăшĕнче те пулин

бомбардировщиксемпе истребительсем ӳкерсе хурать».[49]

Икĕ тĕслĕхĕнче те лирикăллăн çырни çав вăхăтрах политикăллă событисене хăйне евĕрлĕ хак панине те пĕлтерет. «Хыр тата пальма» очерк пейажĕ — «Испани дневникĕн» нумай-нумай хăйне евĕрлĕхĕсенчен пĕри çеç. Произведенире эпир событисен политикăллă пĕлтерĕшĕсене асра юлмалла палăртакан илемлĕ пайăрăмсене куратпăр. Тĕслĕхрен, 1936 çулхи ноябрĕн 6—7-мĕшĕсенчи трагедиллĕ событисем хыççăн ноябрĕн 8-мĕшĕнче кĕтмен çĕртен дневникра çапла çырма тытăнни: «Эпир бомба çурăлнинчен те мар, хулана çитсе кĕнĕ фашистсем прикладсемпе такканинчен те мар.., автан хыттăн аватнинчен вăранса кайрăмăр. Малтан ку тĕлĕкре пулса иртнĕ пек туйăнчĕ. Самантлăха колхоз, Пугачев районĕ, тырă хатĕрлев пунктне турттарни мĕлтлетсе иртрĕ...».[50]

Куншăн нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Госпиталь çумĕнче чăх ферми пекки йĕркеленĕ иккен. Анчах очерк пуçламăшĕ мĕншĕн çакнашкал-ха? Капла пуçлани малти очерксен çивĕчлĕхне пăртак вăйсăрлатать-çке. Мĕншĕн тесен çак кун малтан пулманни пулса иртнĕ: «Халĕ тинех паллă — Мадрид парăнмасть ... Ăна çапăçусăр тăшмана памаççĕ. Хама эпĕ питĕ шăппăн калатăп: тен, пачах та памĕç-и?»[51] Очерк çапла вĕçленет. Çиелтен пăхсан, унăн пуçламăшĕпе вĕçĕ хушшинче нимĕнле çыхăну та çук пек туйăнать. Тĕрĕссипе, ку çыхăну пур, очерк пуçламăшĕнчи кулăшла йĕркесен пĕлтерĕшĕ питĕ пысăк — унта калăпăшĕ енчен тан мар событисене танлаштарнă: фашистсем прикладпа хваттер алăкĕсенчен шаккасса кĕтни тата чăн-чăн автан кикириклетни. Очерк пуçламăшне унăн вĕçĕ ăнлантарать. Ноябрĕн 8-мĕшĕнче хулана паттăрăн хӳтĕлеме пуçланă.

«Дневникри» малаллахи аталану литература портречĕпе ĕçлес ыйтупа çыхăннă. «Дневникри» нумай-нумай персонажсенчен Залка, Дурути, Прието, Антонио летчик, Ларго Кабальеро премьер сăнарĕсене уйрăмах лайăх кăтартнă. Кольцов ӳкерсе кăтартнă Матэ Залка

сăнарĕ литература портречĕсем ӳкерес тĕлĕшпе тунă чи пысăк çитĕнӳсен шутне кĕрет. Писатель Залкăна штаб кабинетĕнче кăтартать, унăн калаçăвĕн уйрăмлăхĕсене темиçе хутчен те палăртать, пачах кĕтмен çĕртен тата çав хушăрах питĕ ĕненмелле революционер-писатель Залка пурнăçне «ăшăшăн шăннă» поляр тĕпчевçин Амундсенăн пурнăçĕпе танлаштарать. Кольцов Залка пурнăçа юратнине, вăл çивĕч, хушăран кăнттамрах шӳте килĕштернине сăнарлать, — çаксем пурте чăн пурнăçри писательпе генерала, этеме тата кĕрешӳçе лайăхрах курма, ăнланма пулăшаççĕ. Залкăран трофейсен пĕр пайне илеççĕ, вăл вара «Михаил Ефимовича» çăхав парать: «Çип юлмиччен хывăнтарса çаратаççĕ! Каллех 15 грузовикпа 3 лимузин туртса илчĕç!.. Арăмна мучуна пар, тени мар-и ку! Мĕнех ĕнтĕ, Мулкач — таса чунлă испан салтакĕ, вăл пĕрлехи командованине пăхăнать».[52]

Кольцов кулакан тата макăракан Залкăна та, хăйне тимлĕ тытакан тата тăрăхласа шӳтлекен Залкăна та кăтартать, унăн паттăрла историйĕсене аса илсе вăл мĕнле вилни çинчен каласа парать. Çаксем пурте пĕрле темиçе страница йышăнаççĕ, пурте пĕрле очерк меслечĕсемпе геройăн чăн-чăн палăкне тăваççĕ. Залкăн сăнарне калăпланă май Кольцов испан вăрçи пуçланичченех тытăннă ĕçе — литература портречĕсем çырассине — малалла тăсать. Кунта вара, «Дневникра», вăл геройăн тул енчи характеристикине, геройăн чунне кăтартакан портрет енĕсене уçса пама тăрăшать. «Дневникра» Испани ирĕклĕхĕшĕн кĕрешсе пуçне хунă анархиста Дурутие темиçе те асăннă. Анчах та унăн сăнарĕ çак темиçе йĕркесĕр самай шуранка та тĕссĕртерех курăннă пулĕччĕ: «Çӳллĕ, атлетăнни пек кĕлеткеллĕ, кăшт çеç кăвакара пуçланă хитре пуçлă, влаça хытă тытать, ыттисене пусарать, анчах та куçĕсенче хĕрарăмăнни евĕрлĕрех темĕнле ытлашши туйăмлăх, тепĕр чухне аманнă тискер кайăк майлăрах пăхать. Мана унăн характерĕ çемçерех, вăйсăртарах пек туйăнать».[53]

Литература штампĕсенчен ятарласа хăтăлма тăрăшакан хальхи вăхăтри очеркистшăн çакнашкал характе-

ристикăра, хăйне майлă сăнласа панинче вĕренмелли питĕ нумай. Чĕррĕн кăтартас тесе сăнламан портрет, çын кăмăл-туйăмне çеç кăтартман пейзаж, сăнарлăн танлаштарни пит усăллах мар меслет, — пурте çаксем чи кирлине уйăрса палăртмалли мелсем — вăт мĕн ыттисенчен урăхларах сăнласа кăтартать Кольцов-очеркиста.

«Дневникра» Кольцов пĕрре çеç мар литература реминисценци меслечĕпе усă курать. Çапах та ăна нихăш вырăна та тивĕçсĕррĕн, ячĕшĕн çеç кĕртсе лартмасть. Яланах вăл тĕп шухăша уçăмлăрах тума пулăшать. Дон Кихот çинчен калаçни, Испанире «Чапаев» кинофильма кăтартнине сӳтсе явни, кĕтмен çĕртен Данилевскин «Княжна Тараканова» кĕнекинчен пĕр сыпăк илсе «Дневника» кĕртни е Мускава ют çĕршывран килнĕ писатель сăнласа кăтартни. Ку литература тĕнчи тăрăх экскурсире çӳрени те мар, авторăн анлă тавра курăмне кăтартас тени те мар, — вĕсем испан вăрçине тĕрĕс сăнласа пама пулăшакан пайăрăмсем. Сервантес геройне аса илни республика хӳтĕлевçисен лăпкăлăхне, вĕсен ытла та ăшăх шухăшĕсене питлеме май парать; испан боецĕсем кинофильм пăхнă вăхăтра пĕр пек кăмăл-туйăмлă пулни испан вăрçин интернациллĕхне уççăнрах кăтартма пулăшать; Мускав çинчен çырнă страницăсене кĕнекене кĕртни автор кăмăлĕпе пĕр килет тата фашизма хирĕç пыракан кĕрешӳре пирĕн çĕршывăн паллă вырăнĕпе пысăк пĕлтерĕшне çирĕплетсе хăварать.

Хронологи енчен илсен, «Дневникри» ĕçсем 1936-1937 çулсенче пулса иртеççĕ. Анчах Кольцов çак çулсен рамкинчен тухмалли мелсем те тупать. Вăл Испанири ĕçсемпе пĕрешкелтерех пулса иртнĕ истори пулăмĕсене, танлаштарусене, аса илӳсене хăйĕн кĕнекине кĕртет, — Испание вăл иккĕмĕш хут килет ĕнтĕ. Тен, çавăнпа «Дневника» «Испанири çуркунне» очеркăн хăшпĕр страницисене кĕртнĕ. Сăлтавĕ те тупăннă: Кольцов Испани компартийĕн Тĕп Комитечĕн секретарĕпе Хосе Диаспа тĕл пулни. Çак ыттисенчен нимĕнпех те уйрăлса тăман паллă мар коммунист çинчен Кольцов 1931 çултах çырнă иккен, халĕ çав Хосе Диас Испани компар-

тийĕн çул пуçĕ пулса тăнă. Кольцов çавна пула маларах хăй çырса пичетленĕ эпизодсене, пулни-иртнисене «Дневника» кĕртет. Ĕçсем, асăннă вăхăтран тухса, ултă çул каялла куçаççĕ.

Аналоги — танлаштару та çавнашкалах, ăнланма йывăр мар вĕсене. «19 хуларах» Кольцов Загреба Полтавăпа танлаштарнăччĕ, венгр отельне «Унгарие» — Ленинград «Асторийĕпе», ун коридорĕсем тăрăх та пулемет лентисем çакнă хĕрлĕ армеецсем таплаттарса утнă. «Испани дневникĕнче» çавнашкал «вырăсла» танлаштарусем сахал мар. Вĕсем автор çырса кăтартакан ӳкерчĕксене чăн пулса иртнĕ пек тата чĕррĕн кăтартаççĕ.

Валенсире апельсин йывăçĕсем çимĕçĕ качкипех урамсенчех, хунар çакнă юпасем хушшинче ӳсеççĕ. Паллах, ку çурçĕрте пурăнакансемшĕн тĕлĕнмелле туйăнать. Ĕненмелле мар пек. Хăнăхнă пурнăçринчен пачах урăхла. Ку вăл «ваннăри крана уçсан шывпа пĕрле унтан пулăсем ишсе тухнă евĕрех», — тет М.Кольцов. «Дневник» авторне пур çĕрте те туятăн — вăл пĕр-пĕр ĕçе пурнăçланă вырăнта кăна мар. Унăн пĕтĕмлетĕвĕсенче çурçĕр çыннин сасси сисĕнет (халь çеç илсе кăтартнă танлаштарури пек) тата пур чухне те совет çыннин сасси.

Кольцовăн политикăлла хĕрӳ, хăюллă кĕнекине испан вăрçине тӳрремӗнех хутшăннă, унăн активлă боецĕ пулнă çын çырнă. Ăна талантлă художник хайланă. Пурнăçа сăнласа кăтартмашкăн унăн вулакана тахçанах йăлăхтарнă «типĕ» меслетсем çук. Эпир «Дневникăн» хăш-пĕр илемлĕх мелĕсене асăнтăмăр, анчах вĕсем Кольцов-художник сăрĕсене ниепле те пĕтĕмпе хупласа лартаймаççĕ. Ара, Залкăпа Дурутисĕр пуçне эпир «Дневник» страницисенче тăхăр çулти Ксавера та, антифашистсен конгресне хутшăнакансене те, Барсело подполковника та, Рохо полковника та куратпăр-çке. Кашнине сăнлама Кольцов пĕр-пĕринчен пачах уйрăлса тăракан, пĕр-пĕрне пăтраштарма çук сăрăсем тупать. «Дневник» страницисем тăрăх тăшмана тĕл лектерсе çунтаракан тата кулăшла йĕркесем, халиччен илтмен танлаштарусем сапаласа тухнă. Тĕслĕхрен, акă иронияллĕ тунсăхлăн асăрхаттарса калани: «Мигель Мартинес ыт-

тисемпе пĕрле «этем çыххинче» хускалмасăр выртать, çав «çыхă» «Мадрид-Лиссабон» шоссен икĕ енĕпе те тăсăлса кайнă, вăл выртнă тĕлтен Мадрида çитме чылай çывăхрах».[54] Ку мĕне пĕлтерет: республиканецсен ĕçĕсем чаплах мар, фашистсен наступленийĕ ăнăçлăн аталанса пырать. Çавăн пек танлаштарусене, ытти тропсемпе синтаксис фигурисене, — вĕсем кашни кун çырса пыннинче те пур, — уйăрса хăварас мар тесен, пĕтĕм «Испани дневникне» тĕслĕх вырăнне çырса тухма тивĕччĕ.

«Испани дневникĕ» Кольцов-очеркист пултарулăхĕн çĕнĕ енĕсене уçса кăтартнă. Унăн пултарулăхĕнче пĕрпĕрне чăрмантармасăр хаçат информацийĕпе литература портречĕ, политика пейзажĕпе сăнарлă танлаштару, автор шухăшĕсемпе событисене хутшăнакансен чĕрĕ те пуян чĕлхи хăйсене çеç тивĕçлĕ вырăн тупаççĕ. Пафос тата лирика, йĕкĕлтесе кулнипе çунтарса кĕллентерекен сарказм — стилĕн тĕрлĕ енĕсем хăйсем валли вырăн тупаççĕ çак произведенире. Кольцовăн чи лайăх очеркĕсемпе çыхăннă «Дневник» литературăра çĕнĕ жанр çуралнине пĕлтерет. Çак шухăша асăннă май В. Ставский, «Дневник» пичетре тухичченех, çапла каланă: «М. Кольцов, совет писателĕсенчен чи малта пыракан литераторсенчен пĕри, пачах çĕнĕ йышши илемлĕ произведенисен типне çуратрĕ».

М. Кольцов очеркĕсенче — «Испани дневникĕнче» пĕтĕм эпохăна хумханчăклăн та питĕ ăстан кăтартса панă. Нумай нациллĕ Раççей литературине вăл документ пек çеç мар, чăн-чăн литература произведенийĕ пек кĕрсе юлчĕ. М. Кольцовăн нумай-нумай очеркĕсемпе «Дневникĕ» вулакансене паянхи кун та савăнтараççĕ те, хумхантараççĕ те. М. Кольцовран вĕренмелли халĕ те нумай-ха. Унăн очеркĕсен традицине малалла аталантарса пырас пулать.

Чăваш писателĕсем «Дневник» авторĕнчен очерк ăсталăхне май пур таран яланах вĕренме тăрăшнă. Хăйĕн пултарулăхне вырăс писателĕсенчен ӳстерсе пыма тăрăшакан Леонид Агаковăн пĕр очеркне тишкертĕмĕрха маларах. 1941 çулта унăн пысăках мар очерксен «Манăн туссем» кĕнеки пичетленсе тухать. Çав кĕне-

кере эпир пăхса тухнă «Пулеметчик юрлать» очеркĕ те пур. Унсăр пуçне автор унта тата тăватă очерк кĕртнĕ. Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусем çинчен çырман пĕр халăх литератури та юлман ун чухне совет çĕршывĕнче. Самурайсемпе паттăррăн кĕрешнĕшĕн Е.Винокурова Совет Союзĕн Геройĕн ятне параççĕ. Кун çинчен А. Эсхель «Сунталта» очерк пичетлесе кăларнисĕр пуçне Тăван çĕршыв Аслă вăрçи пуçланас умĕн самаях пысăк кĕнеке кăларать. Л. Агаковăн «Танкист калавĕ» очеркĕ те Хасан кӳлли патĕнчи çапăçусем çинченех. Совет çĕршывĕн вăйне, унăн Хĕрлĕ Çарĕн хăватне Хĕвел тухăçĕнче яппунсем пĕр май тĕрĕслесе пăхма тăрăшаççĕ. Гитлерпа ахальтен мар çине-çинех калаçусем ирттереççĕ вĕсем. Вырăс çĕрне Урал тăвĕсем патне çитиччен хăйсен аллине çавăрса илесси — Тухăçри тăшманăн тĕп тĕллевĕ. Камацубара генерал монгол çĕрĕсем çинчи Халхин-Гол шывĕ хĕрринчи Баци Цаган тăвĕсем патне темиçе пехота дивизийĕ, нумай утлă çар, артиллери, авиаци, шучĕ çук пулеметсем куçарса килет. Баци Цаган тăвĕсене вăл тĕнчери никам çĕнтерейми хăватлă крепость туса хума ĕмĕтленет. Хĕрлĕ Çар командирĕсем те ăнланаççĕ: Совет çĕршывĕн техники çитес вăрçăра фашизм техникипе тупăшма пултарать-и, Хĕрлĕ Çар салтакĕсен ăсталăхĕ, хăюлăхĕ фашистсеннинчен юлмаççĕ-и — çакна пĕлни те, мĕн çитменнине халех пĕтерме кирлине те, вăрçа хирĕç халех хатĕрленме пуçламаллине те ăнланаççĕ. Ăнланманнисем те пур... Анчах писательсем те пĕтĕмпех çырса кăтартаймаççĕ мар-и? Кĕçĕн командирсемпе салтаксен паттăрлăхне вулакансене ăстан кăтартаççĕ-ха вĕсем, акă, Л. Агаков та танк экипажĕ нименле тăшманран та хăраманнине, самурайсемпе пирĕн танкистсем юлашки юн юлмиччен çапăçма хатĕррине сăнласа панă. Самурайсем танксен çулне пӳлме чи юрăхлă выränта виçĕ оруди дотсене вырнаçтарнă. Орудисем умне виçĕ метр тарăнăш траншейăсем чавнă. Самурайсене парăнтарас тесен, вунă тонна туртакан танксене траншейăна сиктерсе тепĕр енне улăхмалла — тăшман орудийĕсем тĕл переççĕ, пулеметсен пульлисем танк çине пăрçа ывăçласа тăкнă пек тăкăнаççĕ. Танкна çав траншейăна

сиктер — тепĕр çеккунтран бензин бакĕсем шартлатса çурăлаççĕ те, пĕтĕм танк хĕрлĕ çулăмпа çунма пуçлать... Анчах та шăп çак самантра чăваш каччи, калуçă пĕлтернĕ тăрăх, Чита хулинче çап-çамрăк медсестрапа паллашнине, ăна хăйĕн танкĕпе тарăн канавсем урлă сиксе каçма тивни çинчен каласа кăтартнине аса илех каять. Хăçан сиксе каçнă? Нихçан та! Çав сăмахсемшĕн Миша танк ăшĕнчех хăмла çырли пек хĕрелсе каять, хăйне никам курмасть пулин те, хĕр умĕнче çапла мухтаннăшăн чĕри хĕсĕнсе килет.

— Малалла-а! — приказ парать танк командирĕ.

Миша, колхозра трактористра тата шоферта ĕçленĕскер, газ хушать, мĕкĕрекен танка малалла чуптарать. Анчах вăл чупмасть, автор гиперболăпа пĕлсе усă курнăран «... вĕриленсе çитнĕ урхамах кайри урисем çине тăнă пекех çĕкленет», темĕнле çăмăллăн пулса каять самантлăха механик-водителе, тепĕр самантран тин ăнланать, унăн танкĕ тарăн та сарлака траншея урлă вĕçсе каçнă иккен. Нивушлĕ? Ĕненмелле мар! Анчах командирăн хаваслă сасси ĕнентерет:

— Миша! Ăмăрт кайăк эсĕ, танк ăшĕнче ларакан кайăк!

Л. Агаков, вулакансене ăнланмалларах пултăр тесе, техника тата çар терминĕсемпе сахал усă курать, вĕсен вырăнне ун чухнехи вулакана çывăх сăмах çаврăнăшĕсем куратпăр очеркра: «тĕнчене кисретекен моторсем мĕкĕрсе ĕçлени», «тупăсемпе пулеметсен сассине хупăрласа лартрĕç танксем», «тăшман енче пысăк милĕк евĕр хĕм куписем пĕрхĕнме тытăнчĕç», «хĕрлĕ çунатлă хурчкасем пулеметсенчен шултра пульăллă вăйлă çумăр сапса иртсен» т.ыт.те. Е тата: «Пирĕн хăватлă танксем сухаласа иртнĕ хыççăн шултра калибрлă пулеметсем çĕр ăшне таптаса кĕртнĕ ванчăк тимĕр купи çеç пулса юлаççĕ», «турпас пулса юлнă урапасем», «Джунгали тепĕр чăрăш айне кушак пек сиксе куçрĕ»... Е салтака, механик-водителе, тăшманпа çапăçнă вăхăтра тата вăл юратнă савнийĕпе тĕл пулнă чухне танлаштарни — яппун самурайĕсем умĕнче вăл хăйне тигр пек тытать, больницăра выртнă вăхăтра вара савнийĕ кучченеçсемпе пыр-

сан: «тĕлпулу пӳлĕмне çитнĕ çĕре чĕре хăнтлатсах тапма тытăнчĕ, çав тери пăлханса кирлĕ алăка уçрăм. Таньăна курсан чĕлхе çыхланса ларчĕ, нимĕн те калаймасăр ун çине шăтарасла пăхса, пĕр май аллине силлетĕп...».[55]

«Савăнăç» очеркра «Кзыл Аскар» колхоз каччисем Хĕрлĕ Çара каяççĕ. Вĕсене пĕтĕм колхоз ăсатать, çĕршыв чиккисене куç пек тимлĕ сыхлама хушаççĕ колхозниксем. Пулас боецсем хушшинче Джунгали те пур. Унăн чун савнийĕ, хура куçлă Эмине, каччăна аяккарах чĕнсе илсе, хăлхинчен хăрах алкине вĕçертсе парнелет. «Ан çухат çакна киле таврăниччен, — тет Эмине пĕр вăтанса, пĕр харсăрланса. — Алкана çухатсан, пирĕн юрату та сӳнет». Çарта Джунгали разведчик, унтан разведчиксен кĕçĕн командирĕ пулать. Пĕррехинче, разведкăра (унччен вăл темиçе те разведкăра хăюлăхпа пултарулăх кăтартнă) ăна финсем пур енчен те хупăрласа илеççĕ, амантаççĕ. Джунгали пĕтĕм вăйне пухса тарăн шăтăк чавать, пуçне юр çине хурать. Эмине алки унăн кăкăр кĕсйинчех-ха, финсен аллине лекме юрамасть çав алкан.

«Тăван çĕршывшăн!» — çыртса лартнă шăлĕсем витĕр пăшăлтатнă вăл, пĕтĕм чун-хавалне пухса. — Найăр, илĕр ман юлашки кучченеçе!»

Çĕнĕ çарта йĕркесем те çĕнĕ. Командир унта кашни салтакшăн ашшĕ пек тăрăшать. Çакна Агаков Джунгали шăпипе çирĕплетет. Юлашки гранатăна тăшман еннелле ывăтсанах тăнне çухатать вăл. Шурă финсем (вĕсенчен чылайăшĕ çĕр çинчен çĕкленмесĕрех юлать) ĕлкĕриччен хамăрăннисем Джунгали патне çитеççĕ, тăшмана çĕнĕ вăйпа каялла хăваласа яраççĕ. Госпитальте тăна кĕнĕ Джунгалие вара юлташĕсем çапла ăнлантараççĕ: «Çырмари шăтăкран комбат сана хăй çĕклесе кăларчĕ, тухтăр пырсан ăна: темле пулсан та çак геройăн пурнăçне çăлăр, терĕ. Сан суранусене çыхнă чухне ниçта уйрăлмасăр пăхса тăчĕ».[56] Çак сăмахсене илтнĕ хыççăн Джунгали суранĕсем тата хăвăртрах сывалаççĕ.

Командир салтаксемшĕн тăрăшнине Л. Агаков тепĕр очеркĕнче те питĕ лайăх сăнласа парать. Сăмах ма-

йăн каласан, писатель хăй те шурă финсемпе çапăçнă, взвод командирĕ пулнă. «Джунгали» очерка вăл аманнă хыççăн Ленинград госпиталĕнче выртнă вăхăтра, декабрь уйăхĕнче çырнă. Халĕ тишкерекеннине те. Шурă финсемпе çапăçнă чухне Хĕрлĕ Çар питĕ пысăк çухатусем тӳснĕ, Раççей патшин ăслă генералĕ пулнă Мандельштам наука вĕрентĕвĕсене шута илсе тунă укрепленисене йышăнма çăмăл пулман. Çав хушăрах салтаксемпе кĕçĕн командирсем финсене çĕнтерме мĕнпур вăя хураççĕ, çĕнтерӳшĕн хăйсен пурнăçне те шеллемеççĕ. Ку очерк тĕп геройĕсем те разведчиксемех, чăваш каччи Петĕрпе тутар йĕкĕчĕ Галим. Разведкăра вĕсен, тăшман çинчен нумайрах пĕлес шутпа, пĕр-пĕринчен уйрăлма тивет. «Çук, асăрхамаççĕ, — çак шухăшпа Петĕр юр ăшне ытларах путса, пĕтĕм вăйпа, чĕринчи пур хастарлăха пухса малалла упаленсе кайрĕ. Приказа пурнăçа кĕртмеллех, çак сăрт çинче мĕн пуррине пĕлсе таврăнмалла... Тăшман тĕл пулсан — тытăçма хатĕр».[57] Умри пысăк чул инçех те мар ĕнтĕ. Хăйĕн пĕтĕм ăсталăхĕпе усă курса акă мĕн пĕлет Петĕр: унран çирĕм метртах — траншея. Сăрт хĕррипе çĕлен пек авкаланса пырса вăл темиçе блиндажа пĕрлештерет. Сăрт айккинче, йывăçсем айĕнче — дот иккен. Унăн стенинче виçĕ амбразура курăнса тăрать. Çиелте — кирпĕч ванчăкĕсем, пĕрене татăкĕсем, авкаласа, кукăрткаласа пĕтернĕ тимĕр листисем выртаççĕ. Ишĕлме пуçланă мăрьерен çинçе шĕвĕ тĕтĕм йăсăрланать. Шалта хулăн сасăпа ăнланмалла мар калаçни илтĕнет. Хыçалта сасартăк ура сассисем илтĕнсе каяççĕ. Финсем! Пĕччен хирĕç тăраймăн ... Тен, асăрхаймĕç... Çук, курчĕç, темĕн хушăра винтовкăсенчен шалт-шалт! тутарчĕç. Икĕ хулне те пульăсем çунтарса илчĕç, юн тапса юхма тытăнчĕ. Финсем çывхарсах килеççĕ. Мĕнле пĕлтермелле разведка сведенийĕсене хамăрăннисене? Тăшман аллине лекиччен хăвна гранатăпа сиктерсе ямалла — аллисем пăшал тытаймаççĕ. Взрыв сассине илтсен, хамăрăннисем килсе тухĕç-и тен?

Петĕр ялти хĕр-тусне Праские аса илчĕ, Галим юлташĕ ăна Сахия çинчен каласа кăтартнăччĕ, шухăшне

çапах та улăштармарĕ. Граната аври çинчи ункăна шăлĕсемпе çыртса хывма хăтланчĕ: «Çук, май килмест». Финсем çитрĕç. «Петĕр, гранати çине ерипен шуçса выртнăран, вăл курăнмасть. Вăл хускалмасть, сывлани те сисĕнмест — вилнĕ. Финсем ăна тапса пăхрĕç, унтан çав сăмахах хăйсен чĕлхипе каларĕç пулас. Анчах кунпах лăпланмарĕç-ха. Пĕри, каялла таврăнса, Петĕр патнелле ӳпĕнчĕ, вăрăм çĕçĕпе хулпуççийĕнчен яшт! чикрĕ. Чăтрĕ хĕрлĕ армеец, хăнк та тумарĕ, вилнĕ пекех выртрĕ. Анчах пĕлмест, ăçтан вăйă тухрĕ унăн, епле майпа алли çĕкленчĕ — гранатăна финсем çинелле хыçалтан ывăтрĕ. Аçа çапнă пекех шартлатрĕ вăл сивĕ çанталăкра. Фин салтакĕсем сывлăшалла сирпĕнчĕç. Иккĕн ыратнипе нăйкăшса ячĕç... Урăх Петĕр нимĕн те астумасть — тăнне çухатрĕ...

Миçе сехет выртнă вăл, кам ăна лазарета çĕклесе килнĕ — пĕлмест. Пĕрремĕш хут куçне уçса маччаналла тинкернĕччĕ çеç, унăн пичĕ тĕлĕнче взвод командирĕн Потаповăн кăвак куçĕсем курăнса кайрĕç.

— Тухтăр, пăхăр-ха, куçне уçрĕ, — терĕ Потапов хăй ĕненмен пек.

— Пурăнать, — терĕ çирĕппĕн тухтăр.[58]

Хӳтĕлев литературин аталанăвĕнче Хветĕр Çитта пултарулăхне те палăртмалла. Федор Александрович Çитта 1914 çулхи май уйăхĕнче Патăрьел районĕнчи Кĕçĕн Патăрьелĕнче çуралнă. Вăтам шкулта тата педтехникумра вĕреннĕ. Шкулта учительте ĕçленĕ. Литература ĕçне вăл 1930 çулсенче тытăннă. 1932 çулта талантлă çамрăк писатель Шупашкарта «Пионер сасси» хаçат редакцийĕнче ĕçлеме тытăннă. Ытларах вăл очерксем çырма юратнă. «Пионер сасси» тата «Çамрăк колхозник» хаçатсенче пичетленнĕ очеркĕсене вулакансем хапăлласа кĕтсе илеççĕ, кăмăллаcа вулаççĕ. Çав очерксен шутĕнче «Герман доброволец», «Чăн тӳрĕ çулпа», «Лагерьте», «Паянхи Маленчук», «Çамрăк маттурсем», «Эх, пултараççĕ те!», «Лагерьти хаваслăх», «Маттур Маруся», «Ольга Харитоновна», «Çамрăк талантсем». Вĕсенче Çитта чăваш ялĕсенче çĕнĕ пурнăçăн çĕнĕ йăлисем вăй илсе пынине сăнласа кăтартать.

1935—1938 çулсенче Хветĕр Çитта Ленинградри В. Воровский ячĕллĕ журналистика институтĕнче вĕреннĕ, пĕр хушă Чăваш патшалăх издательствин редакторĕнче ĕçленĕ. 1938 çулта ăна çара илеççĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă вăхăтра çамрăк писатель-журналист дивизире тухса тăракан «Красноармеец» хаçат редакцийĕн япаллă секретарĕ пулнă. 1942 çултанпа вăл — батальон комиссарĕ, дивизири «Защитник Родины» хаçат редакторĕ.

Хв. Çитта нимĕç фашисчĕсене Ленинград патĕнче çапса çĕмĕрнĕ хаяр çапăçусене хутшăннă, хăйĕн пур очеркĕсемпе калавĕсене те вăл фронтри лару-тăрура çырнă. Унăн чи малтанхи очеркĕсенчех хĕрӳллĕ агитаци вăйĕ, салтак вăр-варлăхĕпе çивĕчлĕхĕ тата çавсене илемлĕ меслетсемпе питĕ уçăмлăн сăнарлани лайăх палăрать. «Ахаль çынна та ăнланмалларах пултăр. Çав вăхăтрах тĕрĕс те уçăмлăрах», — тесе çырнă Хв. Çитта «Сунтал» журнал редакцине янă çырăвĕнче. Çитта хăйĕн вулаканĕсене — ялсенчен, завод цехĕсенчен Хĕрлĕ Çара пынă хресченсемпе рабочисене — çамрăк салтаксене нихçан та манмасть. Тăван çĕршыва хӳтĕлеме хатĕрленекен хĕрлĕ армеецсене хăйĕн пысăках мар очеркĕсемпе тĕрленчĕкĕсенчех вăл çутă идейăсемпе салтак кăмăл-туйăмĕ çинчен ăнланмалла, шухăша анлăн çырса кăтартма тăрăшать. Вулăр, пĕр сăмах сиктерсе хăвармасăр тимлĕ вулăр, йĕри-тавралла куçсене чарса пăхăр, çĕнĕ пурнăçа мĕнле йĕркелемеллине вĕренĕр, тенĕн туйăнать унăн вăрçă умĕнхи очеркĕсенче.

Хв. Çитта очеркĕсенче тĕп вырăнта çĕнĕ йышши çын тăрать, çав çын обществăн çӳлти сийĕсенчен мар, аялти сийĕсенчен тухнă, революци çитĕнĕвĕсене тăшмансенчен хĕçпе тата кĕреçепе хӳтĕлет: хĕçпе — утлă çарта, кĕреçепе — аслă стройкăсенче, тӳрремĕнех вара халĕ Хĕвел анăçĕнчен хăмсаракан хаяр тăшмана хирĕç хăюллăн та хастаррăн тăма, пăшалпа тĕрĕс усă курма, тĕл пеме, унран чеерех пулма хăнăхать, тавра курăмне ӳстерсе çамрăк республикăна тăшмансем мĕншĕн тапăнма хăтланнине, мĕншĕн ăна пур енчен те хупăр-

ласа ирĕклĕн сывлама та чарма тапаçланнине лайăхрах ăнланать.

Хв. Çиттан пултарулăхĕнче çирĕп алăпа Хĕрлĕ Çарта парти политикине тытса, сарса, çирĕплетсе пыракан хĕрлĕ комиссар, хĕрлĕ политрук сăнарĕ пысăк вырăн йышăнать. Шăпах вăл «боевая тревога» вăхăтĕнче, вилĕм сапакан пульăсем айĕнче, çывăрма вăхăт çуккипе куç айĕсем пирченĕ салтаксене хальхипе ĕлĕкхине танлаштарса пуласлăх мĕнле чĕрĕ вăй илсе хăватланнине пĕр вĕçĕмсĕр ăнлантарать, вунă-вун тĕшмĕшлĕх витĕр хĕрлĕ салтак ăнĕ патне тӳрĕ çул тупать. Шăпах вăл колхозăн халь çеç купаласа лартнă çĕнĕ ферма пурине чĕртсе янă хурахсене тытса чарать; икĕ тилхепипе икĕ хăмăтран пĕрерĕшне колхоза парасран пытарнă пурне те ăнлансах çитеймен хресчен чунĕ патне çул тупса хăйнех çав япаласене пĕрлешӳллĕ çĕнĕ хуçалăха çĕклесе пыртарать; хурахсем персе амантнă уксах урипех пĕрлештернĕ хуçалăха кунĕпе пăхса çӳренĕ хыççăн лампа çутинче тавра ирхи шуçăм çапиччен малашлăх планне туса ларать; политкомиссар вăл — паян инженер-строитель, ыран — шорник, виçмине — ветсанитар тата тухтăр. Вăл пур çĕрте те кирлĕ специалист. Пур ĕçе те, çитменнине, çиелтен мар, ку ĕçрен хăвăртрах хăтăлас тесе мар, тĕплĕн, яланлăха тесе тăвать. Хăй ывăнни çинчен çывăх юлташне те вăрттăн çеç, шăппăн калать, мĕншĕн тесен кун çинчен никамăн та пĕлме юрамасть. «Политрук ывăнма та, чирлеме те, амансан мĕн пуласса та пĕлмест. Канма кирлине те, лăпкă ыйха та пĕлмест вăл. Çирĕм тăватă сехет ура çинче е атакăна çĕкленме хатĕрленсе выртнă салтаксем умĕнче вăл; çак секунтрах приказ парса хĕрлĕ армеецсенчен чи малтан «Ур-ра!» янраттарса малта ыткăнса пыма вăй пухать политрук. Хăйне çапла тытнинче — унăн вăйĕ, хĕрлĕ армеецсем хушшинче вара куллен ӳсекен сумлăхĕ. Çавăн пек политрук взвочĕсемпе ротисенче, батальонсемпе батарейăсенче тимĕр дисциплина калчисем шăтса ӳсеççĕ те ĕнтĕ».[59]

Çывхарса килекен хаяр вăрçă сигналĕсем çавăн пекех М. Данилов-Чалдунăн «Тăшмансен куçĕ умĕнче»

(1933), Ар. Золотовăн «Тинĕс тыткăнĕнче» (1936), Нест. Янкасăн «Сарнаев» (1938), К. Сергеевăн «Чикĕре», М. Кибекĕн «Цыганок курсант» очеркĕсенче уççăнах илтĕнеççĕ. Çар очеркĕсенче чăваш писателĕсем вулаканпа çывхарса килекен хăрушлăх çинчен хăюллăн, нимĕн пытармасăр калаçаççĕ. Пăхăр, сăнăр, теççĕ вĕсем хăйсен очеркĕсенче промышленноçпе культурăра, ялпа хулара пулса иртекен çĕнĕ пулăмсем çинчен те кăтартма манмасăр, акă пирĕнпе сирĕн çĕршыв, вăл çĕкленет, илемленет, стройкăсемпе пуянланать — эпир унăн хуçисем. Çавăнпа Тăван çĕршыв чиккисене тулашри тăшмансенчен уйрăмах тимлĕ сыхламалла пирĕн, Хĕрлĕ Çара чи лайăх хĕç-пăшалпа тивĕçтермелле, халăхран тухнă офицерсемпе сержантсен, ахаль салтаксен политика ăсталăхне ялан ӳстерсе пымалла.

Кашни очеркистăн — хăйĕн çыру ăсталăхĕ, хăйĕн илемлĕх меслечĕсем. Литературăри илемлĕх ăсталăхне ӳстерсе пынă май кашни чăваш писателĕ çакна ăнланнă: енчен те произведени автор ăс-тăнĕпе, унăн ăсталăхĕн хăйне евĕрлĕхĕпе пуянланман пулсан, вăл кирлĕ пек пиçсе çитеймен, апла тăк вулакан кăмăлне те туллин тивĕçтереймест. Илемлĕ очерк — искусство, чăваш писателĕсем очеркăн жанрĕпе унăн тĕсĕсене пур енчен те малалла аталантарнă май хăйсен çар очеркĕсене патриотла туйăмсемпе вăйлатса çар литературине никĕсленĕ çĕре хăйсен пĕтĕм пултарулăхĕпе ăсталăх хăватне хываççĕ.

[1] Хализев В.Е. Теория литературы / В.Е. Хализев. – М., 1999. – С. 319.

[2] Горький М. Проза. Драматургия. Публицистика / М. Горький. – М., 1998. – С. 60.

[3] Çавăнтах. – 256-257 с.

[4] Шумский А.М. Горький и советский очерк / А.М. Шумский. – 2-е изд. – М., 1975. – С. 344.

[5] Журбина Е.И. Теория и практика художественно-публицистических жанров (очерк, фельетон) / Е.И. Журбина. – 2-е изд. – М., 1969. – С. 8.

[6] Çавăнтах. – 8 с.

[7] Глушков Н.М. Очерковые формы в советской литературе / Н.М. Глушков. – Ростов, 1969. – С. 31.

[8] Тукташ И. Чăваш совет антологийĕ / И. Тукташ. – Шупашкар, 1940. – 7 с.

[9] Львов П. Вăрçă ан тухтăр тесен, мĕн тумалла / П. Львов // Сунтал. – 1927. – 3 №. – 7-9 с.

[10] Талвир А. Чăваш совет антологийĕ / А. Талвир. – Шупашкар, 1940. – 250 с.

[11] Чалдун М. Левентей масарĕ / М. Чалдун // Сунтал. – 1927. – 8 №.

[12] Кольцов М. Пламенные годы / М. Кольцов // 30 дней. – 1926. – № 3.

[13] Çавăнтах.

[14] Кольцов М. Весна в Испании / М. Кольцов. – М., 1938. – С. 67.

[15] Çавăнтах. – 43 с.

[16] Кольцов М. Женева — город мира / М. Кольцов. – М., 1932. – С. 33.

[17] Митта Петĕрĕ. Пушар / Петĕр Митта // Сунтал. – 1936. – 4 №. – 4 с.

[18] Çавăнтах. – 5 с.

[19] Çавăнтах. – 5 с.

[20] Çавăнтах. – 8 с.

[21] Савкай Г. Пурăнатпăр пурнăçа / Г. Савкай // Сунтал. – 1935. – 7№. – 7 с.

[22] Çавăнтах. – 7 с.

[23] Агапов Е. Всесоюзный съезд писателей: Стенографический отчет / Е. Агапов. – М., 1934. – С. 605.

[24] Луначарский А. Искусство и очерк / А. Луначарский // Литературная газета. – 1930. –№ 2.

[25] Горький М. Наша цель / М. Горький // Литературная газета. – 1930. – № 2.

[26] Савкай Г. Пурăнатпăр пурнăçа / Г. Савкай // Сунтал. – 1935. – 7№. – 8 с.

[27] Бараев В. Таврăнсан / В. Бараев // Трактор. – 1939. – 3 №. – 36 с.

[28] Çавăнтах. – 39 с.

[29] Çавăнтах. – 39 с.

[30] Пайраш К. Лида йăнăшĕ / К. Пайраш // Сунтал. – 1934. – 3 №.

[31] Çавăнтах.

[32] Кипек М. Лейтенант ывăлĕ / М. Кипек // Сунтал. – 1938. – 4 №.

[33] Çавăнтах.

[34] Митта Петĕрĕ. Сыхлар / Петĕр Митта // Сунтал. – 1936. – 10 №.

[35] Короленко В.Г. Собр. соч. В 10 т. / В.Г. Короленко. – Т. 8. – М., 1955. – С. 27–28.

[36] Тукташ И. Шурă Роза / И. Тукташ // Сунтал. – 1938. – 4 №. – 9–15 с.

[37] Агаков Л. Очеркăн ӳссех пымалла / Л. Агаков // Трактор. – 1933. – 3 №. – 159 с.

[38] Таньков А. Калав патне куçмалли кĕпер / А. Таньков // Трактор. – 1932. – 3 №. – 149 с.

[39] Рейснер Л. Собр. соч. / Л. Рейснер. – Т. 1. – М., 1928. – С. 286.

[40] Ермолаев П. Шуррисем Тĕрлемесре / П. Ермолаев // Трактор. – 1933. – 5 №.

[41] Лазарева А. Иккĕмĕш тĕлпулу / А. Лазарева // Сунтал. – 1939. – 1 №.

[42] Çавăнтах.

[43] Эсхель А. Паттăр калавĕ / А. Эсхель // Сунтал. – 1939. – 2 №.

[44] Игнатьев Н. Ламлы эдельвлана / Н. Игнатьев // Усеем. – 1938. – 10 №.

[45] Кольцов М. Испанский дневник / М. Кольцов. – М., 1937. – С. 59.

[46] Çавăнтах. – 210 с

[47] Çавăнтах. – 239 с.

[48] Çавăнтах. – 608 с.

[49] Çавăнтах. – 373-374 с.
[50] Çавăнтах. – 265 с.
[51] Çавăнтах. – 272 с.
[52] Кольцов М. Генерал в штабе / М. Кольцов // Новый мир. – 1938. – № 6. – С. 44.
[53] Çавăнтах. – 44 с.
[54] Çавăнтах. – 91 с.
[55] Агаков Л. Манăн çывăх туссем / Л. Агаков. – Шупашкар, 1941. – 22 с.
[56] Çавăнтах. – 34 с.
[57] Çавăнтах. – 64 с.
[58] Çавăнтах. – 68 с.
[59] Çитта Х. Фронтри паттăрсем / Х. Çитта. – Шупашкар, 1941. – 55 с.

Иккĕмĕш пайĕ

ВĂРÇĂ ÇУЛĔСЕНЧЕ

Юратнă Тăван çĕршывшăн

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче ирхине фашистла Германин Европăра чи вăйлăн хĕç-пăшалланнă 170 дивизийĕ вăрçă пуçлани çинчен пĕлтермесĕр пирĕн çĕршыва хĕвел анăç чиккинчен Балти тинĕсĕнчен пуçласа Хура тинĕсе çити вăрă-хурахла тапăннă. Гитлер çарĕсем çавăн пек тискер вăрçă пуçласа яни пирĕн Тăван çĕршыва çав тери йывăр лару-тăрăва кĕртсе ӳкернĕ. Совет патшалăхĕн пурнăçĕпе вилĕмĕ — çакăн пек кăткăс ыйту тухса тăнă çĕршыв умне. Совет Союзĕн халăхĕсен ирĕкре пурăнмалла е фашизм пусмăрне лексе унăн чури пулса тăмалла — акă мĕнле шăпа кĕтнĕ вĕсене. Нумай миллионлă тата нумай наципллĕ совет халăхĕ пĕр çын пек пулса Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине хутшăннă, этемлĕх историйĕнчи чи хаяр тăшмана çĕнтерессишĕн хăйĕн пĕтĕм вăй-халне панă. Фронтпа тылра кашни çын ирĕклĕхшĕн кĕрешекен салтак пулса тăнă. Совет воинĕсен паттăрлăхне пирĕн халăх, партипе правительство тивĕçлĕ пысăк хак панă, Аслă çĕнтерӳшĕн тăрăшса паттăрлăх кăтартнăшăн çичĕ миллион ытла салтакпа матроса, сержантпа офицера, генералпа адмирала орденсемпе медальсемпе наградăланă. Вун пĕр пин воина Совет Союзĕн Геройĕн хисеплĕ ятне панă. Вĕсенчен çĕр иккĕшĕ çак чаплă ята икĕ хут илме тивĕçлĕ пулнă.

Тăван çĕршыва хӳтĕлеме чăваш халăхĕ те йышлăн хутшăннă. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчех митингсемпе пухусенче колхозниксемпе рабочисем, интеллигенци, студентсемпе шкулсен аслă класĕсенче вĕренекенсем тăшмана чунтан курайманни, ăна путарма пурнăçа шел-

леменни, алла хĕç-пăшал тытса юратнă Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хӳтĕлесе хăварассишĕн юлашки юн юлмиччен çапăçма хатĕрри çинчен каланă, чи маттур йĕкĕтсемпе хĕрсем фронта хăйсен ирĕкĕпе халех тухса кайма хатĕррине пĕлтернĕ. Вăрçă пуçлансан тепĕр куннех республика больницин 36 медсестрине Ржева янă, вĕсем фронт çумĕнчи çар госпиталĕн вăтам медицина персоналĕн тĕп вăйĕ пулса тăнă, июнĕн 26-мĕшĕнче çапăçу хирĕнчен илсе тухнă аманнă салтаксен пĕрремĕш ушкăнне йышăннă.

Чăваш Республикинчен вăрçа пĕтĕмпе 210 пине яхăн çын хутшăннă, вĕсенчен çурри паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Патшалăх Оборона Комитечĕ йышăннипе 1941—1942 çулсенче хĕлле Сăр оборона рубежне туса хунă, унăн тĕп линийĕ Чăваш çĕрĕ çинче вырнаçнă. Çак рубежа тунă çĕрте ку таранччен нихçан пулман шартлама сивĕре куллен 85 пинрен кая мар çын ĕçленĕ, вĕсен 70 проценчĕ хĕрарăмсем пулнă. Алăпах вĕсем 50 миллион кубла метр шăннă çĕр чавса кăларнă.

Çапăçусенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн 54 пин салтак патшалăх наградине тивĕçнĕ, тăван республикăран тата çĕршывăн тĕрлĕ облаçĕсемпе республикисенчен кайнă 80 ытла чăваш Совет Союзĕн Геройĕ ятне илнĕ.

Выльăх-чĕрлĕхе ĕрчетес тата пысăк тухăçлă тыр-пул пухса кĕртес енĕпе пысăк ӳсĕмсем тунăшăн Чăваш АССРне 1942 тата 1943 çулсенче СССР Патшалăх Оборона Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕпе наградăланă. Республика ĕç çыннийĕсем оборона фондне тата çар техники тунă çĕре 170 млн тенкĕ укçа хывнă. Вăрçă çулĕсенче, кунсăр пуçне, патшалăх заемне тата лотерея билетне 556 млн тенкĕлĕх туяннă. Пухнă укçа икĕ бронепоезд (çав шутра "Комсомол Чувашии" бронепоезд та), çар самолечĕсен "Осоавиахим Чувашии" звени, "Комсомол Чувашии" эскадрилйи, "Тракторист Чувашии" тата "Колхозник Чувашии" танк колоннисем, уйрăм самолетсемпе танксем тунă çĕре кайнă. Тылра хастарлă ĕçлесе пысăк çитĕнӳсем тунăшăн промышленноçпе транспортра тата ял хуçалăхĕнче ăмăртса

ĕçленĕ 400 çынна орденсемпе медальсем панă. "1941—1945 çулсенчи Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче хастар ĕçленĕшĕн" медале 120 пин çын тивĕçнĕ.

Чăваш ĕç çыннийĕсен патриотлăхне палăртса, 1945 çулхи июнĕн 24-мĕшĕнче Чăваш АССРĕ 25 çул тултарнă ятпа ĕç çыннисем патне янă саламлă çырура ВКП(б) Тĕпкомĕпе ССР Союзĕн Совнаркомĕ çапла çырнă:

"Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче фашистсене хирĕç çапăçнă чăваш халăхĕ çĕршыв умĕнчи тивĕçне чыслăн пурнăçларĕ. Чăваш АССРĕн ывăлĕсем тăшманпа кĕрешсе хăюлăхпа паттăрлăх кăтартрĕç; вĕсенчен нумайăшне Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Чăваш АССРĕн рабочийĕсем, хресченĕсем тата интеллигенци хăйсен ĕçĕсемпе совет халăхĕ гитлерла Германие çĕнтерес кĕрешӳре паллă çитĕнӳ турĕç" (Советская Чувашия. 1945. Июлĕн 8-мĕшĕ).

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсенчен уйрăмах пĕрремĕш çулне йывăр лекнĕ. Вăрçă пуçлансан иккĕмĕш кунĕнчех, июнĕн 23-мĕшĕнче, писательсемпе журналистсен тата Чăваш патшалăх издательстви редакторĕсен анлă канашлăвĕ пулса иртнĕ. Кун йĕркинче пĕр ыйту: "Чăваш патшалăх издательствин илемлĕ литература пайĕн планне улăштарасси тата оборона литературине кăларасси". Çак пухура А. Эсхель тата Н. Илпек докладсем туса панă. Докладсене сӳтсе явнă çĕре Н. Шелеби, С. Элкер, Н. Янгас, К. Чулкаç, С. Шавли тата ытти сем хутшăннă.

Ку канашлу партипе правительство: "Пĕтĕмпе — фронта, пĕтĕмпе — çĕнтерӳ валли!" — тесе чĕнсе каланине пурнăçлама чăваш писателĕсен, журналисчĕсен тата Чăваш патшалăх издательствинче ĕçлекенсен çывăх вăхăтрах мĕн-мĕн тумаллине палăртнă.

1. Илемлĕ литература тата ача-пăча литературин пайĕсен планĕсене çĕнетсе улăштармалла, плана оборона тематикипе çырнă илемлĕ произведенисем кĕртмелле.

2. Çак кунсенчех чăваш писателĕсен хӳтлĕх калавĕсене пĕрлештерсе уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăлар-

малла, çавăн пекех оборона сăввисемпе юррисене те пĕр кĕнекене пухса пичетлесе халăх патне çитермелле.

3. Писательсен союзĕ тата кашни писатель уйрăммăн хăйсен ĕç планне улăштарса оборона тематикине тĕп вырăна лартмалла. Писательсен вăйне республика хаçачĕсемпе журналĕсен ĕçĕсемпе тачăрах çыхăнтармалла.[1]

1941 çулхи июлĕн 4-мĕшĕнче чăваш писателĕсен союзĕн правленийĕ "Окна ТАСС" валли лозунг-сăвăсем çырма ятарлă бригада йĕркелеме йышăннă. Бригадăна В. Алагера, А. Кăлкана, И.Тукташа, И. Ивнике, Я. Ухсая тата А. Эсхеле кĕртнĕ.[2]

Хĕрӳллĕн, çивĕччĕн янăрать Яков Ухсайăн "Мускав" сăвви.

Мускав! Çăпатапа килсен,
Эс тăхăнтартрăн сăран атă,
Шăннисене — ăш пӳлĕмсем,
Чирленисене эс сывлăх патăн,
Мĕскĕнсене хисеплĕ турăн,
Сухаçăсен ачисене
Керменсене кĕртсе культурăн
Хĕвел çутти пек ташшине
Тыттартăн, канăçлăх курмасăр
Кăлартăн аслă çул çине;
Çуралчĕç вĕсенчен профессор,
Артист, художник, инженер.
Мускав тесен, тăван хуламăр,
Чĕри сиксе хумханмĕ камăн!

Çакăн пек сăвăсене ун чухне хресченсем, рабочисем, шкул ачисем ялан тенĕ пекех ушкăнпа пухăнса вуланă. Мускав — юратнă Тăван çĕршыв чĕри. Мускав чĕрĕ пулсан, çĕршыв та чĕрĕ; Мускав тăшмана парăнмасть, çĕршыв та — парăнмасть; Мускав фашистсене çĕнтермешкĕн кунĕн-çĕрĕн ĕçлет, кĕрешет, çапăçать, Тăван çĕршыв та — çавăн пекех. Мускавра — Кремль, Тăван çĕршыва ертсе пыракансем. Çакна Яков Ухсай та, Мускав университетĕнче вĕреннĕскер, лайăх пĕлет, шанать. Çав пĕлĕве, çав шанчăка хаçат урлă халăх хушшинче сарма тăрăшать.

Ниҫан та асăмран каймаççĕ
Тӳп-тӳрĕ вăрăм урамсем,
Çĕрле хĕвел пек ялтăраççĕ
Вут чуллĕ хĕрлĕ çăлтăрсем
Мухтавлă Кремль çийĕнче,
Вĕсен çутти, хăватлă çулăм,
Хĕмленнине пĕтĕм тĕнче
Пăхса тăрса, малти ун çулĕ
Епле тап-такăр иккенне
Курать. Унта тăшман таканĕ.
Килсе пуссан, хăй чĕрнине
Каттарĕ; пуçĕ йăлт саланĕ:
Ялан хумханĕ вăр-хурахăн
Вилли çинче шуйттан хупахĕ.[3]

Хаçатăн çак номерĕнчех В. Ахтубайăн "Савнă тусăм" сăвви пур. Вăл хăйĕн публицистикăлăхĕпе патриотла вулакан чун-чĕринче çĕнĕ вăй хушать, тăшманпа кĕрешес хастарлăха татах ӳстерет, çирĕплетет. Сăвăри тĕп персонаж — рядовой Арбузов, Хĕрлĕ Çар салтакĕсен пĕрлештернĕ сăнарĕ теме пулать ăна.

Шывра пулнă — йĕпенмен,
Вутра пулнă — вут илмен:
Тухнă виçĕ вăрçă витĕр
Манăн çакă тусăм
Рядовой Арбузов.

Тăваттăмĕш вăрçăра Арбузовшăн чи çывăх юлташ вырăнне çĕнĕ пăшал пулса тăрать.

Çĕнĕ, çутă автомат
Киллентерчĕ тусăма.
Ăна питĕ те юратрĕ,
Тек тасатрĕ, тек çутатрĕ...
Пахаларĕ хĕрĕ пек,
Çĕнĕ çутă çĕрĕ пек.
Унпа хăй те тĕлĕнтерчĕ:
Мĕн чул нимĕç, финн пĕтерчĕ
Манăн савнă тусăм
Рядовой Арбузов.

Анчах пĕррехинче, хаяр çапăçура фашистсем унăн

автоматне тивертсе хытах сиенлеççĕ, хĕç-пăшалĕпе пĕрлех алли те чăлахланать салтакăн.

Пулнă пĕчĕкçĕ — йĕмен,
Ĕмĕрте те ай! темен.
Халь пур — куçĕсем шывланчĕç.

Шел автомата! Анчах мĕн тăвăн — вăрçăра темĕн те тӳсме тивет. Аманнă аллуна тухтăрсем сыватĕç, çĕнĕ автомат тылран ярса парĕç. Фашиста çеç ирĕккĕн сывлама ан пар, совет çĕрĕ тăрăх малалла ан яр! Арбузова ĕненмесĕр май çук — аллине те сыватать, çĕнĕ автомат та илет, юлташĕсемпе пĕрле хăй сыхлакан çĕртен тăшмана та ирттерсе ямасть.

Вăрçăн малтанхи уйăхĕсенчех чăваш литературинче сатирăллă публицистика çуралса вăй илет. Чăваш халăх поэчĕ Н. Шелепи "Чăваш коммунинче", "Тăршшĕ ик метр, урлăш пĕрре — территори кирлĕ Гитлере" сăвăллă çивĕч памфлет пичетлет. Хаçатăн çав номерĕнчех[4] П. Хусанкайăн "Геббельс е Кукша Иван, вуласан пĕлен аван" сăвăллă фельетонĕ тухать. Йӳтĕмĕ те питĕ вырăнлă пулнă ку хайлава çырмашкăн: 1941 çулхи декабрĕн 4-мĕшĕнче Германире радиопа Геббельс сăмахне параççĕ ... Рейхминистр халăха, "нимĕç салтакĕсен йывăр шухăшне сирес" тесе, фронт валли ... хаваслăрах музыкăллă граммофон пластинкисем пуçтарса пама чĕннĕ. П. Хусанкай хăйĕн фельетонне çырнă чухне антитезăпа питĕ вырăнлă усă курать:

Астăватăр пуль халлап?
Пулнă пĕр Кукша Иван.
Пур ĕçе те кутăнла
Туса пынă çав айван.
Туй тухсассăн ун умне
Вăл вилес пек макăрать,
Вилнĕ çын турттарнине
Тĕл пулсан — ташша ярать...

Ку чухне ун евĕрлĕ
Хăтланни çукрах вара.
Пурте тĕрĕс-тĕкелех
Халĕ пирĕн пурнăçра.
"Ăçта кайнă çав Иван?"

Тесе ыйтăр эсир тен.
А вăл пирĕн çĕршывран
Берлина халь куçнă мĕн.
Иван ятлă мар иккен
Халлапри çав апăрша.
Геббельс ятлă вăл кĕскен,
Хушамачĕ — фон Кукша.

Хăйĕн ĕлĕкхи мелĕсене аса илсе, фон Кукша приказ хыççăн приказ кăларма пуçлать:

"Çăмăл мар-и, салтаксем?
Ан кулянăр-ха сĕре.
Янраттарăр такмаксем,
Ташлăр ташă, мĕн сире!

Чакатех-шим пирĕн çар
Аманса, шăнса вилсе?
Атьăр музыка ярар
Хавасраххăн, нимĕçсем!.."

Çаптарать камит ташша:
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк!
Анчах темшĕн шухăша
Вăл ярать мана пăртак.

Хăйĕн вилĕм ташшине
Ташламасть-ши çынçиен?
Е калла пластинкине
Ывăтсассăн итлекен?

Е пластинка хĕç пулсан
Çĕн Германи туйĕнче
Шавлă Геббельс фон Кукшан
Йĕмелле ан пултăрччĕ...

Йăнăшатăп, çук иккен:
Йĕмĕ, ма тесен ун чух
Ăçтиçук çав кукшасен
Шăммине те тупас çук.

"Кам вăл Гитлер тата вăл мĕн тăвасшăн?" — çакăн пек ят панă Алексей Толстой хăйĕн статйисенчен пĕрне. Ăна Чăваш патшалăх издательстви чăвашла куçарса уйрăм кĕнеке туса кăларнă.

Ĕлĕк унăн тусĕ пулнисенчен пĕри Гитлер çинчен акă мĕн каласа панă: "Гитлер — австриец, таможньăра ĕçленĕ пĕчĕк чиновник ывăлĕ, унăн чăн-чăн хушамачĕ — Шикльгрубер. Вăл вăтам шкултан вĕренкелесе тухнă. Вĕренессе начар вĕреннĕ, художник пулма ĕмĕтленнĕ, анчах таланчĕ пулман пирки пĕр вăхăтра строительство кантурĕнче ĕçленĕ. Профсоюза кĕресшĕн мар пулнăшăн ăна ĕçрен кăларнă. Вара вăл чертежник ĕçне сырăннă та ăхаль çынсенчен нимĕнпе те палăрса тăман.

Империализмла вăрçă вăхăтĕнче Бавари полкĕн штабĕнче ĕçленĕ, унта вăл ефрейтор чинне илнĕ... Пĕр тытăçура ăна газпа сиенленĕ пулнă, вара вăл чутах суккăрланса юлман. Çавăн хыççăн вăл тытса пăрахакан евĕрлĕ, аташтаракан чирпе чирленĕ çын пекех пулса тăнă...

1919 çулта, Мюнхенри революцие çĕмĕрсе тăкнă хыççăн, вăл уйрăм комиссинче следователь пулса ĕçлеме тытăннă. Çакăнта вара айăплакан актсем çырса тата Германи революционерĕсене персе вĕлерттерсе, çын юнне ĕçме юратакан çын пулса тăнă".

Çак вăхăтра Мюнхенра "национал-социалистла" партин пирвайхи кружокĕ пуçланса кайнă. Кружокра вăл çиччĕмĕш номерпе шутланса тăнă. Гитлер кунта кружокăн барабанщикĕ пекки çеç пулнă темелле.

Гитлерăн паллă енĕ — хăйне мухтанине питех те юратни пулса тăрать. Гитлер — çав тери çилĕллĕ, тытамаклă, ирсĕр çын. Вăл майĕпенех хăй тавра тĕрлĕ авантюристсене, уголовниксене, вăрă-хурахсене пухса пынă. Çапла майсемпе ултавла хăтланса, унтан вара юнлă провокацисем урлă влаçа хăйĕн аллине çавăрса илсе канцлер пулса тăнă, хăйне "фюрер" тесе аркатуллă тискер ĕççем тума тытăннă.

Çак асар-писер этем, юнĕçен, совет халăхне чуралантарса, фашистла йĕрке туса хурасшăн. Вăл "çĕнĕ йĕрке" çинчен çухăрашать. Унăн çĕнĕ йĕрки çакăн пек: "Гитлерăн тĕп планĕ тĕнчере пуç пулса тăрасси, хăйне кирлĕ мар халăхсене пĕтерсе, ĕмĕрлĕхех фашистла пĕр йĕрке туса хурасси пулать. Анчах унăн кунта шухăш

çитеймен: çав çĕнĕ йĕркесене вăл авалхи вăтам ĕмĕртен ӳкерсе илнĕ: вăл — пирамида пулса тăрать, çав пирамида тăрринче çурма-турă — Гитлер, аяларах — унăн сановникĕсем: Геббельссем, Герингсем, Риббентропсем тата ытти хура шуйттансем лараççĕ, аяларах — çĕр процентлă вăрăм пуçлă аристократсем — улпутсем, вĕсенчен, калăпăр, пĕри хăйĕн аллинче пĕтĕм Киев çар округне "тытса тăрать", тепри — Урала, Пермьрен пуçласа Магнитогорск таран "çавăрса илет" т.ыт.те. Аяларах — нимĕçсен шултра буржуазийĕ, тата аяларах — пусмăрти халăхсем, шанчăклăрах чурасем, аяларах — шанчăксăртарах чурасем, малалла — сийĕн-сийĕн тĕрлĕ рассăсем, вара чи аялта — çынсем-машинăсем, çынсем-выльăхсем, е, Гитлер каланă тăрăх, "этем пулса çитейменнисем", витесенче пурăнакан çынсем, ĕрчеме ан пултарччăр тесе, фашистсем стерилизаци тăвакан çынсем, çын хисепĕнче тăман, ним чĕнмесĕр ĕçлекен масса".

... Тăшмана пĕлсе тăмалла, тет Алексей Толстой. Гитлер кам иккенне пĕлмешкĕн Ал. Толстойăн "Кам вăл Гитлер тата вăл мĕн тăвасшăн?" ятлă чăвашла пичетленсе тухнă пĕчĕк кĕнеки те нумаях пулăшнă.

Ал. Толстойăн кĕнеки чăвашла тухнă вăхăталлах Берлинран тепĕр хыпар тĕнчипе сарăлать: Мускав патнелле наступлени туса пыракан çарсене "тĕрĕс ертсе пыманшăн" Гитлер фашистла Германин тип çĕр çинчи çарсен тĕп командующине фон Браухич генерал-фельдмаршала ĕçрен кăларса отставкăна ярать, ун вырăнне хăй йышăнать. Тĕнчери вăрçă обозревателĕсем Гитлерăн çак хăтланăвне фашизмăн хăй пуçарнă вăрçăри пулас ăнăççăрлăхĕсен пуçламăшĕ тесе хак параççĕ. Германи çарĕсенче чи сумлă та чи пултаруллă полководец пулнă фон Браухич та çаплах шутлать. Унăн юлташĕ, пĕрле пĕр çар операцине çеç мар хутшăннă отставкăри тепĕр фельдмаршал Лист вара, Адольф Гитлер офицерсен кĕçĕн чинне те пулин илес пулсан, çавăнпа эпĕ нихçан та килĕшмен пулăттăм, тенĕ. Фюрер тахçан-тахçанах Лист полкĕнче аран-аран ефрейтор званине илнĕ пулнă.

Пирĕн çĕршыв ытла та йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкет. Гитлерăн бронетанклă чаçĕсем хула хыççăн хула йышăнаççĕ, тырăпа пуян пин-пин ял тăшман аллине лекет. Çапах та Хĕрлĕ Çар пуç усмасть. Ун йышĕнче вуншар пин паттăр çуралать, тăшман тылĕнче партизан отрячĕсем кăмпасем пек пиншерĕн йĕркеленеççĕ. Совет халăхĕ хаяр тăшманран хăрамасăр çĕнĕ вăй пухать, вырăнăн-вырăнăн унăн наступленине чара-чара лартаççĕ, вырăнăн-вырăнăн полкĕ полкĕпе тĕп тăваççĕ, нумай çĕрте каялла та чакараççĕ.

Фронта кайма ĕлкĕреймен писательсем ялсене тухатуха çӳреççĕ, хăйсен хĕрӳллĕ сăмахĕпе тĕл пулусенче, пухусенче колхозниксен хастарлăхне ӳстереççĕ, хаçат-журнал страницисенче вĕсен мухтавлă ĕçĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ. Акă, Максим Ястранăн "Тăватă тăван" тĕрленчĕкĕ. Кузьма Афанасьевич поэта: "Эпĕ тăватă ывăл пăхса ӳстертĕм", — тесе пĕлтерет. Унăн аслă ывăлĕ Афанасий вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн агронома вĕренет, анчах Хĕвел анăçĕнчи лару-тăру ăна мирлĕ ĕçе хăварса Хĕрлĕ Çар ретне тăма хистет. Салтак службин вăхăчĕ пĕтсен те вăл çартах юлать, хăйĕн тăван ялĕнчех çуралнă ĕмĕтне пурнăçлать — авиашкулта вĕренсе летчик пулса тăрать. Кузьма Афанасьевичăн иккĕмĕш ывăлĕ Максим та вăтам шкултан вĕренсе тухнă, фронтра вăл лейтенант званине илнĕ, пехота чаçĕн командирĕ пулса тăнă. Виççĕмĕш ывăлĕ, Иван, Нурăсри педагогика училищинчен вĕренсе тухнă-тухманах хăйĕн ирĕкĕпе фронта тухса каять, пĕр хушă çар курсĕнче вĕреннĕ хыççăн ăна авиатехника лартаççĕ. "Ĕçлеме ăста çын тăшманпа çапăçма та ăста", — тет Кузьма Афанасьевич патне çĕнĕ халапюмах итлеме пынă ватă старик Еремей Николаевич Воробьев, кӳршин кĕçĕн ывăлĕ Якку, фронта бригадирта ĕçленĕ çĕртенех тухса кайнăскерĕн ашшĕ патне янă çырăвне итленĕ хыççăн. Кузьма Афанасьевич ывăлĕсем тĕрлĕ фронтсенче тăшманпа çапăçаççĕ: Афанасипе Макçăм — Кăнтăр-хĕвел анăç фронтĕнче, Иванпа Якку — Çурçĕр-хĕвел анăç фронтĕнче. "Тăваттăшĕ те вĕсем, амăшĕн сĕтне телейлĕн ĕмсе çитĕннĕскерсем, ирĕк пурнăçпа пурăнакан ашшĕ-амăшĕн лăпкă кун-çулĕшĕн,

хăйсен пулас телейĕшĕн вунă-вун çул упранă вăйĕсене шеллемесĕр çапăçаççĕ". Тăватă тăванăн Ермошкинăри 7-мĕш класра вĕренекен йăмăкĕ пиччĕшĕсем валли чăлха-алсиш çыхать. «Ман япаласене хăш-пĕрисем ытла та пĕчĕк парнесем тейĕç. Ку тĕрĕс мар, пĕчĕк мар вĕсем, мĕншĕн тесен çав алсиш-чăлхасенче ман чĕремĕн хĕрӳлĕхĕ, тăван пиччесене çирĕп сывлăх сунни, пĕтĕм ял çыннисен чун ăшши", — тесе ăнлантарать Ястрана ĕçчен хĕр ача.

Кузьма Афанасьевич хăй те вăрçă хăрушлăхне лайăх ăнланать, унăн тискерлĕхне вăл пĕрремĕш тĕнче вăрçинчех тӳссе курнă, унтан 1920 çулта нимĕçсене Украина çĕрĕ çинчен хăваласа кăларнă çĕре хутшăннă.

Фронта тăватă ывăл ăсатнă тепĕр паттăр чăваш çинчен "Чăваш коммунинче" Данилов-Чалдун çырать. Ефим Семенов ку, Етĕрне районĕнчи Урапакасси ялĕнчен. Хăй вăл, Кузьма Афанасьевич пекех, çирĕм çултах пĕрремĕш тĕнче вăрçинче тăшманпа паттăрăн çапăçнă, унтан вăл та нимĕçсенчен 1920 çулта Украина çĕрне тасатнă. Унăн аслă ывăлĕ Иван Ефимович, Хĕрлĕ Çарта пĕрре пулнăскер, виçĕ уйăх каялла фронта тухса кайнă. Ялта бригадирта ĕçленĕ вăл, фронтра — артиллерист. Малтанхи çапăçусенчех Иван туппин расчечĕ фашистсен пилĕк танкне тĕп тунă, икĕ хутчен командованин Тав хутне илме тивĕç пулнă. Паттăр, çирĕп сывлăхлă ывăлсем ӳстернĕ Ефим Семенович. Иккĕмĕш ывăлĕ Сергей малтан Етĕрнери педагогика училищин физкультурăпа спорт уйрăмĕнчен вĕренсе тухнă, вăл моряк, Хура тинĕс çар флотĕнче улттăмĕш оруди наводчикĕ. Виççĕмĕш ывăлĕ Данил та моряк, анчах Балти тинĕс çар флотне лекнĕ, вăрçă пуçланас умĕн виçĕ çул çар карапĕ çинче тупă авăрлакан пулнă. "Отпуска курма килчĕ те килте виçĕ кун çеç пурăнчĕ, — каласа панă ашшĕ Данилов-Чалдуна. — Фашистсем пирĕн çĕршыв çине тапăннине пĕлсенех хăйĕн чăсне васкаса тухса кайрĕ". Данил вăрçă тутине активсе пăхнă, Балти тинĕс çар флотне кайиччен Етĕрнери ял хуçалăх техникумĕнчен вĕренсе тухнă, МТС агрономĕнче ĕçленĕ. Флотра шурă финсенчен Ленинграда хӳтĕленĕ, çапăçура

паттăрлăх кăтартнăшăн ăна карап командирĕ хăйĕн кĕмĕл сехетне парнеленĕ. «Фашистсен флочĕ вăйлă, хаяр çапăçусем кĕтеççĕ пире Балти тинĕсĕнче, çапах та эпир, совет краснофлотечĕсем, вĕсенчен хăрамастпăр», — тенĕ Данил, тăванĕсемпе ыталанса сыв пуллашнă май.

Кĕçĕнни, Петя ятлăскер, Палтайри вăтам шкулăн юлашки класĕнче вĕренет. Ăна Етĕрнене çар комиссариатне чĕннĕ те ĕнтĕ, медицина комиссийĕ витĕр те тухнă вăл. Ăна Сывлăш çар флотне яма йышăннă. Петя, кашни кун çар комиссариатĕнчен повестка кĕтет пулин те, шкула та кун сиктермесĕр çӳрет, çар кружокĕн урокĕсенчен те пăрăнмасть. Аван ăнланать вăл: Хĕрлĕ Çара вĕреннĕ çынсем кирлĕ, пиччĕшĕсенчен юлас мар тесен ялтан Етĕрнери çар комиссариатне тухса кайичченех çар пĕлĕвĕ пухмалла.

П. Хусанкай, С. Шавли, С.Элкер, Н. Шелепи, Ив. Ивник, А. Эсхель, Я. Ухсай, юлташĕсене фронта ăсатнă хыççăн, аслă вăрçа тухса кайма хăйсен черетне кĕтсе, пĕр кун та перо тытмасăр ирттермеççĕ. Хаçат-журнал валли вĕсем публицистикăллă сăвăсем, фашист эшкерĕсем çинчен фельетонсемпе памфлетсем çыраççĕ. Фронтпа тыл уйрăлми пĕрлешни, халăхсен туслăхĕ, çарпа партизансен паттăрлăхĕ, Аслă çĕнтерӳшĕн юлашки юн юлмиччен ирсĕр тăшманпа çапăçни, — акă вĕсен чĕрисем шăратса кăларнă тĕрлĕ жанрлă патриотла хайлавсен темисем.

Яков Ухсай хăйĕн "Тутимĕр" трагедине çĕнĕрен пăхса тухса хăш-пĕр улшăнусем кĕртет, ăна К.Иванов ячĕллĕ Чăваш академи драма театрĕнче Л. Родионов çамрăк режиссер сцена çине кăларать. "Чăваш коммуни" хаçатра Ухсайăнах "Ватă карчăк" сăвăллă очеркĕ пичетленет. Фашист çарĕсен тылĕнче юлнă совет çыннисем тăшмана парăнманни; партизан отрячĕсене йĕркеленсе нимĕçсене хирĕç вăйлă хумпа çапăçни; вĕсене пур çĕрте те лăпкă пурăнма чăрмантарни; май килнĕ таран тăшмана çĕрле те, кăнтăрла та вăрттăн та чеен тапăнса сиен кӳни çинчен Ухсай очеркĕ. Ватă карчăк ывăлĕпе кинĕ — партизан отрядĕнче, вĕсен амăшĕ фашистсем йышăннă ялта пурăнать, тăшмансем çинчен отряда

çĕнĕрен те çĕнĕ хыпарсем пĕлтерсе тăрать. Чеелĕхĕ те пур карчăкăн: вăрмана вăл хуранпа çӳрет, яла ун ăшне листовкăсем тултарса таврăнать. Анчах пурнăç тикĕс килмест тесе ахальтен каламан. Карчăкпа та çапла пулса тухать. Пĕррехинче унăн хуранĕпе ялти полицейский кăсăкланма тытăнать.

— Мĕн унта санăн?

— Млеко. Млеко! — çухалса каймасть карчăк. — Ĕçсе пăхăр. Тутлă, халь çеç вăрман уçланкинче ĕне сурăм.

— О-о, млеко-о! — тутисене чаплаттарса илет фашист, ĕçме тесе пуçне хуран патнелле пĕкет.

Мĕн тумалла карчăкăн? Нумай шутлама вăхăт çук — йывăр чугун хуранпа полицейски пуçĕнчен шаплаттарать. Те тăнне çухатса лаплатать карчăк умне нимĕç, те çутă тĕнчепех сыв пуллашать — карчăкăн вăрах хытса тăма юрамасть, листовкисене нимĕç тавра йăпăр-япăр салатать те хăй хăвăртрах сĕм вăрман еннелле çул тытать. Партизансен отрядĕнче карчăк валли те ĕç темĕн чухлех: выльăхсене те пăхмалла, апатне те пĕçермелле, разведкăна та çӳреме пултарать-ха вăл — урисем вăрваррипех-ха, ыратни мĕнĕ сисĕнмест. "Чăваш коммунин" 1941 çулхи декабрĕн 2-мĕшĕнче пичетленнĕ Г. Ефремовăн "Партизансем" очеркĕнче паттăр белоруссен сăнарĕсене куратпăр.

П. Хусанкай вара хĕрӳ çапăçура халăхсен туслăхĕ тăшмана çĕнтерме пулăшнине ĕненмелле сăнласа кăтартать:

Аманнă лейтенант Сурбанов —
Чăваш ачи аптранă мĕн.
Ăна карел хĕрĕ юн панă,
Çăлса хăварнă вилĕмрен.

Хастар казах-пилот тăшманăн
Умнех самолетпа анса
Хăпарнă çĕклесе аманнă
Артиллерист-белоруса...

Аманнă снайпер Георгадзе —
Хăюллă, витĕмлĕ грузин.
Ăна йăтса тухать ал вĕççĕн
Калуга вырăсĕ Ильин.

Çапла йăхсем тăванлашаççĕ
Чи аслă туслăх ячĕпе,
Çĕршывăн ячĕпе пăхаççĕ
Пĕрне пĕри пĕр варлă пек.

Пире хапсăнакан ан мантăр:
Ĕçпе, хĕçпе, чĕрĕ юнпа
Сыхланă ирĕке ниҫан та
Мăшкăллаттармăпăр юта.[6]

1941 çулхи августăн 24-мĕшĕнче писательсен союзĕ прозаиксемпе поэтсен тата драматургсен творчество ĕçĕсене пĕтĕмлетнĕ, малашне республикăн обществăпа политика ĕçĕсене татах та хастарлăрах хутшăнса пурнăçламалли плана пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Писательсен союзĕн правленийĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсенче писательсен пултарулăх ĕçĕсене тăтăшах пăхса тухнă, П. Осиповăн "Тăван çĕршывра", Н. Мраньккан "Юратакан чĕресем" пьесисене сӳтсе явнă, "Илемлĕ литература" журнал вăрçă очеркĕсем пичетлес енĕпе мĕнле ĕçленине, республикăра пурăнакан вырăс писателĕсен çĕнĕ произведенийĕсене сӳтсе явса творчество ĕçне вăйлатма, илемлĕ очерксемпе ытти хайлавсен пахалăхне ӳстерме кирлине палăртнă.

Вăрçă çулĕсенчен пирĕн хаçатсен ĕçне писательсем нихҫан та 1941 çулхи пек йышлăн та хастарлăн хутшăнман. Хаçатсен ĕçне çеç мар, Чăваш академи театрĕн артисчĕсемпе пĕрле А. Эсхель, С.Шавли, Л. Агаков, С. Элкер, И. Малгай тата ыттисем те ял-ял тăрăх çӳресе литература каçĕсем ирттернĕ, колхозниксемпе шкул ачисене фронтри лару-тăрупа паллаштарнă, Чăвашран кайнă офицерсемпе салтаксен паттăрлăхĕ çинчен калакала кăтартнă. Фронта тухса каякансем умĕнче хăйсен сăввисене вуланă, кинотеатрсенче фильм пуçланиччен сăмах илнĕ, Чăвашрадио микрофонĕсем умне тăрса вăрçăпа мир çинчен хĕрӳллĕн калаçнă.

Чăваш халăхĕн ăсĕ-тавракурăмĕ вăрçă çулĕсенче пĕрĕнсе ансăрланман, пачах урăхла — çивĕчленнĕ, чылай анлăланнă. "Республика хулисемпе ялĕсенче вăрçă çулĕсенчех чăвашсем А. Пушкин, Н. Гоголь, М. Ло-

моносов, И. Крылов, М. Горький, В.Маяковский çуралнă кунĕсене паллă тăваççĕ, вĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарса уйрăмшар кĕнекен пичетлесе кăлараççĕ. Чăваш театрĕсен сценисем çинче Н. Островскин "Хурçă мĕнле хĕрнĕ", Г. Мдиванин "Батальон Хĕвел анăçнелле каять", К. Ивановăн "Нарспи", А. Григорьевăн "Маринка", Г. Поспеловăн "Кĕпер" пьесисем пыраççĕ.

1944 çулхи май уйăхĕнче Чăваш республикин общественноçĕ чăваш халăх поэчĕ С.В. Элкер 50 çул тултарнине паллă тăвать. Çав çулхи июль уйăхĕнче Шупашкарта чăваш литературин классикĕн К.В. Ивановăн литература музейне тума йышăнаççĕ.

Чăваш писателĕсем, çĕршыври пур писательсем пекех, çак хăрушă кунсенче яланах халăхпа пĕрле пулнă: халăхпа пĕрле сывланă, халăхпа пĕрле хурланнă, халăхпа пĕрле ĕçленĕ. Вĕсен, халăхăн пекех, пĕр тĕллев, пĕр шухăш çеç пулнă: пĕтĕмпе — фронта, пĕтĕм вăйпа ăсталăха, пĕтĕм ĕçченлĕхпе пултарулăха тăшмана çапса çĕмĕрмешкĕн памалла![7]

Чăваш халăх поэчĕ Ç. Элкер "Юн ĕçекен фашизма тĕп тумалла!" статйинче çапла çырнă: "Пире вăрçă кирлĕ мар. Эпир мирлĕ стройкăсенче ĕçлеттĕмĕр, çĕршыв обороните тата халăх хуçалăхне çирĕплететтĕмĕр, наукăпа культурăна аталантараттăмăр. Ку енĕпе пирĕн ӳсĕмсем питĕ пысăк. Шăпах çак ӳсĕмсене аркатасшăн та ĕнтĕ Германи фашизмĕ — малта пыракан этемлĕхĕн чи хаяр тăшманĕ... Вилĕм агрессора! Эпĕ — пĕрремĕш тĕнче вăрçин инваличĕ, эпĕ Германи çарĕсен тыткăнне лексе унăн пĕтĕм тискерлĕхĕсене тӳссе куртăм. Халĕ, Тăван çĕршыва усаллăн тапăннă хыççăн, эпĕ ăна хӳтĕлекенсен ретне тăма хатĕр.[8]

1941 çулхи июлĕн 6-мĕшĕнче Шупашкар хулин интеллигенцийĕн пухăвĕнче И. Тукташ çулăмлă сăмах каланă. "Пĕтĕм вăйпа пĕлĕве, енчен те кирлĕ пулсан пурнăçа та, Тăван çĕршывшăн, унăн чысĕшĕн тата ирĕклĕхĕшĕн парăпăр",[9] — тенĕ вăл.

1941 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче чăваш писателĕсемпе Чăвашгиз сотрудникĕсен митингĕ пулса иртнĕ. Митинг-

ра халăх ополченийĕн отрячĕсем тăвас ыйтăва пăхса тухнă. С. Элкер, Н. Илпек, В.Долгов, А. Эсхель, Н. Васанкка тата ыттисем те хăйсен сăмахĕсенче тата митинг пынă вăхăтрах çырнă заявленийĕсенче халăх ополченийĕ речĕсене тăма килĕшнĕ, Тăван çĕршывшăн, фашизм чуралантарнă халăхсене ирĕке кăларассишĕн алла пăшал тытса кĕрешме хатĕрри çинчен пĕлтернĕ.[10]

Чăваш писателĕсем çĕршывăн оборона фондне хывма укçа-тенкĕ пухас енĕпе хастаррăн тăрăшнă. С. Элкерпе Я. Ухсай 1941 çулхи август пуçламăшĕнче оборона фондне пуринчен малтан пĕрер пин тенкĕ хывнă, литературăпа искусство ĕçченĕсене вĕсенчен тĕслĕх илме чĕнсе каланă. М. Трубина, ялти шкулта ачасене вĕрентекен тата ытларах ачасем çинчен çыракан писатель, çак фонда 1500 тенкĕ хывнă. Чăваш патшалăх издательстви 1941 çулта "Хĕрлĕ ялавпа" кĕнеке пичетлесе кăларнă, унта кĕнĕ произведенисен авторĕсем Л.Агаков, Хв. Уяр, В. Долгов тата ыттисем те хăйсене тивĕçекен пĕтĕм гонорара оборона фондне пама йышăннă.[11]

Фронтран килекен хыпарсене пĕр сиктермесĕр тимлесе сăнакан чăвашсен паллă кулăш ăсти Иван Мучи "Чăваш коммунинче" çине-çинех фельетонсемпе сатирăллă очерксем пичетлесе кăларать.

... Вильгельм Эльманăн сарă çӳçĕсем вирелле тăрса, куçĕсем чарăлса, куç харшисем хăпарса кайрĕç, тесе пуçлать вăл "Салтыков-Щедрин тата Вильгельм Эльман" очеркне. Унăн салтакĕсем, виççĕн, çытар вырăнне пуç айне учитель шкапĕнчен тустарса килнĕ кĕнекесем хурса выртнă иккен. Шăп виçĕ кунран вара суд пухăннă. Айăпланакансен тенкелĕ çинче хайхи виçĕ салтак тата Эльман ефрейтор пуçĕсене усса ларнă, айăпĕсене йышăнасшăн мар. Салтакĕсене виççĕшне те вулама юраман кĕнекесене пуç айне хурса усранăшăн айăпланă, ефрейторăн айăпĕ тата пысăкрах: ăна фюрертан мăшкăлласа çырнă произведенисене киленсех вуланăшăн çакса вĕлермелле туса хунă. Приговор хыççăн Эльман: "Гитлер режимĕ туйманнине туйтарать, сисменнине систерет", — тесе кăшкăрса янă.

Мĕнле кĕнекесем пуçелĕк вырăнне хунă пулнă-ха

нимĕç салтакĕсем, мĕн çинчен вуланă Эльман ăна çав териех айăплама?

Ефрейтор вуланă йĕркесем çапларах пулнă: "Хăй шухăшĕсене проект авторĕ çапла çырса хунă. Çакăн йышши çынсене персе пăрахсан усăсăр пулмĕ: чи малтан, пирĕнпе килĕшмесĕр шухăшлакансене; иккĕмĕшĕнчен, хăйсене пытанчăклă тыткалаканнисемпе хăйсен шухăшĕсене палăртманнисене; виççĕмĕшĕнчен, салхуллă сăн-пуçпа çурĕсе лайăх шухăшлă обывательсен кăмăлĕсене ӳкерекеннисене; тăваттăмĕшĕнчен, шăл йĕренсемпе хаçатçăсене..."

"Ха!.. Чăнах фюрер çинчен пулас? Вĕсем паянхи Германири законсем çинчен çапла çыраççĕ ĕнтĕ. Ыттисем те ку "Дневник провинциала в Петербурге" тенĕ кĕнеке пекех-ши? — тесе "Полное собрание сочинений М.Е. Салтыкова-Щедрина" тенĕ кĕнекесен тепĕр томне варринчен уçса, куçĕ тĕлне пулнă йĕркесене вулама тытăннă хайхи ефрейтор: — "Пырса çитрĕ те пуçлăх хăй вырăнне, пуçларĕ сăтăрлама. Пĕр çул сăтăрлать, икĕ çул сăтăрлать..."

Питĕ ăста усă курнă ку сатирăллă очерка çырма перифраз мелĕпе Иван Мучи: "Тем тесен те ун çинченех! Юптарса çырнă, — терĕ Вильгельм. — Иш, шуйттан! Çавсене çыраканни хамăн аллăма лексен чĕлхине, хăлхине, сăмсине каса-каса илеттĕм, куçĕсене чавса кăларнă пулăттăм", — çавăнтах чăваш сатирикĕ сĕмсĕр фашист сăнарне вырăс литературин классик-сатирик сăнарĕсем урлă çав тери çивĕччĕн кăтартать. Тепĕр кĕнекине варринчен уçса вуласа пăхать Эльман: "Эсир — манăн чĕре суйласа илнисем! Кайăр та шăмăсем акса тухăр, янахсене çĕмĕрĕр, çут çанталăкран пушă хир туса хурăр! Сирĕн ăнăçлă ĕçсене эпĕ хаваласнах пăхса тăрăп".

Ку очерка вуланă май вырăс литературин классикĕн хайлавĕсем чăннипех те вилĕмсĕр иккенне, унăн сăнарĕсем çирĕммĕш ĕмĕрте те Раççейре çеç мар, тĕнчери ытти çĕршывсенче те тарăн тымар янине тата вĕсене автор витĕр курса тăнă пек тĕлĕнмелле çивĕччĕн, çав йăх-яхсене чăн-чăн сарказмпа (вутпа çунтарса кĕлне те, текех никама та ан чăрмантарччăр тесе, хăватлă çилпе сапаласа вĕçтерсе янине) питленине куратăн.

"Кĕнекин ятне "Помпадуры и помпадурши" тенĕ, хăй пирĕн Гитлерпа национал-социалистсем çинчен çырать. Чее! Ыттисенче те çавсем çинченех çырнă пулмалла", — ефрейтор тепĕр кĕнекине тытса малалла вулать: — "Вĕсем тĕнчерен пушă хир туса хурасшăн каçсах каяççĕ, анчах ун йышши административлă ĕçсем хыççăн мĕн пуласси çинчен шухăшламашкăн пачах пĕлмеççĕ", — тенĕ. "Д-а. Пĕлетпĕр кам çинчен çырнине! Ку кĕнекене тата "Письмо к тетеньке" тесе ят панă. Мĕн çинчен çырать-ши мăшкăллама юратакан автор хăйĕн инкĕшĕ патне?»

"Вăл кунсерен хăйĕнне перет, унăн ирсĕр хаçачĕсене камсем вуламаççĕ — çавсем пурте унăн тăшманĕсем тата патшалăх тытăмне ишĕлтерекенсем пулса тăраççĕ"... Хăйсем юратман Геббельс çинчен ĕнтĕ ку. Лайăх кăтартнă пулĕччĕç сана çакăн пек çырнăшăн пирĕн патшалăхра, — терĕ куçа курăнман Салтыков-Щедрина юнаса. — Ку тата... "Письма за рубежом" тенĕ. Вуласа пăхар,» — тет ефрейтор.

"Пруссаксем вĕсен нӳхрепĕсенче усраннă эрехе пĕтĕмпех ĕçсе пĕтернĕ, сигарĕсене туртса янă, шкапсенчи кĕпе-тумтирсене, чашăк-тирĕке, кĕмĕлсене вăрласа пĕтернĕ", — тенĕ. Татах уçса вуласа пăхар: "Удавпа Дыба ыттисене шухăшлаттарасшăн мар, ыттисен вĕсем çырса тунă программăна пурнăçласа пырас тутлă шăпапах пурăнмалла.» Тĕрĕс! Салтакăн устав тăрăх шухăшлама юрамасть. Вĕсемшĕн шухăшлама пуçлăхсем пур. Ой, фюрера "Удав" тенĕ. "Дыба" тени Риббентроп пули-ха, те Геббельс-ха.. Пĕлме йывăр. Юптарса çырнă.

Очерка вуланăçемĕн унăн сатирăллă витĕмлĕхĕ ӳссе пырать. Иван Мучин ӳркенменлĕхĕ, ĕçченлĕхĕ, кашни япалана вĕçне çитиех пысăк ăсталăхпа тума тăрăшни уççăн палăрать. Вулакан чунĕнче фашистсене, вĕсен пуçтах пуçлăхĕсене курайманлăх туйăмĕ çуратать вăл. Ку тĕллевпе хаçат валли пысăках мар очерк çырасшăн Салтыков-Щедринăн мĕн чухлĕ произведенине пăхса, тишкерсе тухнă чăваш сатирикĕ. Çав хушăрах вăл Германири лару-тăру йывăрланса пынине, Гитлер гаулейтерсен нацистсен партийĕн облаçсенчи пуçлăхĕсен кон-

ференцине пухни, гаулейтерсем Германире анлă сарăлса пыракан пусăрăнчăкла шухăш-кăмăлсене хирĕç кĕрешме çав тери йывăррине каласа панине те шута илнĕ. Германин аслă командованийĕ, çавнашкал шухăшсем сарăлса пырассине кăштах та пулин чарас шутпа Хĕвел тухăç фронтĕнче çапăçакан чăссенчен отпуска тухнă салтаксене Германие тавăрнма чарнă. Фронтри салтаксем хушшинче те пусăрăнчăк кăмăл сарăлса пынине, вĕсем пулас çĕнтерӳ çинчен аслă командованирен урăхларах шухăшланине Иван Мучи хăйĕн очеркĕнчи Эльман ефрейтор сăнарĕпе кăтартса парать. Акă, виçĕ листа уçсан, Вильгельм куçĕ çак йĕркесем çине ӳкнĕ:

"Берлинра утиял туянма пулать, анчах кăнтăрла вырăн çине сарса хума юрăхлине мар; резинăран тунă мечĕк туянма пулать, анчах пуян мар çынсен ачисене выляма юрăхлине кăна; юлашкинчен Берлинра колбаса туянма пулать, анчах ку ырă суннă çынна хăналанă чухне çитермелли мар, нушаран çын курасран питĕрĕнсе тăр пĕччен ларса çимелли çеç, çисен кайран вархырăму ыратма чарăнсанах çинине манатăн". Ку эрзацсем çинчен ĕнтĕ, шухăшласа илет Эльман, кĕнекине "Письма за рубежом" тенĕ. Кунта юптарса мар, тӳрех çырнă, — "Берлинра" тенĕ.

"Хальхи вăхăтра Германире пурăнакан халăхран çурри Берлин хулине юратмасть çеç мар-ха, — кураймасть. Кашнинченех Берлин мĕн те пулин туртса илнĕ, хирĕç нимĕн те тавăрса паман. Çитменнине Берлин хăйĕн салтакĕсене пур çĕре те тăратса тултарнă".

Кăна çеç çырман-ха Берлин çинчен: "Берлинра именесси вырăнне — харпăр хăй çинчен нумай шухăшласси, политикăран пăрăнас вырăнне — виçерен тухса пĕтĕм тĕнчен пуçĕ пулса тăма тăрăшасси малта пырать", тенĕ. Ку та тĕрĕс. Апла пулин те ун çинчен çырнине вулама юрамасть, тесе шухăшласа илнĕ хыççăн, Эльман виçĕ салтак еннелле çаврăнса тăнă, вулама юраман кĕнекесене пуç айне хурса выртнăшăн вăрçма пуçланă вĕсене. Ятласан-ятласан, унăн тепĕр кĕнекине пăхас килнĕ. Вăл Салтыков-Щедринăн "История одного

города" ятли пулнă. Кама тĕл пулнă, çавна çĕр питĕнчен шăлса тăкасшăн, пĕтĕм тĕнчене казармăсемпе тултарасшăн, мĕнпур халăха асап кăтартасшăн тата тумтир тăхăнтартса маршировка тутарса усрасшăн çунакан Угрюм-Бургеев çинчен вуланă чух Эльман умне Гитлер сăн-сăпачĕ чĕп-чĕррĕн тухса тăнăн туйăннă.

— Мĕн вулан? — илтĕннĕ рота командирĕ Швейнкопфăн мухмăрлă сасси.

... Вăт мĕншĕн çар приговорĕ хыççăн Эльман: "Гитлер режимĕ туйманнине туйтарать, сисменнине систерет", — тесе кăшкăрса янă.

Иван Мучин сатирăллă очеркĕсемпе фельетонĕсене вулакансем кашнине чăтăмсăррăн кĕтеççĕ, ялсенче бригадăсене, заводсемпе фабрикăсенче цехсен участокĕсене пухăна-пухăна вулаççĕ, ахăлтатса кулаççĕ — кулă вара ывăннине хăвăрт ирттерет, фронтра пирĕн салтаксем çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем туни мирлĕ ĕçре те пысăкрах та пысăкрах çитĕнӳсем тума хавхалантарать, фронтпа тыл пĕр чĕрĕ организма пĕрлешсе тăшмана хирĕç вăйлăраххăн та вăйлăраххăн кĕрешет.

Иван Мучин тепĕр сатирăллă очеркĕ "Хыпар маçтăрĕсем" ятлă. Унта паллă сатирик гипербола, сарказм мелĕсемпе усă курса фашистсен пропаганда аппаратне питлесе çунтарать, уйрăммăн илсен, Берлинра тухса тăракан "Фолькстер беобахтер" хаçат ăстисен ĕç меслечĕсем çинчен сăмах пырать. Ку очеркра та сатирик пери питĕ çивĕч, фашистла суя пропаганда маçтăрĕсене вăл, яланхи пекех, кулăпа, сарказмпа тăрă шыв çине кăларать.

Хаçатçăсем çĕнĕ кăларăм хатĕрлеççĕ. Иккĕн хăйсен умне Мускав картине саркаласа хунă та ун çийĕн мăнтăр пӳрнисене шутараççĕ.

— Ганс! — кăшкăрса ярать вĕсенчен пĕри. Кунта, ак, "Кузнецкий мост" тесе çырнă.

— Питĕ лайăх, — тенĕ тепри, — заметкунта тӳрех кăтарт: шыв çийĕн совет салтакĕсен виллисем ишсе çӳреççĕ, те.

— Çырма... Юхан шывĕ çук-ха карта çинче... Кĕперĕ пур, шывĕ çук...

— Ăна ан пăх эсĕ. Шывĕ салтаксен виллисем питĕ нумайран тата вĕсем кĕпер умĕнче кĕпĕрленсе тăнăран курăнмасть. Геринг авиацийĕ часах кĕперне те ишсе антарать, те.

— Дьяк тăкăрлăкĕ , — вуланă витĕр куçли, кĕпере карта çинче малтан асăрхани.

— Тепĕр лайăх хыпар, Ганс!

— Мĕншĕн лайăх?

— Ытла нимĕн чухлайман çын эс, Ганс! Çыр: дьякĕсене большевиксем вĕлерсе пĕтернĕ, ытти çыннисене пурне те Мускав урамĕсене кĕме ĕлкĕрнĕ рейх чаçĕсем тыткăна илнĕ!

— Инвалидная линия, — вуланă Ганс.

— Çапла пулмалла та! Питĕ лайăх хыпарсенчен тăракан хаçат кăларăмĕ ку. Пĕр хаçатне тӳрех рейхсфюрер Геббельс патне ярăпăр. Хамăрăн хушаматсене кăтартма ан ман. Пирĕн танксене хирĕç тăнăшăн Геринг авиацийĕ вăл лаптăка бомбăсемпе сухаласа тухнă. Ăнлантăн-и? Мĕн юлать ун хыççăн? Паллах, инвалидсен линийĕ кăна!

Ганс шурă хут çине чăр-чар чĕркеленĕ те картăна тимлесерех пăхма тытăннă, ку сая кайман:

— Пăх-ха ку еннелле, вулаятăн-и? "Коровий вал", "Оленевый вал", тесе палăртнă.

— Питĕ лайăх куратăп, мĕншĕн çапла çырнине те ăнланатăп. Мускав çыннисен баррикадăсем тума стройматериал çитмест, çавăнпа ăна вĕсен çеçен хирсенчен, пăлансем çӳрекен çурçĕртен турттарса килме тивет. Хĕстеретпĕр, Ганс!

— Кунта тепĕр тăкăрлăк пур. «Кисельный переулок», тенĕ. Çырмалла-и?

— Çырмалла, Ганс! Кун пеккине хăварма юрамасть. Кĕсел тутлă япала, ăна çав тăкăрлăкра пĕçереççĕ ĕнтĕ советсем. Пирĕн салтаксем кĕсел юратнине пĕлетĕн, ăна ăçта хатĕрленине вуласа пĕлсен, хавхаланса кайнăскерсем, «Кĕсел тăкăрлăкне» те вĕсем самантрах тытса илеççĕ.

— «Бородино урамĕ» те пур кунта. Мĕн тăвăпăр? — Ганс хăйĕнчен аслăрах званиллĕ офицера пăтранчăк куçĕнчен пăхрĕ. Лешĕ пăртак шухăша кайнă пек пăхса тăнă та çирĕппĕн каласа хунă:

— Бородино... Бородино... 1812 çул. Наполеон... Çеттуй. Елена утравĕ. Ганс, кун çинчен çырма юрамасть, салтаксен пуçĕсенче иккĕленчĕклĕ шухăшсем çуралма пултараççĕ.

Çак самантра стена çинчи репродуктортан шикленнĕрех диктор сасси илтĕнсе кайнă:

— Ахтунг! Ахтунг! Совет самолечĕсем Берлина бомбăлаççĕ! Хăвăртрах бомбоубежищесене васкăр!

Ганспа унăн пуçлăхĕ, сĕтел çинчи картăпа хаçат валли хатĕрленĕ материалсем çинчен манса, хăвăртрах аялти бомбоубежищене çитес тесе, редакци пӳлĕмĕнчен пусма çине чупса тухнă.

Хаçатăн çак номерĕнчех, Иван Мучин сатирăллă очеркĕпе юнашар, Г. Ячеистовăн фашистла çарăн салтакне карикатурăласа ӳкернĕ сăн ӳкерчĕк пур. Карикатура айне А. Эсхелĕн тăватă йĕркеллĕ сăввине пичетленĕ:

Вăл çапăçнă пур вăйĕпе,
Çĕнтерсе илнĕ вăл кал-кал:
Вун платье, юбка, виç кĕпе,
Вунă чăх, пĕр кăвакал.

Писательсем пĕрин хыççăн тепри фронта тухса каяççĕ, тӳрех хаяр çапăçусене лекнĕ пирки малтан вĕсем кĕрешӳ очеркĕсене Шупашкара çырса яма ĕлкĕреймеççĕ-ха, çавăнпа "Чăваш коммуни" хаçатпа "Илемлĕ литература" журнал вырăс писателĕсен М. Шолоховăн, А. Фадеевăн, Н. Тихоновăн, И. Эренбургăн, К. Симоновăн, И. Рябовăн, А. Караваевăн, А. Дунаевскин тата ытти паллă литераторсен "Правда" хаçатра тухнă очеркĕсене чăвашла куçарса пичетлеççĕ. Алексей Толстойăн вуланă-вуламан чĕрене тивекен "Эпир мĕне хӳтĕлетпĕр" публицистикăллă статйинче пирĕн халăх Тăван çĕршыв шăпи çинчен чăн-чăн патриотла шухăшланине ӳкерсе кăтартнă: "Ку вăл манăн çуралнă çĕршывăм, манăн юратнă çĕрĕм, манăн Тăван çĕршывăм, — пурнăçра сана юратнинчен хĕрӳллĕрех, тарăнрах, тасарах юрату урăх çук..." Тăшмана çав тери хытă кураймanлăхпа тулса ларнă И. Эренбургăн "Фашистсем мĕнпе килеççĕ" стат-

йинче Гитлер варварĕсен тискер чĕрчунла сăн-сăпатне сăнласа панă, çав сăнсене писателĕн Францинче хăйĕн куçĕпех курма тивнĕ.

Июлĕн 2-мĕшĕнче "Правдăра" "Вăрçă эпизочĕсем" рубрика уçăлать, унтан вăл "Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче" ятпа вăрçă чаплă Çĕнтерӳпе вĕçленичченех татăлмасть. Çак рубрикăпа пичетленнĕ очерксенче писательсем вăрçă пуçламăшĕнче совет воинĕсен паттăрлăхне, тăшманпа хаярăн кĕрешнине кăтартакан çапăçу саманчĕсене сăнласçĕ. Çакна вĕсен ячĕсенченех курма пулать: Савва Голованивскин "Тытăçу", В.Ставскин "Çунатлă халăхăн нимрен хăраман ывăлĕ", В.Вишневскин "Тинĕс сунарçисем", Л.Соболевăн "Балти тральщикĕсем", Ю. Крымовăн "СС полкне мĕнле çапса çĕмĕрни", А. Фадеевăн "Нимĕçсен оборонине штурмлани", А. Безыменскин "Тăватă юлташ" т.ыт.те. Ытти хаçатсенче те çавнашкал çивĕч материалсемех пичетленеççĕ: "Известия" кăларăмĕсенче — Евгений Кригер, Виктор Полторацкий, Л. Кудреватых тата ыттисем, "Звезда" хаçатра — Константин Симоновпа Василий Гроссман, "Комсомольская правда" хаçатра — Юрий Жуков очеркĕсем, ыттисен — тĕрлĕ çарсемпе фронтсен хаçачĕсенче. Шăпах çакăнта ĕнтĕ, вăрçă историйĕн пĕрремĕш чĕрĕ страницисенче, очерк вăрçă умĕнхи 30-мĕш çулсенче çын чунĕ еннелле çаврăнма пуçлани лайăхрах, ăнăçлăрах палăрма тытăнать. Мĕншĕн тесен вăрçă тĕлĕнмелле пысăк тĕрĕслев пулнă пирки писательсем çĕнĕ çыннăн паттăрла илемне, унăн чунĕн пуянлăхне анлăн та тарăннăн уçса панă, çакă чăн малтан очерк литературине пуян опытлă пысăк та палла писательсем те мала хунинчен килнĕ.

Писательсемпе журналистсем фронтра çар çыннисен массăллă героизмĕн свидетелĕсем пулнă, вĕсен куçĕ умĕнчех тĕрлĕ çынсем, тепĕр чухне нимĕнпе палăрман ахаль салтаксемех пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерекен паттăрла ĕçсем тунă. Çавăнпа писательсем чăн малтан çынсем хушшинче пулма, вĕсемпе калаçма, вĕсен шухăшкăмăлне пĕлме тăрăшнă. Ун чухне портретлă очерксем йышлă шутланнă, анчах очерксен ытти тĕсĕсенче те

пирĕн çарăн боецĕсемпе командирĕсен паттăрлăх тымарĕ епле çуралса вăй илсе пынине сăнланă. Фронтовик-очеркистсем пирĕн нумай наципе Совет Союзĕн çирĕплĕхĕ, вăйĕ 1917 çул хыççăн уйрăмах питĕ пысăкланнине чĕрĕ тĕслĕхсемпе кăтартнă. Патриотла воспитани ĕçĕ хаяр çапăçусен вăхăтĕнче те чарăнман. Коммунистсем чи йывăр условисенче малта пырса хăйсен тĕслĕхĕпе хăюсăртараххисене хавхалантарнă, хăюллисене çĕклентернĕ, массăсен вăй-хăватне пĕтĕçтерсе цемент пек çирĕплетнĕ. Кун çинчен фронтра çырнă çĕр-çĕр очеркпа корреспонденци каласа парать. Акă, тĕслĕх вырăнне Борис Горбатовăн "Фронт дневникĕнчен" илнĕ пĕчĕк, анчах сĕрс витĕмлĕ тĕрленчĕкĕ.

"Чи вĕри çапăçура та чăрмав сиксе тухма пултарать, чи хăюллă çыннăн та çавăн пек чухне чĕри хускалмасăр юлаймасть. Кама та пулин çапăçура нимĕçсем мала тухассăн туйăнса каять; кам та пулин сиснĕ пек пулать: тăшман ункăна хупăрласа хурать! Вара тахăшĕ, чунĕпе чухăнскер, пăлханса çухăрса ярать:

— Ăçта пирĕн командирсем, ăçта-ха комиссарсем?

Çавăнтах лăпкă та хаваслă сасă янраса каять:

— Комиссар кунта.

Сасси вăйлах та мар, илтессе пурте илтрĕç. Çапăçун чи хĕрӳ пайĕнче, наступлени пуçланă боецсем хушшинче, яланхи пек лăпкăскер, яланхи пек кулăпа хупланнă сăн-питлĕскер, çӳллех мар кĕлеткеллĕ, каскăллă, хытанкарах пӳллĕ, полкра пуриншĕн те тăван пек тата пурте паллакан çын — батальон комиссарĕ Панков пынă.

Хăюллисене вара чĕрисем минутлăха сиксе илнĕшĕн намăс пулса каять, пăлханма пуçланисем лăпланаççĕ, пурне те — хаваслă та çăмăл туйăм çавăрса илет. Темĕнле çӳллĕ, хура боец çав вăхăтра, кăмăлне хытараймасăр, комиссар патне чупса пырать те, питĕнчи савăнăç куçсульне шăлса типĕтмесĕрех, кăшкăрса ярать:

— Эх, комиссар! Туйăмлă çынах мар эпĕ, çапах та... Кӳр-ха сана пĕтĕм чунтан чуптуса илем!

Вăл Панкова ыталарĕ те ăна ашшĕне е тăван пиччĕшне чуптунă пек хыттăн чуптурĕ. Унтан винтовкине

пуçĕ çине çĕклерĕ те çапăçу хирĕнчи пĕтĕм боецсем илтмелле кăшкăрса ячĕ:

— Комиссар пирĕнпе пĕрле!

Çынсем вара атакăна штыксемпе ыткăнчĕç".[13]

Чăн-чăн çынлăха сăнласа паракан вăрçă очеркĕсем хушшинче Борис Горбатовăн очеркла произведенийĕсем уйрăмах палăрса тăраççĕ. Унăн "Юлташ патне çырнă çырăвĕсем" мĕн вăрçă вĕçленичченех "Правда" хаçатра пичетленсе пыраççĕ. Çавсенчен виççĕшне "Чăваш коммуни" 1941 çул вĕçнелле чăвашла куçарса пичетлет. Борис Горбатов очеркĕсенче писатель-воин воин-вулаканпа калаçать. Вăрçăпа пурнăç, Тăван çĕршывпа этем шăпи, аслă туйăмсем — юратупа курайманлăх çинчен.

"Чăваш коммунинче" пичетленнĕ очерксем, писателĕн ытти очеркĕсем пекех, тӳремĕнех писатель ентешĕ-боецĕ патне çырнă пек вуланаççĕ, çав хушăрах вĕсенче писатель кашни салтакпа, — вăл ăçта çуралнине тата паян тăшманпа хăш тĕлте кĕрешнине пăхмасăр, — чун-чĕререн калаçнă евĕр туйăнать.

"Юлташ!

Хальхи вăхăтра ăçта çапăçатăн?

Эпĕ сана Вапнярка, Умань, Кривой Рог патĕнчи çапăçусенче шырарăм. Сана чи хаяр çапăçусенче çеç тĕл пулма май пуррине пĕлнĕ эпĕ", — çапла пуçланать Горбатовăн "Тăван çĕршыв" ятлă пĕрремĕш очеркĕ.

Çакнашкал кĕске, писатель чĕринчен тухса салтак чĕрине кĕрекен калаçу пуриншĕн те ăнланмалла тата чуна тивекен пулнă, кашни совет çыннишĕн çывăх, вĕсен чунĕнче чи хаклă шухăшсемпе туйăмсем вăратса аталантарма, çĕнĕ вăй кĕртме май панă. Çак калаçура писатель боецсем Тăван çĕршыв çинчен мĕн шутланине çеç кăтартман, вăрçă мĕнле аталанса пынине те тишкернĕ, боецсене унăн малашлăхне лайăхрах ăнланма пулăшнă, Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен йышĕнче кашни боецăн вырăнĕ мĕнлине лайăхрах курма вĕрентнĕ. Событисене, çынсене — писатель ăсталăхне пула — кашни вулакан хăйне çывăхнерех курнă.

"Акă халĕ те эпĕ Днепр хĕрринчи ялта ларатăп, сан патна çак йĕркесене çыратăп. Кунтан икĕ çухрăмра

çапăçу пырать. Эпĕ сан пата хăш ялтан çыратăп, çав ялшăн çапăçаççĕ.

Ман пата колхозниксем килеççĕ. Юнашар лараççĕ. Сăпайлăн ӳсĕркелесе ыйтусем параççĕ. Мĕн çинчен? Çывăхрах вĕрекен çапăçу çинчен тетĕн пуль эсĕ? Çук! Ленинград çинчен!

— Ну, мĕнле унта Ленинград? Э? Тăрать-и-ха, парăнмасть-и?

Вĕсем Ленинградра нихçан та пулман, тăванĕсем те çук унта, — мĕншĕн-ха вĕсен сассинче пăшăрханни, хытах пăшăрханни сисĕнет? Мĕншĕн-ха вĕсен чĕри инçетри Ленинградшăн хăйсен тăван ялĕшĕн ыратнă пекех ыратать?

Çавăн чухне тинех ăнлантăм эпĕ. Мĕн вăл Тăван çĕршыв: кăвак тӳпе айĕнчи кашни хата санăн тăван хату пек туйăнать, ялти кашни ватă карчăк — тăван анне пек. Тăван çĕршыв вăл — пирĕн хĕрарăмсен кашни вĕри куççуль тумламĕ санăн чĕрӳне вут пек пĕçертни. Фашистăн тимĕрленĕ тĕплĕ атти пирĕн çĕр çинче тунă кашни утăм — санăн чĕрӳнте юлнă юнлă йĕр.

— Юлташ!

Эпĕ сана Вапнярка патĕнче те, Умань çывăхĕнче те, Кривой Рог таврашĕнче те тупаймарăм. Анчах та çак вăхăтра таçта пулсан та — тăван çĕршĕн вăрçатăн...

... Юлташ!

Енчен те эсĕ Тăван çĕршыва юрататăн пулсан тăшмана çап, канлĕх памасăр çап, шеллемесĕр çап, хăрамасăр тăшмана çап!" (Правда. 1941. Сентябрĕн 29-мĕшĕ).

Б. Горбатов "Çыравĕсенче", кирек мĕнле очеркри пекех, çынсене, событисене, фронт пурнăçне чĕрĕ ӳкерчĕксем пек илемлĕн сăнласа кăтартни витĕмлĕ публицистикăпа, автор шухăшĕсемпе тачă çыхăннă. Б. Горбатов очеркĕсем тарăн лирикăллă. Писатель шухăшĕсем вара публицистика çеç мар, пĕр-пĕринпе çывăххăн, пĕрпĕрне пур енчен те шанса, куçа-куçăн пăхса, пĕр-пĕрин чĕрине ăнланса калаçни. Çакăнтах писателĕн публицистикăлла шухăшĕсем çеç мар, автор сăнанисем те, фронтри пурнăç ӳкерчĕкĕсем те кĕреççĕ.

Декабрĕн 7-мĕшĕнче пичетленнĕ иккĕмĕш çырăвĕ (Б. Горбатовăн) "Пурнăçпа вилĕм çинчен" ятлă.[14]

"Юлташ!

Халĕ пире приказ вуласа пачĕç: тул çутăлсанах — çапăçăва кĕмелле. Çутăличчен çичĕ сехет юлчĕ".

Çапăçу пуçланиччен çичĕ сехет хушши писатель-боец мĕн çинчен шухăшласа ирттернĕ, — пĕтĕмпе, нимĕн сиктерсе хăвармасăр çак çырăва кĕнĕ. Писателĕн тĕп шухăш-кăмăлĕ — пурнăçпа вилĕм çинчен. Çавăн пек шухăшлама писатель-боецăн чăн-чăн йӳтĕм пур, унăн шутне çывхарса килекен çитес çапăçу та, "леш енчен" хырăмĕпе шуса каçнă саламатпа çурăмĕнчен хĕнесе пĕтернĕ çынпа калаçни те, виççĕмĕш рота боецне Антон Чувырина хăравçăлăхшăн строй умĕнче персе пăрахни те, — вăрçăн çакнашкал трагедилле енĕсем пурнăçпа вилĕм çинчен питех те çивĕччĕн шухăшлаттараççĕ.

"Юлташ!

Питĕ пурăнас килет.

Пурăнас, сывлас, çĕр çийĕн утса çӳрес, пуç тăрринче тӳпе курас килет.

Анчах та кирек теменле пурнăçпа пурăнас килмест манăн, кирек мĕнле пурнăçпа çырлахмастăп эпĕ...

Паттăр салтак пек пурăнмалла; паттăр салтак пек вилмелле, — акă епле ăнланатăп эпĕ пурнăçа.

Тул çутăлать...

Гаубицăсем кĕрслеттерме тытăнчĕç. Артиллери тăшмана тустарать.

Халĕ эпир те каятпăр.

Юлташ!

Тăван Дон çеçен хирĕнче хĕвел тухать. Çапăçу хĕвелĕ. Унăн шевлисем айĕнче тупа тăватăп сана, юлташ! Çапăçура эпĕ çухалса каймастăп. Амансан та — стройран каймастăп. Тăшман хупăрласа илсен — парăнмастăп. Ман чĕрере халĕ шикленни те, пăтранни те, тăшмана шеллени те çук — курайманлăх кăна. Çав тери хытă курайманлăх. Чĕрене çунтарать...

Ку вăл — пирĕн вилĕмлĕ çапăçу.

Каятăп".

Çак шухăшсем хĕрӳллĕ тупа, салтак çапăçу умĕн

хайĕн чунне нимĕн пытармасăр уçса панă пек вуланаççĕ, акă мĕншĕн вĕсен ĕнентерӳ вăйĕ çав тери пысăк.

Б. Горбатовăн очеркĕсенчен нумайăшĕ салтак чунĕпе сыхăннă, салтак чунĕн вайне шанать писатель-воин. Юратупа курайманлăх пирĕн халăха ташманпа кĕрешме чи пысăк вăй парса тăракан туйăмсем шутланнă. Çав туйăмсене сăнланипе тивĕçлĕ, чăн-чăн патриотла воспитани парасси Б.Горбатовăн "Çырăвĕсен" тата ытти писательсемпе журналистсен очеркĕсен тĕп тĕллевĕ пулнă.

"Чăваш коммунинче" П. Трояновскин "Пирĕн салтаксем Ясная Полянăра мĕн курнă" очеркне чăвашла пичетлесе кăларсан республика общественноçĕн фашистсене курайманлăхĕ тата хытăрах ӳсет. Очеркра фашистсен тискерлĕхне, вĕсем тĕнче пĕлекен вырăс халăх культура палăкĕсене ним юлмиччен аркатса хăварнине çырса кăтартнă.

Ясная Поляна. Вырăссен аслă писателĕ, "Вăрçăпа мир" роман авторĕ Л.Н. Толстой пурăннă вырăн. Халĕ вăл вырăссемпе нимĕçсем тытăçса çапăçмалли вырăн пулса тăнă. Йĕри-тавраллах нимĕç салтакĕсен виллисем, ӳпĕнтерсе янă танксем, снаряд тултарнă ещĕксем выртаççĕ. Инçех мар нимĕçсем тивертсе янă ял çунать. Кĕлпе кăмрăк куписем çинче хĕрарăмсем, ачасем макăрса лараççĕ.

"Çак хĕрхенӳсĕр çапăçун хăвачĕпе унăн пысăк инкекĕсем çинчен çырса кăтартма Толстойăнни пек гени кирлĕ", — тесе палăртать очерк авторĕ Трояновский. Вăл тĕнчипе паллă писателе совет салтакĕсем мĕн тери юратнине çак ӳкерчĕкре лайăх кăтартса панă: "Ясная Полянăна курсан, эпир çӳçенсех кайрăмăр. Манпа юнашар пыракан лейтенант: "Ачасем! Ясная Поляна!" — тесе кăшкăрса ячĕ. Çакăн хыççăн пирĕн боецсем, тарăн юр тăрăх çăмăллăн ишсе, шăхăракан пульăсене асăрхамасăр, малалла ыткăнса чупрĕç. Тахăшĕ çавăнтах юнне юхтарса ӳкрĕ. Ăна çĕклерĕç, — йăтса пыраççĕ. Хăй çапах та хуллен пăшăлтатать: "Васкăр, ачасем, унта Толстой пурăннă!" Вĕсем утса мар, чупса пыраççĕ. Тăшман пирĕн еннелле перкелешсе васкасах Ясная Поляна çумĕнчи улăхалла чакать.

Гитлер вăрă-хурахĕсем Ясная Полянăра тискерленни совет боецĕсен тăшмана курайманлăхне татах ӳстернĕ. Ясная Полянăра тăшман мĕн хăтланни вĕсен никама курайманлăхне, ытти халăхсен чаплă палăкĕсене ним вырăнне хуманнине питĕ лайăх кăтартнă. Ясная Поляна боецсем умĕнчех çунать. Паллă шкула çулăм çавăрса илнĕ, больница та тĕтĕмпе витĕннĕ. Толстой çурчĕ пулнă икĕ хутлă çуртăн чӳречисенчен тĕтĕм палкать.

Фашист эшкерĕсем тарма васканипе хăйсен хĕçпăшалĕсене, машинисене, танкĕсене, пемелли хатĕрĕсене илсе тухма ĕлкĕреймен, анчах та çак хушăрах вĕсем историллĕ чаплă кил-çурта тивертсе хăварма вăхăт тупнă. Ясная Полянăри пушар — нимĕç фашисчĕсем Лев Николаевич Толстойăн тăван çĕрĕнче тунă пĕртен-пĕр усал ĕç мар. Нимĕçсем кунта октябрĕн 29-мĕшĕнче пырса кĕнĕ. Хăйсем çитиччен икĕ кун малтан Толстой кил-çуртне пĕрмаях бомбăсем пăрахса çĕмĕрнĕ тата тупăсенчен пенĕ. Ялта нумай хĕрарăм, нумай ача-пăча пĕтнĕ. Вĕлернисем хушшинче Павел Давыдович Орехов пур. Орехов — вырăнти колхоз председателĕ, вăл ĕлĕк Лев Николаевич Толстойăн вĕренекенĕ пулнă.

Икĕ вăй — Хĕрлĕ Çар тата Гитлер хурахĕсем — Ясная Полянăра мĕн хăтланнине танлаштарса пăхсан, совет салтакĕн чĕринче фашизма чăтма пултарайманлăх тата Тăван çĕршыва юратни çирĕпленнĕçемĕн çирĕпленни курăнать. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем Ясная Полянăра тăнă вăхăтра Л. Толстой музейне тата пĕтĕм кил-çурта часовойсем хуралласа тăнă. Иртен пуçласа каçченех музейпа паллашма боецсем, командирсем тата политработниксем татăлмасăр пынă. Толстой ĕçлесе пурăннă çурта тимлĕн курса çӳренĕ, музей сотрудникĕсем каласа панисене пĕр сывламасăр тăрса итленĕ. Пур енчен те вĕсем аслă писателе юратни, хисеплени тата ăна сума суни сисĕннĕ.

Фашистсем вара хăйсене пачах урăхла тытнă: чăн малтан пур сотрудниксене те хваттерĕсенчен хăваласа кăларса янă, вĕсен мĕнпур пурлăхне туртса илнĕ, юлашкинчен музея казарма валли пушатса пама хушнă. Нимĕçсем ĕнесене, хурсене, чăхсене пусса çиме пуçланă,

картасене пăсса çунтарма тытăннă, алăк тăпсисене хăйпăтса пĕтернĕ, сĕтел-пукансене çĕмĕрсе тăкнă, — пурне те вутта пăрахса çунтарнă. Музей сотрудникĕсем çакăншăн вĕсене хирĕçлесе пăхнă, çунтармашкăн çумрах вутă пурри çинчен каланă. Анчах та çакна хирĕç нимĕçсен врачĕ Шварц: "Пире вутă кирлĕ мар. Эпир сирĕн Толстой ячĕпе çыхăннă япаласене пурне те çунтарса пĕтеретпĕр", — тенĕ.[15]

Çапла вара совет халăхĕ çав тери юратса сыхласа усранă кил-çурт паллайми улшăннă. Лев Николаевичăн хаклă сĕтел-пуканĕсене тата унăн кĕнекисемпе картинисене нимĕçсем подвалсене е урамалла кăларса пăрахнă. Музей çуртне офицерсем вырнаçнă. Пусма картлашкисем айĕнчи площадкăра парикмахерски уçнă. Лев Николаевич камердинерĕ Судаков пурăннă пӳлĕмре атăсем юсакан мастерской тунă. Толстой хăйĕн "Вăрçăпа мир" романне çырнă çаврака маччаллă чаплă пӳлĕме нимĕç офицерĕсем чĕлĕм туртмалли вырăн туса хунă. Сада, парка, çурт-йĕрсене пурне те пĕр хĕрхенмесĕр пĕтерсе тăкнă.

Вăрă-хурахла тискер нимĕçсене çакăн чухлĕ çĕмĕрни те çителĕклĕ туйăнман пулмалла. Вĕсем аслă писатель палăкĕнчен ытларах мăшкăлласа кулма шухăшланă: Лев Николаевич ӳчĕ выртакан вырăна нимĕç салтакĕсем çӳп-çап тăкмалли вырăн туса хунă. Толстой ӳчĕн тăприпе юнашар фашистсем хăйсен 300 салтакĕн виллине пытарнă. Çапла ĕнтĕ: çынçиен фашистсем — юнашарах Толстой! Пирĕншĕн, совет çыннисемшĕн, çакăнтан ытла кӳрентерекенни мĕскер пулма пултарнă-ха урăх?!

Нимĕçсем тунă усал ĕçсем çаксемпе те вĕçленмеççĕха. Музея йышăнсан, вĕсем унта юлнă ещĕксемпе шкапсен çăрисене пурне те ватса çĕмĕрнĕ. Хаклă япаласене, историллĕ экспонатсемпе экспозицисене çуркаласа пăрахнă е Берлина ăсатнă. Лев Николаевич çуралнă дивана нимĕçсем пĕтĕмпех ватса, татăк-кĕсĕк туса хунă, кавирне касса вакланă. Çавăн пекех вĕсем Толстой ларма юратнă пукансене тата сĕтеле çĕмĕрсе тăкнă. "Музей сирĕн мар. Эпир мĕн тăвас тенĕ — çавна тума пулта-

ратпăр", — тесе кăшкăрнă текех ӳсĕр çӳренипе сасси хăйăлтатакан пулнă нимĕç офицерĕ.

Толстой япалисенчен мăшкăлласа пĕтернĕ хыççăн нимĕçсем Ясная Полянăра пурăнакансене асаплантарма тытăннă. Кунта фашистсем икĕ çынна çакса вĕлернĕ, тăватă хĕре тытса пусмăрланă, колхозниксенне пĕтĕм выльăх-чĕрлĕхне тата пĕтĕм ăшă тумтирĕсене туртса илнĕ. Юлашкинчен, Хĕрлĕ Çар хĕссе çитернипе тухса тарнă чух, нимĕçсем Ясная Полянăна вут тĕртсе хăварнă. Шкул, больница тата ытти нумай çурт çунса кĕлленнĕ.

"Халĕ ĕнтĕ çак историллĕ чаплă вырăна паллама та çук. Эпир аллея тăрăх утса пыратпăр — тесе çырать Трояновский. Çунăк шăрши кĕрет. Юр çинче кĕл вĕçкелет. Тавралла çӳп-çап, тасамарлăх, — таптанă, ватса тăкнă япаласем. Толстой çуртне пырса кĕрсен, хăвăн куçу мĕн курнине ху та ĕненместĕн. Кунта темĕнле тискер этемсем, вăрă-хурахсем пулнă пуль тесе калас килет. Стенасене сурса, вараласа пĕтернĕ, урайсене пăснă, Толстойран юлнă паха йышши сĕтел-пукана ватса, çĕмĕрсе пĕтернĕ. Кунта вĕт пĕтĕм этемлĕхшĕн хаклă кĕнекесем çырнă Лев Николаевич Толстой пурăннă!

— Çаксемшĕн эпир хытă тавăрăпăр, — терĕ хĕрлĕ армеец Волохов, пирĕнпе пĕрле музейран тухнăскер.

— Тавăратпăр! — теççĕ унпа пĕрле пĕтĕм Хĕрлĕ Çар, пĕтĕм совет халăхĕ".[16]

Малти окопсенчен килнĕ очерксем

Малтанласа очеркистсем совет çыннисен кăмăлшухăшне шута илмесĕр пултарайман, тăшмана çăмăллăнах çĕнтересси çинчен çырнă. Анчах 1941 çулхи йывăрлăхсене салтаксемпе пĕрле хăйсем тӳссе ирттернĕ хыççăн тинех питĕ лайăх ăнланнă: тăшман питĕ хаяр, питĕ вăйлă, питĕ хăрушă, ăна çăмăллăн çĕнтерме май çук, пĕтĕм вăйпа пултарулăха памалла.

Чăваш писателĕсем фронта çитсен те хăйсен мирлĕ пурнăçĕнчи тĕп ĕçе манмаççĕ, салтаксен çапăçури паттăрлăхĕ, вĕсем тăшмана чунтан курайманни, Тăван

çĕршыв ирĕклĕхĕшĕн пурнăçĕсене шеллеменни çинчен Шупашкара малти окопсенче çырнă тĕрленчĕксенче, кĕске очерксемпе репортажсенче çыра-çыра пĕлтереççĕ. Çар корреспонденчĕсене командовани тӳрех асăрхать, вĕсене "Боевой листок" кăларăмĕсене хатĕрлеме явăçтарать, чи пултаруллисене вара тĕрлĕ редакцисенче ĕçлеме куçарать. Çапла вара вунă ытла чăваш писателĕ тăшмана хирĕç дивизи хаçачĕсен редакцийĕсенче перопа та, пăшалпа та кĕрешме тытăнать. Вĕсен шутĕнче Л. Агаков, В. Алагер, В. Долгов, Н. Илпек, В. Ржанов, И. Тукташ, П. Хусанкай, А. Яндаш т.ыт.те. Я. Ухсай тĕрлĕ çар хаçачĕсен редакцийĕсенче вăй хурать, Ф. Çитта малтан Ленинград фронтĕнче дивизи хаçачĕн редакторĕ пулать, унтан ăна çӳлерех куçарма хатĕрленеççĕ. А. Талвир, "Комсомольская правда" хаçатăн фронтри корреспонденчĕ пулнă май, хаяр вăрçă çулĕсенче Мускаври редакци пӳлĕмĕнче мар, ялан тĕрлĕ фронтсене тухса çӳрет, чи малти окопсенчен хаçат валли снарядсемпе бомбăсен ванчăкĕсен шăршипе тулнă материалсем хатĕрлесе таврăнать.

Писательсенчен хăшĕ-пĕрисем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине унăн пĕрремĕш кунĕнчех хутшăнаççĕ. Александр Алгана Хĕрлĕ Çара 1939 çултах илнĕ, малтан саперсен взводĕнче рядовой, унтан сержант пулнă, пĕрремĕш вутлă çапăçусенче паттăррăн çапăçнă хыççăн саккăрмĕш кунĕнче тăшманăн мина катăкĕ ăна пуçĕнчен амантать. Госпитальте сипленнĕ хыççăн вăл Мускаври çар инженерĕсен училищинче вĕренет, унтан каллех — фронта! Саперсен взвочĕн, ротин командирĕ пулать, Сапер пĕрре çеç йăнăшать тенине хăй чăтса курать. Малтан взводпа, унтан ротăпа тăшмана хирĕç паттăррăн çапăçнăшăн А. Алгана темиçе орденпа, медальпе наградăлаççĕ. Висла урлă каçса Глогау хулин урамĕсенче уйрăмах хăюлăх кăтартнăшăн вăл Хĕрлĕ Ялав орденĕ илме тивĕçет. 1945 çулта Берлин еннелле пуçланнă наступление ăна апрель уйăхĕнче кăкăрĕнчен йывăр амантаççĕ. Полевой госпитальтен Алга майăн 8-мĕшĕнче — Германи капитуляци туни çинчен алă пуснă кун — тухать".[7]

П. Хусанкай та вăрçăра çар журналисчĕ пулса тăрать, темиçе хутчен те алла пăшал тытса хаяр çапăçăва хутшăнать, пĕрре çеç мар аманать, госпитальсенче сипленнĕ хыççăн каллех малти позицисене тавăнать. "Таçта-таçта çитсен те фронтра е госпитальсенче пулнă чухне те, — пур çĕрте те манăн лайăх, хастар туссем пулнă, вĕсенчен нумайăшĕ манăн ентешсемччĕ. Эпир халăх хушнине нихçан та манмастпăр: пирĕн ĕç тĕрĕс ĕç, тăшмана çапса аркататпăрах. Ĕненетĕп эпĕ, манăн боецсем те ĕненеççĕ: эпир çĕнтеретпĕр, савăнăçлă мир кунĕ çитетех. Хальлĕхе пирĕн пĕр тĕллев çеç — малалла кăна!"[18] — тесе çырнă вăл хăйĕн юлташĕ Н.Дедушкин патне.

1942 çулхи январь уйăхĕнче хăйĕн ирĕкĕпе фронта Граждан вăрçинче паттăрăн кĕрешнĕ палламăр писатель М. Данилов-Чалдун тухса каять. Вăл кашни кун тенĕ пек çар комиссариатне çӳренĕ, ватă тата чирлĕрех пирки ăна фронта яман. Çавăнпа вăл Мускава темиçе çыру çырать, çав-çавах юлашкинчен Кремльтен хăйне фронта кайма ирĕк ыйтса илет. Паттăрăн çапăçнă ватă салтак фашистсемпе, хаяр тытăçусем хушшинчи ирĕклĕрех кĕске вăхăтра вара Шупашкара çырусем, очерксемпе калавсем çырса тăнă. Акă çак çыру йĕркисем М. Данилов-Чалдун хăюллă боец-патриот пулнине питĕ аван кăтартса параççĕ: "Тăван çĕршывран хакли маншăн нимĕн те çук. Ăна чĕререн юрататăп. Пирĕн çĕршыва намăс кăтартма, пирĕн халăха чура тума шут тытнă тăшмана шăлсемпе çыртса çурас килет... Фашистсем манăн пĕртен-пĕр ывăлăма вĕлерчĕç. Уншăн вĕсене çĕр хут тавăратăп. Эпĕ — ашшĕ, манăн алă чĕтремĕ",[19] — тесе çырнă вăл хăйĕн "14-мĕш атака умĕн" очеркĕнче. Ку вăл — салтак тупи, çав тупапа фронта кайнă, çав тупана хăйĕн пурнăçĕ татăличченех çирĕп тытнă, йывăр аманнă хыççăн 1944 çулхи мартăн 2-мĕшĕнче 120 мм миномет командирĕн чĕри çар госпиталĕнче тапма чарăннă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи Европа халăхĕсене фашизм чуралăхĕнчен хăтарчĕ. Ку вăл совет халăхĕн интернациллĕ тивĕçĕ пулнă. Çакна совет патриотизмĕн тымарĕ-никĕсне пĕлмесĕр ăнланма та, тĕрĕс хак пама та çук.

Вăрçă çинчен çырнă пирĕн пĕтĕм илемлĕ литература çакна ăнланас çĕкленӳллĕ тĕллевпе авăрланнă. Вăрçă паттăрĕсен кăмăл-туйăм пуянлăхне тĕнчери лару-тăрăва анлăн та туллин курса ăнланни çинче никĕсленнĕ кĕрешĕвĕн тĕллевĕсене лайăх туйса тăнипе те, тата эпир кашни çын тавракурăмĕ тесе палăртакан унăн юратăвĕпе тата хутшăнăвĕсемпе çыхăнăвĕсемпе те, унăн килĕпе, ĕçĕпе те çыхăнтаратпăр. Ку вăл пĕчĕк япала пек çеç туйăнать, анчах та шăпах çавă çын чунне пуринчен те лайăхрах уçса кăтартать тата вăл пулăшнипе этем халăх пурнăçĕнчи чи пысăк пулăмсене ăнланма тытăнать.

"Тăван çĕршыв — аслă сăмах, — тенĕ Б. Горбатов хăйĕн пĕр очеркĕнче, — ... анчах кашни çыншăнах тăван çĕршыв хăй çуралнă ялтан тата вăл çуралнă килтен пуçланать".

Вăрçă çулĕсенче тата вăрçă хыççăн çырнă хăш-пĕр произведенисенче совет патриотизмне уçса парасси çиелтенреххĕн, дидактиклараххӑн курăннă. Истори аталанăвĕпе çыхăннă геройсен шăписене сăнласа панă чухне çеç ку ĕç ăнăçлăрах, тĕрĕсрех, тарăнрах пулса тухнă. Кăмăл-туйăм, характерсен поэзийĕ историпе çыхăннă пурнăç чăнлăхне илемлĕн уçса паракан реализмла произведенисенче çеç вăйлă та сулмаклă курăнать. Çакнашкал ен чăваш илемлĕ литературинче те аван палăрать.

Ку литературăн пур жанрĕсенче — романпа повеçре те, калавпа очеркра та — сисĕнет. Очерк, паллă ĕнтĕ, несĕллĕрех, çавăнпа вăл писателе, калавпа повеçрен ытларах, фактпа тыткăнлать. Очерк публицистика енĕпе çивĕчрех, идеи уçăмлăрах палăрать. Анчах та ку монографире тĕп сăмах илемлĕ очерк çинчен пырать, çавăнпа П. Павленко "Счастье" романа хайланă тапхăрта мĕн çырса хунине илсе кăтартни вырăнлăрах пулĕ. Çак пĕчĕк сыпăкра писатель Воропаева çапла калаттарать: "Идейăсем çеç пулни çителĕксĕр. Çара шухăшсем çеç пулса тухаççĕ... Эпĕ кирпĕч, пăтасем, сăрă шăрши кĕрекен идейăсене хисеплетĕп".[20]

Критикăра çаплах-ха очерка эстетика енчен хĕссе хаклас туртăм пĕтмест — очерк пурнăçра пулса иртекен пулăмсемпе çыхăннă, унта чăн-чăнах пурăнакан

геройсем хуçаланаççĕ, хирĕçĕвĕсем те пурнăçра чăнласах пулса иртнисем, вĕсене очерк сюжетне те çаплипех, нимĕн улăштармасăрах кĕртсе тултарнă теме пăхаççĕ. Çав вăхăтра шăпах ĕнтĕ фактсем чăн пулни очеркри ĕçсене типизацилеме, характерсене анлăн сăнлама, хирĕçӳ-тавлашусене психологипе социаллăх пĕлтерĕшĕ енчен пĕтĕмпе уçса кăтартма чăрмантараççĕ имĕш. Мĕнле пулса тухать-ха? Илемлĕ творчествăна хавхалантарма тивĕç чăн-чăн çынсен пурнăçĕ очеркра илемлĕх çулĕ çинче тĕп чăрмав пулса тăрать иккен.

Паллах, очеркра типизацип пĕтĕмлетӳ законĕсем романпа повеçринчен урăхларах. Хăçан? Мĕнле очерксенче? Публицистикăра? Илемлĕ публицистика очеркĕсенче. Эпир вара илемлĕ литературăна кĕрекен илемлĕ очерксене тишкеретпĕр. Паллăччĕ-ха, илемлĕ очерк эпика жанрне кĕрет. Эпика жанрĕсем пысăк, вăтам тата пĕчĕккисем çине пайланаççĕ. Н.Д. Тамарченко эпикăн пĕчĕк жанрĕсен шутне анекдота, притчăна тата юптарăва кĕртет. Вара, ун шучĕпе, вăтам жанрсен шутне повесть, новелла тата калав кĕреççĕ. Скобкăра вăл çапла хушса çырать: "не говорю об очерке, так как чаще всего этот жанр принадлежит литературе, но не искусству слова.»[21] Анчах та çак "шухăша" çирĕплетме автор нимĕнле тĕслĕх те илсе кăтартмасть. Хăйне хăйех хирĕçлет мар-и вăл? Ку жанр литературăна кĕрет, анчах искусствăна мар, тет. Илемлĕ литература сăмах искусствипе çыхăнман-и вара? Ирĕксĕрех илемлĕ очерк çинчен çапла хисеплемесĕр калани академилле сулăмлă тĕпчев кĕнекине е ăнсăртран, е йăнăшпа лекмен-ши тесе шухăшлатăн.

Очеркра типизацип пĕтĕмлетӳ законĕсем романпа повеçринчен урăхларах, терĕмĕр çӳлерех. Анчах очеркра та пĕтĕмлетӳ сюжет аталанăвĕнченех йĕркеленсе тухмалла, литературăра çырса кăтартнинче те вăл музыкăри сăнара гармонирен уйăрма çукки евĕрех унпа уйрăлми пĕтĕçсе тăмалла. Шухăшласа пăхар-ха: енчен те очеркăн пĕтĕм эстетикине факт-пулăм чăнлăхĕпе никĕслемелле пулсан, документа, çав вăхăтра пурăннă çынсем каласа панипе шайлашăнса тăракан историллĕ

прозăна епле тишкермелле? А. Фадеевăн "Çамрăк гварди" романне роман-очерк теме никам та шутламастьçке, анчах унта çырса кăтартнă ĕçсем пурте пурнăçра пулса иртнĕ, ку çеç те мар, автор геройсен ячĕсене те улăштармасăрах, хăйсеннех хăварнă. Маресьев шăпипе паттăрлăхне те Б. Полевой очеркра мар, повеçре çырса кăтартнă. Автор герой хушамачĕн пĕр сас паллине кăна улăштарнă, çапах та пурнăçри чăн-чăн герой вулакансемпе час-часах тĕл пулнă, анчах та вулакансем ăна литературăри геройран уйăрма пĕрре те шутламан, апла пулин те писатель калăпланă сăнарпа характер кун пирки илемлĕн пĕтĕмлетнин вăйĕ пачах та чакман. Сăмах майăн çакна та пĕлтерме юрать пулĕ: икĕ урасăр юлнă А. Маресьев Чăваш Республикинчи вăрманлă Йĕпреç районĕнче вырнаçнă госпитальте сипленнĕ, кунти заводра туса кăларнă АН-2 самолетпа завод аэродромĕнче çĕнĕрен вĕçме вĕреннĕ...

Мĕнле кăна тĕллев ан ларттăр писатель-очеркист хăйĕн умне — уйрăм çын е коллектив историйĕ, е пурнăçа сарлакан тишкерсе кăтартни — çынна ăнланса çитес çул çинче çеç вăл хăйĕн тĕллевне илемлĕн татса пама пултарать. Ку тĕлĕшпе очеркăн илемлĕ прозăн ытти жанрĕсенчен палăрмалла принциплă уйрăмлăхсем пулма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен çавнашкал уйрăмлăхсем К. Федин калана сăмахсем патне илсе çитерме пултараççĕ: "Роман çырнă çĕре пĕтĕм таланта, очерк çырнă çĕре талантăн пĕр пайне çеç пама юрамасть, хаçат статйине талантсăрах çырма пулать теме çук".[22] Писатель таланчĕ — çынна тĕпчекен талант. Çав талант очерк çырнă чухне те калав, повесть тата роман çырнă чухнехи пекех хăйĕн пĕтĕм вăйне патăр.

Çак шухăшсене очеркăн хăйĕн законĕсем пуррине хирĕçлес тесе каламан. Очеркăн жанр уйрăмлăхĕсем очерк авторне хăйне урăхларах тытма хистеççĕ. Пурнăç материалĕ очеркра произведени никĕсĕ çеç мар, нумай чухне унăн чи кирлĕ условийĕ пулса тăрать, ку жанрта унăн пĕлтерĕшĕ уйрăмах пысăк.

Очерк вăйĕ — фактсенче. Очерк çын ĕçĕнчен уйрăммăн пурăнма пултараймасть. Çыннине хăйне ăнлан-

масăр унăн ĕçне те ăнланма çук. Фронтри очеркистсен писатель шăпи час-часах герой шăпипе вут-çулăм ăшĕнче пĕрлешнĕ. Çавăнпа çынна вăрçăра сăнласа кăтартни очеркистшăн уйрăмах питĕ паха ĕç шутланать.

А. Алга, тĕслĕхрен, "Малтанхи кун" очеркра Тăван çĕршывăн Аслă вăрçă пуçланнă каçа çапла сăнласа кăтартать: "Çуллахи сенкер пĕлĕт айĕнче, тӳлек çанталăк ытаменче ешĕл вăрмансем ларнă, пуç тайнă ылтăн тырăллă хирсем, утă капанĕсем хывнă улăх-çарансем канлĕн сывланă, кăтра садсемпе витĕннĕ лăпкă ялсемпе хуласенче кун каçа ĕçлесе ывăннă ĕçчен çынсем тата выля-выля ĕшеннĕ хавасла ача-пăча тутлăн çывăрнă. Этеме ырлăх çеç сунакан çĕр хăй те, таçтан амакран хăрушă инкек сиксе тухасса кĕтмесĕр, тӳлеккĕн каннă. Хĕвел тухăçĕнчен, çĕре ыйхăран вăратас тенĕн, тĕттĕме сирсе, çӳхе-çӳхе пурçăн чатăр пек шурă шурăмпуç хăпарнă. Вăл тĕнче тăрăх шăппăн шăвăнса, сарăлнăçем сарăлса пынă, ăна хирĕç ĕнтĕ, ирхи çутта хисеплесе, вĕçен кайăксем юрă шăрантарма пуçланă ... анчах сасартăк:

— Тревога!!!

Çакă темиçе ĕмĕрсем хушшинче нумай-нумай çынсен, халăхсен чĕрине хускатнă хăрушă сасă хальхинче пирĕнпе юнашарах янăраса кайрĕ.

— В ружье! — кăшкăрса ячĕ çав салтаках тата, ытти чухнехинчен хăрушшăн та хаярăн.

Ун сасси пĕтĕм аслă çĕршыва — Рава Русская тавраШĕнчи вăрмансенчен тытăнса Владивосток таран — тен, пĕтĕм тĕнчене илтĕнмелле, пĕтĕм халăха вăратмалла янăраса кайнине кам пĕлчĕ-ши çак самантра? Пĕлсен те — ытла нумайăнах мар-тăр. Мĕншĕн тесен ку сасă малтанлăха лагерьсенче çеç, чикĕрен инçе мар вырнаçнă лагерьсенче кăна, çапла хăватлăн, хăрушшăн, пысăк вăрмансемпе сарлака хирсем тăрăх чĕрене шартах сиктермелле кĕрлесе-шавласа кайрĕ".[23]

Писатель кунта очерк авторĕ çеç мар, вăл тăшмана хирĕç чикĕре пĕрремĕш çапăçăва кĕнĕ совет салтакĕсен взвочĕн командирĕ, автор-калавçă. Çавăнпа вăл çырни чуна хускатать, унăн сăмахĕсене ĕненетĕн, шанатăн, чĕре çумне илетĕн, унпа пĕрле шухăшлама, пăлханма

пуçлатăн: "Эпĕ каçхине мĕнле салтăнса выртнă çаплипех палаткăран сиксе тухрăм. Илтетĕп — чикĕ енче, эпир тăнă вырăнтан çич-сакăр çухрăмра, мăн тупăсем, çĕрле масар çинче урнă йытăсем салхуллăн, тăстарса вĕрнĕ пек, хулăн сасăпа улаççĕ. Хыр вăрманĕ çинче, тем пысăкăш шăтăрмак шатăртатнă пек, кĕрлесе-çатăртатса кайрĕ. Пăхатăп та пуçа çĕклесе — уçланкă тĕлĕнчен, кăвак пĕлĕте хупласа, пысăк та хура самолетсем аялтанах вĕçсе иртнине куратăп. Виççĕ... тăваттă... пиллĕк... улттă. Çуначĕсем айĕнче — тискер хĕрессем. Хăйсем — пирĕн енчен килеççĕ.

Алăри сехетĕм çине пăхса илетĕп. Тăваттă иртейнĕ. Юлташăмсем те палаткăран сике-сике тухрĕç. Васкаса тумланатăп та, взводри винтовкăсемпе икĕ пулемета хатĕрлеме хушса хăварса, дивизи штабне чупатăп".[24]

Писатель (вырăс-и вăл е чăваш, тутар-и е якут) çарсемпе пĕрле вăрçă тусанĕпе хупланнă çулсемпе малтан Хĕвел анăçĕнчен Мускав еннелле чакнă, унтан, тăшмана лăска-лăска тăн кĕртсе çитерсен, çĕршыв тĕп хулипе Сталинград патĕнчен фашизм йăви Берлин еннелле çирĕппĕн утнă. Вăрçăри корреспондентран вулакансем çĕнĕ сăмах кĕтнĕ, фронтри çĕнĕлĕхсене, çитĕнӳсемпе улшăнусене чăн малтан вăл курнă, наступление те хутшăннă вăл, тăшман вăйлăрах вырăнсенче каялла чакмасăр салтаксем мĕн тӳснине вăл та тӳснĕ. Унăн сăмахĕсенче фронтра та, тылра та совет çыннисем хăйсене мĕн кирлине тупса хавхаланнă, çĕнĕ вăйпа, çĕнĕ тĕллевсемпе авăрланнă.

Акă тепĕр очерк. "Днепр урлă" ятлă вăл, ăна Н.Илпек пирĕн çарсем Хĕвел анăçнелле сарăлса пыракан наступлени вăхăтĕнче çырнă. Ноябрĕн 9-мĕшĕнче дивизи политотделĕнче ĕçлекен офицерсене политотдел начальникĕ патне чĕнтернĕ. Николай Николаевич Философов гвардеец полковникĕ ирттерекен канашлăва дивизи хаçачĕн редакторĕ ыттисенчен кăшт çеç каярах юлса çитет.

— Апла, эппин, плацдармра сирĕнтен никам та пулман-и? — ыйтнă полковник шăпах редактор блиндажа кĕрсе тăрса саламланă чухне.

— Мĕнле пулман? Эп пултăм! — тесе пĕр кĕтмен çĕртен персе ярать хаçат редакторĕ.

— Пĕртен-пĕр редактор кăна пулнă иккен унта. Тавах ăна çавăншăн, — тинех салху сăнлă политотдел начальникĕн кăмăлĕ çĕкленнĕ.

Кăштах тăрсан çеç тавçăрса илет хаçат редакторĕ, сăмах вăл пулса курнă плацдарм пирки мар иккен, Днепр леш енне каçса, тăшманран тасатнă плацдарм çинчен ыйтнă иккен гвардии полковникĕ. Çавăн пирки ăна редакци сотрудникĕ çуршар сăмахăн системе калать. Редактор, чăнах та, Днепр леш енче пулман, кайса килмелле-ха тесе çеç шутласа хунă. Мĕнле-ха капла, суйса калани пулнă-çке ку! Кĕтсе те кĕтмен, ĕмĕтленмен те пулнă вăл капла пулса тухасса...

Политотдел начальникне тинех çакăн çинчен "тӳрлетсе" калама аван мар, каламасан та юрамасть. Мĕн тумалла? Юрамасть капла, ăшăмра хама ятланипе çырлахма çук, тенĕ хыççăн редактор çав каçах çĕрле кимĕпе те пулин леш енне каçса каятăп, тесе шухăш тытать. Канашлуран таврăнсан редактор, редакци сотрудникĕсене мĕн-мĕн тумаллине хушса хăварса, хулан вун тăваттăмĕш поселокне васкать. Вăл Днепр хĕрринче, унта Фокин майор полкĕ вырнаçнă. Çав полкăн пĕр батальонĕ Днепр леш енне каçнă.

Очеркра Рязань таврашĕнчи Ряжск хули каччи Фокин сăнарĕ асра юлать. Ун кăкăрне икшер те виçшер хут ылтăн-кĕмĕл вун икĕ орден та пилĕк медаль илемлетеççĕ. Анчах, пур наградăсене шутласан та, вăл хăйĕн вăрçă суранĕсене çавсемпе витсе пĕтереймен пулĕччĕ. Фокин çирĕм виççĕре. Сталинградра чухне вăл сержант пулнă. Вăйлă çапăçура взвод командирĕ амансан, Фокин ун вырăнне тăнă. Унăн взвочĕ тăшманăн хирĕçле атакине çĕмĕрсе тăкнă. Кайран вăл рота командирĕн ĕçĕсене туса пынă. Ставкăран пынă Голиков генерал-лейтенант çамрăк офицера, пултарулăхне кура, батальон командирĕ туса хунă. Капитан ятне илнĕ Фокин пушшех çунатланса кайнă тейĕн — вăл атакăна çĕкленнĕ нимĕçсен полкне ним хăварми аркатса тăкнă та чугун çул станци таврашне тăшманран тасатнă.

Çавăншăн ăна Ленин орденĕ панă. Фокин каярахпа пулнă наступленисенче те чапа тухнă. Ун салтакĕсем, хăйсен командирне кура, вут-çулăм ăшне кĕрсе çапăçнă та яланах çĕнтерӳпе тухнă. Сталинград патĕнче те вĕсем кăкăрпа та чĕре хăвачĕпе паттăр çул хывнă. Ку батальонра пĕр мĕскĕн салтак та пулман. Хӳтĕленсен те пуçа чикесси çинчен унта никам та шутламан. Фокина пĕррехинче йывăр амантнă, унтан вăл каллех хăйĕн тăван йышне таврăннă. Çавăн чух вара ăна дивизи командирĕ полк шанса панă. Çапла Фокин, вăрçă ĕçне вăрçăрах вĕренсе пырса, полк командирĕ те пулса тăнă.

Ун патне редактор шăпах кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче пырса кĕнĕ. "Вăл медсанбатран таврăннă кăначчĕ, тухтăрсем ăна унтан ярасшăн та пулман, — пĕлтерет автор-калуçă. — Сипленсе çитичченех хăй ирĕкĕпе тухса килнĕ. Салтаксем арăслансем пек çапăçнă чух медсанбат кравачĕ çинче йăваланса выртма унăн харсăр чĕри чăтса çитереймен. Кăкăрне йăлтах бинтласа пĕтернĕ, суранĕсем сурса ыратма та чарăнман иккен-ха, хăш-пĕр суранĕ эп пырсан та юнпа хĕрелсе сăрхăнатчĕ. Хăй йăлтах пĕтсе-шурса кайнă. Калаçасса çапах та савăнăçлăн калаçать:

— Леш енне пĕрле каçăпăр, — терĕ вăл мана. — Пирĕн кунта пĕр кивĕ паром пур. Майĕпен çӳрет. Çапах та унпа çĕр каça пĕрре хутлаççĕ. Ĕçме-çимепе çар хатĕрĕсем турттаратпăр. Иртнĕ каç артиллеристсене те каçартăмăр терĕç-ха... Кайма пулать. Кайăпăр..."[25]

Вăрçă çинчен çиелтен çырса кăтартни, лару-тăрăва тĕплĕн тĕпчеменни никама та ĕнентерме пултарайман. Унашкал очерксен витĕмлĕхне нульпех танлаштарма тивнĕ. Анчах та çав сăнарсем, çиелтен сăнласа панăскерсем, вулакан чунне пĕрре пăртак та пулин хускатма пултарнă пулсан та, майĕпен очеркран очерка куçма тытăннă. Вĕсем вара хăйсен илемлĕхне çухатса пынă, малтанласа хăйсем патне вулакансен чунне туртнă пулин те, халĕ кăмăл-туйăм вăйне пĕтĕмпе тенĕ пекех çухатнă. Çав вăхăтрах вĕсен цитата ролĕ те пулман: авторĕсене те пĕр-пĕринчен тепĕр чухне уйăрса илме май

килмен. Кашни хутĕнчех çĕнĕлле курăнма тăрăшса çуралнă пулин те, çав сăнарсем (тен, сăнар теме те юраман пулĕ вĕсене?) никама та илĕртме пултарайман: сăнар штамп пулса тăнă.

Н. Илпек очеркĕнче пачах урăхла. Акă, дивизи хаçачĕн командирĕ (Фокин çав каçхине Днепр леш енне каçайман, унăн суранĕ çĕнĕрен вĕрĕлнĕ, температури çĕкленнĕ) паром çинче, унпа пĕрле Ленинград хĕрĕ — Вера Голубь, вăл салтаксем патне иккĕмĕш хут вĕри яшкапа каçать. Виççĕмĕшĕ те пур — Александров лейтенант, вăл плацдарма снарядсем илсе пырать. Александрова редактор лайăх паллать: вăл унпа пĕр хуларанах, Шупашкартан, дивизире артснабженинче ĕçлет. Вĕсене пулăшма Фокин Андреев замполитрука янă.

Малтан паром питĕ хуллен пынă, çапах та ерипен малаллах куçнă. Нимĕçсем прожекторпа çутатса янă. Унччен те пулман, хамăр енчен харăс-харăссăн тупăсемпе персе илнĕ те, фашистсен прожекторĕ сӳнсе те ларнă, пирĕн парома фашистсем асăрхаса та юлайман. Анчах шыв çинчи лăпкăлăх вăраха пыман. "Сасартăк тăшман пулемечĕ пĕр виçеллĕ пусăмпа персе ячĕ. Ку ĕнтĕ — пирĕн еннелле, — çырать Илпек, — пире кĕтсе илеççĕ пулать. Пуç çийĕн вут çиппи тăсса карнăн туйăнать, шултра пульăсем хамăр тĕлтех шартлатса çурăлаççĕ. Çапах никама та тивеймест-ха. Тăшман çавăн йышши пулеметпа пени хăйне евĕр сигнал кăна иккен — тепĕр самантранах нимĕçсем темĕн чухлĕ тупăпа кĕрлеттере пуçларĕç. Паром хĕвел анăç çыран патнелле туртăнать. Тăшман снарячĕсем шыва ӳке-ӳке çурăлаççĕ. Вĕсем паром çине те килсе ӳкме пултараççĕ. Кунта вара пирĕн темĕн чухлĕ снаряд, граната, патрон, тĕрлĕрен минăсем... Александров лейтенант тăрăшнă ĕç пĕтĕмпех куç умĕнче. Çар хатĕрне вут хыпса илес пулсан, шыва тĕпĕ таранах кисретсе сирпĕтмелле".[26]

Акă мĕнле лару-тăрура каçать очерк авторĕ Днепр леш енне. Çав хушăра çар хаçатçи курни-тӳсни мĕн чухлĕ! Пĕри тепринчен хăрушăрах! Малтан çумрах ӳксе çурăлнă йĕтре çĕкленĕ сывлăш хăвачĕ ăна çапса шывалла сирпĕтсе антарать. Александров капитан та ун пекех

"тĕне кĕрет". Çапах та юхан шыв тытăнĕнчен ирĕке тухаççĕ вĕсем. Анчах çыранра каллех хăватлă "салютпа" кĕтсе илет вĕсене тăшман — нимĕçсем вĕсене улт кĕпçеллĕ миномечĕсемпе вĕçĕ-хĕррисĕр тĕве пуçлаççĕ. Пĕр хушă пеме чарăнсанах журналист кукленсе тапса сикет, малалла ыткăнать, унтан траншейăна персе анать. Пĕлет: 911-мĕш полк батальонĕ кунта тăрать. Анчах унăн командирĕ Евдокимов майор аманнă имĕш те, ун вырăнне вăхăтлăха Голоско капитан юлнă. Фашистсем иртнĕ кунсенче пирĕннисем çине хирĕçле атакăпа çинеçине çĕкленсе пăхнă. Атакисем пĕрре те ăнăçман. Тăван çĕр хăйĕн ывăлĕсене шанчăклăн хýтĕлет: хирсе кăларма хăтлан-ха окопри салтака — шăл витес çук!

Икĕ талăк ирттерет дивизи хаçачĕн редакторĕ плацдармра. Подразделенисенче пулчĕ, артиллеристсемпе минометчиксем патне çитрĕ, ытти фронтсенче çапăçу мĕнле пынине кала-кала кăтартрĕ. Халь ак ку енне тупăсем те каçрĕç, хамăр самолетсем кунсерен вĕçсе килсе фашистсем ăçтарах иккенне тĕрĕслеççĕ. Тата ик кунтан пирĕн салтаксем хускалса кайĕç те, кунти вăрçă Берлинра илтĕнсе тăтăр!

Паттăр салтаксем. Вĕсене пысăк шанчăк çупăрлать.

Редактор та кăмăллă: хаçачĕ валли унăн материал темиçе кĕсье пухăннă, çав вăхăтрах плацдармра пулса хăйĕн тивĕçне пурнăçланă. Çавна паттăрăн пурнăçланă вăл тесе çирĕппĕнех калама пулать. Каярахпа çĕнĕ хыпар килнĕ: плацдармри салтаксем тăшман окопĕсене йăлт аркатса тăкнă та халь ăнăçлăнах малалла кĕрсе пыма тытăннă. "Пирĕн енне тăшман снарячĕсем çитейми пулчĕç. Пуçланă çул ăнса пытăр".[27]

"Вăхăтăмăр виçеллĕ. Кулленхи ĕçе хĕрсе тытăнтăмăр", — тесе вĕçлет очеркне автор. Унăн произведенийĕнче штамплă сăмах çаврăнăшĕсем тупаймастăн. Совет салтакĕсем пĕрре пуçланнă хăватлă наступленине вăйлатса пырса Днепр урлă каçса малалла, Берлин еннелле çул тытса, вĕсем кунта мĕн чухлĕ паттăрлăх кăтартни çинчен вун-вун çар журналисчĕ çырса кăтартнă, çапах та Н.Илпек очеркне вĕсен хайлавĕсемпе пăтраштарса яраймастăн. Çав паттăрлăха кăтартма вăл тивĕçлĕ

геройсем тупнă, геройсене сăнарлама ытти писательсен чĕлхисенчен урăхларах чĕлхе, эпитетсемпе, метафорăсемпе, метонимисемпе, синекдохăсемпе, сăпатлантарусемпе пуян хăй ҫеҫ ҫыракан илемлĕ чĕлхепе усă курнă.

Наступлени вăхăтĕнче Днепр урлă салтаксем мĕнле каҫни ҫинчен ҫырса кăтартни чăваш прозинче тепре те пур, вăл — Александр Алган "Юлташпа юнашар" очеркĕ. Очеркăн тĕп геройĕсем — саперсем, вăрҫăри чи йывăр ĕҫсенчен пĕрисене тăвакансем. Ку очеркра та салтаксем Днепр урлă тăшманăн тăхлан ҫумăрĕ айĕнче каҫаççĕ, кунта та вĕсем аслă юхан шыв леш енче плацдарм йышăнаççĕ, фашистсемпе хаяррăн ҫапăҫаççĕ, мĕншĕн тесен пуриншĕн те паллă: нимĕҫсем совет ҫарĕсен наступленине Днепр патĕнче путлантарма палăртнă, ҫак аслă юхан шывăн тепĕр енне, вăл ахаль те чăнкă иккенне пăхмасăрах, ҫав тери тăрăшса тĕреклетнĕ, темиҫе рет траншея чавнă, дзотсемпе дотсем тунă, чи вăйлă ҫапăҫакан пехота, танк, артиллери чаҫĕсене вырнаҫтарса тухнă.

"— Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт ҫитрĕ! Украина часах пĕтĕмпех ирĕке тухĕ, — терĕ ҫамрăк офицер, строй умне тăрса, — фашизм тыткăнĕнчен хăтăлĕ... Пирĕн, саперсен, халĕ каҫ пулса ҫитиччен сулăсем ҫыхса хатĕрлемелле. Кашни отделени — пĕр сулă...

Днепр енчен нӳрĕ ҫил вĕрет. Ҫӳллĕ те тӳп-тӳрĕ сарă хыр тăррисем ерипен хумханаççĕ. Вăрмана чун кĕнĕн туйăнать. Унта та кунта команда панă сасăсем илтĕнеççĕ, машинăсем кăшкăртни, пуртă чанклатни, пăчкă юрлани янăраса тăрать, хутран-ситрен тупăсем сас парса илеççĕ — вăрман шавлать, кашлать..."[28]

Очеркра автор саперсене чылайăшне сăнласа кăтартать, ҫапах та писатель куҫĕ ытларах чухне икĕ салтак ҫинче чарăнать, вĕсем — Курганов тата Игнатьев. Пĕрремĕшĕ вырăс, вăрҫă ҫулне 1941 ҫулхи июнĕн 22-мĕшĕнчи вут-ҫулăмра пуҫланă; тепри — чăваш, фронта вăтам шкул вĕренсе пĕтернĕ хыççăн анчахрах килнĕ те йĕри-таврара иртсе пĕтми ҫар пулнăран тĕлĕнмеллипех тĕлĕнет. Курганов вăтам ҫула ҫитнĕ салтак, тĕреклĕ ҫан ҫурăмлă, сарлака хулпуҫҫиллĕ арҫын — темиҫе ҫĕр ҫух-

рăм кайсан та ывăнас çук пек, ним йывăрлăха пăхмасăр Днепр еннелле сулмаклăн утса пырать, пĕр вăхăтра, çамрăк салтак ĕшеннине кура, унăн кутамккине те илме тăрать. Виктор, типшĕмрех пӳ-силлĕ, сенкер куçлă çамрăк салтак, кутамккине пама килĕшмест, Курганов пек маттур утса пыма тăрăшать. Çав хушăрах, ывăннине Курганова систермесĕр, ĕмĕтленсе малалла пăхса шухăшлать: "Хăçан çитес-ши çав хыр вăрманĕ хĕррине? Кăшт лартса кантарĕччĕç..."

"Вăрман тупă сассипе уласа-кĕрлесе кайрĕ.

— Акă, çитрĕмĕр те, шăллăм, — терĕ Курганов, Виктор каллех унпа юнашар пулсан. — Ывăнмарăн-и?

— Çук.

— Суйма юрамасть, тусăм. Тĕрĕссине хăюллăн калас пулать. Тĕрĕслĕхпе хăюлăх — йĕкĕреш теççĕ. Ан ман çакна. Кам вĕрентрĕ тесен, хам пĕлетĕп, те".[29]

Салтаксене кăшт канăç çитсен, çавăнтах, вăхăта сая ямасăр, вĕсем хутаççисенчен винтовка тасатмалли хатĕрсем кăларнă, васкаса ĕçе тытăннă. Кайран вăхăт пулмĕ-ши вара, тесе шухăшласа илнĕ Игнатьев, ним тытса ним тума аптранă енне. Канасчĕ пăртак. Анчах командир ăна та винтовкине тасаттарать, хăйĕнне те: ĕçлени çыншăн пулсан та, вĕренни хăвăншăн пулĕ.

Игнатьев Курганова шырама тытăннă. Лешĕ пĕр пысăк тунката хыçне тăсăлса выртнă та шав Днепр çинелле пăхать.

Днепр... Илемлĕ те эсĕ, хăрушă та. Сан сылтăм çыранна халĕ тăшман чавкаласа пĕтернĕ, çавăнпа хаяррăн, хăрушшăн курăнатăн эс. Вăрçăчченхи кунсенче, ылтăн хĕвел канма ларас умĕн сан çутă хумусене ăшшăн чуп туса хăварнă вăхăтра, мĕн тери ырă пулнăтăр çак çыранта пулă тытса тухнă хыççăн кăвайт умĕнче туссемпе калаçса ларма! Сан тăрăх шурă пăрахутсем кăшкăрта-кăшкăрта иртнине çынсем савăнса курса тăнă, палуба çинчисем вĕсене алă сулса саламланă. Савăнăçлă, телейлĕ, ырă кăмăллă çынсем!.. Халĕ те эпир ырă кăмăллă. Анчах çутăпа хăват паракан пысăк ГЭСа вăрçă шыва путарнă, акăш пек шурă пăрахутсене çунтарса янă. Çавна пула ĕнтĕ эпир çак çырана уçăлса çӳреме е пулă

тытма килмен. Умри юхан шыв çак самантра пирĕнпе тăшман хушшинче ассăн сывласа юхать. Пулăш пире, ватă Днепр!..

Çапларах шухăшласа ларать Виктор Игнатьев çыр хĕрринчи хăва тĕмĕсем хушшинче. Писатель лайăх пĕлет: вăрçă ĕçĕ çăмăл ĕç мар, йывăр та хăрушă ĕç. Ăна ăнăçлăн тума та вĕренмелле. Çавăнпа ĕнтĕ вăл кăшт маларах юлташĕсене Игнатьевран кулнăшăн: «Хура-шур курнă салтак çамрăккинчен кулмасть,» — тесе хурать. Игнатьев командир ăна хаярăн курăннине хирĕç вара çапла ăнлантарать: "Вăт ку сăмаху тĕрĕс пулмарĕ вара санăн. Кирлĕ чухне, калăпăр, хăрушă вăхăтра, йăвашшăн, ачашшăн чĕвĕлтетсе тăракан командира салтаксем юратмаççĕ. Унашкал командирпа — çĕнтерме мар, вилме кăна".[30]

Виктор малтанласа вăрçă çине романтикларах пăхать-ха, хăйне командир "ывăлăм" тесе чĕннĕшĕн те кӳренме пăхать: "Мана ача вырăнне, ним пĕлмен çын вырăнне хурать", анчах командир "ăçтисем" тесе ыйтни унăн кăмăлне кăшт çеç çемçетет, ара, Федько (командир хушамачĕ çапла) Днепропетровск хулинчен-çке, вăл салтаксемпе пĕрле малтан Атăл патне çитиччен чакнă, кайран Сталинграда хӳтĕлесе çапăçнă. Апла тăк, Сталинград фашистсен аллине лекменнинче унăн тӳпи те пур.

— Вăй парччĕ хăвăн ывăлусене, савнă асаттемĕр! — пăшăлтатса илнĕ Федько. Виктор ун еннелле çаврăнса пăхнă. Командир та унăн шухăшнех калать. Апла пурте — çыран хĕрринче чĕнмесĕр ларакан салтаксем те пĕр шухăшах шухăшлаççĕ эппин. Çакă Виктор чĕрине вĕрилентерсе янă, унăн хăйне паян кăштах ятланă командира ăшă сăмах калас килнĕ. Курганова шыраса тупсан вара ăна та малтанхинчен урăхларах пăхнă, сăмахĕсене тимлесерех итленĕ.

— Ыйху килмест-и? — ыйтнă вăл Виктора курсан. — Чăтас пулать. Пĕринче виçĕ талăк куç хупса курмарăм çапла. Çĕрле походра пултăмăр, утнă май çеç вара кăшт тĕлĕркелесе куртăм. Анчах урасем çултан таçталла пăрăнса кĕнĕ те, кĕçех аташса кайман... Тăшмана хăвала-

са пынă чухне çапла вăл, çывăрмастăн. Анчах тарăхмастăн та. Савăнса пыратăн. Малалла каятпăр-çке-ха!

Салтак сăмахĕсем çирĕп, ĕненмелле илтĕнеççĕ. Командир пирки те акă еплерех калать вăл:

— Пысăк та вăйлă çыннăн кăмăлĕ ырă пулать. Паллах, çӳллисем хушшинче те айвантараххисем, лутрисем хушшинче те пысăк ăслă, ырă кăмăллисем пулаççĕ. Ман сăмахăм — саккун мар. Анчах эпĕ çапла шухăшлатăп: пысăк та вăйлă, ăслă çынсен хăйсене кирли яланах çителĕклĕ — ĕçлеме вăйĕ пур, тăшмантан хăрас йăли çук. Тапăн-ха ăна пырса! Ман шухăшпа, çĕршывсем те çавнашкалах. Мĕн пысăкăш çĕршыв пирĕн, мĕн чухлĕ халăх пурăнать унта! Пуянлăх виçесĕр-виçесĕр, вăй-хăват — чикĕсĕр. Куртăн-и паян аслă çула? Ку пĕр çул çеç, тăванăм. Мĕн чухлĕ пирĕн ун пек çулсем! Çапла, хăватлă эпир. Анчах хăçан эпир хамăр тапăнни пур? Вуланă-и, курнă-и эсĕ вырăс халăхĕ ытти халăхсем тĕлĕшпе усал пулнине? Хăйĕн çине килсе тапăнсан вара, унран чăтăмли те, унтан вăйли те çук. Эсĕ ун çинчен вулатăн та, халĕ ху куçупах куратăн акă... Çук, Федько усал кăмăллă пулма пултараймасть. Чăн-чăн командир...

— Сулă çине! — çывăхрах Федько сасси илтĕнсе кайнă.

Вăрман, сасартăк ыйхăран вăраннă пек, шавласа кĕрлеме пуçланă.

— Тăван çĕршывшăн!

Çак самантра пĕр пĕчĕк тупă, икĕ пулемет, пĕр взвода яхăн салтак вырнаçнă, минăсем хунă сулă, юхан шывăн сулахай çыранĕнчен уйрăлса, сылтăм çыран еннелле шăва пуçларĕ.

Писатель Виктора хăйĕн куçĕнчен Днепр урлă ишекен сулă çинче те вĕçертмест. Тĕнче пĕтет пуль, ахăр, тет Виктор, мăшăлтатса кĕсменпе ĕçленĕ май, кăшт сывлăш çавăрса ярса. Курганов, кăна илтсен, çамрăк салтака çапла тавăрать: «Тĕнче пĕтни мар, тĕнче çĕнĕрен чĕрĕлни пулать ку. Тăшман варалана çĕр вут-çулăмсăр тасалмасть, тăванăм. Ĕçле кĕсменӳпе хăвăртрах!»

Викторăн хулĕ ыратса кайнă. Çамки йĕп-йĕпе. Алă тупанĕ сурать, пилĕкĕ касса ыратать. Анчах вăл йывăрлăх

çинчен асăнасшăн мар. Пĕтĕм çамрăк вăй-хăватне пухса, шăлне çыртса, вăл пĕр чарăнми малалла ишет.

"Игнатьев! Маттур, тата хытăрах!" — илтĕнет командир сасси. Ун сăмахĕ ăна тата ытларах вăй парать. Курганов лăпкăн та пĕр тикĕссĕн ĕçлет, анчах вăл çак енне ларман пулсан, пурне те, пурне те йывăр килнĕ пулĕччĕ. Вăл, паçăр хăйăр ашса утнă чухнехи пекех, кунта та хăйне шанчăклăн тыткалать. "Телейлĕ çын", — шухăшлать Виктор, хăй те ун пек пулма тăрăшса.

Çывăх, çывăх... Умри çырана ĕнтĕ лăпкăнах пырса перĕнсе, лăпкăнах тухса тăрас пек туйăнать. Çакă Виктора савăнтарчĕ, вăй кĕртрĕ. Вăл, ывăннине манса кайса, çăмăллăн ĕçле пуçларĕ: "Паллах, артиллери çакăн пек хĕм панă хыççăн, çыранти пĕр тăшман пуçĕ те сывă юлм.. пултарайман"... Çапла çеç шухăшласа илнĕччĕ вăл.

Инçе те мар капан пек хум капланса хăпарнă та, сулă хăяккăн тӳннĕ пек туйăннă, кăкăра сивĕ килсе çапнă. Виктор кĕçех шыва чăмман. Каярахпа вăл, тепĕр снаряд сулă çумнех килсе ӳксен, шываллах вăркăннă, çиеле тухса, сывлăш çавăрса илнĕ кăна, сасартăк вăйлă хум килсе çапнă та ăна вак чуллă, хăйăрлă çырана кăларса ывăтнă.

Кун пек çухатусăр пулас çуккине туяççĕ-ха, пурпĕр малаллах туртăнаççĕ. Часах пулемета алă вĕççĕн йăтнă командира уринчен хытă амантаççĕ; вăл, пулеметне хăйăр çине антарса, хăй те çавăнтах тĕшĕрĕлсе ӳкнĕ. Унтан пуля сылтăм ури витĕрех тухса кайнине пĕлсен, вăл хăйĕн аллипе хăй шăнăр çинче çакăнса тăракан урине чĕркуççинчен аяларах çĕçĕпе касса пăрахнă. Нумай та вăхăт иртмен, санитар чупса пырса Федькона урăх çĕрелле çĕклесе кайнă. Командир вырăнне Курганов йышăннă.

Автор Виктора манмасть-ха. Çамрăк салтак артиллеристсем хăйсен тупписене çырана антарнине, пулеметчиксем малалла чупса кайса куçран çухалнине курать. Хăрани пачах çук халĕ унăн. Пĕтĕм сылтăм çыран ура! кăшкăрнипе, пулеметсемпе автоматсем шатăртатнипе, тупăсем хаярăн ухлатнипе, снарядсем шăхăрса вĕçнипе кĕрлесе янăра пуçларĕ. Саперсем чăнкă çыран хӳттине пуçтарăнса тăчĕç.

"Епле-ха вĕсем çак çыранта та тытăнса тăраймарĕç? Ман шухăшпа, Днепр пек юхан шыв урлă каçма... ай-ай-ай! Сарлака! Вăйлă юхать тата! — терĕ Виктор.

— Ним тĕлĕнмелли те çук, тăванăм, — тавăрчĕ Курганов, — тара-тара сехри хăпнă вĕсен, тискер çичĕ ютсен".[31]

Днепр урлă хывнă пысăк кĕпере хĕрĕх пĕрмĕш çулта çĕмĕрнĕ. Çав кĕпертен шоссе çулĕ каять. Пĕртен пĕр çул. Ăна куçран çухатма юрамасть. Курганов ертсе килнĕ саперсен отделенийĕ çул çине темиçе тĕлте те минăсем хунă. Вĕсемпе пĕрле Виктор та пĕр танах ĕçленĕ. Саперсем çултан инçех мар купаланă дамба айккине вырнаçнă та тавралăха куç илми сăнаççĕ, шăппăн та пулин шӳтлеме чарăнмаççĕ. "Темле йывăрлăха та шӳт туса ирттерсе яраççĕ", — шухăшларĕ Виктор, вĕсем еннелле ăшă куçпа пăхса илсе.

Курганов та çавăнтах. Сасси çирĕп, ĕненмелле: "Курск пĕкки тăшмансемшĕн акă мĕн пулса тăчĕ, — малалла кала пуçларĕ Курганов, лăпкăн та витĕмлĕн тухакан сассипе ыттисене чарса. — Малтан вĕсем çав пĕкĕрен ункă тăвасшăн пулчĕç. Пирĕн мăя тăхăнтартма. Авкалама хăтланса пăхрĕç, анчах эпир пытăмăр та — вĕренне касса татрăмăр. Хайхисем Днепр урлах ыткăнса вĕçсе ӳкрĕç. Сталинград хыççăн хавшарĕç вĕсем. Ăнлантăн-и, Игнатьев шăллăм? Çапла пулса тухрĕ. Халь пĕккине те хамăр аватпăр, ункине хамăр çыхатпăр..."

Виктор хăйне салтак пекех тытать ĕнтĕ, салтакла шухăшлать. Дамба çинче ыттисемпе юнашар сыхă выртнă чухне амăшне аса илет, пĕрле вăтам шкултан вĕренсе тухнă кăвак куçлă Тамарăна та. Тен, кам пĕлет, вăл та фронтра? Санитарка пулма ĕмĕтленетчĕ. Пĕрле выляса ӳснĕ, пĕрле вĕреннĕ, мĕншĕн пĕрре те "юрататăп" тесе калайман-ши ăна?.. Мĕнле ыррăн вĕрилентерсе илет çак шухăш çамрăк чĕрене!

"Çывăх çынсен чĕри таппине таçта инçетре чунтан юратса сыхлани — ку вăл калама çук пысăк телей иккенне, çĕршыва мĕншĕн аннепе танлаштарнине Виктор кĕçĕр малтанхи хут чĕрипе туйса илчĕ".[32]

Лăпкăлăх нумай пымасть, çакна халĕ Игнатьев та

ыттисем пекех лайăх туякан пулса çитнĕ. Автор очеркри пур геройсене те кăмăллать, анчах вулакантан пытарма çук: вăл çапах та, малтанхи пекех, Викторпа Курганов сăнарĕсемпе ытларах интересленет. Берлина çитме инçе-ха, çав вăрăм çул çинче темĕн те пĕр курма-тӳсме тивĕ-ха. Курганов чăтĕ-ха пулас походсене, анчах Игнатьев йăвашрах пулмĕ-ши? Çак ыйтăва очеркри тепĕр ӳкерчĕк лайăх кăтартса парать. Нимĕçсем контратакăна çĕкленеççĕ. Танксем! Вĕсем Днепр еннелле хăрушшăн çывхараççĕ — вĕсен айне пулас мар тесе, хăть выртнă çĕртен тăрса тар... Анчах саперсем ниçталла та хускалмаççĕ, тăшман танкĕсем минăсем çине пырса кĕрсе шартлатса сирпĕнме, çунма тытăнасса кĕтеççĕ. Минăсем лартнă çĕре Виктор та хутшăннă, вăл та тăшман танкĕсенчен куçне вĕçертмест. "Нимĕç саперĕсем пирĕн минăсене кăларса илмерĕç-ши? Куç хупми сăнарăмăр-çке. Куç илми тинкерсе выртрăмăр. Эпĕ тĕлĕрсе илнĕ вăхăтра пулмарĕ-ши ку? Иккĕмĕш танк та иртсе пырать"...

Çак самантра шарт! в-в-в! янраса кайрĕ таврара. Танк, элес-мелес хăяккăн тайăлса, тăпах чарăнса ларчĕ. Çав вăхăтрах виççĕмĕш танкĕ, минăсем тĕлне кĕрсе çитейнĕскер, йăванса кайрĕ, чи малтине артиллеристсем тивертрĕç, кайри танксем каялла чакма тытăнчĕç, анчах вĕсене халĕ тупăсем тĕл пеме тытăннипе ниçталла пăркаланма та пулмарĕ, вĕсенчен пĕрин хыççăн тепри хура тĕтĕм мăкăрлантарма пуçларĕç.

Курганов савăнăçлăн пĕлтерчĕ: "Эпир шухăшланă пек пулчĕ! Каçса каяймарĕç!»

Анчах Виктор Игнатьев куншăн хĕпĕртеме те ĕлкĕреймерĕ, танксем хыççăн Днепр еннелле нимĕç салтакĕсем кюветсем тăрăх пĕшкĕнсе чупа-чупа килнине курах кайрĕ. Вăл ун çинчен никама та каласа ĕлкĕреймерĕ, пӳрнипе çеç тăсса кăтартрĕ. Çав вăхăтрах пĕр хĕринчи хамăр пулемет çавăнталла пеме те тытăнчĕ. Унтан такам пăшалне çӳлелле çĕклерĕ те "Малалла!" тесе кăшкăрса ячĕ. Ун хыççăн Виктор та сиксе тăрса юлташĕсемпе пĕрле малалла ыткăнчĕ.

Çапла хĕрӳ лару-тăрура çуралать те ĕнтĕ чăн-чăн

салтак. Нимĕҫсенчен тĕрĕсрех шухăшлакан, командир приказĕсене тĕрĕс ăнланса вăхăтра пурнăҫлакан, хăйне тăшманран вăр-вартарах тытса пăшалĕпе тĕллерех перекен, Тăван ҫĕршыва чунтан юратса уншăн пурнăҫне пама хатĕр салтак. Виктор Игнатьев чăваш каччи шăпах ҫавсенчен пĕри ĕнтĕ.

... Отделени аслă юхан шыв хĕрринелле утать. Тăшман салтакĕсем пĕтнĕ. Минăсене кăларнă, ҫул уҫă. Викторшăн ҫапах та ку ăнланмаллах мар-ха. Мĕншĕн малалла мар? Курганов ун шухăшне сиснĕ пекех: "Халĕ Днепр урлă кĕпер хыватпăр, — терĕ. — Пĕтĕм бригадăпа пĕрле. Фашистсем тек ан та асăнччăр пирĕн Днепр ҫинчен".

Вăл ҫав хушăрах ҫамрăк юлташне хавхалантарса илмеллине манмасть: "Маттур! Эсĕ тăшмана вăхăтра курман пулсан, йывăр килетчĕ пире. Тавтапуҫ сана, Витя".

Пĕтĕм отделени Кургановпа Игнатьĕв тавра пуҫтарăннă. Ҫывăрманнипе тĕркеленнĕ, хуралнă пит-куҫĕсем пурин те савăнăҫлăн ҫиҫеҫҫĕ. Вĕсем ҫĕнтерчĕҫ! Ҫак туйăмран ырри тата мĕн пур-ши?

"Лайăх ҫапăҫрăн, — терĕ Курганов хăйпе юнашар хăлаҫланса утакан Игнатьев кăмăлне хытăрах ҫĕклесе. — Шывра путмарăн, вутра ҫунмарăн. Тата ҫакна асту: юлташ яланах юлташла юнашар пулмалла. Эпир яланах пĕр тăван пулнă. Ҫак тăванлăха ҫухатма юрамасть!"[33]

Вĕсене хирĕҫ тупăсем, ҫăмăл танксем, ҫуран ҫарсем ирте-ирте каяҫҫĕ. Вĕсене хирĕҫех, паттăр ҫарсене хĕвел анăҫнелле ырă сунса ăсатнă пек, Днепр урлă хĕвел хĕрелсе хăпарать...

Александр Алган "Виҫҫĕн", "Ҫулсем-йĕрсем", "Кĕрешӳ пырать" очеркĕсем те вăрҫă ҫулĕсемпе вăрҫă паттăрĕсене тĕрĕс, ӳстермесĕр, юрăхсăр шăв-шавсăр кăтартаҫҫĕ. Ку енчен унăн "Малтанхи кун" очеркĕ уйрăмах палăрса тăрать. Хайлавра пирĕн салтаксем вăрҫăн пĕрремĕш кунне епле ирттернине сăнласа кăтартнă. Очерк авторĕпе калавҫă унта пĕр ҫын, ҫавăнпа писатель-очеркист сăмахĕсем сулмаклăн, ĕненмелле илтĕнеҫҫĕ. Тăшманăн миҫе атакине (фашистсен тĕп вăйĕсемпех тĕл пулайман-ха вĕсем) сирсе ямаҫҫĕ-ши ҫав кун, тĕ-

рĕссипе, вăрçăн хаяр хăрушлăхне пĕтĕмпе туйса та илеймен-ха вĕсем. Пĕр атакăна сирсе янă хыççăн, тепри пуçланиччен, кулса-шӳтлесе те илеççĕ. Атака мĕн вăхăт хушши пынине пĕлместĕп, тет пилĕккĕмĕшне путлантарнă хыççăн автор-калавçă, çапах та вăл мана питĕ хăвăрт иртсе кайнăн туйăнчĕ. Тупăсемпе миномĕтсен сасси шăпланман-ха, пулеметсемпе винтовкăсем те вăхăчĕ-вăхăчĕпе шатăртатса, кĕрĕслетсе илеççĕ, анчах пирĕн умра фашистсем çук ĕнтĕ, снарядсемпе пульăсем инçете вĕçеççĕ. Эпĕ, çамка çинчи тара шăлса, йĕри-тавра çаврăнса пăхатăп: манран инçех те мар пĕр боец, паçăр манпа калаçнăскер, бруствер çинче аллисене тăсса, пуçĕпе çĕрелле ӳпĕнсе выртать. Çумĕнче пăшалĕ. Ахлатнăйынăшнă сасă илтĕне-илтĕне каять. Чĕре чăмăртанса ларать. Часах ăна санитарсем лазарет еннелле çĕклесе каяççĕ.

Салтаксем тепĕр атака пуçланиччен калаçса та пулин лăпланма тăрăшаççĕ. "Ну, çунтартăмăр та!" — терĕ Юрков, çамкипе пит çăмартине çаннипе шăлса. Анчах капла тунипе пичĕ тата ытларах хуралса кайрĕ. Çакна хăй те сисрĕ пулас вăл, кĕсйинче тем шырама тытăнчĕ, тутăр туртса кăларчĕ, пăхкаларĕ — хуралнă. Вара:

— Юрĕ-çке, — тесе мăкăртатса илчĕ. Унтан:

— Ну, патăмăр та! — терĕ тепĕр хут. Хăй çумĕнче шурă шăлне кăтартса, куçне çиçтерсе тăракан Козленкова хул пуççинчен çапса илчĕ:

— Маттур та иккен эсĕ! Эсĕ пулман пулсан... Вăт сана "Качака путекки" те! Хушаматна улăштармалла санăн, "Козлов" ту хăть.

Козленков каллех, мирлĕ вăхăтри пек, çилленессе кĕтеççĕ салтаксем. Анчах Козленков, хăйĕн юратнă тăванне ыталанă пек, Юркова пилĕкĕнчен çупăрларĕ те: "Хĕр мар, тупата, чуп туса илеттĕмех сана! — терĕ кулакула. — Санпа нихçан та, ниçта та хăрас-шикленес çук эпĕ. Иксĕмĕр пулсан — çĕнтермеллех! Фашиста мар, вун ик майракалла шуйттана та пуç хĕрлĕ çавăрса çапмалла".

Кун хыççăн пурте ахăлтатса кулса янă. Юрковпа Козленковран е вĕсен кулăшла сăмахĕсенчен мар, ун чухне вĕсем мирлешнипе, тин иртсе кайнă хăрушă çапăçура уйрăлми юлташсем пулса тăнăран савăнчĕç.

Хăйсем сисрĕç-ши çакна е чухлаймарĕç-ши? Çук, сисмерĕç, чухлаймарĕç пулас, тет автор-калавçă. Туслăх, пысăк сăлтав пулсан, самантрах вăранакан туйăм иккен вăл. Мирлĕ чухне хирĕçлекелесе илни чунра тарăн йĕр хăвармасть. Каярахпа ăна асăнсан та кулкаласа çеç асăнатăн. Юлташна çапăçура пăрахрăн пулсан, вăл — ĕмĕр манми, каçарми хирĕçӳ кăна та мар, çав тери пысăк айăп, чĕрере тавăрас кăмăла хускатакан айăп. Юрковпа Козленкова пĕр хăйсен шăпи кăна мар, пурсăмăр та пĕр шăпа умĕнче — хăрушлăхпа тивĕçлĕх умĕнче тăни туслаштарчĕ. Мĕн кĕтет-ши пире пурсăмăра та малашнехи кунсенче, тен, малашнехи сехетсенчех, тесе шухăшлать герой-калавçă.

Тĕрĕсех шухăшланă. Нумай та вăхăт иртмест, фашистсен улттăмĕш атаки пуçланать. Бомбăсем тăкăнаççĕ те тăкăнаççĕ. Зенитка сасси илтĕнмест. Пирĕн салтаксем хыçĕнчи яла вĕçрен вĕçех, талккишпех вут хыпса илнĕ. Çулăма ирĕк! Шăрпăк пек типсе кайнă пĕренесем шартлата-шартлата çунаççĕ. Пушара сӳнтерекен çук. Вăрçă...

Ку мĕскер тата хир тăрăх совет салтакĕсем еннелле кĕрлесе килекенни — тумхахсем урлă пысăк тимĕр шапа пек сулланса каçаканни? Танк. Виçĕ танк. Унтан тăшман енченех тупăсем пеме пуçлаççĕ. Салтаксем хальхи çапăçусем мĕнле иккенне ăнкарса илме пуçланă ĕнтĕ — авиаци, артиллери, танксем, пехота... Пĕр çын пуçне мĕн чухлĕ тимĕр-хурçă! Ку çапăçу нумая пымарĕ. Тăшман енчен пăшал сасси часах илтĕнми пулчĕ. Пăхаççĕ салтаксем — икĕ танкĕ тĕтĕм мăкăрлантарса ларать; виççĕмĕшĕ, тусан кăларса, каялла вĕçтерет. Акă, ăна та пĕр снаряд пит меллĕн пырса çапăнчĕ пулас та, вăл — çав йĕрĕнчĕк пысăк тимĕр шапа, тăпах чарăнса ларчĕ. Нимĕç салтакĕсем, аллисене саркаласа, çĕре пуçпа тирĕнчĕç, тĕрĕс-тĕкел юлнисем каялла тарма тытăнчĕç.

Пирĕн салтаксем командирсем хыççăн траншейăран вĕлт те вĕлт! сиксе тухаççĕ. Ĕнтĕ пĕтĕм уй-хир "Урра-а-а!" тесе кăшкăрнипе кĕрлесе янăраса тăрать.

Алка очеркĕнче уйăм паттăрсене те сăнласа кăтартнă. Çапах та авторăн тĕп тĕллевĕ — салтаксене уй-

рăммăн кăтартасси мар, вĕсен вăйĕ атака хыççăн атакăна сирсе янă май пĕрлешсе-пĕрлешсе пырса пĕр вăйлă та çирĕп чăмăра пăчăртанса пынине сăнласа парасси. Ку тĕллеве очеркист кăшкăрашусемпе, салтаксен паттăрлăхне каçса кайса мухтанипе пурнăçламасть. Çав хушăрах вăл Хĕрлĕ Çар салтакĕсем тăшманпа куçа-куçăн тĕл пулса вĕсемпе çапăçма вĕренсе пынине васкамасăр, ĕненмелле кăтартса парать. Ирхине вĕсем пĕрремĕш тытăçура фашистсен вăйне хаклама та пĕлсех каймаççĕха. Кăнтăрла тĕлнелле тăшман атакине темиçе хут сирсе янă хыççăн хăйсен тăван çĕрĕ çинче çирĕпрех, тăшманран хăрамасăр тăма пултарнине чунĕсемпе ăнланма, ĕненме тытăнаççĕ. Атакăна хăйсем çĕкленнĕ хыççăн вĕсен хавхалану çуралса аталанма, çĕкленме тытăнать, куçĕсем те йĕри-таврара мĕн-мĕн пулса иртнине çивĕчреххĕн курма, сăнама тытăнаççĕ.

"Акă ăçта вăл вăй! Мĕн чухлĕ кăна салтак атти таптамарĕ пуль паян иртенпе çакă çĕр лаптăкне, ун çине мĕн чухлĕ вĕри тимĕр тăкăнмарĕ пулĕ, мĕн чухлĕ бомба, снаряд ăна чавкаласа пĕтермерĕ пулĕ — çынсем çапах та юлнă, çук, юлнă çеç те мар, тем таранччен чăтса, вăй-халне те сыхласа хăварнă. Ак пĕтĕм батальон, хĕсĕк траншейăран аслă хир ирĕкне тухса, кун каçа тӳсме çук тарăхнипе ӳссе кайнă, çивĕчленнĕ вăйне туйса, курайми усал тăшмана хирĕç контратакăна хăюллăн çĕкленчĕ. Вăл хăй хăвалать ĕнтĕ тăшмана! Çак туйăм пирĕн кăмăла çĕклентерсе ярать, ал-урана, чĕрене вăй-хăват парать. Мĕн пек пысăк телей вăл ху çĕнтерсе пыни!"[34]

Атакăра Малинин вилет. Поликарпов аманать. Унăн хулне пуля витĕрех шăтарса кайнă. «Ăçта амантрĕç?» — ыйтаççĕ салтаксем, суранне çыхнă май. «Контратака тытăнсанах,» — тавăрать Поликарпов. «Епле туймарăн-ха апла ху аманнине, кунта çитиех епле килтĕн?» — татах ыйтаççĕ салтаксем.

Поликарпов хуравĕнчен тепĕр чухне кулатчĕç те пулĕ салтаксем, ăна ĕненменнисем те тупăнатчĕç-и, тен. Халĕ вара вăл "вăхăт пулмарĕ, сисмерĕм" тенинчен никам тĕлĕнме те, кулма та шутламасть. Ун вырăнĕнче пулсан, нумайăшĕ ун пекех хуравланă пулĕччĕ.

Вĕсене, урăх çĕре çитсе, хăйсен ĕçне — саперсен ĕçне тума хушнă, çавăнпа вĕсем, ку вырăнтан тухса, каялла утаççĕ. Кунĕпе çапăçса ирттернипе яланлăхах асра юлмалли вырăнтан, çавăн пекех урăх батальонри пĕрле юн тăкнă, тертленнĕ, пĕрле çĕнтернĕ боецсенчен уйрăлса кайма та шел вĕсене.

Каç пулса çитнĕ. Вăрçăн малтанхи каçĕ. Ăçта пăхнă унта — малта, хыçалта, сылтăмра та сулахайра — пĕлĕте çулăм карса илнĕ. Çӳлтен-çӳлтен, хĕвел анăçнелле те, хĕвел тухăçнелле те самолетсем пĕр кĕрлесе, пĕр кăлтăртатнă сасă кăларса вĕçсе иртеççĕ. Вĕсем пысăк хуласем, станцăсем çине бомбăсем тăкма васкаççĕ. Çĕр çинче, çулсем тăрăх, пĕр чарăнми шăв-шав тăрать. Çулсемпе танксем, автомашинăсем, тупăсем, урапасем иртеççĕ. Вĕсем ыран çак вырăнтах хĕрӳллĕ çапăçусем пуласса пĕлтереççĕ. Çак вырăнта кăна-ши?..

Çунакан ял витĕр саперсене хирĕç çĕнĕ подразделенисем иртеççĕ. Вĕсем хăйсен вырăнне çитме васкаççĕ, çапах та саперсем енне пăхаççĕ те, хуралса, çуркаланса пĕтнĕскерсенчен, ывăннă питсенчен тĕлĕнсе илни сисĕнет. Иртсе пĕтми салтаксем... Ку саперсене савăнтарать. Наçилкке çинче выртакан Поликарпов чăтаймасăр тăрса ларнă, аманнăскерне çĕнĕ вăй-хал кĕрсе кайнă, çумĕнчен иртсе пыракан салтаксене сăмах хушмасăр чăтаймасть вăл: «Пĕри те ан хăрăр! Фашистсем хăйсем хăравçă вĕсем. Эпир кăтартрăмăр вĕсене паян. Пирĕн пек çапăçăр. Хăюллăн çапăçăр. Пĕри те ан хăрăр!..» Çак сăмахсене Поликарпов мухтанса мар, вĕрентсе те мар, хăйне паттăрла кăтартас тесе те мар, хаяр тăшмана хирĕç каякан салтаксене хавхалантарас, вĕсен кăмăл-туйăмне кăштах та пулин çĕклентерес шутпа калать. Васкаканнисем чĕнмеççĕ, Поликарпов тепĕр подразделени умĕнче те çак сăмахсенех хĕрӳленсе каласан, пĕри пурин ячĕпе те çапла каласа иртсе каять: «Ан иккĕлен, юлташ. Эпир — хăракан йышшисем мар!»

Çакăн хыççăн хăйне ялан шăп та чĕнмесĕр тытакан Усанов хушаматлă боец отделени командирне (вăлах калавçă) çапларах хушса хурать: "Пĕлетĕн-и? Хам та чухлаймастăп, тем пулчĕ, калама та аван мар: хăрарăм

пулмалла. Çур Европăна çĕнтерсе тухнă-çке-ха çав ирсĕрсем. Çирĕп тăтăмăр та — чĕтрене ерчĕç, çапрăмăр та — чикеленсе кайрĕç. Ним чухлĕ те хăрамалли çук иккен. Чăн каланăччĕ комиссар: кӳпĕннĕ мул хуçисенчен хăраса пурăнсан, çĕнĕ тĕнче çĕнтерес çук тесе. Кунта та çавăн пекех пулса тухрĕ пирĕн паян.

"Юрковпа Козленков юнашар утаççĕ, лейтенант малта пырать. Саперсем çапăçу мĕн иккенне пĕлеççĕ ĕнтĕ. Çавăнпа çĕр çине хăюллăн пусаççĕ". Çапла вĕçленет А. Алга очеркĕ. Писатель-очеркист, пĕрремĕш кунах вăрçă мĕнлереххине тӳссе курнăскер, вăл хăрушă та хаяр пуласса, тăшмана хирĕç чăн-чăн халăх вăрçи пуçланасса систерет. Унашкал вăрçăра вара фашистсене хирĕç çĕкленнĕ халăх нихçан та тăшмана парăнас çук.

Вăрçă çулĕсенче илемлĕ очеркпа пĕрлех фронтсенче, малти окопсенче çар корреспонденцийĕ çырасси те питĕ анлă сарăлнă. Илемлĕ литература жанрĕсемпе пĕрлех писательсем корреспонденци фронтри ĕçсене, малти окопсенчи салтаксен пурнăçне, кĕрешĕвне, шухăш-туйăмне хăвăрт, кая юлмасăр çырса кăтартма пулăшакан жанр пулнине аван ăнланнă, мĕншĕн тесен фронтри пурнăçа хăйсем те салтаксемпе пĕрлех тӳссе ирттернĕ. Вĕсем те боецсемех пулнă, тăшманпа çапăçакан салтаксен çăмăл мар пурнăçĕпех пурăннă, корреспонденцийĕсемпе репортажĕсенче хăйсем мĕн курнине, мĕн тӳснине чĕрисем витĕр кăларса сăнланă. Вăрçă геройĕсен сăнарĕсене ытларах портретлă очерксенче кăтартса пама тăрăшнă. Çавăн пекех ку çулсенче дневник жанрĕ те анлă сарăлать. Çакна палăртмасăр çук: очерк жанрĕн тĕсĕсене те, ун чухне вĕсем пĕр-пĕринчен мĕнпе уйрăлса тăнине те тĕп-тĕрĕс кăтартса пама май килмен. Событисем çинчен çырнă очерксенчех час-часах геройсен литература тулли портречĕсене курма май пулнă. Çар корреспонденцийĕнче вара событисем çинчен çырнă очерксен е очерк-портретсен паллă енĕсемех самай пысăк вырăн йышăннă. Çавăнпа Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи тапхăрĕнче çырнă тĕрлĕ жанрлă очерксене литература тĕпчевçисем палăртнă пек ниепле те пĕр-пĕрин-

чен уйăрса тишкерме çук. Çавăн пекех ун чухнехи çулсен публицистикине те илемлĕ очерксенчен уйăрма йывăр. Мĕншĕн тесен илемлĕ публицистика илемлĕ очеркăн уйрăлми пайĕ пулса тăрать, илемлĕ очеркăн идейăллă пĕлтерĕшĕ нумай чухне темăна публицистика меслечĕсемпе епле уçса панин шайĕпе тачă çыхăннă. "Искусство, — тесе çырнă В. Белинский, — хăйĕн ку е леш чикки патнелле çывхарса пынă май хăйĕн тупсăмĕнчен ерипен мĕн те пулин çухатать, çав вăхăтрах хăй мĕнпе чикĕленнин тупсăмĕн пайне йышăнать, çавна пула ĕнтĕ икĕ пая уйăракан чикĕ вырăнне икĕ енне те мирлештерсе пĕрлештерекен текстлă вырăн çуралать".[35]

Илемлĕ очеркра публицистика енĕсем самаях пулни унăн илемлĕхне нимĕн чухлĕ те чакармасть, пурнăç ыйтнине тивĕçтерекен жанрăн хăйне евĕрлĕ паллă енĕ пулнă май, Чернышевский каланă пек, çав жанр "пурнăçра çынна кăсăклантараканни мĕн пур, çавсене пурне те сăнласа кăтартма тивĕç".[36]

Вăрçă çулĕсенчи очерксемпе паллашнă чухне М. Горький "Колхозник" журналта пичетленнĕ очерксенчен пĕрин çинчен каланă сăмахсем аса килеççĕ. Пĕчĕк çеç заметкăрах пирĕн литературăшăн, уйрăмах очерк жанрĕшĕн питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ шухăш пур. "Пирĕн çын прозăра, уйрăмах çав прозăна тирпейсĕр е сивĕ чунпа çырнă пулсан, лайăх вырăн тупайманнине" палăртса, Горький çынна сăнласа памашкăн ăсталăха ӳстермелли тата тĕссене пуянлатмалли çинчен каланă, "çынсене ӳкерекен прозăна çав тери хавхаланса, вĕсене чунтан юратса, вĕсен ĕçĕшĕн мăнаçланса çырмалла, вара çав проза хăйех сăвăсене куçса пытăр",[37] — тенĕ.

Вăрçă çулĕсенче "Илемлĕ литература" журналта паллă вырăс писателĕсен чылай очеркĕсене чăвашла куçарса пичетленине асăннăччĕ ĕнтĕ. Çав очерксенчен пĕри М. Шолоховăн "Курайманлăх науки". М. Шолохов очеркĕсем пирки Б. Горбатов очеркĕсем пек, питĕ оперативлă пулнă тесе калама çук. Унăн очеркĕсем, писатель хăй фашистсем пирĕн Тăван çĕршыв çине сĕмсĕррĕн тапăннă-тапăнманах вăрçă çулĕ çине тăнă

пулин те, хăй курнă çапăçусем çинчен пулман. Анчах та çынсене вăрçă хирĕсенче сăнласа панă очеркĕсем "Правда", "Красная звезда", "Комсомольская правда" хаçатсен страницисенче ирĕксĕрех малти окопсенчен килнĕ оперативлă корреспонденцисемпе юнашар вырăн тупнă, вĕсенчен вăрçă тĕтĕмĕн шăрши кĕнĕ, халăхăн ыратăвне, мухтавне тата халăха шаннине пысăк ăсталăхпа вăйлăн сăнласа кăтартнă.

Шолоховăн вăрçă пуçламăшĕнче çырнă очеркĕсем çавăн чухнехи событисене писателе вĕсен тĕлĕнмелле пысăк пĕлтерĕшне лайăхрах ăнланма пулăшнă, унăн геройĕсен çав событисене хастарлăн хутшăнма, писателĕн паттăр характерсем çуралса туптаннине сăнласа кăтартма тивнĕ. Тĕслĕхрен, "Курайманлăх науки" очеркăн тĕп геройне Герасимова аса илер-ха. Вăл чăн-чăн пролетари йăхĕнчен, питĕ хăйне майлă çын, ăслă, таса ăнлă, хăйĕн пĕтĕм йăх тымарĕсемпе халăх шăпипе çыхăннă — савăнăçлă тапхăрта та, ĕçсенче те, вăрçăн трагедилле йывăр тĕрĕслевĕсенче те. Герой сăнарне писатель унăн тĕп енĕсенче уçса парать — васкамасăр, нумай сăмахсемсĕр. Çак сăнарпа, автор каланă пек, унăн пĕр шухăшĕ çыхăннă, çав шухăша Герасимов хумханса та ытарлăн, тӳрех ăнланса илме йывăртараххăн пĕлтерет: "Енчен те Тăван çĕршыва юратни пирĕн чĕресенче тапма чарăничченех упранать пулсан, эпир тăшмана курайманлăха яланах штыксен вĕçĕнче çĕклесе çӳретпĕр". Çакă пулса тăрать те ĕнтĕ Герасимов лейтенантăн кăткăс çар шăпи çинчен вулакансене каласа кăтартнă хыççăн вăл тăвакан пĕтĕмлетӳ.

"Курайманлăх науки" очеркра пахаран та паха илемлĕ проза публицистикăпа питĕ тачă çыхăннă. Шолохов вăрçăри салтаксен шăписем, халăх шăпи çинчен вулаканран нимĕн пытармасăр тӳрĕ те уçăмлă калаçу иртерет. Вăл политикăлла сăмахран пăрăнмасăр ăна произведенин илемлĕх мелĕсемпе сисĕнмелле мар çыхăнтарать. Ку тĕлĕшпе классикăлла вырăс литературин малти йăли-йĕркисене çирĕп тытса пырать, пирĕн очеркистсене литературăпа политикăна хăюллăн пĕрлештернин тĕслĕхне кăтартать.

"Курайманлăх науки" — халăх паттăрлăхĕ çинчен çырнă произведени. Çакна асăрхамасăр хăварма çук: Шолохов геройĕсем пĕр-пĕр ĕçре палăрнă тĕлĕнмелле çынсем мар, пирĕнпе юнашар пурăнакан, пирĕнтен нимĕнпе те уйрăлса тăман ахаль çынсемех. Кам вăл Герасимов лейтенант? Малтан мирлĕ пурнăçра механик пулнă, çара лекиччен Çĕпĕрте ĕçлесе пурăннă.

Эпир ĕçри паттăрлăх çинчен çырма хăнăхнă. Герасимов ĕçре те ыттисенчен уйрăлма юратман. Çын сывламасăр пурăнаймасть, çапла майпа вăл паттăрлăх кăтартатьăм вара? Ĕç ăна сывлăш пекех кирлĕ пулнă, ку уншăн нимĕнпе те палăрман яланхи йăла шутланнă. Писатель халăх пурнăçĕн чи вăрттăн енĕсене пĕлет. Çĕр çинче çирĕппĕн те шанчăклăн утса çӳрекен çынсенче вăл халăх вăйне тата йышлăран та йышлă паттăрлăхăн иксĕлми çăл куçне курать. Пăхăр, епле çирĕппĕн чăтса ирттерет Герасимов лейтенант фашистсен тыткăнĕнчи тискерлĕхсене; итлĕр, мĕнле нимĕн ӳстермесĕр, чееленмесĕр каласа парать вăл хăй тыткăнран тарса тухни çинчен, унăн сăн-питне пăхăр, эсир унта юри пысăклатмасăр, хитрелетмесĕр палăракан паттăрлăха асăрхатăр, çав паттăрлăхра çемçе туйăмсем мар, çирĕплĕхпе хастарлăх хуçалана ççĕ. Шăпах çакă пулать те ĕнтĕ талантлă художник ăсталаса кăтартнă пурнăç чăнлăхĕ.

"Курайманлăх наукинче" паттăрлăха çапла хăйне евĕрлĕн сăнласа пани Шолоховăн никамăннипе пăтраштарма май çук меслечĕ. Вăл çынна чунтан ĕненет, унăн кăмăл-туйăмне питĕ аван туять, çавсене пурне те ăста художник куçĕпе курса сăнлать. Тĕлĕнмелле паттăрлăх яланхи ахаль пурнăç никĕсĕ çинчех çуралса çирĕпленнине ĕненмелле кăтартса парать. Шолохов геройĕ "тӳпере вĕçсе çӳремест", хăй пек юмарт çынсем хушшинчех çĕр çинче утса çӳрет. Вăл хуйхăпа хаваслăх мĕнне те пĕлет, чун çĕкленĕвĕпе пусăрăнчăклăхне те ăнланать, унăн туйăмĕсем таса, пуян, чунĕ çынсемшĕн уçă, çынна йывăрлăхра пулăшмасăр нихçан та хăвармасть. Пурнăçа хуçалла, пĕлсе тата хавхаланса юратать. Вăл çынсен телейĕшĕн тата çитĕнĕвĕсемшĕн хĕпĕртет те, тĕлĕнет те.

Акă фронта тухса кайнă чухне, тĕслĕхрен, Герасимов лейтенант хăйĕн пуçлăхĕпе еплерех сывпуллашать: "Пурнăçра пĕрремĕш хут эпĕ хамăн пуçлăха чуп турăм, шуйттан пĕлет-и, вăл мана пачах унченхи пек чунсăр çын пек туйăнмарĕ ... Вăл кăмăллă та чунлă пулнăран мана ăшă-ăшă пулса кайрĕ, çавăнпа эпĕ ун патĕнчен хавасланса тата пăлханса тухрăм".

Шолохов очеркĕнче çакнашкал чунлăх мĕн чухлĕ нумайрах, вăл сăнласа кăтартакан паттăрлăх та çавăн чухлĕ пысăк пĕлтерĕшлĕрех. Нимĕçсен тыткăнĕнче мĕнмĕн тӳссе курни çинчен каласа кăтартнă май, Герасимов ăнсăртран çапла хушса хурать: "Мĕн-мĕн курма тивнине пурне те сăмахпа каласа пама пулать, тетĕр-и эсир? Пулмасть те, юрамасть те! Çук унашкал сăмахсем. Ăна хăвăн курмалла". Очеркра, Шолоховăн пĕтĕм прозинчи пекех, вулакансем патне пурнăçпа геройсем çинчен каланă сăмахсем мар, чăн малтан "хăв курма пултаракан" пурнăç хăй çитет. Çакăн пек чăн-чăн пурнăçри майлă тухса тăрать ума халăха пĕтĕм чĕрипе юратакан çын паттăрлăхĕ.

Халăхăн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинчи паттăрлăхĕ çинчен çырнă чухне эпир чăн малтан халăхăн массăллă героизмне кăтартатпăр. Пĕр шухăшлă туйăм, пĕр-пĕриншĕн тăрăшни, Тăван çĕршыва патриотла юратнă мăнаçлă туйăм, ахаль çынсем çĕршывшăн хăйсен пурнăçне шеллеменни — çаксем пурте хаяр тăшмана çĕнтерме пулăшнă.

1948 çулта пирĕн çĕршыва нимĕçсен прогрессивлă писателĕсен ушкăнĕ килсе курнă. Кунта мĕн-мĕн курнине, мĕн-мĕн туйнине вĕсем çулçӳрев очеркĕсенче, статьясенче, сăвăсенче çырса кăтартнă. Паллах, çулçӳрев очеркĕсенче вĕсем тĕп вырăна нумаях пулмасть вĕçленнĕ вăрçă событийĕсене лартнă, хаяр вăрçăра фашизма аркатма пултарнă халăх хăватĕнчен тĕлĕннине тата савăнса хавхаланнине пĕлтернĕ.

"Вăрçă тĕрĕслевĕнче, — тесе çырнă Бернгард Келлерман, — çĕнĕ вырăс çыннин характерĕн вăйлă енĕсем тĕлĕнмелле илемлĕн малалла аталаннă".[38]

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Ленинграда хӳтĕлесе

хăварни — çав вăхăтри историн нихçан манăçми страницисем пулса юлчĕç. Пĕтĕм этемлĕх умĕнче, Ленинград çыннисем çине тиеннĕ чи хăрушă йывăрлăхсен çулĕсенче вырăс халăхĕн паттăр характерĕ çĕнтерчĕ. Фашистсен атаки Ленинград стенисем умĕнче путланчĕ. Гитлер танкĕсем хула хĕрринчи урамсем тăрăх кĕмсĕртетсе пынă, Путилов завочĕн цехĕсем патнех çите-çите тухнă вĕсем, анчах кашни хутĕнчех вутлă снарядсем çунтарнипе каялла чакма тивнĕ. Хула юнашарах пулнă, пехота полкĕ пĕрре атакăна çĕкленмелĕх çеç юлнă унта кĕмешкĕн. Аслă тата юмахри пек хула тĕтре витĕр тăшман умĕнчех курăнса выртнă. Ăна вутпа тата выçăпа асаплантарнă, çапах та вăл парăнман, ун вырăнне малтанхинчен те çирĕпленсе, тĕрекленсе пынă.

Ленинград фронтĕнче ытти халăхсемпе пĕрле пинпин чăваш салтакĕ çапăçнă. Дивизи хаçачĕн редакторĕ пулнă май, Ленинграда хŭтĕленĕ çĕрте уйрăмах Ф. Ситта писатель паттăрлăх кăтартнă. Вăл вăрçă пуçланичченех чăваш литературинче Хĕрлĕ Çар салтакĕсем çинчен çырнă очерксемпе палăрнă. Унăн "Артиллеристсем", "Паттăр разведчик", "Фронтри патриотка" очеркĕсене вулакансем килĕштерсе кĕтсе илнĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçлансанах унăн очеркĕсемпе калавĕсене Чăваш патшалăх издательстви уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларнă. Вăл "вăрçăн малтанхи кунĕсенчех совет салтакĕсен паттăрлăхне пропагандăлама, Чăваш республикин ĕç çыннийĕсене фашистсемпе кĕрешес ĕçре хавхалантарма пулăшнă".[39]

Гвардеец майорĕ Ф. Ситта Ленинград йывăр блокадинче "Защитник Родины" хаçата редакциленĕ, унăн хаçачĕ Ленинград фронтĕнчи салтаксен чи юратнă хаçачĕсенчен пĕри шутланнă. Дивизи хаçачĕсен редакторĕсен канашлăвĕнчи сăмахĕнче вăл çапла каланă: "Редакци сотрудникĕсем çапăçусем вăхăтĕнче яланах малти окопсенче салтаксемпе пĕрле пулма тăрăшаççĕ ... Каçхине редакцин пĕтĕм коллективĕ пухăнать те материалсене набора парать. Çĕрле эпир вĕсене наборласа пĕтеретпĕр, хаçата майлаштарса пуçаратпăр та, тул çутăличчен пĕтĕм тиража пичетлесе, редакцире ĕçлекенсем ха-

çатăн çĕнĕ номерĕпе çар чаçĕсене, малти линие çул тытаççĕ".[40]

Çапăçу мĕнле иртнине лайăх пĕлме редактора команда пунктĕнче пулни кăна çителĕксĕр, тенĕ вăл. Мгирен тата Синявинăран çурçĕререх пулса иртнĕ хаяр çапăçусем вăхăтĕнче Ф. Ситта унти пур чаçсене те çитсе курать, батальонсемпе ротăсенче пулать, салтаксемпе те, командирсемпе те паллашать, окопсенче калаçусем иттерет, окопсенчех хаçатăн çĕнĕ номерĕ валли хĕрӳллĕ корреспонденцисемпе тĕрленчĕксем çырать. Акă, "Защитник Родины" хаçатăн 1943 çулхи октябрь уйăхĕнче тухнă номерĕ. Пĕрремĕш страницăра хăюллă сăнлă, çивĕч пысăк куçлă, хĕрлĕ çăлтăрлă пилоткине кăшт чалăштарсарах тăхăннă салтак сăн ӳкерчĕкĕ. "Михайлов снайпер фашистсен çирĕм иккĕмĕш снайперне тĕп тунă",[41] — тесе çырнă пысăк сас паллисемпе хаçат страници урлă пĕтĕм талккишĕпе. "Сунартан" таврăннă-таврăнманах тĕл пулса калаçнă Ситта пĕтĕм фронт пĕлекен снайперпа. Михайлов ефрейтор, сăмах çаптарма юратман чĕмсĕртерех Новосибирск вырăсĕ, вăтăралла çывхарса пыраканскер, Ситтапа кăмăллăн тĕл пулать, анчах редактор ыйтăвĕсем ăна хавхалантармаççĕ. "Миçе сехет кĕтме тиврĕ?" — тесе ыйтсан, — "Яланхи пекех, анчах хальхинче чееречхи лекрĕ, шуйттан", — тесе çеç хуравланă. "Çапах та кĕрешӳ вăрттăнлăхĕсем пурах ĕнтĕ сирĕн, унсăрăн тăшмана çĕнтерейместĕн", — тенĕ Ситта. "Паллах, пур, анчах хальлĕхе вăл вăрттăнлăхсем хамран ан тухчăр-ха, Берлина çитиччен эпĕ çĕр фрица леш тĕнчене ăсатма тупа тунă", — кĕскен пĕлтернĕ снайпер. "Миçе сехет засадăра лартăр?" — ыйтнă Ситта. "Ку хутĕнче самай вăрах ларма та, пĕр вырăнтан тепĕр вырăна куçма та тиврĕ", — Михайлов писателе пилоткине хывса икĕ тĕлте хура пăнчă пек шăтăксем кăтартать. Ф. Ситта тĕлĕнсех каять: "Фашист пульлисем-и?" "Çавсем. Нимĕç снайперне улталас шутпа эпĕ икĕ хутчен хамăн пилоткăна вăрăм патак тăррине тăхăнтартса çӳлелле пăртак çеç çĕклерĕм. Иккĕшĕнче те нимĕç снайперĕ улталанчĕ, юлашкинчен тимлĕхне çухатрĕ-çухатрех: çăка çулçисем сасартăк пĕр тĕлте, çил çук пулин

те, силленсе илчĕç. Ман ун пек чухне куçсем çивĕч...» "Эсир тайгари сунарта пакшана куçĕсенчен тивертнĕ теççĕ..." "Пĕрре çеç мар, виççĕ пулнă ман тайгари пурнăçра ун пекки", — кулса янă сасартăк Михайлов ефрейтор, унăн кăмăлĕ улшăннă, хăйне мăнна хумасăр, унпа пĕрле юнашар выртса тăнă пекех салтакла калаçакан майор-журналист килĕшнĕ ăна. Юлташĕсем хаçат редакторĕ вăрçă пуçланиччен сĕм вăрманта тăр пĕччен хăмăр упапа тĕл пулни çинчен каласа кăтартнине аса илнĕ. Чылайччен каласа пынă вара иккĕшĕ... Хаçат редакторĕ Михайлова çĕнĕ хыпар пĕлтернĕ: Ленинград фронтĕнчи хĕрлĕ снайпера пĕтерме фашистсен тĕп йăвинчен Берлинран чаплă мастер килет иккен.

Анчах ку хыпар Михайлова шиклентерес вырăнне савăнтарса янă. Редактор ăна иккĕленсерех пăхса илнĕ:

— Мĕн пулчĕ? Эпĕ кирлĕ мар сăмах персе ямарăм пулĕ-çке?

— Питĕ лайăх, питĕ хĕпĕртемелле хыпар пĕлтертĕр, редактор юлташ!

— Апла сана, Михайлов, фашистсен снайперĕ нимĕн чухлĕ те шиклентермест?

— Хăçан килет? — хыпаланса ыйтнă Михайлов.

— Çитес эрнере, тесе пĕлтерет разведка.

— Тавах сире, майор юлташ, чаплă хыпаршăн! — журналист аллине хăй сисмесĕрех тытса чăмăртанă ефрейтор, унтан тин хăйне офицер умĕнче тĕрĕс тытманнине тавçăрнă. — Каçарăр мана, тайга сунарçине... Çав снайпер Польшăпа Бельгире аллă çынна тĕп тунă теççĕ вĕт?

— Çапла.

Михайлов аллинчи снайпер винтовкине çепĕççĕн ачашласа илнĕ, журналист куçĕнчен хăюллăн пăхнă:

— Килтĕр. Эпĕ ăна кĕтсе илме хатĕр. Ĕнер кăна тайгари ялтан, сакăр вунă çичĕ çулхи асаттерен çыру килчĕ. Фашистсене сахалтарах пĕтернĕшĕн кăмăлсăрланса çырать, хăй мар ĕнтĕ, ун ячĕпе хĕрĕм тĕрленĕ çырăвне. Кăçал, тет асатте, утмăл çичĕ пакша тытрăм, Çĕнĕ çул тĕлне вĕсен шутне çĕртен ирттерес шухăш пур. Эсĕ унта мĕншĕн ытла та сӳрĕккĕн çӳретĕн "сунарта"?

Çирĕм икĕ фашист тĕплерĕм тесе пĕлтертĕн. Сахал ку, мăнукăм. Сана пулăшу кирлĕ мар-ши тесе района çар комиссарĕ патне кайса килтĕм. Пĕр-ик эрнелĕх командировкăна пыма çук-ши сан патна тесе ыйтрăм. Çук, килĕшмест. Яхăнне те ямасть. Эпĕ тытнă пакша тирĕсенчен Хĕрлĕ Çар салтакĕсем валли алсишсем çĕлесе яртарма кăна килĕшрĕ. Шел, эрнере сахал мар вĕрентме пулатчĕ сана, чăн-чăн снайпер пулса юлаттăн. Кĕтменччĕ санран, мăнукăм, нимĕç снайперĕсенчен хăрасса. Вăрçă çĕнтерӳпе вĕçленичченкапла эсĕ аллă фашиста та пĕтерме ĕлкĕрейместĕн. Ан ман, яла çирĕм çичĕ хурлăхлă çыру килчĕ — санăн çавсемшĕн тавăрмаллах!"

Ф. Ситта очеркĕ хаçатăн виçĕ номерĕнче пичетленет. Ăна салтаксем малти окопсенче кашнинчех чи хаклă япала кĕтнĕ пек кĕтеççĕ, журналист очеркне çĕр хӳме çумне таянса сержант вулать, ăна ыттисем сывламасăр тенĕ пек итлеççĕ — пĕри отделени командирĕн çăварĕнчен пăхать, тепри урисене хутлатнă та кушак пек пăчăртанса выртать, виççĕмĕшĕ урисене тăснă, тăваттăмĕшĕ пуçне юлташĕн чĕркуççийĕ çине хунă. Хушăран нимĕçсем енче пăшал пере-пере ярать е пĕччен автомат шăтăртатса илет. Инçетерех машинăсем кĕрлеççĕ.

Пĕтĕм дивизийĕпех пĕлеççĕ ĕнтĕ, нимĕç снайперĕ çинчен арми хаçатĕнче те заметка пичетленсе тухнă. Новосибирск сунарçин хушаматне кăна мар, Берлинран ятарласа вĕçсе килнĕ Ганс Штаубер фашист-снайпера та пĕлмен çын юлман пулĕ фронт линийĕнче. Штаубер фашистсем парăнтарнă Голландипе Бельги çĕрĕсенче унти салтаксене нумай пĕтернĕ, снайперсемех пулман пулас çав çĕршывсенче. Польшăра поляксен темиçе снайперне персе ӳкернĕ, Гитлер ăна хăй патне чĕнтерсех унăн кăкăрĕ çине икĕ хĕрес çакса янă.

Совет снайперĕпе фашист снайперĕ хушшинчи кĕрешӳ эрне ытла пынă: кăнтăрла та, çĕрле те. "Пурнăç е вилĕм!" тавлашура иккĕшĕнчен пĕри çеç чĕрĕ юласса Михайлов та, Штаубер та лайăх пĕлнĕ. Нимĕç снайперĕ Тухăçри Балти тинĕсĕн пырĕнче блокадăра хĕсĕннĕ хула хĕрринчех вырăссен снайперĕпе тытăçни çинчен фронт

штабĕн радисчĕсем Геббельс эфирта кăшкăрашни çинчен те илтнĕ иккен. "Русс чаплă перет, пирĕн Ганс Штаубер ыранах унашкал виçĕ снайпера леш тĕнчене ăсатать. Ку миçе сехетре пулса иртнине эпĕ Германи халăхне хам радиопа пĕлтеретĕп!" — çухăрать Геббельс. Çакăн хыççăн Михайлов çĕр пӳрте те таврăнми пулать: чĕрĕ-и вăл е вилĕ? Тен, аманнă? Никам та пĕлмест. Салтаксем пăшăрханма тытăнаççĕ, анчах дивизи йышăннă позицире çĕнĕ танксемпе çĕнĕ тупăсем курăнса кайсан, хушăран ун пирки манаççĕ. Темиçе куна пынă лăпкăлăх тинех вĕçленет пулас, тĕнче çĕнĕрен чĕтренме, кисренме, алхасма тытăнасса пурте туяççĕ. Çапах та Михайлов шăпи еплерех-ши? Нивушлĕ ăна теменле Ганс пĕтерчех-ши? Çук, ку шухăша салтаксем çавăнтах пуçĕсенчен каялла хăваласçĕ. Пакшана куçĕнчен тивертекен сунарçă икĕ хĕреслĕ мар, виçĕ хĕреслĕ снайпер куçĕ тĕлне те лекес çук.

Пĕррехинче Михайлов çĕр пӳрте ир енне, таврана кăвак шуçăм çапсан, кăштах тайкаланса, çапах та кĕлеткине тӳрĕ тытма тăрăшса утса килсе кĕрет. Снайпер винтовкине чĕмсĕррĕн тасатса яланхи вырăна майлаштарса тăратать те юлташĕсене пĕрремĕш хут курнă пек сăнаса çаврăнать, унтан улăм сарнă тапчам çине тулли ыраш кĕлти пек лаплатса ӳкет. Ӳкет те тӳрех куçне хупса сăмсипе шăхăрттарма тытăнать. Çĕр пӳртри салтаксем ăна шăппăн хупăрласа илеççĕ, вăл мĕнле выртнине, мĕнле сывланине сăнама-итлеме тытăнаççĕ. Сасартăк отделени командирĕ Дубинушкин сержант снайпер хулпуççийĕнчен аяларах шинель çанни ĕнсе шăтнине, çав шăтăкра шурă татăк асăрхать. Пĕшкĕнсе тимлесерех пăхаççĕ те шинель çаннин тепĕр енĕнче юн хытса ларнине асăрхаççĕ. Аманнă! Фашист снайперĕ Михайлова тивертнĕ! Çавăнпа вăл никама нимĕн чĕнмесĕр çĕр пӳрте тайкаланса кĕрсе улăм тапчам çине тӳнсе кайрĕçке! Сержант хушнипе çĕр пӳрте самантрах санитаркăна чĕнсе килеççĕ. Хĕр алли хĕр аллиех çав, вăл Михайлов хулне шинельпе унăн айĕнчен тăхăннă салтак бушлачĕн çаннисенчен пушатать. Тĕрĕс! Снайпер аманнă, ăна Михайлов юн юхасран хăйех бинтпа туртса çыхнă.

Лена санитарка бинта ерипен салтса салтак ӳтне çуса тасатать, çĕнĕрен питĕ меллĕн майлаштарса çыхать. Михайлов çеç нимĕн те сисмест, вилнĕ пек ыйха туртать, анчах разведчиксем ăнланаççĕ — вилнĕ çын сăмсипе шăхăртса çывăраймасть.

— Ну, мĕнле? — шăппăн ыйтаççĕ салтаксем. — Йывăр аманнă-и?

— Аптăрамасть, тăшман пульли чавсинчен çӳлерех çеç кăшт шăйăрттарса кайнă.

— Лазарета илсе те каймастăн пуль апла?

— Урăх çĕртен аманман пулсан?

Тата тимлесерех пăхаççĕ — кĕлеткинче аманнă вырăн урăх курăнмасть.

— Халĕ тăраниччен çывăртăр, — сĕнет санитарка.

— Çывăртăр, виçĕ талăк куç хупман вăл, — тет отделени командирĕ те

Анчах çĕр пӳртри салтаксем те пăлханаççĕ: мĕн пулнă-ши фашист снайперĕпе? Нивушлĕ каллех чĕрĕ юлнă? Михайлов аран тайкаланса утса анчĕ çав çĕр пӳрте — ку ахальтен мар... Кунта епле майпа шуса çитнĕ-ши?

— Лектернĕ вăл! Унсăрăн çакăн пек сăмсипе шăхăрттарса та выртаяс çук, — тенĕ Новосибирск тепĕр вырăсĕ, Березкин хушаматлăскер.

Михайлов таврăннăранпа çирĕм минут та çитменха, кĕтнĕ чухне вăхăт юриех вăрах иртет. Паттăр боец хăй те çывăрса вăхăт ахаль ирттерме хăнăхман. Михайлов урисене тăсса ярать, куçне уçсан ыратакан хулĕ лăпланнине, ăна тап-таса шурă бинтпа çавăрса çыхнине, хăйне хирĕç Дубинушкин сержантпа Лена санитарка пĕр-пĕринпе пăшăлтатса ларнине курать. Снайпер куçĕсемпе çĕр пӳрте тĕлĕнсе пăхса çаврăнма ĕлкĕрет кăна, анчах вăл сăмах хушиччен çĕр пӳртри телефон аппарачĕ чăнкăртатса каять. Березкин итлет, сăмах мĕн çинчен пынине пĕлтерме ĕлкĕриччен çĕр пӳрте полк разведкин командирĕ Сережкин лейтенант чупса кĕрет, улăм сарнă тапчам çинче выртакан Михайлова ыталаса чăмăртама пуçлать.

— Полк штабĕнче эсĕ вилнĕ тесе шутлаççĕ! Кĕлеткӳне нимĕçсем сĕтĕрсе каясран артиллери еплерех

кĕрслеттерет! Михайлов! Иван! Хăçан çитсе выртрăн?

— Çирĕм минут каялла, — пĕлтерет отделени командирĕ.

Ыйхă мĕнле хăвăрт сырăннă, унран çавăн пекех хăвăрт ирĕкленсе, Михайлов разведка начальникĕ умĕнче яштах тӳрленсе тăрать. Сасси ытти чухнехи пекех çирĕп, хулăн, уçă, пысăках мар çĕр пӳртре аслати пекех кĕрлет:

— Лейтенант юлташ, паян ирхине, çичĕ сехет те вун çичĕ минутра фашист снайперне Ганс Штаубера леш тĕнчене ăсатрăм!

— Ăсатрăн? — куçне чарнă пек пулнă лейтенант.

— Ăсатрăм! Шанчăклăрах пултăр тесе сахалтан та виçĕ пульăран кая мар кĕртсе лартрăм унăн пуçне.

— Йăнăшмастăн-и, Михайлов?

— Йăнăшмастăп!

Лейтенант хăй умĕнче юман юпа пек хытса тăнă Михайлова ыталанипе çырлахмасть, унăн çĕлĕкне, çамкине, сарлака кăкăрне хыпашласа пăхать.

— Ĕненмесĕр май çук. Михайловах! — тенĕ те вăл сасартăк ахăлтатса кулса янă, кĕсйинчен листовка пекки кăларса салтаксене тыттарнă, тепĕр хушăран вĕсем те, Михайлова кĕлеткинчен чыша-чыша, пĕтĕм сасăпа ахăрма пуçланă. Çав самантра телефон чăнкăртатни çĕнĕрен янраса каять. Вăл тинех трубкăна ярса тытать, савăнăçлăн пĕлтерет:

— Фриц снайперĕ мар, пирĕн Михайлов фашиста пульăпа ăшаланă, командир юлташ! Чăнах-чăнах! Ак халь анчахрах çĕр пӳрте таврăнчĕ! Сып-сывă, ман умра юман кĕреш пекех тăрать. Юрать, пурнăçлатăп! — разведка начальникĕ тепĕр хут Михайлова хыттăн пăчăртать: — Ку — полк командирĕ ячĕпе. Илтрĕн пулĕ — хăй хушрĕ.

Связист çакăн хыççăн телефон трубкине ниепле те хăйĕн вырăнне хураймасть, таçтан та шăнкăравлаççĕ: дивизи штабĕнчен, корпус штабĕнчен, арми штабĕнчен! Германин рейхсминистрĕ Геббельс радио итлекенсем умĕнче панă сăмаха тытнă иккен: Хĕвел тухăç фрон-

тне, кĕç-вĕç нимĕç çарĕсем кĕрсе кайма хатĕрленекен Ленинград хули патне пырса çитнĕ, паттăрлăхшăн фюрер икĕ хутчен хĕреспе наградăланă нимĕçсен чаплă снайперĕсенчен пĕри Ганс Штаубер обер-лейтенант ют фронтри лару-тăрупа кĕске хушăрах лайăх паллашнă та эрне вĕçленичченех вăрçăччен Çĕпĕр сунарçи пулнă вырăссен ку таранччен никам ним тăвайман снайперне Иван Михайлова тĕп туни çинчен пĕлтернĕ. Кун хыççăн Штаубер сăн ӳкерчĕкне хаçатсем пичетленĕ, листовкăсенче Хĕвел тухăçĕнчи фронтсенче çеç мар, Хĕвел анăç фрончĕсенче те çĕршер пин салатнă. Салтаксем ăна ăмсана-ăмсана вуланă, пур çĕрте те Гитлер снайперĕн ячĕ татах чаплăланнă. Геббельс çавăн чухне хăйĕн сăмахĕнче икĕ йăнăш туни çинчен çав кунах пĕлеймен-ха нимĕç çарĕсенче. Михайлов снайпер сывă юлнине те унăн юлташĕсемсĕр пуçне çӳлерехри пысăк командирсем тӳрех ĕненмен, çавăнпа çĕр пӳртри штабра телефон пĕр чарăнмасăр чăнкăртатнă та ĕнтĕ.

Санитарка снайперăн бинтпа çыхнă хулĕнчен куçне вĕçертмест, ĕç урăхла çаврăнса каясса сиссе Лена разведчиксен командирĕнчен Михайлова лазарета илсе каясси çинчен пĕлтернĕ. Кăна илтсен, паттăр салтак санитарка сĕнĕвĕпе килĕшмесĕр пуçне татăклăн пăркаланă: "Ниçта та каймастăп! Çав сĕмсĕрĕн пульли чавсаран çӳлерех кăшт шăйăрттарнăшăнах лазарета кайнине пĕлсен манран пĕтĕм полк кулма пуçлать вĕт. Ан та ыйт, Ленушка, ан та тархасла! Нимĕн те ыратмасть манăн!"

Взвод командирĕ ку каласăва илтсен, хăлхисене чăнках тăратать, пăртак пăлханса кăсăкланать:

— Мĕнле пуля çинчен пырать кунта каласу? Мĕншĕн сасартăках чĕлхӳне çыртрăн, Михайлов?

Чăнах та, мĕнле пуля çинчен? Кам тивертнĕ унпа Михайлова? Çĕр пӳрт самантрах шăпланать. Пурте ăнланаççĕ: Михайловпа нимĕç снайперĕ хушшинче ахаль перкелешӳ пулса иртмен.

— Хамăн вăрттăн вырăнта эрнене яхăн усăсăр ларни йăлăхтарсах çитерчĕ мана, — терĕ Михайлов темĕншĕн айăплăрах сасăпа. — Фриц та, тĕрĕссипе каласан, урăхлараххи лекрĕ, ахальтенех наградăламан ĕнтĕ ăна

Гитлер икĕ хĕреспе. Нервисем те тимĕр пекех çирĕп. Çавăнпа туятăп: иксĕмĕр хушшинчи ку куçа курăнман кĕрешӳ эрнене мар, пирĕн дивизи ниçталла хускалмасан, икĕ эрнене те тăсăлма пултарать. Мĕн тумалла? Мĕн шутласа кăлармалла? Фрица мĕнле улталаса хамăн серепене çаклатмалла? Сисетĕп-ха: ку снайпер ыттисенчен урăхларах, Берлинран Ленинграда курма ахальтен вĕçсе килмен вăл. Ыттисем юлташĕсен окопĕсенчен аякках каймастчĕç, хăйсен вăйне туйса выртма юратнă пулĕ те — ку вĕсене ман винтовка умĕнче пулăшсах каяймастчĕ çав ... Ку, Штаубер, пĕчченлĕхе килĕштерекенскер — ыттисем ан чăрмантарччăр ăна. Вăл ăçта вырнаçнине, унăн тĕп йăвине çав-çавах иккĕмĕш куне тĕп-тĕрĕс палăртрăм. Нимĕçсен икĕ чаçĕ хушшинче виçĕ тĕмескеллĕ вырăн пур. Фриц малтан çавсем хыçĕнче пĕрин патĕнчен тепри патне шуса çӳресе меллĕ вырăн шырарĕ пулас, юлашкинчен варринчине суйласа илчĕ. Мĕнле пĕлтĕм çакна? Айккинчи икĕ тĕмеске хыçĕнче те эпĕ тăпрана çӳлелле ывăтнине асăрхарăм, ку хайхи Ганс хăйне валли йăва çавăрнине пĕлтерчĕ ĕнтĕ. Нумай та мар, пĕр-ик хут çеç сирпĕнчĕ тăпра. Варринчи тĕмеске хыçĕнче вара нимĕн те пулса иртмерĕ. Çĕрле те çывăрмастăп, кăнтăрла та куç хупмастăп — усси çук. Çĕлĕксене те иксĕмĕр шăчă тăрне лартса пăхрăмăр — эп те пеместĕп, вăл та пемест, — Михайлов çапах та хăйĕн ăсталăхĕн вăрттăнлăхĕсене пĕтĕмпе уçса парасшăн пулмарĕ, çитменнине нумай калаçма юратмасть вăл, халĕ те виçерен иртсе кайнине туять, çавăнпа ыттине çăтăр-çăтăр кĕскен каласа хучĕ:

— Нумай чеелентĕмĕр пĕр-пĕрне улталас тесе, анчах теменле "академи" пĕтернĕ фриц лекрĕ. Туятăп: варринчи тĕмеске хыçĕнчех лăпчăнса выртать вăл, мана иртен пуçласа каçчен, унтан çĕрле те ăшĕнче вăрçать, анчах вăл та нимĕн те тума пултараймасть. Тепĕр чухне сиксе тăрса çумри гранатăна фриц тĕмески хыçнех ывăтас килет, анчах юрамасть, самантрах кĕлеткеме ураран пуçласа пуç таран тăшман пульлисем шăтарса каяççĕ. Штаубер пульлисем çеç мар, окопсенче выртакан пулеметчиксен пульлисем те.

Михайлов сывă аллине бушлачĕ айне чиксе ячĕ те кăкăрĕ умĕнчи кĕсйинчен документ майлă япала туртса кăларчĕ; ăна, тарăхса çитнĕскер, пĕтĕм вăйĕпе çĕр урайне çатлаттарчĕ.

— Акă "чаплă" снайперăн обер-лейтенант билечĕ!

Ахаль те тăвăр çĕр пӳртре пĕр чĕрĕ чун юлман пекех шăп пулса тăчĕ. Хайхи билета пĕр самант пурте куç сиктермесĕр пăхрĕç, унтан ăна взвод командирĕ тытса çĕклерĕ те уçкаласа пăхрĕ.

— Икĕ уйăх каялла çеç ăна çĕнĕ звани панă. Маттур, Михайлов!

— Эпĕ уçса та пăхаймарăм ăна, нимĕçле те пĕлместĕп...

— Мĕнле майпа лекрĕ Штауберăн офицер кĕнеки сан кĕсйӳне?

— Хам илсе чикрĕм.

— Ăçтан?

— Кителĕн кĕсйинчен.

— Эсĕ мĕн, ун патне хăнана кайса килтĕн-им?

— Тиврĕ кайма.

— Ха-ха! — каллех ахăлтатса кулса ячĕ лейтенант хăйне теменле лару-тăрура та хаваслă тытма хăнăхнăскер. — Рейхсфюрер Геббельс Ганс Штаубер Çĕпĕр сунарçине леш тĕнчене ăсатни çинчен эфирта пĕтĕм тĕнче илтмелле çухăрашать, çав вăхăтра вырăс снайперĕ "Хура кашкăр" патне хăнана çӳренĕ иккен! Тĕрĕс калатăп-и? Ну, Михайлов!

— Каласа кăтарт! — хушрĕ лейтенант.

— Лейтенант юлташ... — сас пачĕ Лена санитарка.

— Кай-ха эсĕ лазаретна! Унти боецсене хăв мĕн илтнине каласа савăнтар. Вăхăт çитсен снайпер суранне çыхма хамах ертсе пыратăп.

— "Хура кашкăрĕ" кам-ха тата?.. — ыйтрĕ пĕр разведчикĕ.

— Ганс Штаубер снайперăн вăрттăн ячĕ çапла пулнă.

— Фашист кашкăрĕ Çĕпĕр упин çăварне лекнĕ апла?

— Çапла пулса тухать... — хăюсăртараххăн тавăрчĕ Михайлов.

... Темиçе кун выртса аптăранă Михайлов пуçне тинех питĕ харсăр та хăюллă шухăш пырса кĕрет: "Берлинран мана вĕлерме ятарласа килнĕ офицера аллăмран вĕçертмелле-им? Ĕмĕрте те пулас çук япала ку! Хама та пĕтеретĕп, ăна та! Эпĕ çапах та ефрейтор кăна, вăл — обер-лейтенант. Ăна Гитлер хăй пĕлет теççĕ, мана — çак çĕр пӳртре хĕсĕне-хĕсĕне тăшманран хӳтĕленекенсем тата эпĕ нимĕçсене сахал тĕп тунăшăн тарăхнă асатте... Çирĕм çичĕ арçын вилни çинчен яла хут килнĕ... Мĕн пулать те мĕн килет! Вилĕмрен хăрас пур ялтан та тухас çук".

Михайлов, çапла шухăшласа, аякри тĕмескене нихçанхинчен те тимлĕрех сăнама пуçлать, çав хушăрах сулахай хулне ерипен-ерипен хăйне тăшман снайперĕнчен хӳтĕлекен тĕмеске çинелле шутарса çĕклеме тытăнать. Пĕрре... иккĕ... виççĕ... Бушлат хулĕ тепĕр самантран нимĕç снайперне курăнса каймалла — Михайлов снайпер винтовкин окулярĕ витĕр куçĕпе малалла тирĕнет... Акă унăн хулĕн çурри майлах тĕмеске çинче ĕнтĕ, ăна вăл малалла умĕнчи çĕре бушлачĕпе якатнă евĕр хăтланса шутарать. Çав вăхăтрах хайхи хула темĕн çатăрт! пĕçертсе илет. Анчах Михайлов ăна каялла туртса илмест, ыратнă пек пĕр вырăнта сиктерсе çеç илет. Тăшман тепре перет, анчах пуля хальхинче бушлат çаннине çеç шăтарса тухса хыçалта çĕр çине чаклатать. Михайлов чее: Штаубер пульли ăна хул мускулĕнчен тивнĕ пек аллине питĕ хăвăрт тĕмеске хыçне "ӳкерет". Тăшман пульлисем ун тавра чаклатса çĕр ăшнелле тăрăнаççĕ. Аманнă снайпер çут тĕнчепе сывпуллашас умĕн ыратакан кĕлеткине туртăнтарнă чухнехи пек, вăл çĕлĕкĕн хăлхине пăртак хускатса çĕклет: ăна çав самантрах ик-виçĕ пуля шăтарса каять. Ку хутĕнче те Михайлов чăтăмлă пулать, çĕлĕкĕн хăлхине (ăна вăл тытăçура кирлĕ пулĕ тесе кив çĕлĕкрен татса пынăччĕ) нимĕç куçĕ умĕнчех выртгарса хăварать. Чăтăмĕ пулни, тăшмана юриех хулĕнчен тивертме ирĕк пани, ытти чĕлĕхсем те хăйсен ĕçнех тăваççĕ: малтан нимĕç снайперĕн пуçĕ кăштах курăнса каять — Хĕрлĕ Çар енчен перекен çук. "Вĕлертĕм! тесе шухăшлать", — вĕлтлетет

Михайлов пуçĕнче. Хулĕ туртса ыратнине тинех туять вăл. Ленинград енче çаплах шăп пулнăран фриц хăюлланать, урисене кăшт вылятма та юрать тесе пулас, чĕркуççийĕ çине çĕкленет. Çав самантрах пирĕн снайпер унăн кăкăрĕ тĕлне винтовкин икĕ кĕпçинчен те умла-хыçлăн икĕ хут персе ярать. Фашист икĕ аллине икĕ еннелле саркаласа хыçалалла тӳнсе çухалать. "Пулчĕ", — тет вăл лăпкăн кăна ăшĕнче, ялта вутă çурса пĕтернĕ чухнехи пек. Тĕмеске хыçне пытанса суранне хăвăрт çыхать, юн юхнине чарма (нимĕç снайперĕн пульли чавсаран çӳлерех тирне çеç сӳсе кайнă иккен) нӳрелнĕ çĕртен кăшт çӳлерех хыттăн туртса çыхать. Выртнă çĕртенех йĕри-тавралла пăхса çаврăнать те хăйсен окопĕсем еннелле шума тытăнсан таврари шăплăха тĕлĕнсе итлет: çывăхра икĕ енчен те перекен çук, аякра çеç нимĕç самолечĕсем хула çине бомбăсем тăкса таврăнаççĕ, вĕсене зениткăсем самаях "тăн кĕртнĕ пулмалла" — темиçе самолет хура тĕтĕм кăларса çĕр çинелле вирхĕнсе анать.

Михайлов шума чарăнать, унăн пуçне тепĕр чăрсăр шухăш пăталаса кĕрет: нимĕç снайперне хăйне те хамăр енне сĕтĕрсе каçмалла мар-ши? Хăйĕн пуçне каçăртма, ахаль салтаксене çӳпĕ вырăнне хуракан мар-ши вăл? Вĕсемпе хутшăнсах каймanran-ши е ирхи сивĕре чăптанса-чăмăртанса выртма канлĕрехрен Штаубер выртакан виçĕ курпунлă çӳллĕрех вырăна пĕр мĕлке васкани те курăнмасть. Нейтраллă çĕр урлă шуса каçса тăшман снайперне çитсе курас! Шутланă — тунă. Михайлов тăшман окопĕсем еннелле шума тытăнать. Балти тинĕсĕ енчен таврана тĕтре йăсăрланса килме пуçларĕ. "Ку — лайăх", — шутларĕ Михайлов. Анчах тăшман та çывăрмасть иккен. Унăн прожекторĕсен шевлисем çăра тĕтренне шăтарса совет салтакĕсемпе фашистсем хушшинчи пушă çĕре çутатса-хыпашласа куççа пыраççĕ. Михайлов çĕр çумне мĕн май килнĕ таран лăпчăнса хускалмасăр выртать. Çутă шевле ерипен шуса иртсе каять. Тăшман вышки çинчи пулемет тĕлли-паллисĕр сиввĕн кăлтăртатса илет.

Акă хайхи тĕмеске. Шăп. Ун хыçĕнче пĕр сас-чӳ те

илтĕнмест. Михайлов тимлĕхе çухатмасть-ха, шуса-шуса тĕмеске хыçне çитет, унта ăшă материалпа хулăнлатнă плащ-палатка тăхăннă çын аллисене сарса тӳпенелле пăхса выртнине курать. Юнашарах — снайпер винтовки. Вăрăм, хулăн кĕлеткеллĕ нимĕç. Ăна хамăр енне сĕтĕрсе каçма май çук та пулĕ. Аманнă хулĕ те хытăрах та хытăрах пĕçертет. Прожекторсен çути çине лексен... Михайлов нимĕç снайперĕн кительне вăр-вар ухтарса унăн офицер кĕнекине туртса кăларать те хăйĕн бушлачĕн кĕсйине ярăнтарать. Малтанхи шухăшне хăвăрт улăштарса нимĕçĕн снайпер винтовкине сывă хулпуççийĕнчен çаклатса каялла, хамăр еннелле шума тытăнать.

...Телефонистăн халĕ те канлĕх çук-ха. Дивизи хаçачĕн редакторĕ çĕр пӳртре ларни çителĕксĕр-ха, корпус тата арми хаçачĕсен редакцийĕсенчен шăнкăравлаççĕ, фронт хаçачĕн журналисчĕпе пĕрле Ленинградран килнĕ теменле писатель малти окопа çитесшĕн. Полкăн разведка взвочĕн командирĕ Сережкин лейтенант хушнипе çĕр пӳртрен халĕ те лазарета тухса кайман санитаркăна тинех кăвак куçĕнчен шăтарасла пăхать:

— Сирĕн лазаретра пирĕн снайпера кăштах канса илме вырăн пур вĕт?

— Канма мар, унăн аманнă хулне сыватма та тупăнать, — санитарка лейтенанта паçăрах хăй Михайлова лазарета куçарма сĕннине пăртак кăмăлсăррăн систерет.

— Нимĕнле лазарета та каймастăп! — Михайлов каллех пуçне пăркаларĕ, нимĕç снайперĕн офицер кĕнекипе паллашнă салтаксене унăн çĕнĕ винтовкипе паллаштарма тытăнчĕ.

Разведчиксем офицер документĕ варринчен шăтнине тата ун тавра хут ĕнсе çĕтĕлнине уйрăмах тĕлĕнсе, шăппăн сăнаса пăхрĕç. Взвода уйăх каялла çеç килнĕ лутра та çирĕп кĕлеткеллĕ Овчаров Михаил кăна бушлатри шăтăкпа офицер билетĕнчи ĕннĕ шăтăка танлаштарса тинкерчĕ-тинкерчĕ те чĕнмесĕр чăтаймарĕ:

— Пирĕн снайпер нимĕçе икĕ хутчен петĕм терĕ. Анчах иккĕмĕш пуля шăтарнă вырăн çук. Унăн та "молоко" пулать-и вара?

Любишкин сержант Овчарова çĕлĕкĕнчен пусса ăна çамрăкăн çамки çинех антарса лартрĕ.

— Эх, ешĕл калча! Капла каланăшăн Михайлов кӳренме те пултарать.

— Кӳренместĕп, — терĕ сийĕнчех Çĕпĕр вырăсĕ. — Эпĕ вăл епле пенине взвода килсен тепĕр куннех куртăм. Фашистсем атакăна çĕкленнĕччĕ ун чухне. Маттур, Михаил! Çухалса каймарăн, пĕрре персех пĕр нимĕçне çĕр çине ӳпĕнтертĕн! Ахальтен пирĕн взвод разведчикĕсем патне яман сана.

Ку сăмахсене илтсен Овчаровăн çаврака пит çăмартийĕсем хĕрелсе кайрĕç, пуçне вăл тӳрлетерех тытрĕ.

— Ну, мĕн те пулин асăрхарăн-и? — кулкаласа ыйтрĕ сержант.

— Çук-ха ...

— А вĕт пирĕн Михайлов халиччен те сывлăша пĕр пуля та ярса курман. Ăнлантăн-и?

Овчаров Михаил кун хыççăн обер-лейтенант билетне тепре сăнаса пăхрĕ, унăн хăмăр куçĕсем ку хутĕнче савăнăçлăн çиçсе илчĕç.

— Пульлисене пурне те "девяткăна" лектернĕ. Пĕр вырăна! Эх, манăн та çапла пеме вĕренесчĕ!

— Пакшана куçран лектерекен урăхла пеме те пултараймасть, — терĕ сержант, Михайлова юратса пăхса.

— Кайрăмăр! — терĕ лейтенант, снайперпа санитаркăна пуçĕпе сĕлтсе.

— Лейтенант юлташ, манăн нимĕн те ыратмасть! — Михайловăн çĕр пӳртри юлташĕсенчен пачах уйрăлас килмест.

Анчах лейтенант та снайпер камсемпе калаçма юратманнине лайăх пĕлет:

— Дивизи штабĕнчен шăнкăртаттарчĕç, Иван. Унта корпуспа арми хаçачĕсен корреспонденчĕсем килсе çитнĕ — рейхсфюрер Геббельса тăн кĕртме хатĕрленеççĕ пулас вĕсем. Санăн радиостанци микрофонĕ умĕнче те калаçма тивет пулмалла. Виçĕ талăк куç хупмарăм, терĕн. Çавăнпа сана лазаретра та пулин ик-виçĕ сехет çывăрттарса илесшĕн. Асту, Штаубера кам тата епле тĕп тунине пĕлсен, санпа кĕрешме Гитлер пĕр снайпер мар,

снайперсен отделенине яма хушĕ. Атя, кану сана халĕ питĕ кирлĕ, — терĕ вăл.

Ку сăмахсен вăйĕ чăнахах витерет иккен Михайлова. Вăл сак çинчен тăчĕ те шинельне тăхăнма тытăнчĕ.

— Килĕшетĕп, лейтенант юлташ!

Çапах та взвод командирĕпе мухтавлă снайпер хăйсен планне пурнăçлаймарĕç — малтан тулта машина кăшкăртни илтĕнчĕ, унтан çĕр пӳрте полк агитаторĕ Сорокин аслă лейтенант кĕрсе тăчĕ. Пурне те сывлăх суннă хыççăн вăл Михайлов снайперпа взвод командирне полк шатбĕнче кĕтни, вăл унта разведчиксене лартса кайма машинăпа килни çинчен пĕлтерчĕ.

— Çирĕм минутран полк командирĕ патĕнче пулатпăр, — терĕ вăл аллинчи сехетне пăхса илсе. — Çав тĕле пирĕн штаба корпус командирĕ килсе çитмелле.

Михайлова вăл лайăх паллать, çавăнпа унăн аллине хыттăн тытса чăмăртарĕ, юлташла сĕнчĕ:

— Нимĕç обер-лейтенанчĕн документне илме ан ман, снайпер винтовкине те!

— Манăн çав ăнăççăр снайперăн пульли те пур, — сасартăк перçе ячĕ Михайлов.

Полк агитаторĕпе вăл вăрçă пуçланиччен пĕр вăрман хуçалăхĕнче ĕçленĕ, çавăнпа снайпер аслă лейтенантпа çапăçусем лăпланнă вăхăтсенче Çĕпĕр тайгине аса илме юратать.

— Епле майпа? — тĕлĕнчĕ агитатор.

— Шăпах çак пуля пулăшрĕ мана нимĕç снайперне тĕп тума. Çак пуля ман сулахай хула шăйăрттарса кайрĕ те эпĕ выртакан çĕртен инçех мар темĕнле майпа çак тарана çитиччен сыхланса юлнă çамрăк йывăç вуллине чаклатса кĕрсе ларчĕ. Май килнĕ чухне, асăнмалăх тесе, ăна эпĕ çав йывăç вуллинчен чакаласа кăларса илтĕм. Сасартăк çӳлтен çăра тĕтре хупланса анни пулăшрĕ.

— Пульлине те хăвпа пĕрле ил, — хушрĕ аслă лейтенант, çавра ют пуля питĕ хăвăрт çĕр пӳрт тавра çаврăнса Михайлов патне каялла таврăнсан. Салтаксем тӳрех асăрхарĕç: фашист снайперĕн пульли пирĕннин-

чен йывăртарах. Епле шикленмен Михайлов хăйĕн аллипе çавнашкал эксперимент ирттерме? Нимĕн те хушса калаймăн — чăн-чăн паттăр!

Тепĕр самантран полк штабĕн машини хула еннелле çил пек вĕçтерсе курăнми те пулчĕ.

Эпир кунта Ф. Ситта майорăн хăй редактор пулнă "Защитник Родины" хаçатăн виçĕ номерĕнче кун курнă "У лжи ноги коротки" очеркне пĕтĕмпе тенĕ пекех пичетлес терĕмĕр. Унтан-кунтан çеç пăртак кĕскетнĕ ăна. Очеркне чăваш писателĕсен союзĕнче ĕçленĕ чухне чăваш писателĕсем вăрçăра çапăçни çинчен кĕнеке хатĕрленĕ май союзăн правлени председателĕ запасри полковник Н.С. Дедушкин панăччĕ.

Вăрçă хирĕнче çырнă çак очерк Ленинград блокадинчи Хĕрлĕ Çар чаçĕсенчи лару-тăрăва питĕ лайăх, уçăмлăн та ĕненмелле сăнласа кăтартать. Очерк тĕсĕллĕ произведенире, ялан тенĕ пекех, пуринпе те интересленекен сăнавçă пур, вăл кĕтмен çĕртен тенĕ пек тĕрлĕ çынсемпе тĕл пулать, унтан вара вĕсем çинчен каласа парать. Каласса вара хăй мĕн курни е илтни çинчен çеç каласа кăтартать. Çавăнпа монографи пуçламăшĕнче хăш-пĕр тĕпчевçĕсем очерка документлă жанр тесе шутлани çинчен асăннăччĕ, анчах вăл илемлĕ очерк та пулма пултарать, унăн никĕсне вара пурнăçра пулса иртнĕ чăн-чăн пулăмсемех хывăнма пултараççĕ.

"У лжи ноги коротки" очеркра чăн-чăн очеркла пулăм тĕл пулать: фронтăн малти линийĕнчи окопсене кайса дивизи хаçачĕн редакторĕ Ф. Ситта унти чи хăюллă та паттăр разведчиксемпе паллашать. Разведчиксем хушшинче çирĕм икĕ фашиста леш тĕнчене ăсатнă паллă снайпер Иван Михайлов та пур. Çавăн çинчен илемлĕ очерк çырма шутланă вăл. Анчах редактор разведчиксен çĕр пуртне пырса кĕриччен унта хайхи пулас очерк геройĕ те анчахрах "сунартан" тавраннă иккен. Вăл Михайлов кам пулни çинчен кĕскен те уçăмлăн сăнласа парать. Снайпер Çĕпĕр вырăсĕ, чĕмсĕртерех этем, сăмах çаптарма юратмасть, хăйĕн сунарçă вăрттăнлăхĕсене те уçса памасть. Хăйне ытти салтаксенчен нимĕн чухлĕ те уйрăм тытмасть. Çĕпĕр тайгинчи

сунарта вăрçăччен пакшасене куçĕсенчен тивертни çинчен тахçан пĕрре салтаксем хушшинче асăрхамасăр персе янă та — уншăн та ӳкĕнет. Хăй хыçĕнчех блокадăри Ленинград пулнине пĕлет вăл, ĕмĕчĕ çапах та — Берлина çитесси, унччен хăйĕн снайпер винтовкипе çĕр фашиста тĕп тăвасси. Автор та Михайлова салтаксенчен уйăрса сăнламасть, мĕншĕн тесен пĕлет: взводри кашни разведчикăн, лейтенантран пуçласа подразделенине хальçехрех кăна килнĕ Овчаров Михаил таранах, пĕр туйăм — Тăван çĕршыва чунтан юратни, пĕр тĕллев — тăшмана каялла, ăçтан килнĕ çавăнталла хăвалама тытăнасси. Çапăçусене те кăтартман очеркра, боецсен характерĕсем мĕнле майпа улшăнса çирĕпленни те курăнмасть. Çапах та писатель çырнине вуланă май — телефонистăн хăйĕн аппарачĕ умĕнчен пăрăнма та вăхăт çук; кĕске вăхăта тăпланнă тавралăхра сасартăк пулемет такăлтатни е тупă хаярăн ухлатни илтĕне-илтĕне кает; аякра Ленинград çине бомбăсем тăкса тавраăнакан тăшман самолечĕсем курăнаççĕ, пирĕн зениткăсен вучĕ витĕр вĕсене ирĕклĕн тухма çук: иккĕшĕ-виççĕшĕ тĕтĕм кăларса çĕр çинелле тăрăнать — Хĕрлĕ Çар тăшмана хулана кĕртес мар тесе кĕрешнĕ вăхăтрах ăна кĕтмен çĕртен вăйлă çапса антăратса хăйĕн йăви патнелле хăваламашкăн ерипен-ерипенех вăй пухса пынине туятăн.

Очеркра вулакан чунне çав тери хускатакан пĕр деталь пур, вăл — Михайловăн сакăр вунă çичĕ çулхи аслашшĕн кăштах ӳпкелесе çырнă çырăвĕ.

Ф. Ситта очеркĕнче çирĕп сюжет та, композици те çук пек туйăнать малтанласа. Анчах ку çиелтен çеç çапла курăнать. Очеркри эпизодсене автор пĕр-пĕринпе питĕ тачă çыхăнтарса пырать. Çакна тума унăн очеркĕнче автор та, калавçăпа калуçă та, геройсем каласа кăтартни те пулăшаççĕ. Пур очеркра сюжет. Вăл, тĕрĕссипе, дивизи редакторĕ разведчиксем патне пынинчен мар, Михайлов снайпера писатель çĕнĕ те тĕлĕнмелле хыпар — Ленинград фронтĕнчи хĕрлĕ снайпера пĕтерме фашистсен тĕп йăвинчен Берлинран ятарласа чаплă снайпер, Гитлер аллинчен икĕ хĕрес илме тивĕç пулнă Ганс Штаубер обер-лейтенант килесси çинчен пĕлтернинчен пу-

çланать. Михайлов аллинчи снайпер винтовкине çепĕççĕн ачашласа илет, редактор куçĕнчен хăюллăн пăхса çапла тавăрать: "Килтĕр. Эпĕ ăна кĕтсе илме хатĕр". Пуçланать вара кĕрешӳ!

Очерк сюжетне çапла майпа темиçе эпизода пайлама пулать: Гитлерăн юратнă снайперĕ çинчен пропаганда рейхсминистрĕ Геббельс радиопа тухса калаçни; Штаубер хăйне валли меллĕ вырăн шыранине Михайлов питĕ тимлĕн сăнани; совет снайперĕпе фашист снайперĕ хушшинче эрнене пынă вăрттăн кĕрешӳ; Михайлов чеелĕхĕ тата вăл Штаубера тĕп туни.

Çак тĕп эпизодсемпе çыхăннă, вĕсене лайăхрах ăнланма пулăшакан пĕчĕкрех эпизодсем те сахал мар Ф. Ситта очеркĕнче. Тĕслĕхрен, пирĕн снайпер фашиста çĕнтернипе çеç çырлахмасăр унăн документне те хăйпе пĕрле фронт линийĕ урлă илсе каçни. Çакăнта совет снайперĕн чăн-чăн пултарулăхĕ палăрать. Михайлов фашист снайперĕ йăнăшасса талăкĕ-талăкĕпе кĕтекĕте сăнанă май унăн хăтланăвĕсене тишкерет, вăл еплерех кăмăллă çын пулнине пĕлме тăрăшать. Снайперсем — пирĕннисем те, фашистсем те — "ухутана" тухнă чухне хăйсен документчĕсемпе япалисене подразделенире командира упрама шанса хăварнă. Ара, те таврăнайĕха вăл черетлĕ "сунартан", те унтах вырtса юлĕ? Михайлов хăй те ун пек чухне нихçан та документчĕсене пĕрле илмен. Анчах вăл Ганс Штаубер, Гитлер аллинчен наградăсем илнĕскер, урăхларах нимĕç пулнине чухласа илет: мăн кăмăллă, салтаксене ним вырăнне те хумасть, хăйĕн документчĕсене никама та памасть (тен, хаклă çĕрĕ е çавăн йышши япаласем те пулнă-ха унăн?), мĕншĕн тесен тăшмана ку таранччен пĕрре те хăйĕн серепинчен вĕçертсе курман. Кунта та, Хĕвел тухăç фронтĕнче, вырăс снайперне тĕп тăвасси пирки иккĕленмест. Çакна лайăх тавçăрса илнĕ Михайлов обер-лейтенантăн документчĕсене ун çумĕнчен кăларса разведчиксен çĕр пӳртне таврăнма шут тытать те ĕнтĕ. Вăл йăнăшман.

Çапах та очерк сюжечĕн чи хĕрӳллĕ вырăнĕ (кульминаци) Михайлов фашист снайперне улталаса тĕп тума

хăйшĕн питĕ хăрушă меслет суйласа илни. Кунта та Çĕпĕр сунарçин çивĕч ăс-тăнĕ çеç мар, унăн чăн-чăн паттăрлăхĕ те курăнать. Питĕ лайăх пĕлет вăл: икĕ снайпер хушшинчи кĕрешӳ пĕриншĕн вилĕмпе çеç вĕçленме пултарать. Пĕлет, çав хушăрах хăйĕн вăйне те шанать — фашист снайперĕ ăçтарах хĕсĕнсе выртнине е ларнине тĕрĕс палăртас тĕллевпе нимĕн чееленмесĕр ăна хăйĕн сулахай хулне кăтартма шутлать. Кăтартать те! Суранлатма та май туса парать. Анчах фашист вырăс чунне ăнланма пултараймасть — çавăнпа эрнене пынă куçа курăнман кĕрешӳре вăл мар, вырăс снайперĕ çиеле тухать. Çапах та очерк сюжечĕ çак çĕнтерӳпе вĕçленет теме çук, кĕрешӳ малаллах пырать.

Çакна Ф. Ситта ытти нумай очеркĕсенче лайăх сăнласа парать, хăйĕн ентешĕсем Ленинграда ытти совет халăхĕсен ывăлĕсемпе пĕрле паттăррăн хӳтĕлени ăна хаçат валли çĕнĕрен те çĕнĕ очерксем çырма хавхалантарать, чи лайăххисене Шупашкарта тухакан хаçатсемпе альманахсене, кĕнеке издательствине ярса парать. Тĕслĕхрен, "Илемлĕ литературăн" 1944 çулта тухнă 17-мĕш кĕнекинче унăн "Паттăр салтак" очеркĕ пичетленет. Унăн содержанийĕ те питĕ кăсăк, вуланăçемĕн вулас килет.

Алексей Горскипе Ф. Ситта 1943 çулта фронтăн чи малти окопĕсенче тĕл пулать. Горский — шăпах "Паттăр салтак" очеркăн тĕп геройĕ. "Часах çапăçу пуçланмалла, — пĕлтерет вăл дивизи хаçачĕн редакторĕ чăваш писателĕ пулнине пĕлнипе хавхаланнăскер, — эпĕ ку хутĕнче те нумайрах фашиста пĕтерме ĕмĕтленетĕп. Халĕ эпĕ, çак вăхăтра, юратнă Тăван çĕршыв, хамăн çемье, инçетри Шупашкар çинчен шухăшлатăп. Урасемсĕр тăрса юлсан, тăшман патне хырăмпа шуса çитетĕп. Суккăрланса юлсан, салтак туйăмĕпе çав-çавах тăшмана шыраса тупса унăн пырне çыртса тататăп".[42] Унăн сăмахĕсенче Тăван çĕршыва, Чăваш Ене юратни çеç мар, ку туйăм чылай анлăрах та тарăнрах, вăл уншăн чи хаклă та чи çывăх япаласене — çемьене. Шупашкара, пĕтĕм совет çĕрне — юратнине палăртни яр уççăн сисĕнет.

Алексей Горский хăюллă та хастар салтак пулнă, хăй ертсе пыракан отделенире ăна пурте юратса хисепленĕ, унăн кашни приказне тăрăшса пурнăçланă. Писатель Алексей, мирлĕ пурнăçра ахаль налук инспекторĕнче ĕçленĕ çын, ун чухнех чăн-чăн салтак пулма мĕнле хатĕрленнине тата фронтра пĕрремĕш хут çапăçăва кĕнине ĕненмелле, ăста ӳкерсе кăтартать. Сержантăн сăпайлă та пĕр мухтанмасăр юхса пыракан калавĕнче салтакăн чи кирлĕ те чи паха енĕсем: хăюлăх, паттăрлăх, çапăçури ăсталăхпа çĕнтерӳ вăрттăнлăхĕ мĕнле майпа çуралса вăй илни, тăшмана парăнмалла мар тĕрекленсе пыни курăнать. "Пурăнас килет, питĕ, питĕ ... Çапăçу çĕнтерӳпе вĕçленнĕ хыççăн чунăм кашнинчех тăван ял еннелле туртăнать... Мĕнле пурăнаççĕ-ши унта мăшăрăмпа ачамсем? Аслă хĕрĕм те чăтаймарĕ вĕт, фронта тухса кайрĕ. Эх, пурăнас килет-çке, нумай пурăнас килет!"[43] — пĕрре хĕрӳленсе, тепре лăпланса чунне уçса парать атака пуçланас умĕн чăваш сержанчĕ чăваш писательне. Алексей Горский çинчен ун чухне çар хаçачĕсем сахал мар çырнă, унăн паттăрлăхĕн паллă енĕсемпе çапăçусенчи çитĕнĕвĕсем çинчен боецсен пухăвĕсемпе митингĕсенче паха тĕслĕх вырăнне кала-кала кăтартнă.

Çак çапăçура гварди сержанчĕ Алексей Горский паттăрсен вилĕмĕпе вилет. Ф. Ситта çапăçу мĕнле иртни çинчен нумаях çырмасть, çапах та унта хутшăннă боецсем пурте чĕррĕн курăнаççĕ. Кун кăлтавĕ — очерк авторĕ хăй те хăюллă та паттăр воин пулнинче. Унăн очеркĕсемпе тĕрленчĕкĕсем, статьясемпе репортажĕсем, фашистсене хирĕç кĕрешнĕ юлташĕсен аса илĕвĕсем "вăл Ленинграда тăшман çарĕсем хупăрласа выçăпа аптăратса тăнă çулсенче те, нимĕç авиацийĕ бомбăсем тăкнă вăхăтра та, фашистсен артиллерийĕ пĕр вĕçĕмсĕр снарядсемпе пенĕ чухне те этемлĕх халиччен курман хăрушлăхпа тискерлĕх умĕнче пуçне усманнине кăтартаççĕ"[44], — тесе çырнă А. Бусырев тĕпчевçĕ.

1944 çулхи февралĕн 23-мĕшĕнче Ф. Ситта "Защитник Родины" хаçата пичетлесе кăларма юлашки хут алă пусать. Фашистсем çав кун ир-ирех наступлени пуçлама хатĕрленеççĕ, совет çарĕн позицийĕсем çине хура

хĕреслĕ самолетсем пĕлĕт пек капланса килсе бомбăсем тăкма тытăнаççĕ. Тăшман бомбин катăкĕпе редактор йывăр аманать. Ăна хăвăрт медсанбата ăсатаççĕ. Хирург писатель суранне тимлесе пăхсан, тӳрех çапла команда парать: "Операци сĕтелĕ çине!" Анчах йывăр аманнă Ф. Ситтана операци те çăлса хăвараймасть, çав каçхинех медсанбатра паттăр майор куçĕсем ĕмĕрлĕхех хупăнаççĕ. Унăн вил тăпри халĕ те Ленинград облаçĕнчи пĕр ял çăвинче упранать. Унăн ячĕ яланлăхах чăваш литературин историне кĕрсе юлчĕ.

Чăваш писателĕ Ф. Ситта Ленинграда хӳтĕлекен дивизисен хаçатне редакциленĕ вăхăтрах унти çар чаçĕсенче — пехотăра, артиллерире, авиацире, тинĕс-çар подразделенийĕсенче — совет халăхĕн ывăлĕсемпе пĕрле пин-пин чăваш паттăррăн кĕрешет (тĕслĕхрен, вăрçă хыççăнхи мирлĕ пурнăçра СССР халăх артисчĕ ятне илнĕ М. Денисов юрăçă т.ыт.те.).

Вĕсенчен пĕри Шупашкар районĕнче çуралса ӳснĕ чăваш офицерĕ Иван Смирнов. 1942 çулхи хаяр çапăçура вăл пуçне хурать. Унăн ячĕ вара пĕтĕм фрончĕпех янраса каять: çар хаçачĕсем "унăн тĕлĕнмелле паттăрлăхĕ çинчен очерксемпе тĕрленчĕксем пичетлеççĕ, поэтсем сăвăсем хываççĕ, пин-пин листовка салтаксене çапăçусенче чăваш халăхĕн харсăр та чаплă ывăлĕн тĕслĕхĕпе тăшманпа юлашки юн юлмиччен кĕрешме чĕнсе калать".[45]

Ленинград поэчĕ Вс. Рождественский "Смирнов пулеметчик çинчен çырнă юрă" сăвă хайлать:

На Родине нашей, которой нет краше,
Немало отважных сынов.
И есть между ними родное нам имя —
Герой-пулеметчик Смирнов.
Фашистские твари на нас наступали,
Огнем все сметали с земли.
Без счета их было, но черною силой
Смирнова сломить не могли.

Поэт сăмахĕсем Чăваш çĕрне те çитсе сарăлаççĕ. Иван Смирнов паттăррăн вилнĕ хыççăн вун ултă çул иртсен, 1958 çулта чăваш композиторĕ Григорий Лис-

ков Вс. Рождественский сăввине музыка çине куçарнă. Çак чаплă юрра нотипе пĕрле Ленинград çар округĕн "На страже Родины" хаçачĕ çав çулхи мартăн 29-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă.

Чăваш халăх поэчĕ Семен Элкер вăрçă умĕнхи çулсенчех патриотизм темипе сăвăллă произведени сахал мар çырнă. Критиксем уйрăмах унăн "Фашизма вилĕм" сăвăлла драмине пысăк хак параççĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче те вăл патриотизм темипе сахал мар сăвă, статьясем çырать. Иван Смирновăн паттăрлăхĕ ăна пысăк поэма-очерк çырма хавхалантарать. "Вăл вилĕмсĕр" сăвăлла очерка ун чухне пĕтĕм чăваш халăхĕ юратса вуланă, шкулта ачасем пăхмасăр вĕреннĕ, драма кружокĕсем унăн сыпăкĕсене клубсенче, вулав çурчĕсенче лартса панă.

Поэма сюжечĕ кăткăс мар. Унăн малтанхи сыпăкĕсенех поэт хула-геройпа чĕрĕ çынпа калаçнă пек пуçласа ярать, унăн иртнĕ çулĕсене аса илнĕ май ăна тунă çĕре пĕтĕм Раççей халăхĕпе пĕрле чăвашсем те йышлăн та хастарлăн хутшăннине палăртать. Халĕ çак хула пысăк хăрушлăхра. Фашистсем ăна тимĕр блокадăпа хупăрланă. Хаяр тăшман хула çыннисене выçăпа аптăратса унăн вăйне пĕтересшĕн тапаçланать, темĕн тĕрлĕ тупăран татти-сыпписĕр персе аркатса çĕрпе танлаштарасшăн мекĕрленет, çĕр-çĕр самолетпа бомбăсем тăкса пĕтĕм керменсемпе пурăнмалли çуртсене ишĕлтерсе-çунтарса вĕсенчен кăмрăкпа кĕл куписем çеç хăварма ĕмĕтленет. Анчах та фашизмăн выçă куçĕ Ленинград патĕнче нихçан тăранаяс çук. Ленинградшăн пĕтĕм çĕршыв тăрăшать. Смирнов патне те амăшĕ тăшмана хирĕç хăюллăн çапăçма пехил ярать, ял çыннисем çĕнтерӳ валли мĕн-мĕн тунине çырса пĕлтерет:

Кĕрешĕр паттăр улăпсем пек,
Хăвалăр урнă тăшмана,
Аркатăр, чикĕр çăвана!..
Эпир кунта ырми-канмисĕр
Ĕçлетпĕр пур вăя хурса,
Тыр-пул ĕçне хисеп-виçесĕр
Тăватпăр пурте тăрăшса,

Сире валли фронта яма
Ир-каç çыхап алсиш, чăлха...[46]

Çапла пуçланать сăвăлла очерк. Автор малалла герой сăн-сăпатне тата вăл хăйне чи йывăр лару-тăрура та çирĕп те хăюллăн тытнине сăнласа кăтартать. Иван Смирновăн çумри юлташĕсем те хăй пекех хăюллă та маттур: Фомичук украинец, Зайцев çармăс, Фролов вырăс, Платунов мордвин, Вахитов тутар, — пурин те вĕсен пĕр çирĕп шухăш, пĕр аслă тĕллев — ирсĕр тăшмана чăн-чăн тăван пек шутланакан хула патне çывхартас мар, ăна юлашки сывлăш юлмиччен алăри пăшалпа та гранатăпа хŷтĕлес. Хŷтĕлеççĕ те. Поэт вĕçĕмсĕр пыракан çапăçусене çав тери пысăк курайманлăхпа сăнласа парать.

Иван Смирнов яланах малтисен ретĕнче, кăштах канма та, ирĕкреххĕн сывлама та вăхăт çук унăн. Тăшмансем амантнă хыççăн ăна вăйпа тенĕ пекех госпитале выртараççĕ, анчах вăл унтан сывалса çитичченех фронтăн малти ретне, хăйĕн кĕрешŷри юлташĕсем патне таврăнать. Ĕçсем хĕрнĕçемĕн хĕрсе пыраççĕ, çапăçусем хаярланаççĕ. Иван Смирнова çĕнĕ боевой приказ параççĕ: пĕтĕм таврана сăнаса-асăрхаса тăма май паракан сăрта йышăнмалла. Анчах тăшман та çавăнталлах туртăнать. Ирĕксĕрех унпа алăпа тытăçса çапăçма тивет. Смирнов кунта та фашистсенчен вăр-вартарах: нимĕç офицерне хăйне лектериччен пеме ĕлкĕрет, пĕр салтакне муталаса кăнтать, юлташне вилĕмрен çăлать.

Çакăн пек паттăрлăха тăшман чăтаймасть, Смирнов роти приказа пурнăçлать — çŷллĕ сăрта фашистсенчен маларах йышăнать. Анчах кунпа лăпланмалли çук-ха: сăрта хăвăн аллунта тытса тăма ăна çавăрса илнинчен те йывăртарах. Фашистсем пĕр контратакăран тепĕр контратакăна çĕкленеççĕ. Тăшман вăйлă, йышлă. Пирĕннисене питĕ йывăр: пĕрин хыççăн тепри пуçĕпе çĕр çине чикĕленет. Пур пулеметсем те стройран тухнă. Очерк-поэма сюжечĕн чи вĕри тапхăрĕ çывхарса килет — Иван Смирнов чĕрĕ боецсенчен тăр пĕччен тăрса юлать, çав хушăрах фашистсем çывхарнăçемĕн çывхараççĕ,

нимĕç танкĕн гусеницисем те юнашар тенĕ пекех кĕмсĕртетеççĕ. Çапах та Смирнов ăсне çухатмасть: тăрса каялла та тармасть, аллисене çĕклесе тăшмана та парăнмасть. Куçĕсем çеç вутпа çиçеççĕ — чăтмалла, татах чăтмалла! Акă инçех те мар вырăсла хăватлăн "ура" кăшкăрни илтĕнсе каять. Апла тăк пулăшу çывхарать, тен, тата темиçе минут çеç тытăнса тăмалла, вĕлтлетет çирĕп шухăш çамрăк командир пуçĕнче. Вăл юлашки вăйне пухса, свастикăллă нимĕç танкĕ айне юлашки гранатине ывăтать. Танк чарăнса пĕр вырăнта çаврăнма тытăнать, анчах хăй тĕп тунă танк айĕнче пирĕн герой та вилет.

Поэма вĕçĕнче пĕчĕк эпилог пур, унта совет салтакĕсем тăшмана çапса аркатни, вĕсен çĕнтерĕвĕ çинчен каланă.

Чăваш халăх поэчĕ С. Элкер çырнă "Вăл вилĕмсĕр" очерк-поэма Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çинчен чăваш писателĕсем хайланă чи паха произведенисен шутне кĕрет. Ăна чăваш литература критикинче пысăк хак панă. Леонид Агаков палăртнă тăрăх, ..."Вăл вилĕмсĕр" иртнĕ вăрçăпа унăн геройĕсем çинчен çырнă чи лайăх кĕнекесенчен пĕри! Вăл пирĕн çамрăксен чи юратнă кĕнеки пулса тăрать".[47]

"Вăл вилĕмсĕр" произведение пурнăçа пĕлсе, пурне те лайăх майлаштарса çырнă, — тесе палăртнă Н. Дедушкин критик. — Уйрăм вырăнсене, уйрăмах пĕрремĕш çапăçăва, Смирнов вилекен сержантпа сыв пуллашнине, траншейăри тытăçăва, нимĕç танкĕпе вăл юлашкинчен пĕччен кĕрешнине поэтика меслечĕсемпе питĕ ăстан кăтартса панă".

М. Сироткин та "С. Элкер пултарулăхĕ" статьяра "Вăл вилĕмсĕр" произведенин лайăх енĕсене курмасăр юлма пултарайман. Çапах та очерк-поэма çитменлĕхĕсене те кăтартса хăварнă: поэтăн тăван халăха унăн паттăр ывăлĕ çинчен хăвăртрах каласа кăтартас тесе васкама тивнĕ, анчах та васкани поэма содержанийĕпе формин пахалăхне самай чакарнă. М. Сироткин хăйĕн статйинче поэма ытла тăсăлса кайнине, унăн тĕп геройне сăнласа панă чухне ăна ăçта, хăçан тата мĕнле-

рех вырăнсенче кăтартмалли çинчен тĕплĕнрех шухăшламаллине палăртнă. Ытларах пĕчĕк пĕлтерĕшлĕ эпизодсене кăтартнă пирки, детальсене суйласа илнĕ чухне вĕсен витĕмлĕхĕ çине сахалтарах пăхнăран тĕп герой сăнарĕ ирĕксĕрех вăйсăрланать, тĕксĕмленет, тенĕ. Поэмăри ытти сăнарсен кăмăл-туйăмне, сăнпитне, чĕлхине те пĕр-пĕринчен уйăрса илме йывăртарах. Вулакан вĕсене ячĕсем тăрăх çеç асра тытса хăварать. Поэма чĕлхи, С. Элкерĕн ытти поэмисемпе танлаштарсан, чухăнтарах, илемлĕх мелĕсемпе синтаксис эрешĕсем енчен те вырăнăн-вырăнăн шупкарах.

С. Элкер юлташĕсемпе критиксен шухăшĕсене, сĕнĕвĕсене шута илмесĕр хăварма пултарайман. "Вăл вилĕмсĕр" поэмăна пĕрре çеç мар тишкерсе тухать, çитменлĕхсенчен тасатать, тĕп герой сăнарне тарăнлатса вăйлатать, чĕлхе кăлтăкĕсене те чылайăшне пĕтерет. Поэма çакăн хыççăн самай илемленет, якалать, вара иккĕмĕш хут пичетленсе тухать.

Вăрçă çулĕсенче чăваш писателĕсемпе поэчĕсем илемлĕ публицистикăра уйрăмах пысăк ăсталăх кăтартаççĕ. Н. Тихонов: "Писатель-публицист сăмахĕ пĕтĕм совет халăхне илтĕнет", — тенĕ пек, чăваш писателĕн хĕрӳллĕ сассине те пĕтĕм чăваш халăхĕ тимлĕн итлет. Вăрçă пуçланиччен чăваш писателĕсем нихçан та хаçат ĕçне унашкал хастарлăн хутшăнман. Прозаиксем, поэтсемпе драматургсем илемлĕ публицистика жанрĕсене искусство вăйĕпе пуянлатаççĕ. Илемлĕ очерк çеç мар, тĕрленчĕк, статья, фронтран килнĕ çырăва ăнлантарса пани, кун кĕнекине çырса хунă хĕрӳллĕ шухăшсем — çаксем пурте хаçат страницисенче вырăн тупаççĕ. Вĕсенче халăхăн иксĕлми вăйĕ, тăшмана çĕнтерессишĕн мĕн пуррине пĕтĕмпе пама хатĕрри тата тискер фашизм халиччен никам пусмăрне чăтма пултарайман çĕршывра хăйĕн вилĕмне тупасса çирĕп шанни уççăн палăрса тăрать.

Петĕр Хусанкай поэт хăйĕн "Тăван çĕршыв" статйинче[48] чăваш тата тутар колхозĕсенче ял çыннисемпе, тăван ялĕнче хĕрарăмсемпе тата ачасемпе тĕл пулса ка-

лаçни çинчен каласа парать, вĕсем Хĕрлĕ Çар хăватне шанни, пирĕн салтаксем фашистсене йывăр кĕрешӳре çав-çавах çапса аркатасса ĕненнине пĕлтерет. Асăннă статьяра та, хаçатра çапса кăларнă "Туссен тĕл пулăвĕ", "Геройсене мухтав" тата ытти статьясенче те вăл вырăс, чăвашпа ытти халăхсем историре йĕр хăварнă кĕрешӳсенче ирĕклĕхе нихçан та никама та паманнине, ютран килнĕ тăшмансемпе яланах паттăрăн çапăçса вĕсене ăçтан килнĕ çавăнтах хăваласа янине тĕслĕхсемпе çирĕплетет. П. Хусанкай публицистикăллă тĕрленчĕксенче фашистсен тискерлĕхне, вĕсем совет халăхне выльăх вырăнне хурса асаплантарнине тăрă шыв çине кăларать, Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе боецĕсене çапăçусенче паттăр та хăюллă пулма, кĕрешӳре яланах фашистла Германие çĕнтерес шанчăклă туйăмпа хавхаланма чĕнсе калать. Сталинград фрончĕн чаçĕсемпе хĕвел анăçнелле наступленине куçсан, "Эпир пыратпăр" очеркра вăл çапла çырнă: "Эпир аманса юнланса пĕтнĕ, тăшман таканлă аттисемпе пусса асаплантарнă çĕрсемпе утса пыратпăр. Нумай пулмасть çеç каялла çеçке çурнă йывăçсемпе витĕннĕ ялсем вырăнĕнче пушар юлашкисем хура тĕтĕмпе йăсăрланаççĕ... Кил-çуртсăр тăрса юлнă, ирĕксĕрте асапланса имшерленнĕ стариксем, хĕрарăмсемпе ачасем, тăшман çĕрĕ çине хăваласа каясран ăнсăртран сыхланса юлнăскерсем, сивĕнсех çитмен кĕле пăтратса килти ăпăр-тапăра шыраççĕ ... Боец юлташ! Хальхи вăхăтра та нумай-нумай вырăс хĕрарăмĕ тăшман атти айĕнче асапланать. Çаплах-ха нумай-нумай вырăс çынни Гитлер çын çиенĕсен сăнчăрлă аллинче йынăша-йынăша сывлама чарăнать. Васка вĕсене ирĕке кăлармашкăн. Вĕсем сана кĕтеççĕ. Вĕсем пирĕн тăван Хĕрлĕ Çара çеç шанса кĕтеççĕ.

Так вперед, огнем сметая
Ненавистный сброд!
Месть народная, святая
Нас зовет: вперед!»[49]

Дивизи хаçатĕнче ĕçленĕ тепĕр чăваш писателĕ — Леонид Агаков. Вăл та, Ф. Çиттана Н.Илпек пекех, чи

йывăр вăхăтра фронтăн чи малти окопĕсене ситсе унти салтаксемпе, сержантсемпе калаçма, вĕсен шухăшĕ-ĕмĕчĕсемпе кăсăкланма, çапăçусем хушшинчи вăхăта боецсем мĕнле ирттернипе паллашма юратнă. Пĕрре çеç мар салтаксемпе пĕрле тăшмана атакăланă çĕре те хутшăнма тивнĕ унăн.

Вăрçăн малтанхи уйăхĕсенче пирĕн çар чаçĕсем йывăр çапăçусемпе çĕршыв ăшнелле чакса пынă чухнех тăшман наступленине чарса лартма пултаракан операцисем пуçлама, ун хыççăн çĕнтерӳллĕ наступленине куçма условисем хатĕрленĕ. Ку енĕпе пĕрремĕш ăнăçлă утăмсем тусанах çар очеркисчĕсем боецсемпе командирсен паттăрлăхĕпе кĕрешӳри çитĕнĕвĕсем çинчен çырса кăтартнипе çеç çырлахма пăрахнă. Пичетре ку таранччен майĕпен-майĕпенех пухăнса пынă опыта тишкерсе пĕтĕçтерекен, уйрăм çар операцийĕсене тимлĕ пăхса тухакан, вăрçăн тĕрлĕ тапхăрĕсенче тĕл пулакан пĕрешкелтерех пулăмсене лайăхрах асăрхакан, хăш-пĕр пĕтĕмлетӳсем тăвакан очерксем курăнма тытăннă. Çав очерксем çар чаçĕсен кăмăл-туйăмне çĕклеме, операцисене малтанхинчен урăхларах — ăслăнрах, анлăрах, пур енчен те лайăхрах хатĕрленсе ирттерме пулăшнă. Командирсемпе боецсем хăйсем йышăннă участоксенчи пĕтĕмĕшле ларутăрăва тĕплĕнрех тĕпчесе пĕлме вĕсен çар пĕлĕвĕ уйăхсеренех ӳссе, сарăлса пынă, ăсталăхĕ те çирĕпленсе вăйланнă.

Çакăн пек çĕнĕлĕхсене Леонид Агаков "Патриот Родины" хаçатăн 1942 çулхи сентябрь уйăхĕнчи номерĕсенче пичетленнĕ "Чи малти окопсенче çырнă заметкăсен" ярăмĕнче кăтартса пама тăрăшнă. Агаков — вăрçă пуçланичченех çар темипе калавсемпе очерксем çырса палăрнă писатель. Вăл финн вăрçине хутшăнса хĕрӳ çапăçусенче пулнă, Маннергейм оборона линине аркатма тĕллев тытнă Хĕрлĕ Çар чаçĕсен çапăçури çитменлĕхĕсенчен тухса тăнă йывăрлăхсене чăтнă, вăрçă опычĕсĕрех планланă наступленисем путланнине хăй куçĕпе курнă.

"Чи малти окопсенче çырнă заметкăсенче" пирĕн çар подразделенийĕсен тактикинчи çĕнĕлĕхсене палăр-

тать, командирсемпе боецсем тăшманпа çапăçса пухнă опыта анлăрах та тухăçлăрах усă курма тытăннине сăнласа кăтартать, окопсенчи йĕрке çирĕпленсе, лайăхланса пынине курать. Çак пысăк мар очерксен ярăмĕнче писатель фронтри лару-тăрури çĕнĕлĕхсене, пĕрремĕш çĕнтерӳсем хыççăн çар чăçĕсенчи кăмăл-туйăм палăрмаллах лайăхланнине, салтаксен пурнăç условийĕсем улшăннине, çарсем халĕ çиелтен пăхсан та урăхларах, хастарлăрах сăнлăн курăннине асăрхать.

Нимĕн те тăваймăн, наступленине чарса лартнă хыççăн тăшмана çĕршыв ăшнелле урăх кĕртес мар тесе йĕркеленĕ хӳтĕлев линийĕсенчи хаяр тытăçусем çарсен çиелти сăнне те улăштараççĕ, çавăнпа очеркиста малтанласа асăрхамасăр юлма пултарнă ахаль çеç ӳкерчĕк те тĕлĕнтерсе ярать: тăшман тупписен снарячĕсем шартлатса çурăлакан, бомбăсем шăхăрса ӳксе çĕре фонтан пек çĕклекен, пулеметсем икĕ енчен те хире-хирĕç шатăртаттаркан хĕрӳ вырăнтан пилĕк çухрăмри ял хĕрринчи çурт умĕнче боецсем лăпкăн, пăлханмасăр, тахçанах хăнăхнă евĕр юмах çаптарса тăраççĕ — вĕсем кунта техĕмлĕ ял мунчинче милĕкпе çапăнса çăвăнма килнĕ иккен.

"Фронтри çак мирлĕ ӳкерчĕке сăнанă май, — тесе çырать Л. Агаков, — хăв лайăх йĕркеленнĕ çар чăçĕ вырнаçнă çĕрте пулнине çеç мар, тăшманпа çапăçма хăюлланса çитнине те туятăн. Çынсем кĕрешеççĕ, окопсенче лараççĕ, атакăна та çĕкленеççĕ, çав хушăрах мунчара çăвăнма та, хырăнма та, кĕпе-тумтир ылмаштарма та манмаççĕ. Ку — питĕ лайăх йĕрке. Çарти унашкал çирĕп йĕркесĕр вара тăшмана çĕнтерме çук".

Енчен те вăрçă пуçламăшĕнче очеркистсем совет халăхĕ фашистсене çав-çавах çĕнтересси çинчен ĕнентерӳллĕн çырнă чухне совет çыннисен тăшмана çапса аркатас кăмăлĕ питĕ çирĕп пулнине шута хунă пулсан, пирĕн çарсен пĕрремĕш çитĕнĕвĕсем хыççăн, уйрăмах нимĕçсене Мускав патĕнче 1941 çул вĕçĕнче вăйлăн çапса аркатнă хыççăн ку çирĕп туйăм фронтсенчи ырă пулăмсемпе фактсем çине таянать, мĕншĕн тесен вĕсем пулас чаплă çĕнтерӳн малтанхи хыпарçисем пулса тăнă.

Тăшмана пĕтĕмпе çапса çĕмĕриччен питĕ инçе пулнăха, çапах та очеркистсем пирĕн çарсен Мускав патĕнчи наступленийĕ çапăçăвĕсенче, çар чаçĕсен кăмăлтуйăмĕ палăрмаллах улшăннинче пирĕн çĕршыв халăхĕ хаяр вăрçăра тăшмана пачах тĕп тăвасса, ăна чаплă çĕнтерӳпе вĕçлессе шантаракан паллăсем курнă. Шăпах çак енĕпе ĕнтĕ илемлĕ очерк çар пулăмĕсемпе вăрçă законĕсен, ыранхи кунăн çыхăнăвĕсен, аслă пуласлăхăн çивĕч те хăюллă тата шанчăклă разведчикĕ вырăнне йышăнать. "Ах, Алешка, пĕрле çапăçсаччĕ эпир. Асăма килеççĕ-çке Харьков патĕнчи çапăçусем, унтан Çурçĕр Донецкпа Дон çеçен хирĕ, вутлă Сталинградри чапа тухнă 62-мĕш çар... Пур çĕрте те паттăрччĕ эсĕ. Тăшман хаярччĕ çав, хаяр та вăйлăччĕ. Пире хамăра та вăй кĕрсе çитнĕччĕ ĕнтĕ. Тăшмана пуçĕпех аркатса тăкрăмăр. Хамăр çĕнтерессе эс те пĕтĕм чун хавалĕпе шанса тăраттăн. Чаплă çĕнтерӳре сан ырă яту та халăх хисепĕнче".[50]

Геринг рейхсмаршал Шупашкар çине бомбăсем пăрахтарать

Василий Ржановăн "Своими глазами" кĕнекин ум сăмахне Фаттых Булатов генерал çырнă. Писатель хăйĕн кĕнекинчи очерксенче совет салтакĕсен çапăçусенчи паттăрлăхĕ çинчен тĕплĕн каласа кăтартать, писателĕн фронтри пултарулăхĕпе вара ум сăмахра генерал палăлаштарать. "Эпĕ унпа 1943 çулхи апрель уйăхĕнче палăлашрăм. Шăпах Федюнинский генералăн 11-мĕш Çарне кĕрекен дивизине пырса çитнĕччĕ ун чухне (Брянск фрончĕ). Ытти ĕçсемпе пĕрлех дивизи хаçачĕ те интереслентерчĕ мана. Вăт çавăнта куртăм та эпĕ Василий Ржанов аслă лейтенанта. Вăл пирĕн пата Калинин фронтĕнчен килнĕччĕ.

Брянск фрончĕн Орловщинăра пуçланнă контрнаступленийĕ вăхăтĕнче эпĕ Василий Ржанов пултарулăпа та хăюллă çар журналисчĕ пулнине пĕлтĕм. Наступленин малтанхи çапăçăвĕсем вăхăтĕнчех дивизи хаçатĕнче Ржановăн çапăçу хирĕсенче çырнă заметкисем кура-

нма тытăнчĕç. Çакна та асăрхарăм: ăçта хаяр çапăçусем пыраççĕ, çавăнта Ржанов военкор çитет. Вăл салтак наукине лайăх пĕлетчĕ. Яланах салтаксем хушшинче курма пулатчĕ ăна, çавна пулах салтак пурнăçне те лайăх пĕлетчĕ вăл. Çавăнпа подразделенисенче ăна "пирĕн корреспондент" тесе чĕнетчĕç.

Нумай çапăçусене хутшăнчĕ Василий Ржанов. Разведкăна çӳрерĕ, чапа тухнă Дмитрий Колганов снайперпа пĕрле вăрттăн операцисене çӳресе вăл фашист снайперĕсене епле çĕнтерни çинчен тӳрех репортаж çырчĕ. Чăваш ялкорĕ пулнă Василий Ржанов тăшманпа перопа та, штыкпа та пĕр танах кĕрешетчĕ. Паттăрлăхпа хăюлăхшăн мана ăна Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ пама питĕ кăмăллă пулчĕ. 1944 çулта вут-çулăмра туптаннă корреспондента Мамонов подполковник ертсе пыракан полк агитаторне лартрĕç. Совет Союзĕн Геройĕ Мамонов ячĕпе Калининград облаçĕнче хула та пур халĕ. Полк командирĕ, вырăс, чăваш политработникпа туссем пулса тăчĕç. Ку ахальтен мар, çĕнĕ çĕрте В. Ржанов дивизири чи лайăх политработниксенчен пĕри пулса тăчĕ".[51]

Генерал хăйĕн аса илĕвĕнче В. Ржанов кăтартнă паттăрлăхсенчен пĕрне тĕслĕх вырăнне илсе кăтартать. «Ку ĕç, — тет вăл, — 1944 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнче Польшăра, Пултуск хулинчен çурçĕртерех пулса иртрĕ. Дивизи Нарев юхан шывĕ урлă каçатчĕ. Тĕп çул-йĕрпе Мамонов полкĕ пыратчĕ. Питĕ хĕрӳллĕ тытăçусем хыççăн боецсен пĕр пĕчĕк ушкăнĕ юхан шыв урлă ишсе каçса тепĕр енче пысăках мар лаптăк йышăнма пултарчĕ. Анчах тăшман пирĕн салтаксене пĕр чарăнми атакăласа вĕсене хăйăрлă çыран хĕррине хĕстерсе лартрĕ те пирĕн ытти чаçсене ниепле те юхан шыв урлă каçма памасть. Лару-тăру йывăрлансах çитрĕ. Наступлени чарăнса ан лартăр тесен, сулахай енче юлнă боецсен вăйĕпе нимĕçсен иккĕмĕш траншейине тытса илмелле, вара фашистсене çыран патĕнчен хăваласа ямалла та полкпа дивизин тĕп вăйĕсене шыв урлă каçма май туса памалла. Çакна тума тăшман пĕр чарăнмасăр персе тăнине пăхмасăр пульăсем айĕнех юхан шыв урлă ишсе каç-

малла та приказа памалла çеç мар, ăна ăнăçлăн пурнăçлассине йĕркелемелле.

Çак чи йывăр самантра ман пата 331-мĕш полк агитаторĕ Василий Ржанов чупса пычĕ.

— Генерал юлташ, мана юхан шыв урлă ишсе каçма ирĕк парăр. Приказа пурнăçлатăп".[52]

Нарев шывĕ снарядсемпе минăсем ӳксе çурăлнăран çăра фонтансемпе сирпĕнсе вĕресе тăнă, айккисенчен пулеметсем шатăртатнă. Сивĕ, пĕтĕм кĕлеткене çупăрлакан çил вĕрнĕ. Пăрлă шыв ал-урасене вылятма чăрмантарнă. Анчах çак йывăрлăхсене пăхмасăрах Ржановпа Борис Кириллов связист шыва сикнĕ. Юхан шывăн леш енне ишсе тухнă-тухманах Ржанов харсăр боецсен ушкăнне атакăна çĕкленĕ, тăшманăн иккĕмĕш линийĕнчи траншейăна вирхĕнсе кĕрсе фашистсем çинелле штыксемпе ыткăннă. Çакна кĕтмен тăшман, хăйĕн пысăк йышне пăхмасăрах, çыран патĕнчен хирелле тарма тытăннă. Паттăр агитаторпа унăн юлташĕсем çапла вара дивизин ытти подразделенийĕсене юхан шыв урлă каçса малалла кайма çул уçса панă. Хăватлă "ура" янраса кайнă, "... пирĕн салтаксем тăшмана чарăнма памасăр юхан шыв патĕнчен темиçе çухрăма хăваласа ячĕç. Кăпăкланса, сирпĕнсе, вĕресе тăракан шыв урлă дивизи хыççăн ытти чаççем ирĕккĕнреххĕн каçса Хĕвел анăçнелле васкарĕç.

Нарев патĕнчи çапăçура паттăрлăх кăтартнăшăн СССР Верховнăй Совет Президиумĕ В.Т. Ржанов капитана Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăларĕ".[53]

Василий Ржанов писатель кĕнекинче "Максим — Улăп" çинчен çырнă легенда пур. Сыпăкĕн айне "1943 çулхи июлĕн 11-12-мĕшĕсем, Калуга ращи" тесе палăртнă. «Паян эпĕ тепĕр хут 331-мĕш полка çитрĕм те хам кĕтмен çĕртенех çĕнĕ хыпар пĕлтĕм, — тесе çырать писатель-агитатор. — Николай Васильевич Мамонов, полк командирĕ эпĕ ун патне блиндажа кĕрсенех интересленсе çапла ыйтрĕ:

— Корреспондент юлташ, пирĕн полкра тăшманăн темĕн тĕрлĕ пысăк ушкăнĕпе хăюллăн кĕрешекен паттăр Улăп пур. Илтнĕ-и?

— Мĕн эсир, майор юлташ, епле майпа юмахри пек паттăр Улăпсене ӳстерме тытăнтăр? — тенĕ шӳтлĕрех сасăпа Ржанов. — Сирĕн улăпсем е тăшмана роти-ротипе вилĕм шăтăкне хăваласа кĕртеççĕ, е нимĕн мар фашистсен полкне хирĕç те харсăрăн тăраççĕ ...

— Ну, Дмитрий Колганова эсир хăвăр та лайăх пĕлетĕр, — чаплă снайпер çинчен аса илтерчĕ командир. — Чăн-чăн герой вăл, ăна виличченех палăк лартмалла. Тепĕр паттăр улăпĕ çинчен — Максим ятлă-ха вăл — эсир илтеймен пулĕ-ха. Ун çинчен юрăсем, симфони кĕвĕлеме пулать... Ку вăл чăн-чăн легенда!

— Каçарăр-ха... Максим — пирĕн çĕнĕ герой ячĕ-и е псевдонимĕ? — ыйтнă Ржанов полк командирĕн сăмахĕсенчен пăртак пăлханма тытăнса.

— Иккĕмĕш батальона Скуратов патне çитсе курăр-ха, вăл сире пĕтĕмпех тĕплĕн каласа кăтартĕ, — çакăн пек ориентир панă та Мамонов корреспондента хыçĕнчен пĕр кулмасăр кăшкăрнă: — Максимпа халăха паллаштармасан, истори пире каçармасть...»

"Максим"... Ку ятлă паттăр пирĕн полка ăçтан килсе лекнĕ-ши, тесе тĕлĕнсе шухăшлать В. Ржанов 2-мĕш батальона çул тытнă май. Тĕрĕссипе, дивизи хаçачĕн корреспонденчĕ чаплă вырăс снайперĕпе Дмитрий Колгановпа тĕл пулса паллашас умĕнхи пекех хумханма тытăнать.

Çапла, вăл пирĕн патăрта тăшманпа çапăçать, пĕлтерет батальонра унăн командирĕ Скуратов капитан хаçат журналистне. Эсир пăртак ларăр-ха, сĕнет вăл унтан, эпĕ халех кунта пĕр çынна чĕнсе илетĕп, вăл сире ун çинчен лайăхрах каласа парĕ.

Çичĕ-сакăр минутран вăл çамрăк сержантпа пĕрле таврăннă. Кĕнĕ-кĕменех сержант сылтăм аллине çамки патне кăнтарнă:

— Аслă лейтенант юлташ! Эсир чĕннипе Иван Ветров килчĕ!

— Эсир Максим ятлă паттăра пĕлетĕр-и? — ыйтнă Ржанов.

— Пĕлетĕп, — тенĕ сержант, — унпа эпĕ кăнтăрла та, çĕрле те туслă.

— Мĕн калама пултаратăр ун çинчен? — кăсăкланнă корреспондент.

— О-о, пирĕн Максим Гитлер патне те çитет-ха, çав тăмсая вилĕм шăтăкне те кăтартĕ-ха вăл, — куçне чеен хĕссе ответленĕ сержант.

Василий Ржанов çĕнĕ паттăр çинчен пĕтĕмпе, нимĕн пытармасăр каласа пама ыйтать.

— Тен, сирĕн ăна хăйне курсан лайăхрах пулмĕши? — калаçăва комбат та хутшăнать. — Ыран вăл полкри пур пулеметчиксемпе тĕл пулать. Унта ăна эсир хăвăр куçăрпах курăр.

Ржанов сăмах мĕн çинчен пынине тинех ăнланнă. Мĕн кăна курма-чăтма тивмен пулĕ çар журналисчĕсене! Вĕсенчен нумайăшĕ вăрçă пуçланиччен писатель пулнине шута илсен, вĕсем фронтри лару-тăрупа хăвăрт паллашнă, пăшалпа çапăçас вырăнне ытларах тăшмана хирĕç перопа кĕрешме тивнине ăнланса, хăйсен çырас ăсталăхне ӳстерсе пынă, дивизипе корпус, çарпа фронт хаçачĕсенче паттăр командирсемпе салтаксен сăнарĕсене тивĕçлĕн калăпласа кăтартма çав ăсталăхпа анлăн усă курнă. Писатель-корреспондент фронтри çĕнĕлĕхсене чăн малтан пĕлме тăрăшнă, салтаксен паттăрлăхне кăтартакан очерксемпе репортажсене çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупмасăр çырса ыттисене çĕнĕ атакăсемпе наступленисенче хăюллăрах, хастарлăрах, ăслăрах пулма чĕнсе каланă, вĕрентнĕ, çĕнĕ вăй-хал хушнă.

Акă Василий Ржанов çĕнĕ паттăрăн мухтавлă ĕçĕсем çинчен илтет. Кам вăл? Ăçтан? Хăйпе тĕл пуличченех туять вăл, полк командирĕн сăмахĕсенченех ăнланать: çĕнĕ паттăра легендăри Улăппах танлаштарма пулать. Совет салтакĕсен паттăрлăхĕ легенда геройĕсен паттăрлăхĕнчен те чаплăрах, вăйлăрах, пысăкрах, тĕлĕнмеллерех.

Тепĕр ирхине мĕн курать журналист Калуга хурăнĕсен ращинче? Çутă, илемлĕ уçланкă. Кунта полк пулеметчикĕсем пухăннă. Вĕсем хушшинче нумай-нумай çапăçусенче хăйсен ăсталăхĕпе, маттурлăхĕпе, хăюлăхĕпе, чăрсăрлăхĕпе пĕтĕм дивизийĕпе мухтава тухнă пĕр тăван Иосифпа Никита Следневсем, Семен Челтыкма-

шев кĕçĕн сержант, Никита Гук аслă сержант, Василий Касимовпа Анатолий Корчмаков старшинасем, Дмитрий Почтаренко рядовой, Петр Александров чăваш тата ыттисем те, кунтах тар шăршине пĕлсех кайман çамрăксем те пур.

Симĕс курăклă çӳллĕ тĕмеске çинче станковăй пулемет тăрать. Юнашарах хĕрлĕ ялав вĕлкĕшет. Ун айĕнче пулемет расчечĕ вырнаçнă: Çĕпĕр ывăлĕсем Иван Ветров, Георгий Шестаков, Николай Першин. «Пурте пĕрле — çак пулемет тата вăрçă çилĕпе пиçĕхнĕ хăюллă каччăсем — "Улăпла Максим" пулса тăраççĕ ĕнтĕ,» — тесе шухăшланă хумханса Василий Ржанов.

Расчет командирĕ Иван Ветров сержант малалла икĕ утăм тăвать те каласа пуçлать. Çапăçусенче уйрăмах хĕрӳллĕ пулнăшăн вĕсен "Максим С82" пулеметне "Максим — Улăп С82" хисеплĕ ят панă. Вĕсен "Максимки" ку таранчченех çăмăл мар çулпа пынă, анчах пĕрре те салтака улталаман. Вăл пулăшнипе рота Мускав патĕнче фашистсене çунтарнă, ноябрьте Михаил Иванович Калинин çуралнă яла тăшманран ирĕке кăларма хутшăннă, "216,3" сăрта хӳтĕленĕ. Таçта пулсан та "Максим" салтаксемшĕн хӳтлĕх, тăшманшăн — аслати шутланнă.

Анчах та вăрçă çулĕ "Максимăн" Ветров расчечĕпе пуçланман. Унăн пĕрремĕш расчечĕ Цепелев пĕр тăвансенчен тăнă. Командирсем вĕсене çаплах чĕннĕ:

— Цепелев асли!

— Цепелев вăтамми!

— Цепелев кĕçĕнни!

Тĕлĕнмелле вăйлă расчет пулнă ку! Çирĕп кăмăлтуйăмлă каччăсем пулнă Çĕпĕртен килнĕ Цепелевсем. Юлашки патрон юлмиччен, юлашки сывлăш юлмиччен тăшманпа кĕрешнĕ вĕсем. Пурин те пĕр тĕллев çеç пулнă: "Тăван çĕршыв е вилĕм!" Иккĕшĕ паттăрла пуçĕсене хунă, виççĕмĕшĕ шитĕ йывăр аманнă, çапах та виççĕшĕ те халĕ те стройрах шутланаççĕ. Ветров хăйсен умĕнхи расчет çинчен юратуллăн, хисеплĕн каласа панă. Çапăçусенче вĕсен пулемечĕсем юнашар тăрса фа-

шистсем çине тăхлан çумăр çутарнă, наступленире иккĕшĕ те яланах малта пынă. Ветров юлашки çапăçу çинче ытларах чарăнса тăнă. Кăштах канса илнĕ хыççăн рота наступленине куçнă. Малта юхан шыв пулнă. Çурхи шывпа вăл çав тери тулса кайнă, ирĕксĕрех Цепелевсем пулемета хăйсем çинче çĕклесе каçнă. Пулемет "кĕлеткине" станокĕнчен уйрăм турттараççĕ пулсан та — çурăм çинчи икĕ пăтлă йывăрăшпа пăтранчăк хăвăрт юхан шыв урлă каçса пăх-ха! Цепелев-асли вара çавнашкал йывăрăшпа хĕвел анăç çырана чăн малтан çитнĕ. Ун хыççăн, запас лентăсен курупкисемпе пулемет станокне çĕклесе, шыв урлă вăтаммипе кĕçĕнни те каçнă. Унтан вĕсем тĕмĕ хыçне хăвăрт пытаннă та пулемета пуçтарнă, пульăсен лентине хăйĕн вырăнне лартнă.

Шăп çак самантра пирĕн артиллери çĕр çумне çыпăçтарнă фашистсем çĕнĕрен çыран еннелле ыткăннă. Совет салтакĕсене каялла чакарса юхан шыва хăваласа кĕртме. Çак вăхăтра хайхисене пирĕн пулеметăн тăхлан "çĕççи" касма тытăнать. Цепелевсем самантлăха та чарăнмаççĕ. Фашистсем урса каяççĕ, пирĕн харсăр пулеметчиксене тупăсемпе минометсенчен пеме тытăнаççĕ. Снаряд татăкĕсем пĕрин кăкăрне чаваласа кĕреççĕ те, вăл пуçне çĕр çине усать. Нимĕçсем каллех контратакăна çĕкленеççĕ. Цепелев асли тăванĕн виллине аяккалла куçарнă та çывăхах çитнĕ нимĕçсене "Максим С82" черечĕпе çунтарса илнĕ. Анчах сасартăк пулемет шăпаннă: патронсем пĕтнĕ. «Лента пар, лента! — кăшкăрнă асли. — Мĕн чаваланатăн унта, хăвăртрах!» Цепелев каялла çаврăнса пăхнă та кĕçĕнни хускалмасăр выртнине курнă, аллинче — пульăсемпе авăрланă лента. Цепелев шăлне çыртса вилнĕ шăллĕ аллинчи лентăна илет те самантрах пулемета лартать. Вара хăйĕн шанчăклă "Максимĕпе" каллех тăшман çулне пӳлсе хурать. Пирĕн салтаксем çав хушăра çĕнĕ çĕрте çирĕпленсе ларнă.

«С82» пулемет патне рота командирĕ шуса пырсан, вăл илтнĕ пĕрремĕш сăмахсем çаксем пулнă: "Пулемет ĕçлет пулсан, Цепелевсем пурте стройра тесе шутлăр.

Тăшман патне Берлина ҫитесчĕ... Пуля пекех, каҫармастăп!" Икĕ шăллĕне ҫапăҫу хирĕнче пытарса хăварнă Цепелев асли унтан пулеметне нимĕҫсем йышăннă ял еннелле сĕтĕрнĕ. "Рота ҫĕнĕрен атакăна ҫĕкленсен, унăн пулемечĕ каллех такăртатма пуҫланă. Шăллĕсем вилнĕшĕн арăслан пек пулса кайнăскер, вăл тăшмана та, хăйне те шеллемен: "Максим" кожухĕнче шыв вĕреме кĕнĕ, хушăксенчен шурă пăс палкаса тухнă, пулемет такăлтатма чарăнман. Ҫак вăхăтра Цепелев асли хăй те йывăр аманнă.

«Ҫапăҫу пынă вăхăтрах хăрушă "Максим С82" пулемета пире пачĕҫ,» — тенĕ Иван Ветров. Цепелев асли ҫĕнĕ расчетпа сыв пуллашса, ҫапла пехиллесе хăварнă: "Пулемета куҫ пек упрăр. Ман шăллăмсемшĕн тăшмана тавăрăр". Кун хыççăн пирĕнтен кашниех унăн ҫак сăмахĕсемпе ҫапăҫу умĕн хĕрӳлленсе тупа тунă. "Пуля пекех, каҫармастăп".[54]

Кун хыççăнхи хаяр ҫапăҫусем ҫинчен те сахал мар каласа кăтартнă расчет командирĕ Иван Ветров. «Паян эпир савăнатпăр та, тунсăхлатпăр та, — тенĕ вăл, — мĕншĕн тесен пирĕн пулемет пирки полкри пулеметчиксем пурте ҫакăнта пухăнчĕҫ. Ку — савăнтарать. Ҫав вăхăтрах чĕрере тунсăх: хамăрăн мухтавлă пулеметпа уйрăлма вăхăт ҫитрĕ. Эпир ăна хамăр тăван вырăннех хунă, чĕрĕ ҫын пекех шутланă, ахальтен мар пирĕн расчета ҫынна чĕннĕ пек "Максим-Улăп" тенĕ пулĕ. Паян эпир хамăрăн "С82" пулемета командовани приказĕпе Иван Кринков сержантăн ҫамрăк расчетне паратпăр.»

Чаплă самант. Оркестр кĕввипе пулемет патне, стройпа утнă пек, ҫамрăк салтаксем — Иван Кринков, Николай Левченко, Дмитрий Корнеец, Василий Баринов — утса пыраççĕ. Кринков сержант тупа сăмахĕсене уççăн та ҫирĕппĕн калать: "Максим-Улăп" расчечĕн тивĕҫлĕ боецĕсем пулма тăрăшатпăр. Тăшмана эпир Цепелев пĕр тăвансем тата вĕсен ентешĕсем Иван Ветров, Георгий Шестаков, Николай Першин пекех ҫунтарма тупа тăватпăр. Вĕсен паттăрлăхĕ пирĕншĕн чаплă тĕслĕх пулса тăрать. Вĕсен ҫунатлă сăмахĕсем пирĕншĕн те приказ евĕрех пулĕҫ: "Пуля пекех, каҫармастăп!"

Василий Ржанов хăйĕн кĕнекинче "Максим-Улăп" пулеметăн тата унăн ытти расчечĕсен паттăрла ĕçĕсем çинчен те тĕплĕн каласа парать. Кĕнекен тепĕр лайăх енĕ — фронтпа тыла ялан çирĕп пĕрлештерсе тăнă çырусем нумай пичетленни. Салтаксене тăван ялĕсенчен, тăванĕсенчен илнĕ çырусем фашистсемпе паттăрăн çапăçма пулăшнă, хăйсен çитĕнĕвĕсем çинчен тыла çыра-çыра пĕлтерни тăван-пĕлĕшĕсене, ялта е заводра çынсене мирлĕ ĕçре фронта пулăшас тĕллевпе çĕнĕрен те çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантарнă, чаплă Çĕнтерĕве çывăхлатма пулăшнă.

"Максим-Улăп С82" пулемет çĕнĕ хастар расчет аллине куçни çинчен дивизи хаçачĕ валли репортаж çырнă май писатель-журналист Шупашкартан илнĕ çырусене тата вăрçă пуçламăшĕнчи кунсене аса илет.

...1941 çулхи октябрь уйăхĕнче фронта каякан подразделени салтакĕсене Мускав çулне сыхлама тата ун тăрăх пĕр вĕçĕмсĕр куçакан транспорта тĕрĕслеме хушаççĕ. Мускав-Чулхула-Шупашкар çул çинче моторсен сасси пĕр самантлăха та шăпланмасть. "ЗИС"-сем, "ГАЗ"-иксем ирте-ирте каяççĕ, пилĕк тата виçĕ тоннăллă грузовиксем, автобуссем, тягачсем, салтаксем ларса тулнă, хĕç-пăшалпа боеприпассем тиесе тултарнă автоколоннăсем пыраççĕ. Фронт еннелле, хĕвел анăçнелле васкаççĕ вĕсем. Хирĕç — хĕрарăмсемпе ачасем, аманнă çынсем ларнă, мирлĕ пурнăç хатĕр-хĕтĕрĕпе тĕрлĕ оборудовани тиесе тултарнă автомашинăсем. Вĕçĕ-хĕррисĕр иртеççĕ. Пурте тенĕ пекех — хĕвел тухăçнелле. Кузовсенче çынсем шăппăн лараççĕ, нумайăшĕ — çӳхе плащсемпе çеç, чĕркуççийĕсем çинче — пĕчĕк çыхăсем. Пĕр вĕçĕмсĕр çумăр çăвать, çынсем пĕр-пĕрин çумне хытăрах тĕршĕнеççĕ.

Мускав çулĕ çинче октябрь уйăхĕнче патрульте çӳреме çăмăл мар. Çапах та çӳремеллех: приказ! Патрулĕн кашни машинăна, кашни çынна тĕрĕслемелле. "Йĕркеллисемпе пĕрлех çакнашкаллисем те тĕл пулаççĕ:

— Ăçта каятăр?

— Ташкента.

— Каймалли хут пур-и?

— Хут çинчен мар-ха шухăш: нимĕçсем Мускав хĕррине çитрĕç. Халĕ, тен, шалалла та кĕчĕç пулĕ.

— Эсир мĕн, Ташкента "оккупацилеме" хатĕрленнĕ-и? Каялла!

— Чарма ирĕк çук сирĕн: эпĕ эрех тресчĕн хĕвел тухăçĕнчи агенчĕ. Ташкента куçатпăр.

— Лăпкăнрах тытăр хăвăра, агент юлташ. Комендатурăна каятпăр!"[55] Ржанов тулли питлĕ агента кăмăлсăррăн сăнаса пăхать, ăшĕнче çапла шутлать: «Тăван çĕршыв тӳпи таса чухне хамăрăн гражданла тивĕç çинчен илемлĕ сăмах сахал каламан пулĕ-ха. Акă, тӳпе хупланма тытăнчĕ те — чăн малтан хамăн тире сыхласа хăвармалла-и? Тĕрĕсех каланă ваттисен сăмахĕнче: çынсен чунĕ йывăр лару-тăрура лайăх уçăлать».

Ноябрĕн 4-мĕшĕнче, вăрман çине тĕттĕм чаршав ансан, сасартăк сирена вăйлăн кăшкăртса янă, команда янраса кайнă:

— Сывлăшра тревога! Пурин те — пытанмалли çĕре!

Çавăнтах самолет моторĕ кĕрлени илтĕннĕ. Вăл вăйланнăçемĕн вăйланнă. Часах пĕлĕт татăкĕсем хушшинче борт енчи çутăсене çутнă виçĕ самолет пĕрин хыççăн тепри курăннă.

— "Юнкерссем!" — кăшкăрса янă Поздышев. Вăл инженер, Мускаври промышленность академийĕнчен вĕренсе тухнă, самолетсене лайăх пĕлет.

"Ăçта вĕçеççĕ-ха вĕсем? Мĕнле тĕллевпе? Çуначĕсем айĕнче мĕн-ши? Фотоаппаратсем-ши е бомбăсем?" — пăлханса ӳкнĕ В. Ржанов.

Зениткăсем кĕрслеттерме тытăннă, анчах та пиратсем пĕлĕт айне кĕрсе пытанма ĕлкĕрнĕ.

— Ăçта-ха пирĕн "хĕренсем"? Мĕншĕн фашистсем ирĕклĕн вĕçеççĕ? — тарăхса ятлаçса илнĕ Завгородний.

Самаях тивнĕ вара çавăн чухне сăмахпа пирĕн «кăйкăрсене».

— Атьăр-ха темĕнле çухалса кайнă "юнкерссемшĕн" авиацие унашкалах ятлар мар, — тесе чарнă хăйне яланах лăпкă тытакан Позлышев, унтан мухтаннă пекрех хушса хунă: — Пирĕннисем, ав, август уйăхĕнчех Берлин çине бомбăсем пăрахрĕç.

Ку пĕтĕмпех тĕрĕс-ха. Анчах та Ржанова урăххи тĕлĕнтернĕ: «Мĕншĕн-ха çак "çухалса кайнă" «юнкерссем» хĕвел анăçĕнчен мар, хĕвел тухăç енчен, Атăл хĕррипе вĕçсе килнĕ? Пирĕн енне епле майпа вĕçсе çитнĕ вĕсем? Мĕнле тĕллевпе?..»

Çĕрле В. Ржановсен взвочĕн Н. поселокĕ патĕнче патрульте çӳремелле пулнă. Ржановпа Поздышева штаб вырнаçнă района сыхлама хушнă. Çĕрле икĕ сехетре вĕсем радиоузелти радист патне кĕрсе курма шутланă. Радист пур хыпарсене те чăн малтан пĕлнĕ, фронтран тата чикĕ леш енчен килекен хыпарсене салтаксене пĕлтерме тăрăшнă. Ку хутĕнче, патрультисем ун патне кĕрсенех, вăл вĕсене тĕлĕнмелле хыпар пĕлтернĕ:

— Сирĕн Шупашкар крепоçĕнчен ванчăк кирпĕчсем çеç тăрса юлнă.

— Мĕн? Мĕн крепоçĕнчен? — ыйтнă куçне чарса Ржанов.

— Сирĕн Шупашкар крепоçĕнчен! Эсир Шупашкар çынни-çке, нивушлĕ хăвăр хулана пĕлместĕр? Пĕлетĕр-и, паян пирĕн çийĕн вĕçсе иртнĕ "юнкерссем" сирĕн хула çине бомбăсем пăрахнă иккен ... Итлесе пăхас килмест-и? Часах çавăн çинчен калакан хыпара тепĕр хут параççĕ...

Радист приемнике тĕрĕслет, лайăхрах ĕçлетĕр тесе, мĕн тумаллине пĕтĕмпех тăвать. Тепĕр икĕ минутранах ют сасă (вырăсла калаçать пулин те) илтĕнсе каять. Акцентлă сасă. Кăшкăрарах, мухтанса калаçать:

"Авиаци рейхсмаршалĕ Герман Геринг штабĕ пĕлтерет: Хĕвел тухăç фронтĕнчи сывлăш-çар вăйăсем паян, ноябрĕн 4-мĕшĕнче, вырăссен Атăл çинче вырнаçнă чи аякри çирĕп крепоçĕ (Шупашкар Берлинран 2500 километрта, Мускавран хĕвел тухăç еннелле 700 километрта ларать) патне вĕçсе çитсе тапăннă. Пĕтĕмпе аркатас шутпа бомбăсене питĕ тĕл пăрахнă пирки крепоçе унăн пĕтĕм тĕрекĕсемпе аркатнă, нумай çар чаçĕсене пĕтернĕ тата салатса янă. Операцие пĕр çухатусăр иртернĕ. Чи ăста летчиксем тапăнса тăшмана çавăн чухлĕ пĕтерни пирĕн авиаци Хĕвел тухăç фронтĕнче чăн-чăн хуçа пулса тăнине тепĕр хут лайăх кăтартса пачĕ. Вырăс-

сем сывлăшра пире хирĕç тăнине пĕтĕмпех пĕтернĕ. Совет авиацийĕ текех пачах çук. Хĕрлĕ Çар халĕ пире хирĕç тăма пултарайман сапаланчăк чăсенчен çеç тăрать"*.

Фанфарăсем янраса кайнă.

Нихçан пулман япала! Тĕлĕннĕрен каçăхса каятăн! Çапларах ăнлантарать ку хыпара В. Ржанов. Герман Геринг хăй тума пултарнинчен те ытларах тăрăшнă. Чăнах та, Берлинран 2500 километрта халиччен пулман Шупашкар крепоçне тупма тата ăна "пĕтĕмпе аркатма" кашни пултараймасть. Герман Геринг рейхсмаршал вара — пултарнă! Паллă ĕнтĕ, обер-суеçĕ Геббельс доктор хутшăнмасăр çуралайман ку хыпар. Мĕншĕн тесен çак сенсациллĕ суя хыççăн Геббельс пропаганди тепĕр уйăхран тата "вăйлăрах сенсациллĕ хыпар" çуратать: болгарсен пичет агентстви урлă: «Нимĕç çарĕсем Атăл çинчи Шупашкар крепоçне йышăннă",[56] — тесе пĕлтерет.

Чăннипе мĕн пулса иртнĕ-ха?

Историе лайăх пĕлекенсемшĕн паллă: пирĕн Шупашкар тавра V Иван патша вăхăтĕнче хĕвел тухăçĕнчен тапăнакансенчен сыхланма йывăçран çирĕп карта тытса çавăрнă, вăл та пулин XVIII ĕмĕр пуçламăшĕнчи пушар вăхăтĕнче ним юлмиччен çунса кĕлленнĕ. Урăх Шупашкарта никам та нихçан та крепость туман. Советсем вăхăтĕнче те пирĕн хулара пĕчĕк гарнизон мар, пĕр взвод та, пĕр салтак та тăман.

Апла пулсан мĕн илĕртнĕ-ха Геринга Шупашкарта? Мĕн пирки унăн "ас-летчикĕсем" историре халиччен пулман паттăрла вĕçев туса Шупашкара тапăннă?

Тепĕр енчен шутласан, Шупашкара историре хăварма тăрăшакансем унччен те пулнă-ха. Тĕслĕхрен, Салтыков-Щедрин писатель-сатирик XIX ĕмĕртех хăйĕн пĕр фельетонĕнче, суеçĕ-журналистсене питлесе тăрă шыв çине кăларас тесе, Балкан вăрçи вăхăтĕнче Мускавран Шупашкара пĕр чаплă журналист килсе вырнаçни çинчен пĕлтернĕ. Бордель çуртне вырнаçать те вăл кашни кун

---

* Илья Эренбург хăйĕн пĕр фельетонĕнче пĕринче нимĕç радиостанцийĕ çапла пĕлтернине «Геббельсăн пĕрремĕш номерлĕ суя хыпарĕ» тенĕ.

Мускав хаçачĕсене "Балкан фронтĕнчен" тесе палăртса, вырăс çарĕсен тĕрлĕ-тĕрлĕ операцийĕсем çинчен репортажсем ăсатма тытăнать. Хаçатсем хăвăрт килекен материалсене (Шупашкартан Мускава почта Софийăран миçе кун маларах çитни паллă-çке) çине-çинех пичетлеççĕ...

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче В. Ржанов Шупашкарта пурăнакан мăшăрĕнчен аран-аранах çыру кĕтсе илет. Акă мĕн çырнă вăл:

"Тен, Вася, ман çыру сан пата çитеймĕ, анчах та эпĕ сана мĕн пĕлтернине пурте пĕлме тивĕç. Камшăн çĕр çинчи пурнăç хаклă — пурте. Çак кунсенче пирĕн хула çине таçтан нимĕçсен виçĕ самолечĕ вĕçсе килчĕ те бомбăсем пăрахма пуçларĕ. Äçта тесе шутлатăн-и эсĕ? Малтан халăх сучĕн çурчĕ çине пăрахрĕç... Мускавран эвакуаци йĕркипе килнĕ виçĕ çулхи хĕр ача осколка тивнипе вилчĕ. Вăл юнашар çуртра пуканепе выляннă, аллинче пукане тытнипех вилсе кайнă. Амăшĕ çав вăхăтра килте пулман. Таврăнсан, хăйĕн хĕр ачи вилнине курнă вăл, пуканине хĕр ача аллисем осколка тивнĕ кăкăрĕ çумне пăчăртаса тытнă пулнă.

Çак çемьене маларах хамăр пӳлĕме вырнаçтарайманшăн мĕн тери шеллетĕп, мĕншĕн тесен çав тĕле пирĕн патăрта эвакуацип килнĕ икĕ çемье пурăнатчĕ те ĕнтĕ, пĕри Ленинградранччĕ, тепри Мускавранччĕ. Эх, пĕлнĕ пулсан, виççĕмĕш çемйине хамăн кĕтесĕме параттăм, вара хĕр ача чĕрĕ юлатчĕ. Вăл амăшĕн пĕртен-пĕр ачийĕ пулнă!

Çав бомбăранах пĕр ватă çын вилчĕ. Атă тасатса тăранса пурăнатчĕ вăл. Астăватăн-и ăна, пĕр ураллă инвалида?.."

Çапла, Ржанов ăна лайăх пĕлнĕ. Вăл иртен пуçласа каçченех Симĕс пасар алăкĕ умĕнче ларнă та хăйĕн умĕнчен иртекен пылчăклă атăллă çынна çапла йĕкĕлтесе каланă: "Аттине тасатман çынна кам та пулин юратать-им?" Пушă вăхăтра вара, щеткипе шаплаттара-шаплаттара, ялан пĕр юрра ĕнĕрленĕ:

"Эсĕ Япони патши-çке микадо,
Пирĕнпе кирлĕ мар вăрçмашкăн"...

Туйнă çынсем: çак старик хăй вăхăтĕнче вырăс-яппун вăрçинче çапăçнă, çавăнпа пĕтĕм чунтан вăрçăна курайман. Халĕ вăл — миçе çул иртнĕ хыççăн — хăйĕн тăван хулинче фашист бомбинчен вилнĕ.

Малалла В. Ржанова мăшăрĕ çапла пĕлтернĕ:

"... Унтан вĕсем Шупашкара хирĕç Атăл леш енчи улăхра вăхăтлăха пурăнма чарăннă чикансен таборне тапăнчĕç. Чикансем пысăк кăвайт чĕртсе янă та, сивĕрен хŷтĕленес тесе, кăвайт тавра шавласа-сиксе çаврăннă. Нимĕç летчикĕсем чикансене çар подразделенийĕ тесе йышăннă пулас та — тытăннă бомбăсем тăкма! Табор темĕн хушăра пĕтĕм вăрмана сапаланса каять... Турăçăм! Виçĕ çулхи хĕр ачапа старик-инвалида вĕлерессишĕн тата никама нимĕнпе сиенлемен чикан таборне салатса ярассишĕн Берлинран Шупашкара çити вĕçсе килмелле-и вара?"

Гитлер рейхсмаршалĕн летчикĕсен "паттăрла" ĕçĕсене В. Ржанов кĕнекере сатира меслечĕпе усă курса çивĕччĕн питлет, фельетон теме те пулать çав сыпăка. «Вăхăт çитĕ, — тесе вĕçлет ку сыпăка автор, — çаклашкал тата ытти "паттăрла" ĕçсемшĕн фашист асĕсем çеç мар, Герман Геринг рейхсмаршал хăй те халăхсем умĕнче тивĕçлĕ явап тытĕ». Ку çаплах пулса тухрĕ. Тĕнче сучĕ умĕнче тăма мĕн тери намăссине туйса тата халăх хăйне тискер чĕр чун вырăнне хурса нихçан та каçарас çуккине пĕлнĕрен рейхсмаршал çутă тĕнчерен наркăмăш ĕçсе уйрăлса кайрĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи çулĕсенче çуралнă чи паллă произведенисен шутне "Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çыру" кĕрет. Ăна хаçатра[57] тата уйрăм листовкăпа вунă пин экземпляр пичетлесе фронта ярса панă. Çак çырăва çырас ĕçе паллă чăваш писателĕсем И. Тукташ, Н. Шелепи, С. Элкер, А. Эсхель тата ыттисем уйрăмах хастар хутшăннă. Çыру текстне малтан республикăра ялсемпе хуласем тăрăх çŷретнĕ, ăна 378 634 çын алă пуснă. Ку "Çыру" чăваш халăхĕн вăрçă тапхăрĕнчи паттăрлăхне уççăн кăтартса парать, халăх историйĕпе лайăх паллаштарать. Ăна çырнă

писательсем, вăл пĕтĕм халăх чунне пырса тивтĕр тесе, тăван чĕлхен пĕтĕм пуянлăхĕпе усă курнă. Çыру фронтри чăваш ывăлĕ-хĕрĕсемпе тылри ĕçченсен пĕрлĕхне питĕ çирĕплетнĕ, вĕсене тăшмана çапса аркатас тĕллевпе пĕрешкел шухăшлаттарнă, пĕр çын пек сывлаттарса фронтри салтаксен паттăрлăхне вăйлатнă, тылри çынсен ĕçри хастарлăхне ӳстернĕ, çитĕнĕвĕсене пысăклатнă. "Çырăвăн" пуçламăш йĕркисене вулама тытăнсанах унăн асамлă вăйне, сăмахĕсен хăватне туйса илетĕн, ăна вĕçне çитичченех сывламасăр тенĕ пек вулатăн:

"Пирĕн мухтавлă ывăлăмăрсем!

Хĕрлĕ Çарăн хастар воинĕсем, Улăп-паттăрăн тивĕçлĕ йăхĕсем, халăх ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнĕ Атăл пăлхавçисен вĕри юнлă ăрăвĕсем, ылханлă тăшмана хирĕç кĕреш юмансем пек çирĕп тăрса пире хӳтĕлекен паттăрсем! Сире пĕтĕм чăваш халăхĕ чĕререн хĕрӳллĕ салам ярать!

Пирĕн таса Тăван çĕршыва ултавлăн килсе тапăннă фашистсене пуçĕпех çапса аркатса, совет çĕрĕн аслă талккăшĕсене тĕпĕ-йĕрĕпех тасатса çитерме сире, пирĕн паттăр ывăлăмăрсем, ырă сывлăх сунатпăр. Хамăрăн тăван çĕр, сирĕн чĕресене хăйĕн хăватлă сĕткенне парса, иксĕлми вăй кĕрттĕр! Сире çапăçу хирĕнче паттăр та чаплă ĕçсем тума пехиллетпĕр! Пирĕн асаттесен хĕçĕ нихçан та тутăхман, эпир нихçан та тăшмана пăхăнман. Хăюллă та хастар пулăр, пирĕн паттăрсем!

Сире аслă Атăл хăйĕн хумĕсем çинче чăпăл туса çитĕнтернĕ. Тăван Совет çĕршывĕ сире хаяр ăмăрт кайăк пек вĕçме сарлака та хăватлă çунатсем панă, ирсĕр тăшмана таптама — танксем, фашистла тискер кайăксене вĕлерсе пĕтерме — шанчăклă хĕç-пăшал панă. Пуринчен пахараххи — çапăçура нимĕнрен хăрама пĕлмен чĕре панă. Çапăçу хирĕнче арăслан пек пулăр! Чыслă тытăр асаттесемпе аттесен ятне, чĕрере усрăр халăх тивĕçне!"

Çак сырăва фронтри чăваш салтакĕсем çеç мар, вĕсемпе пĕрле пĕр взводра, ротăра, дивизионра, батарейăра, танкра, авиаци эскадрилйинче, тунă расчетĕн-

че, пăрахут подразделенийĕнче фашистсене хирĕç çапăçакан вырăссемпе украинсем, белоруссемпе тутарсем, грузинсемпе мордвасем тата ытти нумай-нумай халăх ывăлĕ-хĕрĕсем тимлĕ итленĕ. "Çырури" ăшă сăмахсем атакăна çĕкленме хатĕрленекен боецсене çĕнĕ вăй парса вĕсен паттăрлăхĕпе хăюлăхне ӳстернĕ, тăшмана хаяр тытăçура çĕнтерсе тĕп тума йыхăрнă. Çавăнпа пĕрлех "Çыру" халăхăн чун вĕрилĕхĕпе, хĕрӳлĕхĕпе, кăмăл-туйăм çивĕчлĕхĕпе окопсенчи салтаксемпе командирсене пĕрпĕринпе тата хытăрах пĕрлештернĕ, çывăхлатнă, пĕр ĕмĕт-тĕллевпе пĕтĕçтернĕ. "Çырура" чăваш çĕрĕ-шывĕ сĕм авалтанпа Раççей чĕри варринче пулнине, Раççей яланах чăваш халăхĕн тăван килĕ пулнине палăртнă. "Аслă вырăс халăхĕ хӳтĕлемен пулсан, — тенĕ унта, — пирĕн пек сахал йышлă халăхсене ют çĕртен килнĕ тăшмансем тахçанах туртса çурса, çисе яма пултарнă. Çавăнпа Раççей çĕршывне тăшман тапăнсан, вырăс халăхĕпе пĕрле пирĕн чăваш халăхĕ те тăшмана хирĕç яланах кĕрешĕве çĕкленнĕ".

Пирĕн халăх, аслă вырăс халăхĕпе пĕр шухăшлă пулса, темиçе ĕмĕр хушши тăван çĕре çичĕ ютран вăя шеллемесĕр хӳтĕленĕ. Тем тĕрлĕ инкек-синкек тӳсме, тем тĕрлĕ хĕн-асап курма тивнĕ пулсан та, вăл хăйĕн наци сăн-сăпатне, хăйĕн таса шанчăкне, юратнă тăван чĕлхине, илемлĕ те çепĕç юрри-сăввисене кирек хăçан та чĕрере упраса усранă. "Аçу-аннӳ ани-çаранне нихçан та ан ман", "Пурăнсан, Тăван çĕршывшăн пурăнас, ăна усă тăвас", "Çĕршыва тăван аннене юратнă пек юрат", "Пуçран хакли — Тăван çĕршыв", "Кам çĕршыва юратать, вăл тăшмана кураймасть", "Тăван çĕршывшăн тăр хăюллă, яту ĕмĕре юлĕ мухтавлă", "Пуçна çухатсан та, чысна ан çухат", — тет чăваш халăхĕ. Хăйĕн ывăлĕ-хĕрĕсене Тăван çĕршыва хӳтĕлеме ăсатнă чухне те вăл вĕсене хăватлă чăваш юманĕсем пек тĕреклĕ, çирĕп, чăтăмлă пулма, тăшманпа арăслан пек çапăçма пехилленĕ. Сĕмсĕр вăрă-хураха хирĕç пирĕн пĕтĕм халăх пĕр çын пек кар çĕкленчĕ, тенĕ "Çырура". Çав йывăр çулсенче совет салтакĕсем самантлăха та хăйсен тивĕçне манмарĕç, сахал пулнă-и фронта хăйсен ирĕкĕпе тухса

кайнă çынсем? Çĕршерĕн те пиншерĕн çитнĕ вĕсем вăрçă хирне, çĕршыв чĕрине — Мускава — хŭтĕлеме, Сталинградшăн çапăçма. Днепр урлă çул хывнă, Берлина çитсе тăшмана чĕркуçлентернĕ. Чăваш халăхĕ хăйĕн ывăлĕсем патне янă «Çыру» чăваш салтакĕсемпе командирĕсене пур çĕрте те хăюллă пулма, çапăçусенче паттăрлăх кăтартма, чăн-чăн патриотсем пулма хавхалантарнă.

Çар документчĕсене кĕскен те уçăмлăн, çăмăллăн ăнланмалла çыраççĕ. Шăпах çавăн пек каланă "Çырура" чăваш ывăлĕ-хĕрĕсем фашистсене хирĕç пурнăçа шеллемесĕр кĕрешни çинчен. Унта хамăр ентешсем кашни паттăр ĕçне пысăк хак панă, кунпа пĕрлех фронтовиксене çав геройсенчен ырă тĕслĕх илме хĕрŭллĕ те çулăмлă сăмахсемпе чĕннĕ.

"Чăваш халăхĕн ывăлĕ, васка! Пирĕн Тăван çĕршыври ытти халăхсен мухтавлă ывăлĕсемпе — Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе пĕрле пулса, хамăрăн çĕре тăшманран хăвăртрах тасат! Çапăçу хирĕнче Улăп-паттăр пул! Сан чĕрŭнте пирĕн паттăр ентешĕн Василий Иванович Чапаевăн хăвачĕ сŭнме пĕлмесĕр çунса тăрать. Санăн юнунта — аслă Атăл хăвачĕ.

Герой пул, чăваш халăхĕн ывăлĕ! Тăшмана çапса аркат! Киле çĕнтерŭпе таврăн, кунта сана пĕтĕм халăх чун-чĕререн юратса кĕтсе тăрать!

Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм!"

Çав вăхăтрах вăрçă хирĕсенчен те чăваш боецĕсемпе командирĕсем фашистсемпе хăюллăн çапăçма тупа туса çырусем çырнă. Çав çырусене чăваш воинĕсен ячĕпе çар хаçачĕсенче ĕçлекен Яков Ухсай, Василий Долгов, Василий Ржанов тата ытти сем хатĕрленĕ. Тĕслĕхрен, дивизи хаçатĕнче ĕçлекен Л. Агаков тăшманпа хастарлăн кĕрешнĕшĕн орденсемпе медальсем илме тивĕçлĕ пулнă чăваш салтакĕсемпе командирĕсене пухса пуху иртте-рет, çав пухура вăл сĕннипе тăван халăх патне республикăна çыру-тупа яма йышăнаççĕ. Çырăвне Л. Агаков çырса хатĕрленĕ те пулнă-мĕн. Çав çыру айне пухăва пынă пур чăвашсем те хавхалансах алă пусаççĕ.

"...Икĕ çул ĕнтĕ чăваш халăхĕн ывăлĕсем Совет Со-

юзĕнчи тăванла халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле хамăрăн таса Тăван çĕршывшăн, хамăрăн телейшĕн, ирĕклĕхшĕн çапăçаççĕ, — тенĕ вĕсем çырура. — Нумай паттăр ĕçсем турĕç чăваш халăхĕн юратнă ывăлĕсем çапăçу хирĕсенче. Тăшманпа хĕрӳллĕн çапăçнăшăн, Гитлерăн симĕс шинеллĕ вăрă-хурахĕсене хаярăн пĕтерсе пынăшăн совет правительстви чăваш халăхĕн нумай ывăлĕсене чи пысăк наградăсем пачĕ... Ку ĕнтĕ — калама çук пысăк чыс, пысăк хисеп, чаплă пархатар.

...Эпир, правительство наградине илнĕ чăваш боецĕсемпе командирĕсем, хамăрăн Тăван çĕршывăн телейĕшĕн хамăрăн вăя та, юна та, кирлĕ пулсан — пурнăçа та хĕрхенмесĕр çапăçмашкăн тупа туса сăмах паратпăр!

Нимĕç оккупанчĕсене вилĕм! Сывă пултăр пирĕн çĕршыв ирĕклĕхĕ!"[58]

Пирĕн писательсем — вăрçăра пуç хунисем те, унтан чаплă çĕнтерӳпе таврăннисем те, — хăйсен патриотла шухăш-кăмăлне уçса паракан çырусем сахал мар çырнă. Вăхăт иртет, ăрусем ылмашăнаççĕ. Çырусем çавна май çухалма та пултараççĕ. Вĕсене пухса, уйрăм кĕнеке туса кăларсан, çамрăксене патриотла воспитани пама, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи чăваш литературине вĕренме пулăшакан паха кĕнеке пулмалла вăл.

Писательсем салтак-паттăрсен ĕçĕсем çинчен очерк-портретсем çырнă, çав хушăрах вĕсен ĕçри паттăрлăхĕ çинчен те Шупашкарти хаçатсене ырă çырусем килсех тăнă. Акă, Л. Агаков çинчен И.Кирьянов майорпа А. Фаюстов аслă лейтенант çапла пĕлтернĕ:

"... Пĕр яла нимĕçсен аллинчен туртса илессишĕн çапăçу тăватă кун пынă. Ăнăçлă вырăнта çирĕпленсе ларнă фашистсем пире хирĕç хаярăн çапăçнă, тĕрлĕ пăшалпа пирĕн позици çине персе тăнă, самолетсем бомбăсем тăкнă. Çапах та вĕсем совет салтакĕсен наступленине чарса лартайман. Пирĕн боецсем хăюллăн та хастарлăн кĕрешнипе метр хыççăн метр малалла куçса пынă, пилĕккĕмĕш талăкĕнче ирхине тăшмана пур енчен те тĕреклетнĕ ялтан хĕссе кăларнă. Фашистсен çав тĕреклетнĕ пунктне чи малтан пырса кĕнисем хушшинче

Леонид Агаков лейтенант подразделенийĕ те пулнă". Унтан офицерсем Агакова дивизи хаçатне куçарни, вăл яланах фронтăн малти линийĕнче пулма тăрăшни, çапăçусенче паттăрлăх кăтартнă боецсемпе командирсем çинчен пĕр кун кая юлмасăр интереслĕ тĕрленчĕксемпе корреспонденцисем пичетлесе кăларни çинчен ырласа çырнă. Ку çыру "Чăваш коммуни" хаçатра 1943 çулхи майăн 5-мĕшĕнче пичетленнĕ.

Çак хаçатрах 1942 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче Алагер çинчен çырнă "Писатель-боец" тĕрленчĕк çапăнса тухнă. Ăна фронтран А. Подольский çырса янă. "Вăл саперччĕ. Сапер ĕçĕ çăмăл мар. Темиçе уйăх хушши вăл оборона сооруженийĕсем тунă çĕрте ĕçлерĕ, — пĕлтернĕ çыру авторĕ. — Тăшман вăйлăн персе тăнине пăхмасăрах вăл оборонăн малти хĕрри урлă хăюллăн каçса, минăсем лартать, йĕплĕ пралук карать, танксене чарса лартмалли чăрмавсем тăвать... Нимĕçсен снайперĕсем Алагер хыççăн пайтах йĕрленĕ, анчах ăна ниепле те тытайман.

Часах эпир Алагер юлташа красноармеецсен хаçачĕн редакцине ĕçлеме илтĕмĕр. Унта вăл хăйĕн ĕçне чунчĕререн парăнчĕ. Вăл яланах малти ретре, боецсемпе, командирсемпе пĕрле окопра, блиндажра, урăхла каласан, фронтăн чăн-чăн пурнăçĕ вĕресе тăнă çĕрте. Çавăнпа та вăл боецсемпе командирсен кулленхи геройла ĕçне тĕплĕн çутатса парать, пирĕн çитменлĕхсене çийĕнчех асăрхаса илсе, вĕсене пĕтерме пулăшать... Снарядсемпе минăсем çурăлнă çĕрте, тăхлан çумăрĕ айĕнче вăл çапăçу хирĕ урлă шуса çӳрет, пурне те хăйĕн куçĕпе курма тăрăшать. Пирĕн чаçăн геройла ĕçĕсене вăл ĕнтĕ сахал мар çырса кăтартнă".

Чăваш писателĕсем фронтра хăюллăн çапăçнă вăхăтрах салтаксем Тăван çĕршыва чунтан юратнине, тăван çĕршĕн хăйсен пурнăçне те шеллеменнине кашни çапăçура тенĕ пекех курнă, çавсем çинчен кун кĕнекисене, тетрадьсемпе блокнотсене кĕскен те пулин çыра-çыра хунă, вăрçă Çĕнтерӳпе вĕçленесси пирки вĕсенчен нихăшĕ те иккĕленмен, çавăнпа мирлĕн пурăнма тытăнсан совет салтакĕн паттăрлăхĕ çинчен калав-

семпе повеҫсем, поэмăсемпе романсем çырма ĕмĕтленнĕ. Унччен вĕсен хастарлăхне, çапăçусенчи хăюлăхне, Гитлер хурахĕсене чунтан-вартан курайманнине оперативлă тĕрленчĕксемпе очерксенче çырса кăтартнă. Акă, танк корпусĕн "На штурм" хаçатĕнче 1944 çулхи июлĕн 11-мĕшĕнче пичетленнĕ Яков Ухсай очеркĕ. "Кăвак чечек" ятлă вăл. Очерк танкистсен арăсланла хăюлăхне, вĕсен пĕр-пĕрне пулăшас туйăмĕ, çирĕп туслăхĕ теменле йывăрлăха та çĕнтерме май панине сăнласа кăтартать. Пĕр ирхине танк командирĕ Виктор Белоухов люка уçса тавраналла сăнаса пăхать. Çӳхе шурă пĕлĕт татăкĕсем вăрман тата çывăхри çунсах пĕтеймен ял урамĕсем çийĕн васкамасăр хĕвел анăçнелле шунă. Лейтенант хăйсем чарăннă уçланкăна сăнаса пăхса илнĕ. Вăл танкран тухса çĕр çине сиксе аннă та хăй умĕнчех тутăхса кайнă пысăк осколкăна асăрханă.

— Юлташсем, тĕлĕнмелле япала! — кăшкăрса чĕннĕ вăл танкри тусĕсене. — Пăхăр-ха, епле илемлĕ чечексем!

Башнерпа радист самантрах лейтенант патне чупса пынă, Семенов механик-водитель малти люкран пуçне кăларнă та ĕненмесĕртерех ыйтнă:

— Аçта-ха тĕлĕнтермĕшĕ? — хăй люкран нимĕнех те курма пултарайманнине ăнланса, вăл та танкран тухнă.

— Куратăр-и, осколок выртать, — тенĕ лейтенант. — 41-мĕш çулхи хăрушă кунсен свидетелĕ пулас вăл. Хурçă йывăр иккенне пăхмасăрах ун айĕнчен икĕ кăвак чечек шăтса тухнă.

Танкистсем чĕркуçленсе ларнă та чечексен кашни çулçине тимлесе пăхнă, пуçĕсене хытăрах пĕксе шăршине юратса шăршланă...

Çапла пуçланать Ухсай очеркĕ. Чечек сăнарĕ танкистсем мирлĕ пурнăçшăн тунсăхласа çитнине лайăх кăтартса парать. Анчах вăрçă вĕçленмен-ха, малта — çĕнĕ наступленисем, походсем. Кĕтмен çĕртен механик-водитель командиртан пĕр чечекне татма ирĕк ыйтать. Мĕнле-ха апла, чечексем пĕтĕм вăйран хĕвел патнелле туртăнаççĕ те, эсĕ вара... Çак вăхăтра Семенов хытă пăлханнине асăрхать командир, аллине унăн хулпуç-

çийĕ çине хурса, çапла ыйтать: «Ку чечексем сирĕн пурнăçпа темĕнле майпа çыхăнман-и?»

Механик-водитель пурне те чечексем тавра ларма калать те çав вырăнта вăрçă пуçланнă çул пулса иртнĕ хăрушă çапăçу çинчен сăмах пуçлать.

... Тӳпене çити тусан çĕклесе нимĕç танкĕсем кĕмсĕртетнĕ, сывлăшра вĕсене хӳтĕлесе "Мессершмитсем" хуçаланнă. Чикĕрен пуçласах пирĕн танкистсем тигрсем пек хаяррăн çапăçнă пулин те, вĕсен çĕршыв ăшнеллех чакма тивнĕ. Кашни танкист чĕри пĕтĕм çĕршыв хуйхин тăхлан пек йывăрăшне туйнă. Пирĕн танка нимĕç снарячĕсем темиçе çĕртен шăтарчĕç, башнер вилчĕ, тенĕ Семенов. Шăпах çак вырăнта çав тери хаяр кĕрешӳ пулса иртрĕ. Пирĕн танк командирне Бовкун кĕçĕн лейтенанта танка юсама тата вилнĕ башнера çĕннипе улăштариччен çапăçу хирĕнчен тыла тухма хушрĕç. Хăвăр пĕлетĕр, тенĕ Семенов, танкистсем харсăр та чăрсăр йăх çыннисем. Мана хама танк туппине авăрлама та, пеме те ирĕк парăр, тенĕ Бовкун кĕçĕн лейтенант. Командовани хирĕçлемест. Куратăр-и, аллипе тĕллесе кăтартнă Семенов, пирĕн танк çав çӳллĕ ăвăс айĕнче засадăра тăратчĕ. Фашист танкĕсен моторĕсем кĕрлени çывхарсах килет, йĕри-тавра снарядсем ӳксе çурăлаççĕ. Куç курми тĕтĕм. Çĕр çӳлелле фонтан пек сирпĕнет. Çул çинче фашист танкĕсем курăнса кайсанах командир, пеме пуçлатăп, тесе пĕлтерет: малтан — броньăна шăтараканнисемпе, унтан — осколоксем салатаканнисемпе. Часах нимĕç танкĕсемпе тĕл пуласса сиссе, Семенов та хăйĕн двигательне чĕртет. "Малта икĕ танкпа пехота!" — кăшкăрать командир. Часах пĕрне вут хыпса илет те тĕтĕмпе хупланать. Семенов хăйĕн танкĕпе каллă-маллă çӳресе хăюллă пулма ром сыпнă фашистсене таптама тытăнать, командир вĕсене пулеметпа çулать. Çак вăхăтра айлăмран тăшманăн аллă ытла танкĕ тухни курăнать. Тупăсем пенĕрен ялтлатни, снарядсем ӳксе çурăлни, çăра хура тĕтĕм, тусан, — пĕтĕмпе пĕрлешсе кайрĕç. Броня çине пульăсем çумăр тумламĕсем пек тăкăнаççĕ. Сасартăк хăрушă взрыв пĕтĕм танка кисретсе илчĕ, машина чарăнса пĕр

вырпĕтĕм танка кисретсе илчĕ, машина чарăнса пĕр вырăнта çаврăнма тытăнчĕ...

Каярахпа çеç пĕлет Семенов: пирĕннисем çав çапăçура тăшманăн аллă танкне стройран кăларнă, вĕсен танкĕ — пилĕккĕшне. Салтак туслăхĕ, пĕр-пĕрне тăван пек юратса хисеплени, Тăван çĕршывшăн юлашки тумлам юн юлмиччен кĕрешни, тăшмана чăтма пултарайманни — совет боецĕсен чи лайăх енĕсем çак çапăçура яр! уççăн курăннă. Çапăçу уйĕнчен Семенова танк командирĕ, çăра тĕтĕм пур çĕрте те йăсăрланнипе усă курса, ыраш хирне çĕклесе те сĕтĕрсе тухать, аманнă вырăнтан юн юхнине чармашкăн хăйĕн кĕпине çурса туртса çыхать, çырмасен тĕпĕпе, варсем тăрăх, ращасем витĕр ăна чарăна-чарăна хĕвел тухăçнелле çĕклесе утать, темĕн тери йывăр пулсан та, пăрахмасть — суранне çуса тасатать, çул çинче тупнă нимĕç салтакĕн сумкинчи бинта çыхса ярать, çавăнти таса кĕпене тăхăнтартать. Туслăх вилĕмрен те вăйлăрах тесе ахальтен каламан. Çиччĕмĕш кунне вĕсем хăйсен подразделенине хăваласа çитеççĕ.

«Халĕ манăн танк командирĕ пулнă Бовкун кĕçĕн лейтенант батальон командирĕ, темиçе орден кавалерĕ. Çыхăну татмастпăр, — пĕлтерет Семенов. — Эпĕ çак чечеке татса ун патне ярса парас тетĕп. Шухăшлăр-ха, 41-мĕш çулта пирĕн танк фашистсен пилĕк танкне тĕп тунă вырăнта халĕ кăвак чечексем ӳсеççĕ. Командир юлташ, татма ирĕк парăр. Эпĕ ăна çырупа ыранах батальон командирĕ патне яратăп».

«Ирĕк паратăп, — тет Белоухов лейтенант, — анчах пĕрне çеç. Пĕри çакăнти пĕрремĕш çапăçура тăшманăн аллă танкне пĕтерни çинчен унта хутшăннă Бовкуна аса илтертĕр, тепри эпир çакăнти çапăçурах виçĕ çул иртнĕ хыççăн фашистсене тĕп туса хамăр çĕре ирĕке кăларнине пĕлтерсе малалла ӳстĕр. Çавăнпа чечеке эсир, Семенов, ыран çеç яратăр, мĕншĕн тесен часах эпир атакăна каятпăр, эсĕ вара çырура çав атакăри пирĕн паттăрлăх çинчен те çырса кăтартатăн».

— Итлетĕп, лейтенант юлташ! — тенĕ Семенов механик-водитель, кĕсйинчен çĕçĕ кăларнă та кăвак

чечеке питĕ асăрханса касса илнĕ, унтан унăн çеçке çулçисене тетрадь листисем хушшине чунтан юратса хунă.

Çĕнĕ атакăра тăшмана çĕнтересси пирки танк экипажĕ пĕрре те иккĕленмен.

Дивизи хаçатне ("Советский патриот") Л. Агаков пирĕн салтаксем тăшмана çĕнтерессишĕн пурнăçа шеллеменнине те, фашистсен темĕн тĕрлĕ тискерлĕхне те, Совет Çарĕн наступленине кашни ялта, кашни хулара, кашни килте чи пысăк савăнăçпа кĕтсе илнине курнă, çавăн çинчен хăйĕн очеркĕсенче çырса кăтартма васканă. Фашистсене вăл писателĕн çивĕч сăмахĕпе "Тискер кайăк йĕрĕпе", "Çын вĕлерекенсем", "Фашистсем — çын мар" очерксенче питлесе çунтарнă. 1942 çулта салтаксем унăн "Выборнов минометчик", "Тивĕçлĕ награда", "Пурнăç — кĕрешӳ", "Паттăр комиссар", "Чăваш халăхĕн хастар ывăлĕ" очеркĕсене кăсăкланса вулаççĕ. 1943 çулта дивизи хаçачĕн корресподенчĕ Л. Агаков "Маштаков зенитчик", "Разведчик мухтавĕ", "Чаплă орден кавалерĕ" тата ытти очерксем пичетлет. Салтаксем унăн очеркĕсене окоп пурнăçне пĕлнĕшĕн, вĕсен кăмăл-туйăмне тĕрĕс кăтартнăшăн, йывăрлăхсенчен хăраманшăн кăмăллаççĕ. Очерксен чĕлхи пуян, ăнланмалла, салтак чĕлхин çунатлă сăмахĕсемпе, каларăшсемпе пуян. Унăн очеркĕсен геройĕсем ахаль салтаксем, Тăван çĕршыв çĕнтерĕвĕшĕн мĕнпур вăйпа пултарулăха параççĕ.

Уйрăмах "33-мĕш номерлĕ старик" очеркри Яков Иванович учитель сăнарĕ асра юлать. Очерк эпиграфĕ вырăнне писатель М. Исаковский сăввин йĕркисене суйласа илнĕ: "Ман ялăмран нимĕн те юлмарĕ, хӳме те, юпасем те, çуртсем те веç пĕтрĕç..." Фашистсем пĕтĕмпе ним юлмиччен çунтарса янă. Çынсем çĕр пӳртсенче пурăнаççĕ, выçăпа аптăраççĕ. Шкулпа больницăран нимĕç салтакĕсен казармисем туса хунă.

Совет партизанĕсене тупса пама килĕшменшĕн Яков Ивановича хытă хĕнеççĕ. Вăл хăйĕн мирлĕ ĕçне питĕ юратать, унсăрăн пурăнма пултараймасть. Çавăнпа ялта фашистсем хуçаланаççĕ пулин те, Яков Ивано-

вич пилĕк уйăх хушши çĕр пӳртсем тăрăх çӳрет, ачасем программăран ан юлччăр тесе вĕсемпе уроксем иртторет. Учитель-патриот сăнарĕ "33-мĕш номерлĕ старик" очеркри ăнăçлă сăнарсен шутĕнче çеç мар, Даниловчалдунăн вăрçă çулĕсенчи пĕтĕм творчествинче паллă сăнар шутланать. Пирĕн çĕршыв çыннисем çеç çапла вăйлă та çирĕп пулма пултараççĕ. Унашкал çынсене никам та нихçан та пăхăнтараймасть», — вĕçлет автор учитель çинчен çырнă очерка.

Л. Агаков "Юлташ пурнăçĕ" (Акатов разведчик), "Лăпкă çын" (лашапа çӳрекен Куракин), "Катюша" (Попов стрелок) очерксенче хăюллă та хастар боецсемпе командирсен сăнарĕсене калăпласа кăтартнă. Кашнин шăпи пĕтĕм çĕршыв, пĕтĕм халăх шăпипе тачă çыхăннă. Пурнăç çине вĕсем анлăн пăхаççĕ. Фашист оккупанчĕсем пирĕн çĕршыв халăхĕсене асаплантарнине хăйсен хуйхи, хăйсен хурлăхĕпе асапĕ вырăнне хурса йышăнаççĕ. Кӳрентерсе пĕтернĕ, асаплантарнă, телейсĕр хăварнă пĕтĕм совет çыннисемшĕн хăйсене яваплă туяççĕ. Çавăнпа кирек мĕнле боевой задание пурнăçлама Акатов, Куракин, Попов яланах Тăван çĕршывшăн вĕсем çеç яваплă пек шутласа каяççĕ. Л. Агаков хăйĕн вăрçă очеркĕсенче совет салтакĕ вăрçă çулĕсенче ăс-тăн енчен хăвăрт ӳснине, тĕрекленнине, хаяр кĕрешӳре çирĕпленсе туптаннине, ăста та хастар боец пулса тăнине ĕненмелле сăнласа парать. Çапăçу вăхăтĕнче тăшманпа паттăрăн кĕрешсе кашниех хăйшĕн тăрăшать тесе мар, пĕтĕм вăй-халне юратнă Тăван çĕршыва историри чи усал тăшманран ирĕке кăларассишĕн паратăп тесе шутлать.

Л. Агаковăн "Салтак чунĕ" (1943) очеркĕнчи офицерсен сăнарĕсем таса чунлă, пысăк ĕмĕтлĕ. Вĕсен ырă кăмăл-туйăмĕсем вулакансене илĕртсе хăйсем патне туртаççĕ, мĕншĕн тесен вăйлă юрату, туслăх, пĕр-пĕрне шанни фашистсемпе кĕрешме пирĕн офицерсене иксĕлми вăй-хал парса тăраççĕ.

Аманнă виçĕ офицер госпитальте выртнă. Виççĕшĕ те хушăран хăйсен чаçĕсенчи ĕçсене, атакăсемпе наступленисене, хăш-пĕр пăтăрмахсене аса илсе пĕр-пĕрне ка-

ласа кăтартнă, малашнехи çинчен ĕмĕтленнĕ, канашланă.

Пĕр офицерĕ, çамрăк лейтенант, çапла сăмах хушнă:

— Пĕлетĕр-и? Ăнланăр-и мана? Кашни çапăçу умĕн эпĕ кĕсьерен Наташа сăн ӳкерчĕкне кăларатăп та чунтан юратса пăхатăп. Тен, сирĕншĕн ку кулăшла та пулĕ? Çапах та эпĕ яланах çапла тăваттăм. Пăхса илетĕп те ăна тимлĕреххĕн, вара вăл та манпа юнашар тăрса çапăçăва кĕнĕ пек туйăнать. Чĕрем те вара хытăрах, вăйлăнрах тапма тытăнать.

Çамрăк лейтенант çакăн хыççăн гитара тытать, салтаксен юратнă юррине шăппăн юрлама пуçлать:

Вьется в тесной печурке огонь,
На поленьях смола как слеза ...
И поет мне в землянке гармонь
Про улыбки твои и глаза.

Ку юрă кашнин чĕринех пырса тивет. Хăш-пĕр салтаксен куççуль те тухма пултарать.

— Салтакăн куççуль курăнмалла мар, — тет лейтенант. — Кам йĕрет, вăл салтак мар, кĕсел ...

— Ай-яй! Эсĕ ытла тӳррĕн, тӳркессĕн каласа хутăн ку сăмахсене. Салтакăн чĕре çук-им вара? Ăна эсĕ чунсăр пĕрене вырăнне хумастăн пулĕ-çке, — тесе хушса хурать пăлханнă сасăпа çамрăках мар майор.

Вăл çарта службăра çирĕм çул ытла пулнă, пурнăçпа вăрçă опычĕ те унăн ыттисеннинчен самай пысăкрах. Унтан фронтра пĕррехинче хăйĕн куçĕсенчен епле майпа куççуль тухни çинчен кĕскен каласа парать. Çавăн чухне вăл икĕ пĕчĕк ачине çавăтнă хĕрарăм фашистсенчен пирĕн еннелле чупнине курнă. Тăшман салтакĕсем ун еннелле пулеметпа пеме тытăннă, çапах та хĕрарăм пирĕн енне чупса каçма ĕлкĕрнĕ те командованине тăшман çинчен хаклă хыпарсем пĕлтернĕ.

«Салтак чĕререн юратма та, савăнма та, хурланма та пултарать. Енчен те вăл кураймасть пулсан, салтакран вăйлине никама тупаймастăн», — тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне çамрăках мар майор.

Л. Агаков "Таня" (1944), "Ялав" (1942) тата "Медаль" (1943) очерксенче совет халăхĕшĕн тăван çĕршывран хакли нимĕн те çуккине, аслисене кĕрешӳре ачасем те ялан пулăшнине чăн-чăн писатель-журналист ăсталăхĕпе кăтартса панă.

Вăрçă вăхăтĕнче чăваш литературинче пирĕн ентешсем Совет Союзĕн Геройĕсем çинчен çырнă илемлĕ очерксем паллă вырăн йышăнаççĕ. Вĕсен шутĕнче И. Тукташăн "Павел Лаптев" тата "Ылтăн çăлтăр" (1944), К. Турханăн "Пулеметчик Иван Смирнов" (1942), "Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсем" (1943), М. Якимовăн "Халăх ывăлĕсем" очеркĕсем. Вăрçă очеркĕсем Чăваш патшалăх издательстви кăларнă "Паттăрсем" (1941), "Тăван çĕршывшăн" (1942), "Чăваш халăх ывăлĕсем" (1944) кĕнекесенче те йышлă. "Чăваш халăх ывăлĕсем" кĕнекере А.Эсхелĕн "Комсомол билечĕ" тата "Тăван çĕршывшăн" очеркĕсем уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ. Унта пичетленнĕ Н. Степановăн "Батарея командирĕ", Н. Илпекĕн "Ашшĕпе ывăлĕ", Л. Агаковăн "20 çулхи капитан", С. Шавлин "Вăл 36 фашиста тĕп тунă" очеркĕсем пурнăçа лайăх пĕлсе çырнă произведенисем. Вĕсем тăшмана курайманлăх туйăма кашни вулакан чунĕнчех ӳстереççĕ, унпа пĕтĕм вăя, ăс-хакăла парса кĕрешме хавхалантараççĕ.

И. Тукташăн "Павел Лаптев" портрет-очеркĕнче (1944) çамрăк офицер-командир сăнарне пĕр ӳстермесĕр пур енлĕн кăтартнă. Павел Лаптева, çамрăккине пăхмасăрах, вăл тăшмана тупăсемпе тĕл персе сахал мар тĕп тунине шута илсе, батарея командирне лартаççĕ. Çакăн хыççăнах Лаптевăн фашистсемпе хаяррăн кĕрешме тивет. Нимĕçсем пирĕн салтаксенчен темиçе хут нумайрах. Çапăçура вĕсем, эрех ĕçсе хăюлланнăскерсем, пирĕн боецсене таптасах каяссăн туйăнать. Анчах çамрăк командир çухалса каймасть, хăраса ӳкмест, оруди расчечĕсене тĕрĕс те вырăнлă командăсем парать. Пирĕн тупăсем пĕр чарăнми переççĕ, наводчиксен пултарулăхне кура пĕр снаряд та сая каймасть. Батарейăри разведчик-артиллерист та командира питĕ тĕрĕс шутлавсем парать, çавăнпа батарея коллективĕ çирĕп те хăватлă механизм

евĕрлĕ ĕçлет. Нимĕçсен чăтăмлăхĕ чакнăçемĕн чакать, юлашкинчен вĕсем хăйсен çĕнĕ позицийĕсене хăварса чакма тытăнаççĕ. Çапла вара Лаптев батареи хамăрăн ытти подразделенисене наступлени пуçарма çул уçса парать.

Писатель сăнласа кăтартнă тăрăх, Лаптев хăйĕн паттăрлăхне асăрхамасть те, вăл тăшманпа хăй паттăрла çапăçнине паттăрлăх вырăнне те хумасть, фашистсемпе кашниех çапла пĕтĕм вăйпа пултарулăха парса кĕрешме тивĕç, тесе шутлать. Çав хушăрах батарейăри тупăсен командирĕсемпе наводчикĕсене, тупăсене снарядсемпе авăрлакансене хастарлă пулнăшăн тав тума та, мухтама та манмасть. Лаптевăн чи лайăх енĕсем — Тăван çĕршыва чунтан юратни, çирĕп кăмăл, çĕнтерӳшĕн хăйне пĕтĕмпе пама хатĕрри, хăйĕнчен те, ăна пăхăнакансенчен те тивĕçлĕн ыйтни.

И. Тукташ Павел Лаптев оруди расчечĕсемшĕн куллен тăрăшнине, вĕсен умĕнче хăрушă çапăçусем вăхăтĕнче те чи кирлĕ тĕллевсем лартма пĕлнине кăтартать, мĕншĕн тесен командир хăйне пăхăнакансенчен кашниех мĕн тума пултарнине лайăх пĕлет. Батарейăн çĕнĕ командирĕн чи лайăх енĕсем командовани ăна пĕр яла фашистсенчен ирĕке кăларма приказ парсан уçăмлăн курăнать. Батарея пĕр вырăнтан тепĕр вырăна хăвăрт куçса çĕнĕрен çĕнĕ позицисем йышăнма пĕлни, командир имĕнрен те хăраманни яла, унти совет çыннисене фашистсен пусмăрĕнчен пысăк çухатусемсĕр ирĕке кăларма май параççĕ. Писатель Лаптев йышши геройсем кашни кун тенĕ пек йышланса пынине, çапла пирĕн Тăван çĕршыв фашизма тĕп тумалăх çителĕклĕ вăй пухса туптаса пынине сăнласа кăтартать.

"Ылтăн çăлтăр" очеркра та И. Тукташ Павел Лаптев пек паттăр салтака Иван Поляков ефрейтора произведенин тĕп геройĕ вырăнне лартать. Поляков Сталинград патĕнчи çапăçусенчех хăйĕн хăюлăхне, иксĕлми хастарлăхне, тискер тăшманран нимĕн чухлĕ те хăраманнине кăтартса панă. Фашистсем пĕр чарăнмасăр персе тăнине пăхмасăр Днепр урлă чи малтисен ушкăнĕнче ишсе каçнă, 259 фашиста леш тĕнчене ăсатнă. Ко-

мандира вĕлерсен, çапăçăвăн чи хĕрӳллĕ вăхăтĕнче вăл ура çине сиксе тăнă та: "Тăван çĕршывшăн — малалла! — тесе хăватлăн кăшкăрса тăшман çине ыткăннă.

Тукташ хăйĕн очеркĕнче хĕрӳллĕ оратор искусствипе, чунри монологпа, Тăван çĕршыва юратмалли, унăн юхан шывĕсемпе кӳллисен, ешĕл вăрманĕсен, Раççей çыннин чун пуянлăхĕ çинчен ирттерекен калаçу формипе анлăн усă курать. Автор хумханса та çĕкленсе Днепрпа каласа вулакансене совет халăхĕн чаплă çĕнтерĕвĕсен, Тăван çĕршывăн гитлерла Германие хирĕç пыракан Аслă вăрçин чыслă тĕллевĕсен сăлтавĕсене лайăхрах та тарăнрах ăнланса илме пулăшать.

И. Тукташ чаплă воин сăнарне туллин, асра юлмалла сăнласа кăтартас, унăн чăн-чăн характерне уçса парас шутпа илемлĕх меслечĕсемпе нумай усă курать. Анчах та хушăран-хушăран автор Иван Поляков паттăрлăхне ытлашши ӳстерсе, хитрелетсе кăтартма тăрăшни сисĕнет. И. Тукташ шутланă пек пулсан, очерк геройĕ вăрçă законĕсене пĕтĕмпех вĕренсе пĕтернĕ, автоматĕнчен пенĕ чухне фрицсем çавапа типсе ларнă курăка çулнă пек тăкăнаççĕ т. ыт. те. Çакăн пек тата ытти килĕшӳçĕр танлаштарусемпе сăмах çаврăнăшĕсем очеркăн илемлĕх шайне чылай чакараççĕ.

Ку очерксемсĕр пуçне И. Тукташ совет салтакĕсен паттăрлăхĕ çинчен вăрçă хыççăн та темиçе очерк çырать ("Хасан", "Сержант калавĕ", "Такан пăти"). М.Я.Сиротkин профессор палăртнă тăрăх, "... чăваш литературинче И. Тукташпа В. Долговăн прозăллă сăввисем хăйне евĕрлĕ явлени пулса тăчĕç, çав произведенисем вырăс литературинчи патриотла кĕвĕсене пирĕн литературăра ăнăçлă аталантарнине кăтартса пачĕç".[59]

И. Тукташăн "Хĕрача", "Лантăш", "Пурнăçпа вилĕм" тата В. Долговăн "Тăван çĕршыв", "Нименрен хăраманлăх" прозăллă сăввисем фронтри хаçатсенче пичетленнĕ очерксене çывăх, вĕсем калăпăшĕпе пысăк мар, анчах шухăшĕпе вăйлă: фашизм вăрă-хурахла идеологине тăрă шыв çине кăлараççĕ, совет салтакĕсем ирĕклĕхпе телейшĕн кĕрешнине мухтаççĕ. Ритмлă прозăпа çырнăран вĕсем çĕкленӳллĕн, мухтавлăн янăраççĕ. Çут

çанталăк илемне сăнласа кăтартнипе салтаксен тăшмана чунтан курайманлăх кăмăл-туйăмне уçса пани вĕсем пурнăçа чĕререн юратнине, шухăшĕ-ĕмĕчĕ пулас Çĕнтерӳпе тачă çыхăннине палăртать. Çакнашкал кашни произведени тăван хирсемпе улăхсемшĕн, тăван аннесемпе ачасемшĕн, чĕрери чи таса юратушăн кĕрешме чĕнсе хавхалантарать. "О, Тăван çĕршывăм! Манмастăп сана. Нихçан та!" — тесе вĕçлет тăван ен çинчен çырнă кашни произведенине Василий Долгов.

Ирĕклĕх тĕнчи, Тăван çĕршыва фашистсенчен тасатассишĕн кĕрешсе пурнăçа пама хатĕрри, вăйлă туйăмлă совет çыннин илемĕпе хăвачĕ — акă мĕн куратпăр эпир И. Тукташăн "Пурнăçпа вилĕм" произведенийĕнче. "Старик анăçран тухăçалла утнă", — тенĕ унта. — Вăл çав тери ывăннă пирки урисене аран-аран малалла пускаланă ... Çапах та унăн пурăнасах килнĕ... Çулсерен çуркунне тополь турачĕсем касса юхан шыв хĕррипе лартнине аса илнĕ вăл, çав туратсем икĕ-виçĕ кунранах папаксенчен чечен те çĕнĕ пĕчĕк туратсем кăларма тытăннă... Старик кунта та хăйĕн аллинчи патака хăйăр ăшне чиксе лартасшăн пулнă, анчах та çырана тимлĕрех пăхсан сасартăк чĕтресе ӳкнĕ. Унран инçех те мар, пичĕпе шыва сĕртĕнсе, совет салтакĕ выртнă. Унăн гимнастерки юнланнă пулнă, сылтăм алли винтовкăна чăмăртаса тытнă... Старик ун патне çывхарнă та йĕрсе янă:

— Ой, ман ывăлăм! Ой, ман пурнăçăм!

... Вăл салтака ыталаса хăйĕн кăкăрĕ çумне пăчăртанă, кăвакарса кайнă тутинчен чуп тунă, юнпа вараланса типсе хытнă çӳçĕнчен ачашланă. Çара аллăнах шăтăк авăтнă, унта палламан салтак виллине асăрханса ерипен хунă та хăйăрпа витнĕ. Вара старик хайхи патака салтакăн чĕрĕ вил тăприне чиксе хунă та, унăн винтовкине çĕклесе, çапла каланă:

— Эсĕ хăвăн пурнăçна çапăçу хирĕнче татнă, эпĕ вара ăна тăшманпа хаярăн кĕрешсе унăн юнĕпе паллă тăвăп. Юншăн — юн! Вилĕмшĕн — вилĕм!

Çакăн хыççăн вăл çирĕп утăмсемпе малалла, анчах та хĕвел тухăçнелле мар, хĕвел анăçнелле утса кайнă».

Дивизи хаçатĕнче ĕçленĕ В. Долгов писатель те сахал мар илемлĕ очерк çырнă. Вĕсенчен нумайăшĕнче ("Совет халăхĕ çĕнтерет", "Тăван çĕршыв", "Шкул ачисем") пирĕн халăх Тăван çĕршыва хытă юратнине, вăл çĕнтерессе çирĕп шаннине хĕрӳллĕ сăмахсемпе çырса кăтартнă. Совет разведчикĕсемпе снайперĕсен, пулеметчикĕсемпе артиллерисчĕсен, танкисчĕсен паттăрла ĕçĕсене тĕрĕс сăнласа панă ("Вырăс салтакĕ", "Паллă разведчик", "Григорьев снайпер", "Вăрçăн юлашки кунĕсенче" т. ыт. те); фашистсен тискер кайăкла хăтланăвĕсене писателĕн çивĕч сăмахĕсемпе питленĕ ("Усала тĕп тумаллах", "Фашистсен пусмăрĕнчен хăтăлнă", "Манмастпăр, каçармастпăр!").

Долгов произведенийĕсем нумай чухне вăрçă хирĕсенче пулса иртнĕ ĕçсем çинче никĕсленнĕ, конкретлă герой паттăрлăхне çырса кăтартнипе çыхăннă. Пурте вĕсем пĕртен-пĕр ырă туйăмпа, хăй куçĕпе фронтра мĕн курнипе, чĕнӳллĕ шухăшпа тулнă ("Каялла — пĕр утăм та! Малалла çеç, хĕвел анăçнелле"). Унăн очеркĕсенче мирлĕ ĕçре пиçĕхнĕ çын мĕнле майпа хăюллă та пултаруллă салтак пулса тăнине сăнама, хаяр та йывăр çапăçусенче унăн паттăр енĕсем çуралса тĕрекленнине курма пулать ("Коммунист юнĕ", "Тĕлĕнмелле винтовка", "Хăраманлăх").

Няма сержанта подразделенире пурте лăпкă çын тесе шутланă ("Лăпкă çын", 1944). Вăрçăччен вăл шăшисене те тĕкĕнмен, чăх пусмашкăн та кӳршисене чĕннĕ. Унăн хастарлăхĕ, çирĕп кăмăлĕ атакăсенче, фашистсемпе шикленмесĕр тытăçнисенче уçăлать. Кашни çапăçурах тĕлĕнмелле хăюлăхпа çаврăнăçулăх кăтартать. Йывăр аманнă хыççăн та унăн пĕртен-пĕр шухăш-ĕмĕт çеç: госпитальтен хăвăртрах сипленсе тухмалла та пĕрле çапăçакан юлташĕсемпе малалла, Берлина çитиччен каймалла!

"Григорьев снайпер" очеркра (1943) В. Долгов чăваш лейтенанчĕн сăнарне кăтартать. Ун çинчен полкра çеç мар, пĕтĕм дивизийĕпе мухтаса калаçнă. Автор Григорьев снайпер ăсталăхĕ, унăн вĕренекенĕсем Ахмедзянов тутар, Квитко украинец, Ветчинкин вырăс çин-

чен кăмăлласа çырать. Вăрçăра тĕллевĕсемпе кăсăклăхĕсем пĕрешкел пулни вĕсене пĕр-пĕринпе çывăхлатать, туслаштарать. Писателе Григорьев лейтенант характерĕ ытларах интереслентерет. Çăмăл мар ир те, каç та фашист-салтаксене кĕтсе ларма, анчах та кашни ăнăçлă перӳ хыççăн ăна чăн-чăн савăнăç çавăрса илет. Вăл тăшмана пенĕ чухне яланах Тăван çĕршыв, тăванĕсемпе юлташĕсем çинчен шутлать, ку вара тăшманпа кĕрешме вăй хушать.

Европа халăхĕ те ирĕке юратать

Тăшмана Тăван çĕршыв çĕрĕнчен хăваласа кăларнă хыççăн Хĕрлĕ Çар, фашизм йăви Берлин еннелле анлă наступление вăйлатса пынă май, Гитлер пусмăрне лекнĕ Европа халăхĕсене ирĕке кăларма тытăнать. Совет салтакĕсем вун-вун концлагерь алăкĕсене уçаççĕ, фашистсене тĕрлĕ халăхсен пин-пин ялĕпе хулинчен хăваласа кăлараççĕ. Çар хаçачĕсенче, литература журналĕсенче, тылри хаçатсенче пичетленекен илемлĕ очерксен тематики улшăнать, вĕсен содержанийĕ те çĕнелет. Очерксенче писательсем çĕклекен проблемăсем те урăхланаççĕ, çĕнĕ йышши геройсем курăнма тытăнаççĕ.

Н. Илпек редакторта ĕçлекен дивизи 1944 çулта Дунай урлă каçса Балкан тăвĕн чуллă хырçисем патне çитет. Кунсем уяр тăнă вăхăтра та ирĕлме ĕлкĕреймен юр лаптăкĕсем шап-шуррăн выртни катаранах палăрать. Вĕсен çийĕпе кăвакарнă пĕлĕтсем йывăррăн шăваççĕ.

Пĕлĕт сийĕсем хутланса пĕрĕннĕ вăхăтра вĕсен хушшинче палăракан темĕн пысăкăш палăксем аякранах курăнаççĕ. Аялтан пăхсан вĕсем çав тусем çине тĕренсе, хăйсен пысăк кӳмерккисемпе пĕтĕм тӳпене чаркаласа тăнă пек мухтавлăн çĕкленеççĕ. Çав палăксене иртнĕ ĕмĕрте Шипка таврашĕнче пулса иртнĕ вăрçă ячĕпе вырăс халăхĕн паттăрĕсене сума суса лартнă.

«Эпир шăпах çавăнталла çул тытатпăр, — тесе çырать Н. Илпек "Шипка таврашĕнче" очеркĕнче, — ха-

мăра лартса каякан ямшăк, Петко ятлăскер, вăтам çулсене çитнĕ, хурарах сăнлă та çивĕч куçлă болгар пар лашине хистемесĕр анаталла май юрттарса пырать. Çанталăк шăрăхлатиччен Шипка ялне çитме васкатпăр эпир. Шипка леш енче, анкарти хыçĕнче тенĕ пекех, Балкан хырçин чи çӳллĕ тăвĕ — Ватă Планина пуçланать, унта кайма тата сулхăнтарах».

Хĕрлĕ Çар подразделенийĕ часах роза айлăмне çитет. Роза чечекре. Малтанласа салтаксем ăна кантăк умĕнче ӳсекен роза пек пуль тесе шутласçĕ. Анчах апла мар иккен: лутра вăл, нухăт ращи пек кĕçеленсе ӳсет, чечекĕ те имшеркке. Çак розăран çу юхтараççĕ иккен. Симлĕ роза çăвĕ чи лайăх йышши духисем тунă çĕре каять. Вăрçă тĕтĕмĕпе темиçе çул тĕссĕрленнĕ салтаксем Петкона уççăнах тĕлĕнсе итлеççĕ, çав çăвăн пĕр тумламне çĕнĕ пиншак çине тумлатсан, пиншакран мĕн çĕтĕлсе пĕтичченех ырă шăршă кĕрсе тăрать. Çакăн пек роза тĕнчере урăх çĕрте ниçта та çук имĕш.

Вырăссем болгарсене тăшман асапĕнчен пĕрре çеç мар хăтараççĕ. Çакна кăтартса парасшăн писатель хăйĕн очеркĕнче. Петко, сăмах ваклама питĕ юратаканскер, çак таврара çитмĕл çул ĕлĕкрех мĕн пулса иртнине калакала кăтартать. Ăна итлесе пынă май салтаксем кирек хăш ĕмĕрте те вырăссем паттăр пулнăшăн, ытти халăхсене пулăшма тăрăшнăшăн хавхаланса пыраççĕ, ку хаяр вăрçăра та болгарсене фашизмран ирĕке кăларма май килнĕшĕн вĕсен чĕрисем савăнăçлăн тапаççĕ, кăмăлĕсем çĕкленеççĕ. Петко та çавна питĕ лайăх туять, уçă сасси вырăс салтакĕсен чунĕсенех пырса тивет. «Ун чухне, — тет вăл, — вырăссем пирĕн халăха турккӑсен пилĕк çĕр çулхи пусмăрлăхĕнчен çăлса хăварчĕç. Хальхинче эсир пире Гитлер тамăкĕнчен хăтартăр. Болгарсем вырăс халăхне тăван пиччĕшĕ пек кураççĕ, вĕсем аслă пиччĕшне нихçан та манас çук... Çав сăртсем айне ĕлĕкхи вăрçăра вилнĕ вырăс тата болгар салтакĕсене пытарнă. Нумай çулсем иртрĕç. Çав хĕрессĕр масарсене эпир çывăха хурса хисеплетпĕр. Кунта кашни вырсарни кун халăх пуçтарăнать. Паттăрсене асăнса чечек кăшăлĕсем хураççĕ, инçетри тăванĕсене ырă сывлăх сунаççĕ...»

Петко сăмахĕсене илтсен, калавçă шухăша каять. Кам пĕлет, тен çавăн чухнехи салтаксем хушшинче пирĕн асаттесемпе мăн асаттесем те пулнă пуль? Писатель пĕлтернĕ тăрăх, Хусанпа Чĕмпĕр полкĕсем çапăçнă-çке кунта. Ку полксене вара вырăссемпе пĕрле чăвашсене йышлăн ăсатнă. Самар хулин халăхĕ болгар ополченийĕсене ялав парса та халалланă. Çав ялава калавçă-автор София хулинчи Александр Невский соборĕнче курнă.

Ку очерка вуласа тухсан, унта çирĕп сюжетпа композици çук пек туйăнать, мĕншĕн тесен вăл пĕр-пĕринпе çыхăннă темиçе эпизодран çеç тăрать (кун пек очерк çинчен маларах пăртак калаçса та илнĕччĕ-ха эпир). Автор Хĕрлĕ Çар салтакĕсене болгарсем хăйсене вырăссем ĕлĕк туркăсен пусмăрĕнчен, халĕ фашизм ирĕксĕрлĕхĕнчен хăтарнăшăн тав тунине курать. Ялти кашни урам тăван ятсене асăнтарать. Тăрем аслă урама Скобелев генерал ятне панă, ăна хĕреслетсе каçаканни — Гарталов майор урамĕ.

Очеркра характерсем çук, анчах кашни эпизода курса хак параканни, вĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтараканнисем автор-калавçă тата совет салтакĕсене Шипка ялĕпе ун тавралăхне кăтартса çăрекен Петко болгар. "Чухăн пурăнать-ха пирĕн халăх", — тет совет офицерне Петко, çавăнтах унăн сăмахĕсене çирĕплетекен темиçе йĕрке: "Ту хĕрринчи айлăмра хресченсем çерем уçаççĕ. Ĕшенсе çитнĕ буйволĕсем, енчен енне сулăнса, хăрах тĕренлĕ ака пуçне васкамасăр сĕтĕрсе пыраççĕ. Пуçĕсене аялалла уснă май, темĕн пысăкăш мăйракисемпе вĕсем хăйсем çĕре сухаласа пынă пек курăнаççĕ".

"Мĕнле пурăннă эпир ку таранччен — тарçăлла, — тет Петко, хăй темĕн пек ĕçчен пулсан та, ăна пурте хĕсĕрленĕ — патша тытăмĕпе горбадженсем те (кулаксем), вăрçă-харçă та, ют çĕршыв пуянĕсемпе салтакĕсем те. — Акă тинех эсир пулăшнипе хамăр телее хамăр тума тытăнтăмăр..."

Очеркри тепĕр эпизодра Балкан тăвĕ çине хăпарнă çĕрте, ту çинчи пĕр сарлака айлăмра, салтаксене чаплă

чиркӳ курӑнса каять. Унӑн тӑррисем хӗвел çинче ылтӑнӑн-кӗмӗлӗн ялкӑшса тӑраççӗ. «Ку чиркӳ — палӑк, — ӑнлантарать Петко. — Ӑна Шипкӑри ту çулӗшӗн çапӑçнӑ вырӑс паттӑрӗсене асӑнса, вырӑссемпе болгарсем хӑйсен ирӗкӗпе укçа пуçтарса лартнӑ. Чиркӳ кӑшӑлне вун çиччӗмӗш ӗмӗрти вырӑс стилӗпе Раççей архитекторӗ Померанцев тутарнӑ. Стенисем тӑрӑх пур енчен те шурӑ мрамор плитасем вырнаçтарнӑ, вӗсем çине вӑрçӑра паттӑррӑн кӗрешсе вилнӗ вырӑс салтакӗсемпе офицерӗсен ячӗсене ылтӑн шывӗпе çырнӑ».

Шалта пуян турӑш тӗлӗнтерет. Ылтӑнпа витнӗ турӑшӗсене чи ӑста мастерсем тунӑ. Хӑш-пӗрисем йӑлтах ылтӑнтан. Кӗтессисене топаз чулсем, уйӑх чулсем, симӗс те кӑвак бриллиантсем сапса илемлетнӗ. Вӗсем тӗттӗм кӗтесре те тӗрлӗ тӗспе çунса, йӑлкӑшса тӑраççӗ.

Çапла "Шипка таврашӗнче" очеркра Н. Илпек ерипен-ерипенех уйрӑм болгар çыннисен характерӗсемпе кӑмӑл-туйӑмне мар, эпизодсене пӗтӗмлетсе болгар çӗрне туркккӑсенчен тата фашистсенчен ирӗке кӑларнӑшӑн пирӗн çӗршыва ӗмӗр-ӗмӗр тав тӑвакан Болгари патшалӑхӗн сӑнарне уçса кӑтартать. «Авӑнчӑк пусма чан çапакан çӗре пӗтӗрӗнсе хӑпарать, — сӑнарлать малалла автор-калавçӑ. — Çӳлте пурӗ вун икӗ чан. Вӗсене пурне те вӑрçӑ хыççӑн пуçтарнӑ снаряд гильзинчен шӑратса тунӑ. Чи пысӑк чанӗ çич çӗр вун пӗр пӑт таять. Ӑна тума çӗр хӗрӗх пин гильза кирлӗ пулнӑ. Чанӑн илемлӗ сасси пӗтӗм ту таврашне вӑратать. Чиркӳ тӑррине хӗрлӗ ылтӑнпа витнӗ. Аяларах гранитлӑ юпасемпе тӗрлесе тыттарнӑ. Çак чиркӳ ту çине хӑпарас çул хӗрринче ем-ешӗл садсем хушшинче халапри чаплӑ кермен пек курӑнса ларать».

Салтаксем, татах çӳлелле хӑпарнӑ май, хӑйсенчен сылтӑм енче çӑра курӑк пусса кайнӑ авалхи çула кураççӗ. Вырӑнӗ-вырӑнӗпе вӑл чӑнкӑ çӗртен те тӳрех анать. Тӗллӗн-тӗллӗн чул хӑмасемпе витнӗ пусмасем пур. «Авалхи вӑрçӑ вӑхӑтӗнче вырӑс çарӗсем çав аслӑ çул тӑрӑх пысӑк тупӑсем антарнӑ, ӗçме-çиме турттарса тӑнӑ. Хӗлле кунта час-часах куç уçса пӑхма çук çил-тӑман вӗркесе вӗçет», — тет Петко.

Шипка çинчен сăмах хускатсан, кунта пулса иртнĕ çапăçу çинчен те каламасăр иртме çуккине асăрхаттарать автор. Мĕншĕн тесен кунта вырăс халăхĕн ĕлĕкхи ĕмĕрĕнчи чапĕ усранать. Иртен-çӳрен çын çак таса вырăна çывхарсан, катаранах çĕлĕк хывса пырать. Этем вăйĕ темĕнле инкеке те пăхăнтарма пултарнипе тулать унăн кăмăлĕ, çакăнта ĕлĕк кĕрешнĕ вырăс паттăрĕсен ятне сума суса асăнать вăл.

Автор-калавçă çĕнĕ çĕре тимлĕ сăнанинчен, истори тапхăрĕсене тĕрĕс хак пама пĕлнинчен нумай килет очерк ăнăçлăхĕ. Тен, вăл Шипкăшăн пынă авалхи вăрçă пирки виçесĕртерех, вăрăмраххăн та çырать пулĕ хушăран, çапах писатель болгар халăхне туркăсен пусмăрĕнчен ирĕке кăларнă вырăс халăхĕн мухтавлă ĕçĕсене Гитлер çарĕсене Хĕвел анăçнелле хăваланине ӳкерсе кăтартнă май ырласа аса илни очерк содержанине пачах та кичемлетмест, пуянлатать кăна. Калавçă очеркри хăйĕн вырăнне лайăх ăнланать, унта шухăшĕсене, истори пулăмĕсене кĕртсе очерка кăсăклăрах тума тăрăшать. Сюжет пирки те вăл çук теме пултараймастпăр, мĕншĕн тесен автор уйрăм геройсен характерне тарăнраххăн аталанура уçса парассишĕн тăрăшмасть кунта, унăн умĕнче пачах урăх тĕллев тăрать: пысăк эпизодра болгарсем хăйсене ирĕке кăларакансене мĕнле кĕтсе илнине анлăн ӳкерсе кăтартасси. Çак тĕллеве вăл ăнăçлă пурнăçлать. Паллах, очеркист тĕллевĕ мĕнле, çав тĕллеве епле майпа пурнăçа кĕртет, — очерк сюжечĕ те урăхларах пулса тухать. Çавăнпа сюжет аталанăвĕнче вăрçă саманчĕсем сахал мар вырăн йышăнаççĕ. Çав вăрçă паттăрĕсенчен пĕри, Гурко генерал, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуласса пĕлсе тăнă темелле. Хаяр çапăçу умĕн панă приказĕнче вăл хăйĕн салтакĕсене çапла каланă: "Иртĕç çулсем, — сирĕн йăхăрсен ачисем çак чăнкă тусен тăррине çитсе, пирĕн паянхи кунсене мухтавлăн асăнĕç. Çакăнтан Суворовпа Румянцев пăхаттирĕсен чапне вăратакан çарсем иртнĕ, тейĕç".

Акă мĕнле сăнарлать автор вырăссен пĕрремĕш çарĕ çапăçăва кĕнĕ хыççăнхи пулăмсене: "Часах иккĕмĕш çар та çитнĕ. Сылтăмран тата туркăсене ви-

ççĕмĕш çар çунтарма тытăннă. Ниçта кайса кĕреймен туркĕăсем ăсне-пуçне çухатса ăçта куç курнă — çавăнталла тарнă; вĕсенчен çурри ытла вырăссен аллине тытăна парăнса пĕтнĕ. Тытăнрисен хушшинче Осман-пашшапа Сулейман-пашша та пулнă. Шипка патĕнче çак çĕнтерĕве пула пилĕк çĕр çул хушши туркĕăсен пусмăрĕнче пурăннă болгарсем тинех ирĕке тухнă...

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче çĕршывăмăрăн паттăрĕсем хăйсен мăн аслашшĕсем Шипка таврашĕнче илнĕ мухтавлă чапа чакармарĕç. Вĕсем çав чапа çĕр хут, пин хут ытла ӳстерчĕç, ăна пĕтĕм тĕнчене кăтартса ĕмĕрсен ĕмĕрĕсене çитмелле турĕç".[60]

Александр Алган вăрçăн малтанхи кунĕсенчех хаяр çапăçусене хутшăнма тивни çинчен каланăччĕ ĕнтĕ. Тӳрех вунă куна яхăн фашистсемпе пĕр чарăнмасăр кĕрешме тивет унăн, тăшманпа темиçе те куçа-куçăн тĕл пулать. Çав кунсенче вăл пуçне мина ванчăкĕ тивнипе йывăр аманать, госпитальтен сывалса тухсан ăна Мускава Çар инженерĕсен училищине вĕренме яраççĕ. Офицер званине илсен каллех фронта ăсатççĕ. Чи малти ретре, чи хăрушă вырăнсенче çапăçма тивет Александр Алга саперăн. Вăрçăра сапер пĕрре çеç йăнăшать, тесе ахальтен каламан салтаксемпе командирсем. А. Алга Берлинри рейхстаг çине Çĕнтерӳ ялавĕ хăпартса çакичченех малти окопсенче çапăçать, тăватă хутчен аманать, çапах та кашнинчех госпитальтен хăйĕн чăсне таврăнать. Маларах эпир унăн икĕ илемлĕ очеркне тишкертĕмĕр, ку сыпăкра та унăн очеркĕсем çинчен калаçăпăр. Анчах унччен А. Алга фронтра та питĕ паттăр, çав хушăрах питĕ сăпайлă офицер пулни çинчен калакан пĕр документпа паллашăпăр.

Вăрçă фашизм йăвине Берлина парăнтарнипе вĕçленнĕ хыççăн тăватă çул иртет, анчах А.Алга юлташĕсене Шупашкарта хăй Польша çĕрĕ çинче унти çынсемшĕн пархатарлă ĕç нумай туни çинчен нимĕн те шарламасть. Кун пирки вăл никама та пĕр сăмах та асăнмастчĕ-и тен, анчах 1949 çулта Польшăран Шупашка-

ра Мечислав Френкель çырнă "Чăваш çăкăрĕ" ятлă пысăк очерк килнĕ. Унта поляк писателĕ 1944 çулта А. Алгана тĕл пулни, унăн ырă ĕçĕ çинчен хумханса та хавхаланса çапла çырнă:

"...1944 çул. Нихçан асран кайми кунсем ... Хаяр çапăçу хулара темиçе куна пычĕ; темиçе талăк хушши, ирĕн-каçăн, урамсемпе тăкăрлăксенче, скверсемпе площадьсенче вăрçă шавĕ кĕрлерĕ.

... Юлашкинчен пирĕн хула тăшман çарĕнчен тасалчĕ... Хула урамĕсемпе хĕвел анăçнелле çĕнтерӳçĕсем — совет полкĕсем ирте-ирте кайрĕç. Хулара пытанса юлнă поляксем вĕсене, хăйсен тăванĕсене кĕтсе илнĕ пек, музыкăпа, чечексемпе, хĕрлĕ ялавсемпе кĕтсе илчĕç.

Часах хулара вăрçă лăпланчĕ, хĕвел анăçнелле, инçене кайса, хуллен кăна илтĕнекен пулчĕ.

Нимĕçсем хуларан тухнă-тухманах, урамсенче совет салтакĕсем чи малтанах пĕчĕк ушкăнсемпе, виçшерĕн-тăваттăрăн курăнчĕç. Кашнин аллинче вĕсен — вăрăм шалчасем. Кусем мина шыракансем пулнă иккен.

... Ак ман умра чăваш çынни — Совет Çарĕн офицерĕ, кăкăр тулли орденлă гвардеец. Хăйĕн культурипе, анлă пĕлĕвĕпе мана вăл шалтах тĕлĕнтерчĕ. Вырăс классикĕсемпе Хĕвел анăç Европăри классиксем çинчен, литературăпа философири тĕрлĕрен сийсемпе юхăмсем çинчен, пирĕн аслă поэт Мицкевич çинчен хĕрсе кайсах калаçрĕ вăл. "Акă мĕн тери ӳснĕ иккен революци хыççăн чăвашсен культури!" — шутларăм эпĕ, ăна итлесе ларнă май.

Ик-виç кун иртсен чăваш писателĕ каллех ман пата килчĕ... Нумайранпа эпир пĕр тĕпренчĕк çăкăр та ăша илменччĕ... Совет лейтенанчĕ, чăваш ачи, ман пата вунă çăкăр илсе килчĕ!..

Ун чухне хам епле пăлханнине, мĕн тери савăннине ниепле те каласа парас çук. Çак йывăр выçлăх кунĕсенче çамрăк чăваш панă çăкăр — çав тери пысăк пурлăх пулчĕ вăл! Çак парне маншăн Нобель премийĕнчен те хаклăрах туйăнчĕ...

Çапла эпĕ, çĕршывăмăра нимĕç хурахĕсем çаратса хăварнă хыççăн чылай выçă пурăннăскер, малтанхи çăкăр татăкне совет офицерĕн аллинчен йышăнтăм. Çапла хăналарĕ мана Атăл таврашĕнчен килнĕ Çĕнтерӳçĕ, чăваш çынни, пирĕн çĕршыва ирĕке кăларакан мухтавлă çар салтакĕ. Вăл чăваш поэчĕ Александр Егорович Алга пулчĕ...

Совет поэчĕ мана хăйĕн сăввисене чăвашла вуласа пачĕ. Эпĕ ăна итленĕçем, сăмаххисене пĕлместĕп пулин те, çакна ăнлантăм: чăваш сăвăçи мана хăйсен çĕршывĕнчи телейлĕ кунсем çинчен, вĕсен халăхĕ те Совет Союзĕнчи ытти тăванла халăхсен йышĕнче культурăллă пурнăç туни çинчен хавхаланса кĕвĕлет.

Эпĕ хăйне чĕререн тав тунине кура, лейтенант мана çапла кăна каларĕ: "Эпĕ кашни совет çынни тума пултарнине çеç турăм: йывăрлăхра ĕç çыннисене пулăшасси — пирĕншĕн чыслă ĕç. Пирĕн, халăх интересĕсемшĕн ĕçлекен литераторсен, яланах пĕр-пĕрне пулăшса, туслă пурăнмалла".[61]

Поляк писателĕ хăйĕн çырăвĕнче совет офицерĕ вунă çăкăр парнелесе выçлăхран çăлнине çеç пĕлтермест. Ун çырăвĕн пĕлтерĕшĕ пысăкрах, анлăрах: çырура совет халăхне, унăн çĕршывĕпе хăватлă çарне фашизм пусмăрĕнчен Польшăна ирĕке кăларнăшăн тав туни, çак ырă ĕçе ялан-ялан асра тытма тупа туни. Çав хушăрах ют çĕршыв литераторĕ чăваш поэчĕн сăввисене тимлесе итлет, чăваш халăхĕн культури çĕнĕ саманара вăйлăн аталанса чечекленнĕшĕн чунтан савăнать, хăйĕнче тăванла туйăм çуралса вăй илнине пĕлтерет. А. Алга поляк çыравçине 1944 çулта каланă сăмахсем халĕ те пĕлтерĕшне çухатман.

"Çапла, пирĕн ăрăва шăпа пуçран шăлса ачашламарĕ, анчах эпир Тăван çĕршывпа тăван халăх умĕнче тивĕçе çухатмарăмăр, вăл кăтартнă çулпа шав малалла утрăмăр", — тесе çырнă А. Алга "Хам çинчен пĕр-ик сăмах" ятлă статйинче.

Ку статья А. Алган "Сăвăсем" кĕнекинче 1962 çулта пичетленнĕ.

А. Алга хăйĕн вăрçă очеркĕсенче Совет Çарĕ хамăр

Тăван çĕршыва фашист эшкерĕсенчен тасатнă хыççăн Европăри çĕршывсене те фашизм пусмăрĕнчен хăтарни çинчен пысăк ăсталăхпа çырса кăтартать. Ку енĕпе уйрăмах унăн "Ютра", "Лира" тата "Дубов" очеркĕсем палăрса тăраççĕ. "Ютра" очерка вăл форми енĕпе ыттисенчен урăхларах — кун кĕнекине çырса пынă пек йĕркеленĕ. Германире, Берлинтан хĕвел тухăçнелле, Готбус ятлă пысăках мар хула пур. 1945 çулхи апрель уйăхĕнче, вăрçă чарăнассине кашни курса-туйса тăнă вăхăтра, очерк авторĕн çав хула çывăхĕнчи яла вырнаçнă пĕр пĕчĕк госпитальте выртмалла пулнă. Госпитальте сывалакансем, пĕр-пĕринпе паллашса çывăхланнăскерсем, ялтан инçех мар иртсе каякан аслă çул хĕррине тухса ларма юратнă.

"Çулсем, çулсем! — тетĕн вара ăшунта, чавсуна чĕркуççи çине хурса, чăмăрупа янахна тĕрелесе», — автор çулсем çинчен çырни очеркăн хăйне евĕрлĕ ум сăмахĕ пулса тăрать. «Мĕнлисем кăна çук-тăр вĕсем çĕр чăмăрĕ çинче, ăçталла кăна тăсăлмаççĕ-тĕр! Мĕн кăна курман-тăр, мĕн кăна тӳсмен-тĕр вĕсем, пуринчен ытла вăрçă вăхăтĕнчи çулсем! Çулла вĕсем сывлăша питĕрекен хăмăр та сăрă çăра тусанлă, хĕлле курми çил-тăманлă, кĕркунне-çуркунне пылчăклă-лачакаллă. Вĕсене çĕрĕн-кунĕн салтак атти таптать, çăрать, танксем хĕрхенми ватса аркатаççĕ, тирне снарядсем сĕвесĕве пăрахаççĕ, ӳтне бомбăсем тарăн шăтарса кĕреççĕ. Вĕсем çине хура тар, вĕри куççулĕ, хĕрӳллĕ юн тăкăнать».

Пĕррехинче писатель-воин темле майпа хăнăхнă вырăна пĕчченех тухать. Курать: хĕвел анăçĕнчен кăнтăр хĕвел тухăçнелле пирĕн çарсем тĕрмесенчен, вилĕм лагерĕсенчен хăтарнă çынсем ушкăнăн-ушкăнăн иртсе каяççĕ. Калавçă çул урлă вĕсем патне каçать те сывлăх суннă хыççăн кам хăш çĕршывран иккенне ыйта-ыйта пĕлет. Пĕри Украинăран, тепри Польшăран, виççĕмĕшĕ Белоруссирен, тăваттăмĕш... Голландирен, вĕсемпе пĕрлех чехсем, хорватсем, французсем те пур. Хĕвел анăçĕнче вăрçă пынă пирки Голландипе Франци тата вăл енчи ытти çĕршыв çыннисене килĕсене Одесса урлă таврăнма

сĕннĕ-мĕн. Ывăннă сăн-питсем, савăнăçлă çиçен куçсем.

«Çулсем тăван хулисене, çуралнă ялĕсене, ашшĕ-амăшĕсен килĕ-çурчĕ умне хăвăртрах çитерччĕрех вĕсене», — тесе шухăшлать ăшĕнче автор-калавçă, çав çынсемпе сыв пуллашса уйрăлсан. Унтан вăл сисмест те, шухăшĕсене пула, аяккалла пăрăнса каять. Госпитале хăвăртрах таврăнас тесе, тӳрĕ çул шыраса, анкартисем енне пăрăнать, пĕр пахчара вара пĕчĕкрех кăна хуралтă умне çитсе тăрать. Чӳречисем уçă, ахăртнех, çулла пурăнмалли çурт пулас. Алăкĕ уçă. Мĕншĕн кĕрсе курас мар? Шалта пĕр сĕтел, пукан, кравать — урăх нимĕн те çук. Стенасем çине кăранташпа ятсем çырса пĕтернĕ: Валя, Надя, Эвелина: вырăс хĕрĕсен ячĕсем. Вырăсла çырнă. "Мĕнле майпа, ăçтан?" — писатель шухăш тупсăмне шыраса, сĕтеле уçса пăхать. Çав пĕчĕк сĕтелте вара вăл пĕр хулăн тетрадь тупать, унтан çавăнтах, сывлăш çавăрмасăр тенĕ пек, вуласа тухать. Тетрачĕн хуплашки çине (хуралса пĕтнĕ пирки вулама та йывăр) "Мезенцева Эвелина" тесе çырнă. Çав тетрадьре мĕн çырнинчен пуçланать те ĕнтĕ очеркăн чăн-чăн сюжечĕ.

«...1943 çул. Сентябрĕн 6-мĕшĕ, тунти кун.

Ирхине 5 сехетре шăнкăрав сассипе вăранса кайрăм. Мĕншĕн капла çутăлнă-çутăлманах шăнкăртатрĕ-ха ку паян, çак йăлăхтарса çитернĕ шăнкăрав, тетĕп. Тепĕр самантранах ăнлантăм: вăл кунтан илсе каймалли хĕрсене тăратать-мĕн. Пирĕн пӳлĕмрен иккĕн каймалла пулса тухрĕ, вĕсем — Оля тата Надя. Эпир — пĕр ялта ӳссе çитĕннĕ хĕрсем, тыткăнри асапа çакăнта, ютра, пĕрле тӳснĕ юлташсем — паян ирхине пĕрне-пĕри ыталаса иле-иле, питĕмĕр-куçăмăрсене тăрă шывпа мар, вĕри куççулĕпе çурăмăр.

Унтан вара?.. Унтан каллех вара ĕçе кайма тухса сĕнккемелле пулчĕ. Пире темиçе уйăх ĕнтĕ тӳсме çук тертлентерекен завод тата хытă кичемленчĕ: пĕтĕмпе алă хĕр таран хăваласа кайрĕç. Ĕç умне тăрсан, алăсем усăнаççĕ. Кун аран-аран иртрĕ.

Каçхине хĕрсемпе шуратмасăр паранкă пĕçерсе çирĕмĕр.

Тунсăх. Чун йăлтах пушанса юлнăн туйăнать. Çакăн

пек чухне, — тахăш писатель кĕнекинче вуланăччĕ, — чăнах иккен, алă хăй тĕллĕнех хут патнелле туртăнать. Алă мар, чун тем çырасшăн, мĕншĕнне-камшăнне пĕлмесĕр-чухламасăр, пĕр хăйне кăна тем каласа парасшăн. Шухăшсем чуна вырнаçаймаççĕ.

Ирĕкре пурăннă чух эпир ирĕклĕх мĕн иккенне пĕлмен çав. Атте-аннесем каç-каç пире урамра вăрах çӳреме хушманни кăна ирĕклĕхе туртса илнĕн туйăннă, пирĕн вара вĕсене ирĕксĕрех итлемелле пулнă-çке-ха!

Акă паян пирĕн юлташсене, хăйсен кăмăлĕсене ыйтса-туса тăмасăрах, картишне илсе тухрĕç те, хире кĕтӳ кăларнă пек, хăваласах таçта илсе кайрĕç".[62]

А.Алга ку очеркра фашистсем Германи çĕрĕ çинче ĕçлеме хăваласа кайнă пĕр ял хĕрĕсен пурнăçĕ-асапне, вĕсене Совет Çарĕ ирĕке кăларнине сăнласа кăтартас тĕллев лартнă. Очеркра персонажсем нумаях мар: Оля, Надя, Эвелина, Митрофан — пĕр ял çамрăкĕсем тата Совет Çарĕн салтакĕ, нимĕçсен тыткăнне лекнĕ Потапов Георгий. Вĕсемсĕр пуçне Эвелина ватă ашшĕпе амăшĕ, нимĕç офицерĕсемпе хĕрарăмĕсем. Хушăран пĕрре-иккĕ асăнса иртнĕ персонажсем те пур, анчах вĕсен пĕлтерĕшĕ произведенире хытах сисĕнмест. Очерка кун кĕнеки формипе Эвелина ятĕнчен çырнă.

Очерк персонажĕсене, кун кĕнекин содержанийĕпе паллашнă хыççăн, виçĕ тĕп ушкăна пайлама пулать. Пĕрремĕшне Оля, Надя, Эвелина, вĕсен тăванĕ-хурăнташĕсем кĕреççĕ. Иккĕмĕшне нимĕçсене сутăннă Трофима тата унăн хуçисене, Германире вырăс хĕрĕсене ĕçлеттерсе асаплантаракан фрау Маркера, фашистсен офицерĕсене кĕртме пулать. Виççĕмĕш ушкăнра — Совет çарĕн салтакĕ, йывăр аманнăран нимĕçсен концлагерьне лекнĕ Потапов Георгий тата унăн юлташĕсем. Кашни ушкăн очеркра хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Çав вăхăтрах вĕсем пĕр-пĕринпе те тачă çыхăннă.

Акă еплерех сăнлать Эвелина хăйĕн тусĕсене кун кĕнекинче: Оля, йĕтĕн пек сарă çӳçлĕ, утмăл турат чечекĕ пек кăн-кăвак куçлă. Йăл кулса сăмах хушнă чух тутин хĕрри кăшт путса кĕрет. Çакă такамăн туйăмне

те уҫӑлтарса ярассӑн туйӑнать. Пӗвӗ яштака унӑн, пилӗкӗ ҫинҫе. Хулара педагогика институтӗнчен вӗренсе тухнӑ. Надя вара — йӑлтах урӑхла хӗр. Вӑл кӑвар пек йӑлкӑшса тӑракан ҫырӑ ҫӳҫлӗ, тӑп-тӑп туталлӑ, сӑн-пичӗ пиҫҫе ҫитнӗ анис улма тӗсне аса илтерет. Кулнӑ чух тӑп-тӑп пӗвӗ-сийӗ темле хумханса илет. Мӑнтӑркка, паттӑр, тетчӗҫ ӑна ялта, анчах ун кӗлеткинче, ҫулланнӑ арӑмсенни пек, тирпейсӗрлӗх ҫукчӗ, пӗвӗ-сийӗ илӗртӳллӗччӗ унӑн, хирте ӗҫлесе ӳснӗ хӗрӗн сывлӑхпа вӑй вӗресе тӑратчӗ темелле. Эвелина, кун кӗнекине ҫырса пынӑ хӗр, вӑрҫӑ пуҫланнӑ ҫул хӑйсен ялӗнчи шкултан вӗренсе тухнӑ. Мускаври пӗр института вӗренме кӗме хатӗрленнӗ. "Юрататӑп", — тесе каланине никамран та илтсе курман вӑл.

«Кам шутлама, кам тӗлленме пултарнӑ чикӗрен инҫетри пирӗн ял тӑшман пусмӑрӗ айне пуласса! Каҫ-каҫ пирӗн таврара пӗлӗте ҫулӑм ҫапнине курсан, пӗр кунта, пӗр унта, чуна ҫурмаран ҫурса, тупӑсем уланине илтсен, эпир — ҫимеллипе ҫие улӑштармалли илсе — тухӑҫалла васкарӑмӑр», — тесе пӗлтерет Эвелина сентябрӗн 7-мӗшӗнче хӑйӗн кун кӗнекинче. Анчах кӑлӑхах: хӗвел анса ларсан, вӗсене хирӗҫ хӑйсем васканӑ район центрӗнчен ҫынсем хӑпса тухнӑ, ваттисем туйисем ҫине таянса васканӑ, хӗрарӑмсем ачисене ҫавӑтса е йӑтса чупнӑ. Таҫта пулемет шатӑртатнӑ, пӑшал сасси илтӗннӗ. Нимӗҫсем самолетсенчен район хулин хӗвел тухӑҫ енне десант пӑрахнӑ-мӗн, халь урамсенче ҫапӑҫу пырать. Хӗрсен ҫӑлӑнӑҫ ҫулӗ питӗрӗнет... Ҫапла паллашать вулакан очерк персонажӗсен пӗрремӗш ушкӑнӗпе.

Иккӗмӗш ушкӑнӗ ҫав каҫах Эвелинӑсем патне ҫитсе кӗрет. Кун кӗнеки ҫапла пӗлтерет: чей те ӗҫмеҫҫӗ салтаксем, куҫ хупманни вӗсен тӑваттӑмӗш талӑк, пӗрин урине амантнӑ. Ялта нимӗҫсем суккине кура (вӗсем малалла аслӑ ҫулсемпе иртсе кайнӑ) совет салтакӗсем унта пилӗк талӑк пурӑнаҫҫӗ. Эвелина ашшӗ, апла эсир ункӑна ҫакланса юлтӑр пулать-и, тесен: "Апла тесе шухӑшламастпӑр! — тесе тавӑрать хӑюллӑн асли, лейтенант. — Пирӗн патронсем юлнӑ пулсан, тӑшмансем ҫӗленле те шӑвӑнса кӗреес ҫукчӗ район хулине. Нимех

те мар! Эпир ĕнтĕ вăрçă пуçланнăран вара вилĕм ункинчен икĕ хутчен тухса курнă". Шăпах Потапов Георгий пулнă вăл, Атăл тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ, вунă çул вĕренсе пĕтерсен çар училищине кĕнĕ, ăна пĕтерсенех — вăрçă! Малтан ăна Эвелина килĕштерсех каймасть, йывăрлăхпа хăрушлăх умĕнче тăракан, хуйхă пуснипе пăшăрханакан çын пек туйăнман вăл никама та. Сарă çӳçлĕ, кăвак куçлăскер, пĕртте вăрçă çынни пек курăнман. Ытла çӳллех мар, вăтам пĕвĕ-сийĕ те тăпăл-тăпăл хĕрсенни пекех çинçе пулнă унăн. Çапах та кăмăлĕ, характерĕ хăйне кура мар çирĕп иккенни сисĕнсех тăнă. "Акă ман пурнăçăн пуçламăшĕ, — тенĕ вăл çăмăллăн Эвелинăпа паллашса. — Халĕ чăн-чăнни пуçланса каять».

"Каçарăр та, чăн-чăнни... — тытăннă-тытăнманах ... сӳнсе ларсан? Вăрçă никам пурнăçне те тиркемест, теççĕ", — именчĕклĕнреххĕн калать Эвелина.

— Çук, эпĕ пур-пĕрех вилместĕп! — шанчăклăн, çирĕппĕн хирĕç тавăрнă Потапов лейтенант, куçĕсенче çав хушăра çăмăлттайлăх та, мухтанни те палăрмасть. — Эпĕ пурнăçа ĕненетĕп. Нименех те тăваймарăмăр-çкеха, пурнăç тути-масине тутанаймарăмăр. Ху çимĕçӳсене кураймасăрах çуг тĕнчерен уйрăлма юрамасть. Леш тĕнчере çарăк акмаççĕ.

Çак сăмахсене Потапов ĕненмелле, татăклăн, пĕр иккĕленӳсĕр калать. Эвелинăна та, унăн ватă ашшĕ-амăшне те вăл тахçанах вĕсемпе тăван пек пурăннăн туйăна пуçлать. Пĕррехинче пӳртре хĕрĕпе амăшĕ çеç юлсан, лейтенант: «Вăрçă иртсен, хĕрĕре качча памăр-ши мана?» — тесе хурать. Ăна вара хĕр амăшĕ вăл сăмаха каличчен, малтан вăрçине пĕтермелле, хăвăрăн чĕрĕ-сывă юлмалла, тесе ăнлантарать. Эвелина та Потапова шантарса нимĕнех те каламасть, сăмаха пăрма тăрăшать. Анчах çирĕп шухăшлă лейтенант иккĕшĕ уйрăлнă чухне: "Ну, Эвелина, ман пирки: ăçта пуçне хучĕ-ши, тесе нихçан та ан шухăшла. Килсе хăтарасса кĕтсе пурăн",[63] тесе шантарса хăварать. Потапов нимĕçсен ункинчен ăнăçлăн тухасса та, хамăр чаçсемпе пĕрлешсе фашистсен наступленине чарса лартса тăшмана Берлин еннелле хăвалама пуçласса шанать.

Çак сценăсем пурте Эвелина аса илĕвĕсенчен, вăл хăйĕн ăшри монологĕсене кун кĕнекине шанса панинчен тухса пыраççĕ. Хĕрлĕ Çар салтакĕсем ялтан кайсан тепĕр кунтанах яла нимĕçсем пырса кĕреççĕ. Никам та вĕсене курасшăн пулман, пурте килĕсенче питĕрĕнсе ларнă. Çапах та фашистсене ырă сунса кĕтсе илекен те тупăннă. Вăл малтан асăннă виççĕмĕш ушкăна кĕрекен Трофим Тройкин пулнă. Унăн ашшĕ те, аслашшĕ те лаша вăрри пулнă имĕш. Ывăлĕ те вăрă хăраххиех: тĕрмерен тĕрмене çакланнă. Юлашки хут вăл яла вăрçă пуçланас умĕн килнĕ пулнă. Хамăр çарсем чакса кайсан, ял совет канцелярине пырса кĕнĕ, шăл йĕрсе председатель умне тăнă та: "Сирĕн влаç пĕтрĕ, пирĕнни çитрĕ, пичетне кăларса хур та тухса сирпĕн!" — тесе çухăрса янă. Ăçтан сиксе тухаççĕ-ши, Тройкин пек, ирсĕр сутăнчăксем? Çапла çырса хурать Эвелина кун кĕнекине. Ку — сăлтавсăр мар. Мĕншĕн тесен шăпах Тройкин тĕллесе кăтартнипе Эвелина ытти хĕрсемпе пĕрле Германие лекет, унта йывăр ĕçре выçăллă-тутăллă асапланма тытăнать. Тройкин хĕтĕртнипех фашистсем ялти çуртсенчен хăшне-пĕрне çунтарса яраççĕ.

Пилĕк уйăх тертленеççĕ хĕрсем нимĕçсен заводĕнче, пилĕк уйăх йĕркеллĕ апат çисе кураймаççĕ концлагерьте. Анчах сисеççĕ: хĕвел тухăç фронтĕнче нимĕçсене пирĕннисем хытах хĕсеççĕ, хĕсеççĕ çеç мар, вăйлă наступлени пуçласа тăшмана хĕвел анăçнелле вăйлăн хăвалама тытăннă. Хĕрсен кăмăлĕ çĕкленет, халсăрлана пуçланă характерĕсем çĕнĕрен çирĕпленеççĕ. Çак вăхăтра вĕсен пурнăçĕнче çĕнĕ улшăну пулса иртет, Эвелинăпа Надьăна хĕрсен пĕр ушкăнĕпе лагерьтен Берлин урлă татах та инçетелле, хĕвел анăçнелле поездпа турттарса каяççĕ. Вагонри ытти хĕрсем, поезд тапранса кайсан, Трофим Тройкина (Эвелинăпа Надя ăна малтантарах асăрхаса хĕрсен кĕлеткисем хыçне пытанма тăрăшрĕç, ара, лагерьте Трофим ирĕклĕн çӳренине те курнăччĕ вĕсем) хупăрласа илчĕç те шăкăлтатса калаçаççĕ — хамăрла терĕç пулас. Хамăр чĕлхе! Акă вăл хĕрсене хушаматран, ятран тĕрĕслеме тытăнать. Çук, унран тухакан сăмах пирĕн мар, тесе шутлать Эвелина, вăл — иуда

чĕлхи! Унăн, ура çине сиксе тăрса, ăна питĕнчен сурас килет. Çак самантра Вальăн лагерьте чухне кăшт вăйсăрланнă характерĕ çĕнĕрен çирĕпленни, нимĕçсене курайманлăхĕ те, хăюлăхĕ те хытах ӳсни çĕнĕрен палăрать. Вăл сутăнчăк патне харсăррăн пырса тăрса: «Эсĕ нимĕçсем патне кĕтӳçе кĕрĕшнĕ иккен. Пĕлменччĕ. Лайăх тӳлеççĕ-и? Çăкăр-тăварлăх çитет-и?» — тесе ыйтать.

Трофим Тройкин кĕтмен çĕртен хăйсен ялĕсене тĕл пулнипе çухалса кайнă пек пулать, анчах çавна палăртасшăн мар-ха вăл. Валя пăтранса каймасть, тата хытăрах хăюлланать: "Эпир хамăр килмен кунта. Пире чуралăха илсе килчĕç. Эсĕ мĕнле майпа килсе кĕнĕ-ши юта? Хамăр патăрта урлă каштаран çакасран хăрарăн-и? Хăçан пирĕн çумран хăпăн-ши эс? Куршанак! Хăçан çĕр çинчен тасалăн-ши?"

Малалла мĕн пулатчĕ-тĕр, пĕлме хĕн: хĕрсен телейне, поезд станцине çитсе чарăнать те, сутăнчăк йытă вагонран хăвăрт сиксе анать. Эвелина йĕрĕнсе çапла шухăшлать: "Мĕн туса çӳрет вăл хăй ирĕкĕпех таçта ютра? "Ирĕкре", "ютра" тетĕп. Ăçтан сыхланса юлтăр-ха унашкал ирĕклĕх? Вĕсем — сутăннă. Апла пулсан, ют çĕршыв та çук вĕсен. Вĕсем, ман шухăшпа, — çĕрпе пĕлĕт хушшинчи ылханлă усалсем. Сутăнчăксене çĕр çинче вырăн памалла мар».

Очеркри эпизодсем пĕр-пĕринпе ылмашăнсах пыраççĕ. Унăн сюжечĕ те аталанать. Пирĕн хĕрсем Готбус хулине çитеççĕ. Кĕпе-йĕм çумалли çурт — нимĕç хĕрарăмĕн, пирĕн хĕрсем — унăн тарçисем. Хĕрарăм хуçа вара акă еплерех: сарлака хул пуççиллĕ, лаша ăмăрĕ пек самăр кăкăрлă, çара хулĕсем унăн кăмакара çунса выртса кăварланнă хулăн вут пуççи пек, пичĕ-куçĕ... Лагерьтен ĕçленĕ çĕре çитме — çичĕ километр, кунне вун тăватă километр. Хĕрсен çĕнĕ тамăкĕ çинчен Эвелина кун кĕнеки çапла каласа парать: «...Тăратăн вара валашка умĕнче пуç çĕклемесĕр, хăш чух сăмсаран юн каять, пилĕк сурать. Алă пӳрнисем пирĕн пĕçернĕ пан улми пек тĕркеленнĕ... Эпир яланах выçă. Кăнтăрла пире пĕр литр купăста шӳрпи параççĕ. Ашсăр. Эпир ăна çăкăрсăрах

сыпса ĕçсе яратпăр... Чуна йывăр, салхуллă, хурлăхлă. Ниçта тарса кайма çук, ниçта пытанма çук. Ăçта эс, инçетри тăван çĕршывăм, ăçта эсир, атте-анне?»

Ĕçсем аталаннă май очеркри пулăмсем кăткăслансах пыраççĕ. Пирĕн хĕрсене Трофим Тройкин сутăнчăк Готбус хулинче те шыраса тупать. Кунтах Эвелина Георгий Потапов лейтенанта курать. Каялла чакнă чухне Потапов юлташĕсене хамăрăннисем патне çĕрĕ-çĕрĕпе хир-хир урлă, çырма-çатрасем тăрăх, вăрмансем витĕр утса, выçăллă-тутăллă, çĕтĕк-çатăк пулин те, каçарса ӳкерет. Кайран — пур çĕрте те арăслан пек çапăçнисем. Икĕ орденпа виçĕ медале тивĕç пулать вăл хăйĕн паттăрлăхĕпе. Унтан — вăйлă наступлени, пирĕн çарсем тăшмана хамăр çĕршывăн хĕвел анăç чиккинелле хăвалани, Эвелина ялне фашистсен тыткăнĕнчен хăтарни, хĕр ашшĕамăшĕпе тĕл пулса калаçни... Вăрçăра темĕн те пулать иккен. Потаповпа тусĕсем, наступленире малта пынипе савăннăскерсем, пиллĕкĕн пĕр машинăпа тăшмансем хушшине шалаллах кĕрсе кайнă. Тăшман вĕсен машинине шăп та шай дамба çинчен сиктерет, хăйсем — пуç хĕрлĕ аялалла. Потапов тăна кĕрсен куçне уçать те умĕнче нимĕçсене курать. Унтан — фашистсен лагерĕ. Эвелинăпа кĕтмен çĕртен тĕл пулни. Потапов тăшман лагерĕнче те, яланхи пекех, кăмăлне пусармасть, хăй офицер пулнине те манмасть, лагерьте тĕрлĕ халăх çыннисенчен вăрттăн ушкăн йĕркелесе унтан тарса тухма хатĕрленекен кавара ертсе пырать, Эвелинăн кăмăлне çĕклеме тăрăшать: "Парăнма нихăçан та шухăшламан, аса та илместĕп ăна, вăл шухăш пырса кĕрес çук ман пуçа. Пĕл, эпĕ часах хăтăлатăп кунтан. Нумай юлмарĕ... Ĕнен. Эпĕ пур-пĕрех чĕрĕ-сывă юлатăп, хам ĕмĕте пурнăçлас тесе, çуралнă ялăра хăтарнă пекех, сана хăвна та асапран çăлатăпах! Ан ман: вăрçă иртсен аннӳ мана кĕрӳ тума сăмах панăччĕ!"

Анчах кунта тепĕр пăтăрмах пулса иртет: Трофим Тройкин арçынсен лагерĕнчи кавара сиснĕ иккен, хăйне те унта кĕртме ыйтать Потаповран. Очерк кульминацийĕ те, унăн сюжечĕ вĕçленни те пĕр вăхăтах килет: Эвелина пулăшма ĕлкĕрнипе Потаповпа юлташĕсем

Тройкина унăн ирсĕр хăтланăвĕсемшĕн тивĕçлипе тавăраççĕ — сутăнчăк тарăн çырма тĕпĕнче хăйĕн шăпине ĕмĕрлĕхех тупать. Лагерьтен çав каç çирĕм пиллĕкĕн ăнăçлăн тухса тараççĕ, вĕсен шутĕнче ушкăн ертӳçи Георгий Потапов та пур.

Эвелина хăйĕн кун кĕнекине çапла вĕçлет: "... эпĕ, ирĕклĕ пурнăçа курăпах тесе, хама хам чунтан витерсе калатăп". Пирĕн те унпа пĕр шухăшлах пулас килет.

Александр Алга хăйĕн очеркĕсенче чăн малтан, паллах, ахаль салтаксен паттăрлăхне сăнласа кăтартма кăмăллать, çав хушăрах салтакăн кулленхи пурнăçне, çапăçупа çапăçу хушшинчи вăхăта вăл мĕнле ирттернине, унăн шухăш-кăмăлне, ăс-хакăлне кăтартма та манмасть. "Çураçнă хĕр" очеркра каччăпа хĕрĕн, мăшăрланма çураçнăскерсен, вăрçă пуçланнăран çутă ĕмĕчĕсем татăлаççĕ. Ку çеç те мар, вĕсене тата пысăкрах инкек пырса çапать: хĕрĕн савнине фашистсем унăн куçĕ умĕнчех çакса вĕлереççĕ. "Гришăна çавăн чухне паллама та йывăр пулнă: çӳçĕ кăна унăн ĕлĕкхи пекех çилпе вĕçкеленĕ, çӳллĕ çамки çине кăтраланса ӳкнĕ. Куçĕсем те ĕлĕкхи пекех пысăк пулнă, халăх çине хăюллăн пăхнă. Сарлака хулĕсем кăна ĕлĕкхи пекех... анчах унăн тумтирĕ йăлтах лăсканса пĕтнĕ, пичĕ çинче юн йĕрĕ выртнă. Гриша хăйĕн чунĕ пăлханнине палăртман, пуçне чикмен, куçĕсемпе вĕçĕмех çураçнă хĕрне Шурăна шыранă. Сасартăк унăн сăмахĕсем нимĕç офицерĕсем умĕнчех хăватлăн, хăюллăн халăх хушшине янăраса кайнă:

— Юлташсем! Пуçăрсене ан усăр, ан хăрăр! Çĕнтерӳ пур пĕрех пирĕн пулать! Пире вĕлерсен, теприсем тăрĕç, пуриншĕн те çак тискерсене тавăрĕç...

— Тĕрĕс, Гриша! Эпĕ саншăн тăратăп, Гриша! — хĕрарăм сасси, Шура сасси, çынсен чĕрисене çӳçентерсе, măн кăмăллăн, хыттăн илтĕнсе кайнă".[64]

Фашист хăрах урипе каччă ури айĕнчи пукана тапса сирпĕтнĕ, Шура вара çапах та тарса çухалма ĕлкĕрнĕ, кайран, савнийĕшĕн, фашистсем пирĕн Тăван çĕршыва асап кӳнĕшĕн тавăрас тĕллевпе хăйĕн ирĕкĕпех Со-

вет Çарне каять, снайпера вĕренет, каярахпа кĕçĕн лейтенант, снайпер-инструктор пулса тăрать. Унăн ячĕ, снайпер ăсталăхне кура, дивизири полксем тăрăх хăвăрт сарăлать. "Ăна сасартăках паллама та çук иккен, — пĕлтерет калавçă, — уринче атă, арçын шăлаварĕ, çине фуфайка тăхăннă, пилĕкне сарлака пиçиххипе хытă туртса çыхнă, сылтăм енче пистолет йĕнни, хул урлă офицер сумки, пуçĕнче пилотка, çӳçне, кăтрисем палăрмалла мар туса, тирпейлесе çыхнă. Çакнашкал тумпа вăл мана темшĕн тата та çамрăкрах курăнчĕ. Куçĕсем хаваслăн пăхаççĕ. Салтаксем хушшинче уткаласа çӳрет, калаçать, кулать. Пулас çапăçу çинчен шухăшламасть те пекех. Ăна курса-и, тен, çапăçăва кĕрес салтаксем те нихçанхинчен ытла хаваслă, нихăшĕ те вилĕм çинчен шухăшламасть».

Акă, вăрçă тепĕр майлă çаврăнса кайсан, фашистсем те хăйсене урăхларах тытма тытăннă. Сержант "чĕлхе" сĕтĕрсе каçни çинчен каласа парать. "Ыранхи çапăçу ăнăçлăхĕ тăшман вăйне лайăхрах пĕлнинчен килет", — тесе асăрхаттарнă батальон командирне полк командирĕ. Капитан çĕтĕк-çурăклă нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕрре çеç мар курнă ĕнтĕ, вĕсен "Гитлер капучĕ" ăна çĕрнĕ сухан шăрши пекех йăлăхтарса çитернĕ. Хальхи "чĕлхесем" те, ĕлĕкрех пирĕн алла çакланнисем пекех, алăк урлă каçсан шанк! тӳрĕ тăма хăтланнă чухнех чĕркуççийĕсене чĕтретме тытăннă. Унтан, хăйсем умĕнче "асли" ларнине кура "Гитлер капут" тесе кăранклатнă, хăйсем нумай пулмасть "хайль Гитлер" тенĕ чухнехи пекех аллисене çĕклесе. Пĕри, унтер-офицер, хăйне персе вĕлересрен хăраса, совет командирĕн кăмăлне хускатса, унăн шухăшĕсене çемçетес шутпа-и, тен, «персе ан вĕлерĕр мана, юратнă хĕр пур манăн, çураçнă хĕр...», текеленĕ.

Тепĕр сĕтел хушшинче çывăрса ларакан Шура шăп çак вăхăтра пуçне çĕклесе капитан еннелле пăхса илнĕ.

"Çураçнă хĕр, — шухăшланă пирĕн офицер, — ак тамаша! Пĕве çитнĕ, тăп-тăп ӳт-пӳллĕ. Хăйĕн çураçнă хĕрĕ çинчен калаçать. Туй тума та ĕмĕтленет-ха вăл!» Хăвăн тискер тăшману та сан пекех çынна юратма пул-

тарнине ĕненес те килмест, ăна хăй пек юраттарас та килмест капитанăн. Çав тискер кайăксенчен тискер ик урасем те çын пекех юратма пултарнине капитан çапăçусем вăхăтĕнче те, ирĕклĕрех вăхăтра та асне те илмен. «Чăн-чăн таса юрату, этем кăмăл-туйăмĕ çуках вĕсен» — тесе шутланă. Ку вара, тăшман "каччи" хăйĕн калаçăвĕпе, çураçнă хĕрне асăннипе, ăна юратнине пĕлтернипе пирĕн капитана тĕлĕнтермеллипех тĕлĕнтерет. Çитменнине тата, тепĕр тесен, çав ик уралла тискер кайăксем те юрату çинчен сӳпĕлтетни офицера йĕрĕнтерет, тарăхтарать. "Çураçнă хĕр" тенĕ пиркиех, батальон командирĕ, хăйĕн шухăшĕсене пӳлсе, Шура еннелле çаврăнса пăхать. Вăл та фашист çине куç илмесĕр пăхса ларать. Витĕр шăтарас пек, тинкерсе пăхать. Унăн пысăк, сенкер куçĕсенче хаярлăх кăвар пек ялкăшса çунать. Капитан хĕрĕн чĕринче те çав кăварах амаланнине туять. Çав хушăрах вăл Шурăн нихçан манăçа юлас çук йывăр хуйхине аса илет, нимĕн тума аптранă пек тăракан фашистсем çине çаврăнса пăхать. Йĕксĕксем! Çаксем мар-и-ха, пирĕн аслă çĕршывăмăра юнлă урисемпе яṙса пуссан, пирĕн хĕрсене, çамрăк арăмсене мăшкăл кăтартса, амантса пĕтернĕ хыççăн, вырăн çинчех вĕлере-вĕлере хăварнă, çака-çака асаплантарнă. Шура каччине те вĕсемех çакса вĕлернĕ. Çук, вĕсен таса сывлăшпах сывласа çĕр çинче пурăнма тивĕç çук!

Шура, фашист çинчен куçне илмесĕр, сĕтел хушшинчен урай варрине тухса тăрать, куçĕсем унăн паçăрхи пекех ялкăшса пăхаççĕ. Ун чĕлхине темле тăвăл сасартăк хускатнине, унтан çав тăвăл çийĕнчех тамалнине туять капитан. Хĕр хăй вырăнне кайса ларнă та лăпкăн сăмах хушнă:

— Çураçнă хĕрĕ çинчен ăна ĕмĕрлĕхех мантарасшăнччĕ (Шура хăйĕн хĕрĕ çинчен калаçакан фашист унăн савнине, пулас упăшкине Гришăна çакса вĕлернĕ çĕрте пулнине палласа илет). Юрĕ, пăшалсăр çынна персе пăрахас килмест...

Шурăн юлашки сăмахĕсем вăл вăрçă çынни пулнине çеç мар, пурнăçа чун-чĕререн юратнине, уншăн

мирлĕ пурнăçран хакли урăх нимĕн те çукки çинчен калаççĕ. Епле илемлĕ вăл çĕр çинче этем! Илемлĕ çĕр çинче пĕр инкек-синкек тӳсес килмест, усал-тĕсел açăхнине курас килмест. Çавăнпа тăшмана хирĕç хĕрсе çапăçаççĕ телейпе ирĕке юратакан çынсем.

"Дубов" очеркра автор совет салтакĕсем чикĕ урлă каçсан та паттăрлăх кăтартма чарăнманнине сăнласа кăтартать. Пирĕн полк вырнаçнă тĕлте пысăк ял пулнă, халĕ унта пӳртсем çĕмрĕк, вĕсем питĕ те сайра. Хăшпĕр урамсем пĕтĕмпех çунса кайнă. Вокзал пулнă вырăнта чул куписем. Ял варринче çырма юхса выртать. Вăл Сейм шывĕпе пĕрлешет. Сейм леш енче — вăрманпа витĕннĕ çӳллĕ сăртсем. Унта — тăшман. Саперсен çав пысăк юхан шыв хĕррине тухмалла та ун тарăнăшне, сарлакăшне виçмелле. Куна тума пĕр батальонпа çыхăнмалла. Çав батальона çитме унти çын пулăшсан лайăх, мĕншĕн тесен унта саперсем çӳресе курман тата тĕттĕм, йĕп чиксен те куç курмасть. Çырма пĕчĕккĕ, анчах ку вырăнта вăл сарлака. Ун тăрăхне тăшман пĕр чарăнми тенĕ пек персе тăрать. Ертсе каякан çапах та тупăнать. Дубов вăл, шăпах çав батальон боецĕ. Çӳллĕ пӳ-силлĕ, сарлака кăкăрлă, пилĕкне хытă та тирпейлĕ туртса çыхнă сержант. Унăн сасси кăшт çеç хулăнтарах, анчах питĕ уçă. Чалăшрах лартнă симĕс пилотки айĕнчен хăлхи çинелле кăтрарах çӳç пайăрки анать. Сержантăн — автомат. Вăл ăна кăкăрĕ умне çакнă, кăкăрĕ çинче пĕр орден, виçĕ медаль: сылтăм аллипе автомат кӳпчекне чăмăртанă, сулахай аллине кăшт уснă. Атăпа.

Тирпейлĕ тумланнă, хăйне тăп-тăп тытакан салтак çине пăхма та кăмăллă, вăл хăйне вĕçкĕнленсе мар, хисепе хурса, мĕн тунине, мĕнле пулмаллине лайăх пĕлсе тăрса тыткаланăн туйăнать. Сăмса çунаттисем айĕнчен тути хĕрринелле ик енче икĕ çӳхе йĕр анать унăн, çав йĕрсем тарăнах мар-ха, куç йĕрĕсем вара пĕрттех те курăнмаççĕ, тăрăхларах пичĕ çинче те пĕркеленчĕксем пачах çук. Хăй вăл пĕр вăтăр-вăтăр пилĕк çулхи арçын сăнлă курăнать. Автор-калавçă çапла тимлĕн сăнлать Дубова, вăл сержанта кăмăллани уççăнах сисĕнет.

Мĕншĕн? Унăн салтак шăпине командиртан пуçласа ахаль салтак таранах лайăх пĕлеççĕ иккен. Кăткăс, йывăр, асаплă шăпа унăн. Тепри ун вырăнĕнче пулсан, хамăр тăван çĕр чикки урлă каçнă хыççăн урса кайса тенĕ пек тăшмана тавăрмалла — Дубов ун пек иртĕхмест, ют çĕрте те совет салтакĕн ятне çӳлте, хисеплĕ тытать. Тен, çавăнпах-и ăна пурте сума сăваççĕ, заданире унпа пĕрле пулма тăрăшаççĕ, тăшман тылне те "чĕлхе" тытма унпа пĕрле çӳреме кăмăллаççĕ.

Кам-ха вăл Дубов? Пĕр енчен, ытти салтаксен шăпи евĕрлех пек туйăнать унăн пурнăçĕ. Тепĕр енчен, Дубов вăрçă пуçланнăранпа мĕн кăна тӳссе курман-ши? Малтан вăл та ыттисемпе пĕрлех каялла чакнă. Тăван ялĕ нимĕçсен аллине лекнĕ. Сталинград хыççăн Дубов çапăçакан дивизие Çурçĕр-хĕвел анăç фронтне куçарнă. Салтаксене Сталинградри çĕнтерӳ çунатлантарса янă. Мĕн тери пысăк савăнăç вăл çын хăйĕн вăй-хăватне туйса илсен! Анчах хăйсен таврашне çывхарнă май Дубов сăн-сăпачĕ тĕксĕмленнĕ çемĕн тĕксĕмленнĕ. Вара хăйĕн подразделенине кĕçĕрех хăваласа çитме пулать тесе, çултан пăрăнса, пĕç тĕп таран юра аша-аша, вăрман витĕр тăван ялнелле çул тытнă.

Тухса тăнă хайхи вăрман хĕррине — шартах хытса кайнă: ялĕ — çук. Çаврăн та каялла — уттар ху çулупа. Тăнă-тăнă шухăша кайса, унтан çапах та ял ларнă вырăна та пулин çитсе курма шут тытнă. Хăйсен кил-çурчĕ ларнă вырăна хӳсе кайнă çӳллĕ кĕрт çине улăхса тăнă. Çурт вырăнне теплерен юлнă хурамаран чухласа илнĕ... Тепĕр самантран салтак чарăннă çĕр пӳрте стариксемпе карчăксем, хĕрарăмсемпе ача-пăча пуçтарăннă. Çав кĕркунне, ял çыннисем каласа панă тăрăх, унта акă мĕн пулса иртнĕ иккен. Дубов арăмĕ ытти çынсемпе пĕрле хĕвел тухăçнелле тухса каять, ачине, пĕчĕк Ольăна, ватă ашшĕ-амăшĕпе пĕрле ялтах хăварать. Вĕсен килĕнче нимĕç офицерĕсем вырнаçнă. "Пĕррехинче фашистсем икерчĕ çисе ларнă. Пĕри, вырăсла кăштах перкелешекенскер, улттăри Ольăран:

— Эсĕ икерчĕ юрататăн-и? — тесе ыйтнă.

— Камăн икерчи ку? — тенĕ хĕр ача ăна хирĕç.

— Нимĕçсен. Вырăссем капут, вĕсен нимĕн те çук урăх. Ме, нимĕçсенне çисе пăх! — тесе хĕр ача тути çумне çур икерчĕ тăснă.

— Эпĕ нимĕç икерчине çиместĕп! — тенĕ те çакна хирĕç Оля хыттăн, пăрăнса кайма тăнă».[65]

Офицер-фашист, çак сăмахсене илтсен, куçне чарса пăрахнă, унтан пистолетне вĕлт çеç туртса кăларнă та — пуçĕнчен тивертнĕ ача урайне персе аннă. Фашистсем хăйсем персе вĕлернĕ ача пурăннă çуртрах çĕр каçма шутланă, кӳршĕ çуртĕнче — салтакĕсем. Выртасса выртнă та — урăх тăрайман. Ашшĕпе Çтаппан пиччĕшĕ урамра шартлама сивĕре ĕнтĕркесе çӳрекен часовойне кăпăр-капăрах тирпейленĕ те пӳрчĕсене тултан питĕрсе илсе, вут чĕртсе янă. Фашистсем, ӳсĕрскерсем, пĕри те çăлăнайман. Ватăсем çав каçах вăрмана таптарнă. Партизана!

Дубовăн килти инкекĕсем салтаксене чĕринчи курайманлăха, çиллисене хăватлантарса, çивĕчлентерсе янă. Вĕçĕ-хĕррисĕр аслă та пуян, илемлĕ те ирĕклĕ çĕршывра пурăнакан аслă халăхăн йывăр хуйхи-суйхине чĕрипе ăнланакан салтак чăннипех те юмахри паттăр, вăл шывра путмасть, вутра çунмасть.

Çакна Алга хăйĕн очеркĕнчи батальон командирĕн Уразбахтинăн тĕслĕхĕпе çирĕплетет. Сейм хĕрринчи хаяр çапăçура капитанăн хулне амантаççĕ, вăл госпитальтен текех фронта тавăнасса никам та шанман, мĕншĕн тесен пурте туйнă: унăн суранланнă аллине татма тивет. Анчах тĕлĕнмелле вăй-хăват вырăс çыннин! Каснă алли вырăнне Уразбахтина протез лартаççĕ, киле ярасшăн пулаççĕ, анчах капитан кун çинчен илтесшĕн те пулмасть, аслă чинсемпе калаçса-тавлашса фронтах тавăнать, каллех батальон командирĕ пулса тăрать. Епле паттăр командир сăнарне калăпланă Алга "Дубов" очеркра! Уразбахтина иккĕмĕш хут тĕл пулнă чухнех писатель-калавçă очерк тĕп геройĕпе Дубовпа та курса калаçать. Вăл халĕ пĕччен мар иккен, унăн мăшăрĕ тупăннă. Верăна вăл Уразбахтин капитана медсанбата ăсатма кайсан курнă. Эвакуацине Вера Атăл хĕрринчи пĕр хулана çитнĕ. Унтан яла кайса колхозра ĕçленĕ. Тепĕр çулхи-

не медицина курсне вĕренме кĕнĕ. Вĕренсе тухсан, ăна кунта янă. Тĕл пулнă вара упăшкипе. Халĕ иккĕшĕ те нимĕçсене пĕр чăçрех Берлин еннелле хăваласçĕ. Тепĕр чухне çеç Дубов, ĕлĕкхине аса илсе, салтаксене култăркалать, вĕсен кăмăлне уйрăмах çапăçу пуçланас умĕн çĕклеме тăрăшать. Акă вĕсенчен пĕри: вăрçă пуçлансан Дубов районти çар комиссариатне пуртăпах пынă. Комиссар çакна курнă та куçне чарса пăрахнă: "Эсĕ мĕн, Дубов юлташ, фашистсене хирĕç, аслаçусен аслашшĕсем пек, пуртăпа çапăçасшăн-им?" — тенĕ. "Сапер тăваççĕ пуль терĕм, çавăнпа", — мăкăртатса илнĕ вăл. Чăнахах та сапер пулса тăнă хайхи. Пурттине пăрахса хăварман... Мĕн чухлĕ блиндаж, мĕн чухлĕ кĕпĕр туман пуль саперсем çав çулхине! Ĕç тĕлĕшĕнчен ăна нихçан та хушма кирлĕ пулман, хăй ăçта, хăш вырăнта пулмаллине, мĕн тумаллине хăйех пĕлнĕ. Анчах саперăн яланах мĕн те пулин тумалли çеç мар, çĕмĕрмелли те сиксе тухать. Тăватăн-тăватăн та, калăпăр, пĕр-пĕр кĕпер, туса çитеретĕн кăна, сасартăк приказ — тĕппипех аркатмалла! Кун пек приказа илтсен, йывăррăн лаш! сывласа илнĕ те, пуртти аллинчен тухса ӳкнĕ. Приказ вăл — приказ, итлемесĕр тăма çук. Хăй, тăшмана мăйран кăшласа татас пек çилленсе, пĕр сăмах та чĕнмен. Кĕпере йĕри-тавра тол шакмакĕсем хурса пĕтерсен, аякка кайса выртса, пуçне çĕклемесĕр взрыв пуласса кĕтнĕ. Кĕпер сывлăша ыткăннине те çаврăнса пăхман — куçăм ан куртăр, тенĕ... Малтанхи хут аманса госпитальте выртса тухнă хыççăн, саперсем патне таврăнман вара...

— Берлина пĕтĕмпех ишĕлтернĕ, теççĕ. Эсир ишĕлчĕк çине пăхма кăмăлламастăр-çке, мĕншĕн-ха апла унта пулайманшăн кулянатăр? — ыйтнă писатель-очеркист Дубовран.

"Чăн та, — тенĕ вăл хирĕç тавăрса, — этем ăсĕпе алли тунă япалана (пысăк та илемлĕ кермен-и вăл, хресченĕн хăйне кĕрсе тухмалăх пĕчĕк пӳрчĕ-и е пĕр-пĕр кăптăрти япала кăна-и) — пур пĕрех, вĕсене ишсеçĕмĕрсе тăкнине, вутра çунтарса янине, кĕлне çил хăваланине эпĕ хытă чĕрепе пăхса тăма пултараймастăп. Хамăр çĕршывра кăна çапла пулĕ, тенĕччĕ. Акă, Польша

çĕрĕ çине ура ярса пусрăмăр та, пăхатпăр — унта та çавах иккен, Варшава витĕр тухнă чух, чĕре ыратнипе, чĕркуççисем сăрăлтатса-чĕтренсе илчĕç, пыр питĕрĕнсе ларчĕ. Германие çитсе кĕтĕмĕр — хулисемпе ялĕсем чылаях, тĕрĕс-тĕкелех тенĕ пек лараççĕ. Анчах пуш-пушах, хуçисем, эпир вĕсене вĕлерсе пĕтересрен хăраса пулас (пирĕн çынсене мĕн чухлĕ вĕлерчĕç, хĕн-хур, асап кăтартмарĕç хăйсем), хĕвел анăçнелле тарса кайнă, çилĕ килсе кайрĕ. Вĕсем пирĕнне çаратнă, аркатнă, çунтарçунтара янă, хăйсенне тивместпĕр пулать! Тунмастăп, аллăм кĕсьере хăй тĕлĕннех шăрпăк коробкине ярса тытатчĕ хăш чухне. Анчах шухăшлаттăм-шухăшлаттăм та: "Мĕншĕн чĕртсе çунтарса ярас-ха", — теттĕм. Ан тив ларччăр! Курччăр вĕсен хуçисем, пире фашизм çав тери, çĕр чăтайми пысăк инкекпе хурлăх кӳрекенсем, эпир, совет çыннисем, мĕн тери ырă кăмăллине! Унтан — вĕренччĕр пирĕнтен..."[66]

Хăйсен айăпне туякансене те кăтартать писатель очеркра, туяйманнисем те пур, паллах, мĕншĕн тесен Гитлер вĕсене намăса пĕлме мар, кăштах шухăшлама та вĕрентмен. Пĕтĕм пуç мимине типĕтнĕ. Вĕсемшĕн фюрер шухăшланă, çакна ирĕксĕрех ĕненмелле пулнă. Анчах урăхлараххисем те пур, вĕсенчен пĕрне авторкалавçă питĕ кулăшла лару-тăрура сăнласа парать. Пирĕн салтаксем Берлин-Бреслау автострадăран инçех мар вырнаçнă яла пырса кĕнĕ. Чип-чипер урам. Çурчĕсем пурте тĕрĕс-тĕкелех. Пахчасенче ача-пăчасем выляççĕ. Хĕрарăмсем çĕр улми лартаççĕ. Вăрçă çукпа пĕрех. Анчах ял хĕрринчи çурт умĕнче темшĕн кӳренсе-ятлаçса тăнине кураççĕ салтаксем. Вĕсене курсан тин кăшкăрашма чарăннă. Мĕн пулнă тесен, хĕрарăм пуçĕпе аяккалла сĕлтсе хăюллăн каласа хунă:

— Авă, çурăлнă.

Салтаксем вăл кăтартнă еннелле çаврăнса пăхнă. Пӳрт кĕтессинче, чăн та, çурмаран çурăлнă валашка выртнă.

— Вара мĕн? — ыйтнă пирĕн офицер.

— Мĕн пултăр вара? Мĕн айăп тунă-ха эпĕ? Мĕншĕн ман валашкана сирĕн çурмалла? Халь ăçта кĕпе çăвас?

— Кам çурнă?

— Никам та мар, сирĕннисем! Çак çулпа нумай пулмасть-ха пирĕннисем, юлашкисем, Берлиналла иртнĕ чух сирĕн самолетран бомба пăрахрĕç те, пĕри ман пахчана ӳкрĕ. Валашка пахчараччĕ. Тепле майпа, сывлăшпа пулас çав, çурăлнă кайнă!.. Мĕншĕн? Мĕн айăп тунă эпĕ? Эпĕ шутласа кăларнă-им çав инкек-синкек вăрçа? Мĕншĕн бомбине ман пахчана пăрахмалла?

— Мĕн пакăлтатать çав? — ыйтнă нимĕç хĕрарăмĕпе калаçакан офицертан Дубов, нимĕçле "хэнде хохпа" "капутсăр» пуçне урăх нимĕнле сăмах вĕренменскер. Офицер ăна хĕрарăм сăмахĕсене куçарса панă.

— Эккей, асту-ха эс, валашки çурăлнăшăн тарăхса кулянать! — тенĕ Дубов. — Пысăк инкек курнă! Пирĕн яла чĕртсе-çунтарса яракансенчен пĕри, тен, унăн упăшкиех пулнă? Эпĕ унăнне тивместĕп-çке. Мĕн çунмалли пур валашкашăнах?

Çав самантра пахчаран виçĕ ача чупса тухнă. Хĕрарăм каллех пăшăрханма пуçланă: куратăр-и, тенĕ вăл, вĕсен кĕписем епле хуралса кайнă? Мĕнле çăвас ĕнтĕ ман? Кама кайса калас? Эпĕ айăплă мар-çке. Тен, айăп çуккине пĕлсен, тӳлĕç?

Офицер ку сăмахĕсене те Дубова куçарса парать. Дубов вара вăрăммăн, ассăн сывласа илет, çапах та хăйĕн тарăхăвне ăшĕнчех хăварать. «Эх, — тенĕ вăл, — пире сăтăр тунине вĕсем хăйсем хăçан тӳлесе татĕç-ши? Ыйтха çак айванран, тенĕ Дубов кăшт шухăшласа илнĕ хыççăн, тути хĕррисемпе кулса, пăшатанпа сӳс-кантра е чĕн çук-и унăн? Тавлаштарас мар тесе, халех çĕлесе панă пулăттăм. Унсăрăн хăйĕн ухмах пуçĕпе пиртен çĕнĕ валашка ыйтса хут çырса парĕ таçта...»

Хĕрарăм ăнланнă, хăвăрт пӳрте кĕрсе çухалнă. Дубов вара, çак мыскара тĕслĕхĕпе усă курса, фашизм тискерлĕхĕсене кĕскен те тĕрĕс ăнлантарать:

"Шухăшлăр-ха, сире çакă, чăн та, пирĕн Пушкин юмахĕнчи пек туйăнмасть-и? Гитлер — фашизм — пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн, унтан пысăкраххăн та пысăкраххăн çăтма пуçларĕ, çăварĕ карăлнăçем карăлса пычĕ, юлашкинчен пирĕн çĕршыва — çав тери пысăка — хапсăнчĕ.

Вара мĕн пулса тăчĕ ... Германи çурăк валашка умĕнче — акă мĕн пулса тăчĕ ... Ман шухăшпа, пĕтĕм хапсăнчăксене çавă — çурăк валашка — кĕтет. Америкăпа Англи пулăшĕç, теттĕмĕр-и? Куртăмăр мĕнпе тата мĕнле пулăшнине! Вĕсем пĕр аллипе консерв банки сĕнчĕç пире, тепринпе çурăм хыçне пытарнă хĕç тытса тăчĕç. Пĕлетпĕр вĕсене!"[67]

Писатель Дубов вăрçă çулĕсенче çакăн пек вирлĕ, тĕнчери лару-тăрăва ăслăн ăнланнинчен тĕлĕнмех тытăнать, анчах, кăшт шухăшласа илсен, вăл мар, пĕтĕм халăх калаçать-çке, тет ăшĕнче. Халăх хăйĕн шухăшне тӳррĕн, пат татса калама юратать.

Хайхи хĕрарăм пăшатанпа çӳхе те вăрăм чĕн илсе тухнă. Дубов вара ирĕксĕр ĕçе тытăннă. Пирĕн ĕç — çĕмĕресси мар, тӳрлетесси те тăвасси, тенĕ вăл. Тепĕр вунă-вун пилĕк минутран çурăк валашка çĕнĕ валашка пекех пулса тăнă. Офицерпа Дубов кайма та хатĕрленнĕччĕ ĕнтĕ, анчах хĕрарăм вĕсене кăшт тăхтама ыйтнă, хăй шыв патне чупнă.

Шыв ярса пăхасшăн, юхнине тĕрĕслесшĕн, тавçăрнă пирĕн çынсем. Пăхаççĕ вĕсем хайхи хĕрарăмпа пĕрле — валашкаран пĕр тумлам шыв та сăрхăнса тухман. «Калăр ăна, — тенĕ Дубов хăйĕн командирне, — вырăссем ĕçе тĕплĕ тăваççĕ. Ĕлĕкрех нимĕçсене тĕплĕ, тирпейлĕ, тенĕ. Пулма та пултарнă-и, тен. Анчах хальлĕхе вĕсем йĕркеллĕхе маннă. Вĕсене çапла фашизм тунă». Хĕрарăм кил-çурчĕ умĕнчен пăрăнса кайсан, Дубов çапла хушса хунă:

— Ас турăр-и, вĕсене культурăллă халăх тенине илтнĕччĕ. Ку — ырă ĕçшĕн те тав тумарĕ.

Офицер та çав шухăшах каланă:

— Фашистсем вĕсене çынна çаратсан е вĕлерсен кăна турра тав тума вĕрентнĕ, — тенĕ вăл. — Вĕсем çынна ыр тунине кураймаççĕ. Фашистсемшĕн пулсан, ун пек çын — çын та мар. Мул тĕнчи çуратнă япала вăл... Эсĕ пур, авă, çакна ырă туса хăваратăн.

Дубов, вăрçă çулĕсенче пĕрре çеç мар вилĕм куçĕнчен пăхнă, паттăрлăхшăн кăкăрĕ тулли орденсемпе медальсем илсе тултарнă хастар сержант, çирĕппĕн, хăйĕн

кашни сăмахне чунтан ĕненсе, çапла тавăрнă:

— Çук, ун умĕнче ырă пулас тесе мар эпĕ. Ĕçе тунсăхласа çитрĕм! Алă кĕçĕтсе кайрĕ, ĕç курсан. Нумай пулать алла ĕç тытманни! Хăçан таврăнас киле! Тăраниччен ĕçлесе курăттăм. Мĕн чухлĕ ĕç кĕтет унта пире! Пăхсан — куç хăраса каймалла. Анчах аллăмăр хăрас çук. Пур пĕрех йăлтах туса çитерĕпĕр. Хăвăртах. Вăрçăчченхинчен пысăкрах, çирĕпрех, илемлĕрех тăвăпăр.

Дубов, хăвăртах тăван киле çитес пекех, васкавлăн утма тытăннă. Вăл госпитальтен хăйĕн чăсне кайсан икĕ кунтан вăрçă шăпланă, Аслă Çĕнтерӳ çитнĕ. Паттăр сержант тăван ялĕнчи мирлĕ ĕçре те хастар пуласса, кирек темле ĕçе те чунтан, хăйĕн пĕтĕм пултарулăхне парса тăвасса çирĕп шанăç пур.

Писателĕн "Лира" очеркĕнчи ĕçсем Польшăна фашистсенчен ирĕке кăларнă тапхăрта пулса иртеççĕ. Илпек Микулайăн "Ирена" очеркĕнче те çак вăхăтах сăнласа панă. Иккĕшĕнче те пĕр ыйту — хамăр çĕршыва нимĕç эшкерĕсенчен тасатнă хыççăн Европа халăхĕсене те фашизм пусмăрĕнчен хăтарасси. Икĕ произведенийĕнче те ĕçсем Польша çĕрĕнче пулса иртеççĕ, сăмах совет салтакĕсемпе поляк хĕрсем хушшинчи çыхăнусем çинчен те пырать. Икĕ очеркне те Совет çарĕн подразделенийĕсен командирĕсен ятĕнчен çырнă. А. Алга очеркĕн тĕп геройĕ Мария, Н. Илпекăн — Ирена. Пĕрремĕш очеркĕнче виçĕ взводăн виçĕ тĕлтен, çĕре чава-чава, сăрталла хăпармалла. Малтан чи пĕрремĕш салтак хăйĕн валли пуç кĕмелĕх шăтăк тăвать, унтан вăл — выртсах-ха — çав шăтăка тарăнлатать, аслăлатать. Вара, чĕркуçленсе ларса, шăтăка малалла тăсать. Халĕ ĕнтĕ салтак, тăшман пеме тытăнсан, шăтăкне тăсăлса выртма пултарать: пуля е снаряд, е мина татăкĕ тивес çук ăна. Ун хыçĕнчен пыракан салтак çав шăтăках тата тарăнлатать, аслăлатать, кайрисем ăна чăн-чăн траншея тăваççĕ — метр та вунă сантиметр тарăнăшне çитереççĕ, брустверне тирпейлеççĕ, пулемет лартмалли, салтаксем тăмалли кĕтессем хатĕрлеççĕ. Çапла, пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн, кĕреçен-кĕреçен, минутсерен салтаксем сăрталла хăпараççĕ.

Çапла пĕр çĕр иртсе каять. Тухăçран шурăмпуç ки-

лет. Вăл хĕрелнĕçем хĕрелет, вара ун варринче тем пысăкăш хĕп-хĕрлĕ çăмха, йĕп пек хĕлхемĕсене ярт тӳррĕн инçете-инçете тирпейлесе, çунса-ялкăшса тухать. Ку самантра вĕçен кайăксем гимн пек янăракан ирхи юррипе саламлаканччĕ, халĕ пĕр кĕвĕ те илтĕнмест. Вăрçăн хăрушă сассине пула вăрмансемпе хирсенчен вĕçен кайăксем писнĕ. Сухаçăсем те писнĕ, вĕсем вырăнне сăрт айккинчи шăтăк-шăхăрсенче шинель тăхăннă, пăшал тытнă çынсем йăраланаççĕ, ура çине пĕтĕм вăйĕпе тăраймаççĕ, шăм-шакка, ӳте килентерсе карăнса илеймеççĕ. Кулăшла та хурлăхлă тĕнче!

Пĕр эрне çакăнта асапланнă виçĕ взвод. Траншейăсем тăрăх хĕсĕнсе, чавсапа унта та кунта перĕнсе е уруна хуçас пек такăна-такăна, çĕр çумĕпе вăрă пек пĕшкĕнсе çӳреме йăлăхтарать. Аван-çке вăл кайран, хăрушлăх иртсе кайсан, тем те аса илмешкĕн! Илемлĕçке эпир утса çӳрекен аслă çĕр, уçă-çке эпир сывлакан ытарайми сывлăш, кăмăллă-çке эпир хăйсене савакан, хăйсем те пире юратакан çывăх çынсем! Сăмах майĕн çакна палăртмалла, Алга кирек мĕнле очеркра та, — салтаксем çапăçăва кĕме хатĕрленеççĕ-и е хăйсене сыхлама траншея чаваççĕ, старшина апат турттарса килессе кĕтеççĕ-и е тăшманпа вилесле тытăçса илнĕ хыççăн пăртак канма вăхăт тупаççĕ, — мирлĕ пурнăçа юратнине, мирлĕ ĕçе килĕштернине, тăван тавралăх асĕнчен тухманнине ялан аса илет. Вăрçă унăн геройĕсемшĕн, темĕнле хăрушă пулсан та, вăхăтлăх япала кăна: вĕсем тăшмана çĕнтернĕ хыççăн каллех юратнă кил-йышне таврăнаççĕ, юратнă ĕçре чăн-чăн телейне тупаççĕ.

Пĕррехинче автор-калуçăн (яланхи пекех, Алга очеркĕнче салтаксемшĕн тăрăшакан, вĕсен хуйхи-суйхипе пурăнакан, тăван ялне, тăван-хурăнташĕсене асра тытакан офицер вăл) кăшт пушă вăхăт тупăнать те, умне старшина сăнĕ вырăнне тепĕр сăн тухать. Мĕншĕн халиччен манăçман çавă ăнсăртран тĕл пулнă хĕр? Мĕншĕн вăл хапха умĕнче пăхса тăрса юлнă? Аптăранă кăвакал шыва сикнĕ тенĕ пек, автор, çав хĕре курнине халь-

лĕхе чунне суяпа лăплантарса, ĕçес килнĕ чух тутине сывлăмпа йĕпетнипе танлаштараканскер:

— Лира мĕнле тăрать? — тесе ыйтать старшинаран.

— Тата хытăрах чиперленсе, çуталса кайрĕ. Каснăлартнă пĕр картина çинчи пек, — те эпĕ чĕннĕрен кăшт уçăлса кайнипе, те йывăр шухăшĕсене сирсе ярас шутпа хаваслăн, савăнăçлăн каласа хучĕ Мартынов старшина.

Лирăпа взвод командирĕ хăй çўренĕ (ыттисен те лашасем пулнă). Мĕн чухлĕ пулăшман пулĕ вăл хăйĕн хуçине йывăрлăхра, вилĕмрен çăлса хăварни те пулнă. Ыттисемпе ăмăртни те. Пĕррехинче вăл Сахаров офицерпа штабра пулнă хыççăн взвод командирĕ сĕннипе поляк ялне кайма тухать. Пĕр çур çухрăм вĕсем сиккипе юнашарах пынă. Автор-калуçă сасартăк ирĕксĕр тенĕ пек йĕнер пускăчи çине тăрать те, Лира, çакна кĕтсе пынă пекех, карт! малалла сиксе ўкет. Командир питне çавăнтах çивĕч çил çапса каять, куçра хĕм йăлтăртатса илет. Хуçа Лира мĕнле пынине те курмасть, вăл мĕн туйнине те сисмест. Пĕрте пĕр çын вĕсене çывăхра пăхса тăрас пулсан, çакна курĕччĕ: улăх варрипе, çулпа икĕ юланут вĕçет, хыçалта тусан мăкăрланса юлать, лашисем çĕлен пек тăсăлнă, çĕр çумĕпе выртса-шăвăнса ыткăнаççĕ тейĕн. Акă çўренĕ хура турă юлташне (Лирăна) хăварнă çемĕн хăварать. Те савăннăран, те хĕрсе кайнăран вăл хăвăртран хăвăрт вĕçет, унăн урисем палăрмаççĕ, курăнмаççĕ. Акă вăл çывхарса килет (автор ача чухнехи акатуй лашисене аса илет), унăн йĕтĕр пек çўхе кĕлетки лайăхах курăнать ĕнтĕ, сăмсипе хашлатса сывлани илтĕнет. Хуçи ăна, майĕпен чарасшăн пулса, çултан пăрнăçем пăрать те сăрталла тытать. Акă вăл, сăрт çине улăхса çитсе, юртма чарăнать те, çилхипе пĕлĕте перĕннĕ пек, малти урисене çўле çĕклесе, мăйне пĕкĕ пек авса, мăнаçлăн утса çўрет. Тепĕр пилĕк минутран тин хура турă çитсе тăрать те, вĕсем, каллех юнашар пулса, малалла çул тытаççĕ. Сахаров ăмсанса кĕсрене улăштарма сĕнет, ун вырăнне хуçине илемлĕ хĕрпе паллаштарма пулать. Çапла та каласа хурать: «Эпĕ унпа виçĕ каç иртгернĕ, кăмăлна кайсан, халĕ санăн пултăр». Автор-

калуçă тĕлĕннипе шак хытса ларать: Сахаров пит-куçĕнче нимле шӳт палăрмасть. Виç-тăватă талăк каярах хăрушă каçсене пĕрле асапланса ирттернĕ пулин те, темле ют çын пек туйăнса кайнă Сахаров аслă лейтенант Лира хуçине. Ятне тенĕн, çапах та Сахаровпа пыма килĕшет вăл. Анчах тĕлĕнмелле: хĕре курнă иккен Лира хуçи, паçăр шăпах ун çинчен шухăшласа пынă. Хĕр те ăна палласа илет, ун чухне иккĕшĕ пĕр-пĕрне сăмах хушман пулсан та, халĕ вăл ăна курсанах сăнĕ-пичĕпе илемлĕн çуталса кайнă, унтан куçĕнче кăварне часах сӳнтернĕ, аллине алăран илсе Сахаров еннелле пăхнă та пуçне пĕксе сывлăх сунанçи тунă, анчах алă паман. Лира хуçи нимĕн те ăнланаймасть... Мария (поляк хĕрĕ çав ятлă пулнă) автор-калуçăран хăпмасть, Сахарова пăт-пат çеç сăмах хушкалать. Киле кайма вăхăт çитсен, хĕр çирĕппĕнех калать аслă лейтенанта, эсир те пĕрлех юлташăрпа кайăр тесе... Анчах мĕншĕн? Виçĕ каç ирттертĕмĕр, терĕ-çке Сахаров, каллех тĕлĕнет офицер. Хĕр вĕсене ăсатма хапхаран тухать. Тĕттĕм. Лира хуçи хăйĕн аллинче сасартăк хĕрĕн ăшă аллине туять. Мария унăн аллине вĕçертмест.

Унтан Сахаров вĕсене иккĕшне çеç тăратса хăварать. Йăпăр-япăр сăмах та хушмасть пирĕн офицер: вĕсем урăх пурнăç çулĕпе пынă, урăх йăлара çитĕннĕ. Хĕр вун саккăрта иккен. Çичĕ çул вĕреннĕ. Нимĕçсем килни малалла вĕренме чăрмантарнă. Ашшĕне вĕсемех тытса кайнă. Халĕ вăл ăçти те паллă мар иккен. Мĕншĕн хăйĕн юлташне кăмăлламаннине те ыйтать майĕпен офицер, вăл кунта килкелесе кайнăçке, тет. "Вăл пирĕн патăмăрта умлă-хыçлă виçĕ каç пулчĕ, — тенĕ хĕр. — Малтанхинче мана пăлтăрта алăран ярса тытрĕ те ... кай, калама аван мар!.. Эпĕ, аран вĕçерĕнсе, пӳрте тарса кĕтĕм, анне çумне йăпшăнтăм. Тепĕр каçхине эрех чиксе килнĕччĕ. Аннене сĕнчĕ, мана. Эпир ĕçмерĕмĕр. Пĕчченех ĕçкелерĕ те тухса кайрĕ. Виççĕмĕшĕнче эпир аннепе иксĕмĕр унран тĕлĕнсех кайрăмăр: вăл пирĕнпе чиперех шăкăлтатса калаçса ларчĕ. Темле çын вăл, эпир малтан унран хăрарăмăр".[68]

Сăпайлă офицер аслă лейтенантшăн хăйĕн питне

хĕретсе тăрать. Ăнман этем. Совет офицерĕн ятне ярса çӳрет. Ăçта-ха тата? Хамăр патăрта та мар, ют çĕршывра! Сыв пуллашнă чухне Мария хăюлланать: "Эсир каятăр-и та-и? Хăвăр юлташăр çинчен ырах мар каланăшăн кӳренмерĕр пулĕ-çке? Вăл нимĕнех те усал тумарĕ пире, кăштах хăратрĕ кăна. Эпир хăрама та хăнăхса çитнĕ ĕнтĕ..»[69] — юлашки сăмахĕсене вăл питĕ йăвашшăн, хурлăхлăн каланă.

Çук, уншăн мар, тет офицер, ман лаша пур, ăна шăвармалла, çиме памалла.

Çав каç Лирăна поляк хĕрĕпе пĕрле шăварнă хыççăн капитанпа Мария уйăх çутинче шуçăм палăриччĕнех калаçса лараççĕ. Хĕр офицера картишĕнчен урама тухсах ăсатса ярать, тепĕр каçхине те кĕтсе илме пулать. Çавăн пек амаланса, вăй илсе, çунатланса пырать совет офицерĕпе Мария хушшинчи таса туйăм. Лира çакăн хыççăн поляк хĕрĕн çуртне капитана хăйех çитерме пуçлать: наступленине хатĕрленекен, вăхăтлăха хĕрӳ вутлă çапăçусенчен кăштах канса вăй пухма ирĕк панă подразделени командирĕ вăхăта ахаль ирттермест, Марийăна фашистсенчен Польшăна ирĕке кăларнă хыççăн çĕнĕ пурнăç çураласси çинчен ăнлантарать, хавхалантарать. Хĕр патне капитан малтан калаçса татăлнинчен каярах çитсен, капитанпа Лирăшăн Мария питĕ пăшăрханма тытăнать. Анчах Лира çын мар-çке, уншăн мĕншĕн аплах пăшăрханмалла, тесе лăплантарма пикенет автор-калуçă. Мария урăхларах шутлать: хăйне чипер, юратса пăхсан, выльăх та йĕркеллĕ, ачаш, тет вăл совет офицерĕпе ун хушшинче ырă туйăм çуратса çирĕплетме Лира питĕ нумай пулăшнине ăнланса. «Çынсем, — тет вăл, — авă, выльăхран кăна мар, тискер кайăксенчен тискертерех пулаççĕ. Эпĕ фашистсем çинчен калатăп. Мĕнрен килет вăл?»

Этемĕн ăс-хакăлĕ пур, айван тесе кӳрентересшĕн мар пулса, ăнланмалларах сăмахсем шырать капитан. Çав ăс-хакăла, тет вăл, тĕрлĕ çулпа яма пулать. Хăй пĕлнĕ, пултарнă таран çар çынни ăна фашизм мĕн икненне ăнлантарса пама тăрăшать. Мария хăйĕн пурнăçĕ тĕттĕмлĕхе кĕрсе ӳкнине, çавăнтан ăна тата ытти по-

ляксене те Совет çарĕ ирĕке кăларнине ăнланма тытăнать, фашистсене хирĕç арçынсемпе танах çапăçакан совет хĕрĕсенчен тĕлĕнет те, ăмсанать те. "Телейлĕскерсем", тет вăл вĕсем çинчен, кулкаласа калаçакан, пилотка айĕнчен курăнакан сарă кăпăш кăтрисене пăхса. Мария, ялтан пĕррехинче хулана пырсан, площаде тухать. Халăх туллиех унта. Анчах çынсем пуринчен ытла пĕр çĕрелле пăхаççĕ. Акă Мария умĕнче — çук, пĕтĕм халăх умĕнче — вырăс хĕрĕ! Унăн аллинче пĕчĕк ялав. Вăл пĕрисене пĕр урампа, теприсене тепĕр урампа çул кăтартса ярать. Хăй пĕр вырăнтан сикмест, унăн пичĕкуçĕ, тутисем, нумай пулмасть иртсе кайнă хĕрсенни пек, кулмаççĕ. Марийăпа ытти поляксем çине мар, иртсе пыракан çарсем çине куç харшине пĕрсе е куçне чарарах уçса, çивĕччĕн пăхса илет. Ах, унăн пĕвĕ-сийĕ, кăмăллать ăна Мария. Йăрăс, яштака. Çинçе пилĕкне сарлакарах сарă чĕн пиçиххи тата ытларах çинçелетсе çаврăнкалатса тăрать. Пилотки айĕнчен пайăркан-пайăркан тухса тăракан сарă çӳçĕ халь-халь таçта вĕçсе каяссăн туйăнать. Хул пуççийĕсем унăн черченкерех те тӳп-тӳрĕ, кăкăрĕ çӳллĕ, ун çинче орденсемпе медальсем йăлтăртатаççĕ. Ури тунисене çат тытса тăракан кăштах çӳллĕ кĕлĕллĕ атти çап-çутă, таса. Хула халăхĕ çав хĕр çинчен куç илме пултараймасть, нименле артисткăна çакăн пек юратса, теменччен пăхман-тăр вăл... Илемлĕ сирĕн хĕрсем, тет Мария. Вĕсем вăрçăра та каччисенчен юлмаççĕ. Ирĕк вĕсене. Телейлĕ ... Пирĕн ... Мĕн пур пирĕн? Нимĕн те çук. Совет офицерĕ поляк хĕрне лăплантарать: ан ӳпкелеш, сирĕн те пурте пулать, тесе ăнлантарса.

Часах Мария шăпи те улшăнать — тĕрĕсех каланă ăна капитан. "Ман ĕмĕт çитрĕ! — тет Мария. — Эпĕ çак кунсенчех хулана вĕренме тухса каятăп. Мана та санитаркăсем хатĕрлекен шкула илеççĕ. Халĕ пирĕн те хамăрăн çар пур. Польша çарĕ!.. Пултарайăп-ши? Сирĕн илемлĕ хĕрĕрсем каччисенчен юлмаççĕ-çке? Эпир мĕнрен кая?

— Ĕненетĕп, шанатăп, — тет капитан, хĕре йăпатса, — хăвăрăн тăван çĕршывăра, унăн çутă малашлăхне

чунтан юрататăр пулсан"...

Н. Илпекĕн "Ирена" очеркĕнче те тĕп герой — хĕр. Унти ĕçсем тата хĕрӳллĕрех пулса иртеççĕ. Ĕçсĕр юлнă хитре хĕр Ирена, яштака пӳ-силлĕ те чипер пит-куçлăскер, пурнăç асапне самаях чăтма ĕлкĕрет. Чухăн рабочи çемйи хваттершĕн икĕ уйăх тӳлеме май тупаймасть ĕнтĕ хуçана. Хуçа вара чиперкке Иренăна куç хывнă. Сăмси унăн халь çеç çĕр айĕнчен чавса кăларнă çамрăк çĕр улми пек, мăнтăркка пичĕ ăшне путса пытаннă мăчăлти куçĕсем çупа сĕрсе янă пек йăлкăшса пăхаççĕ. Пит тăрăх йышлăн каркаланнă пĕркеленчĕксем унăн иртĕхсе ирттернĕ кунĕсем çинчен калаççĕ. Пан Стефан пуян, çуртăн пĕрремĕш хутĕнче унăн какай лавкки пур. Хĕрĕх çул урлă каçса ик-виç арăма çитнĕ хыççăн вăл черчен Иренăна шăпах "варли" тесе каласса кам шухăшлатăр? Вельможнăй пан Стефан Иренăна мăшăр тăвас та — ĕçĕм те пĕтрĕ тет пуль. Калатăр, ара, ют çăвара тутăр карса чарас çук. Анчах Ирена ун çинчен ним те шухăшламасть. Амăшĕ ан иккĕлентĕр хĕрĕ пирки. Савса пăхать вăл Ирена çине. Яштака пӳ-силлĕ те чипер пит-куçлă хĕрĕ кам телейне ӳсет-ши? Мăшăр сарă çивĕчĕсем хулпуççи çинчен кăкăрĕ тăрăх икĕ енĕпе йывăррăн усăнса анаççĕ. Кăвак хĕмĕн çунса тăракан пысăк куçĕсем пур çамрăксене те ырă кăмăлпа хавхалантараççĕ. Ахальтан мар ĕнтĕ, кулленхи кунра тĕл пулакан яшкĕрĕмсем, Иренăна курсан, хисеплĕн çул парса иртеççĕ, хăюллăраххисем тата, чи ырă сăмахĕсене чунтан-вартан суйласа, ытарайми çепĕç те япшар чĕлхепе калаçса, Иренăн савас кăмăлне тупасшăн хĕрĕнеççĕ.

Анчах Иренăн ĕмĕтленнĕ çынĕ пур. Вăл тахçантанпах Стасьăна юратать. Пĕр унпа çеç вăл чĕри патĕнчи чи çывăх сăмахсемпе калаçать. Писатель çак икĕ çамрăкăн çăмăл мар пурнăçне питĕ ĕненмелле сăнласа парать. Стася хальлĕхе ĕçсĕр пурăнать-ха. Ӳлĕм вăл Иренăшăн тивĕçлĕ ар пуласси çинчен сăмах та пымасть, мĕншĕн тесен Стася ăста слесарь кăна мар, вăл çамрăк та ăслă çын, вăл тӳрĕ юлташ. Ĕнтĕ сăмахне те тахçанах пĕтерсе хунă, пурнăç кăна кăшт майлашăнтăр, вĕсем вара пĕрле пулаççех. Вара? Эпир антрамăпăр, тет вăл.

Анчах уй урлă каçма çăмăл мар, тенĕ чăвашсем. Ĕлĕкхи, фашизмран шикленсе пурăннă тапхăрти пурнăç та Польшăра çавнах аса илтерет. Ирена çине сасартăк инкек çине инкек тиенме тытăнать. Ăна паллă: «Пĕр хуларах икĕ тĕнче: пуянсем хăйне уйрăм пурăнаççĕ, вĕсем пысăк çуртсенче, тепри — тĕрлĕ ача-пăча, çăтăк-çурăк тумланнăскерсем, вĕсен çурчĕ — урам». Ирена пурнăçĕ те вĕсеннинчен нумаях уйрăлса тăмасть. Кĕтмен çĕртен унăн амăшĕ йывăр чирлесе ӳкет. Виçĕ талăк куç хупмасăр амăшĕн пуçĕ умĕнче ларать Ирена. Тĕнче хĕсĕр мар, паллана çынсем хĕре пулăшма тăрăшаççĕ. Анчах усси çук. Амăшĕн сывлăхĕ йывăрлансах пырать. «Ирена, йывăр чухне манăн пурăнас шанчăк çук ... Улача кĕпеме тăхăнтартăр вара, çĕнĕ чăлхапа пулам ... Ытлашши тăккаланмалла ан пултăр. Йăмăка чĕнтерĕр те аçăрпа пĕрле виççĕр тирпейлĕр. Эс ху, хĕрĕм, манран ан ютшăн ...Куç пек çывăх курнă эп сана, çын тăвасшăнччĕ те ... ан ӳпкелешсе юл, — амăшĕн сасси каллех кăкăр ăшне кĕрсе çухалчĕ».[70]

Ирена, ашшĕ вăхăтлăх ĕçрен таврăнсан, паллана врачсем патне васкать, анчах Крашевскисем килте çук иккен. Резняксем те алăкне питĕрсе кайнă. Фурмановичсенчен хальтерех çеç сĕт илсе килнĕччĕ. Çынна пĕрмай чăрмантарни вырăнсăр, татах кĕмешкĕн лайăх мар.

Очеркра Пшибыковский врач сăнарĕ уйрăмах асра юлать. Хăш-пĕрисем ăна пултаракан врач вырăнне хураççĕ. Ирена çавăнта та пулин кĕрсе тухас тет, хăйĕн пĕтĕмпе те тăватă злотых пулнине тӳрех пĕлтерет, ыттисене çитес эрнере тӳлесе татма шантарать. Малтан тухтăр хĕрпе çепĕççĕн, сăпайлăн калаçать. Укçа суммине пĕлсен, тухтăр пит-куçĕнчи малтанхи ырă сăн самантрах çĕтет. Унтан, турткалансан, турткалансан, пĕрелĕхе пырса пăхма килĕшнĕ пек пулать, анчах куншăн Иренăн ăна хăйне евĕрлĕ майпа тав тума кирли çинчен систерет... Паллах, апла хăтланма килĕшмест хĕр, вара тухтăр та, пыраймастăп çав апла пулсан, тесе пĕлтерет. Пшибыковский тухтăр сасси Иренăна пушă кĕленче ăшĕнче сăра сĕрленĕ пекех илтĕнет. Хăй вăл хуп-хура сăнлă, кĕске хура сухалĕ янахне çеç мар, пит çăмарти-

сене куçĕ таранах сăрса илнĕ, тем тăршшĕ ӳстернĕ çӳçĕ çилхе пек явăнса тăрать. Утса çӳренĕ çĕртен пĕр вăхăта вăл чарăнса тăрать те кĕтеселле пăхать. Хăш-пĕрисем çапла вара, куçкĕрет пĕлсе тăраççĕ пулин те, паян мĕнле кун пулчĕ-ха тесе ыйтаççĕ. Пшибыковский тухтăр та çавăн йышши çын пек туйăнса каять Иренăна. Унпа вăл пĕр сăмах та калаçмĕччĕ те урăх, анчах хĕршĕн ним те шел мар, амăшĕ çеç хăвăртрах сывалтăр. Укçи çук пулсан та, йăлăнса калаçкаласан, икĕ злотых тупса пама килĕшет вăл. Малалла та тухтăр Иренăпа кушак шăшипе выляпă пек тытать. Хĕр амăшне сыватас шухăш та çук унăн, хăй патне пулăшу ыйтма пынă чухăн çынран юри кулса йăпанасси çеç: чирлĕ çын кӳршĕллĕ урам урлă çеç пурăннине пĕлсен те, машинăпах килтĕр пуль кунта, тесе йĕкĕлтенĕнех ыйтать. Трамвайпа пĕр квартал каймаллине пĕлсен, тухтăр урса кайнăнах пулать: "Çук, çук, апла сăмах та пулма пултараймасть. Машинăсăр эпĕ пахчана çеç тухкаласа кĕретĕп те ... Хăйне хăй хисеплекен доктор нихçан та трамвайпа е çуран çӳремест». Сатирăллă, хăйне çеç юратакан, хăй тухтăр пулсан та чирлĕ çынсене çӳпĕ вырăнне те хуман этем сăнарне ăста калăпласа кăтартнă кунта очеркист.

Фурмановичсем патнех кайма тивет Иренăн, анчах каллех ăнăççăр, инкеклĕ: шăпах унăн умĕнче полицейскисем упăшкипе арăмне те арестлесе каяççĕ: чухăнсемшĕн хытă тăрăшакансем пулнă вĕсем иккĕшĕ те. Юрать-ха, каçхине Иренăсен хваттерне Стася пырать. Ирена амăшĕ валли вăл хаклă йышши эмел тупса килнĕ-мĕн. Хĕр савнине асăрханарах çӳреме ыйтать. Анчах Стася хăюсăр яш мар, харсăр вăл, çĕршыври ларутăрăва та аван ăнланать. Стася сăнарĕ очерк темипе идейине лайăхрах ăнланса илме пулăшать. Ирена ăна, асăрханарах çӳре, пĕртен-пĕр çывăх çыннăм вĕт эсĕ маншăн, пăшăрханатăп саншăн, тенине хирĕç çапла хуравлать вăл: "Ан пăшăрхан, Ирена. Пит аслă-çке ирĕк кăмăл туртăмĕ. Ют çын асапĕ ман чĕрене пусать, ют çын тарне-юнне курсан — куççулĕм тухать... Анчах текех хăраса тăрса ĕç тухас çук, пытанса тăма юрамасть... Çынна ĕмĕр-ĕмĕрех шанчăк ăшăтать».[71]

Çапах Ирена амăшĕ халсăрлансах пырать. Ăна больницăна выртараççĕ. Амăшне пăхма ашшĕн укçи çитменрен Ирена витри-çатми таранчченех ломбарда леçет, анчах вĕсене хăй каялла тавăрайманшăн унăн пĕтĕм япалисемшĕн Стефан пан тӳлесе татасшăн иккен. Ирена куçне чарса пăрахать: кай, чун çиесшĕ! Çапла кăшкăрать те вăл çавăнтах хăйĕн пӳлĕмне кĕрсе каять, хыçалтан алăкне çаклатса хурать. Шеллет-им? Ан хапсăнтăр ăна! Ирена хăйне шеллеттерме çуралман тĕнчене. Шелленинчен те пысăк мăшкăл ят ярасси çеç çуралать ...Хĕр характерĕ аталанса, çирĕпленсех пырать. Анчах больницăран таврăннă амăшĕ вăйсăр-ха, унăн çӳреме те юрамасть. Халĕ унăн канмалла, лайăхрах çимелле, терĕç. Çие уртма та нимĕн çук, веçех сутса пĕтернĕ. Паян, тен, ашшĕ ĕç укçи илсе килĕ? Ун вырăнне каллех инкек хыççăн инкек килсе çапать Иренăна: унăн чун савнине рабочисен пурнăçне лайăхлатмалли çинчен çырнă листовкăсемшĕн тытса хупаççĕ, ашшĕ йывăр ĕçе чăтаймасăр фабрикăрах ӳксе вилет, амăшĕпе иккĕшне, Ирена унăн арăмĕ пулма килĕшменшĕн, Стефан пан хваттертен хăваласа кăларать. Çапах та тĕнче пĕтĕмпех хупланмасть-ха Иренăшăн. Малтан вĕсене, амăшĕпе иккĕшне, пулă тытакансем, хăйсем пекех чухăнсем, пулăшаççĕ, унтан — Стася тусĕсем ...

Аслă вăрçăра нимĕçсене аркатса Совет çарĕ Польша çĕршывне фашизм чуралăхĕнчен хăтарать. Люблин хулине ирĕке кăларнă кун совет салтакĕсем чунтан: "Товажищу!.. Товажищу!.." — тесе кăшкăрнине илтеççĕ. Поляк-партизан иккен вăл. Çӳçĕ кăвакарнă унăн, сухалне хырман, куçĕсем кăшт путарах тăраççĕ.

"Стася, эсĕ вĕт ку!" — тет автор-калуçă.

"Палларăн, тусăм, палларăн, — тет хĕрлĕ çăлтăрлă пилоткăллă партизан. — Хамăрăн Совет çарĕ килессе куç пек кĕтрĕмĕр, кĕтсе илтĕмĕр-илтĕмĕрех".

Стасьăпа Иренăна автор-калуçă 1939 çулхине Хĕвел анăç Украинăна ирĕке кăларнă чух лайăх паллана. Çавăн чухне вĕсем совет офицерне хăйсен йывăр пурнăçĕ çинчен каласа кăтартнă. Фашистсен оккупацийĕ вăхăтĕнче те вĕсем тĕрмерен тĕрмене хутланă, лагерьтен лагере

çитнĕ. Тинех пĕтĕм инкек-синкекрен хăтăлтăмăр тесе, совет салтакĕсене çĕклесе илейми тав тăвать Стася.

Ирена та сывах, пĕлтерет вăл юлашкинчен савăнăçлăн.

Н. Илпек пултарулăхĕнче "Микулай шăллĕн калавĕ" очерк ытти очеркĕсенчен уйрăм тăрать. Унта вăл пиччĕшĕпе шăллĕн Эрихпа Герман ĕçĕсене хаяр сатира меслечĕпе сăнласа кăтартнă. Эрих йăнăшман, хăй пиччĕшĕпе курнăçасшăн пулнă вăл — çапла пулса тухнă та. Чăн ĕнтĕ, ĕмĕчĕпе ялта курнăçасшăн марччĕ, лере, Мускавра, пĕр-пĕр чаплă çуртри йăтăнса тăрайми кĕрекере тĕл пулса савăнасшăнччĕ, — аплах пулса тухайман çав. Мĕн тăвас тетĕн, шăпа тени хăш чухне ĕмĕтленнĕ пек пулаймасть те, ирĕксĕрех юр хӳсе лартнă, йĕри-тавра выçă кашкăрсем чупакан вырăс ялĕнчех тĕл пулма тивет. Ялĕнче тăвансене пĕр-пĕринпе курнăçма пĕр енчен лайăх-ха, тепĕр енчен шутласан, меллех те мар ку, мĕншĕн тесен вĕсем тĕл пулакан çурт подвалĕнче йĕке хӳресем тĕлĕнмелле йышлăн пурăнаççĕ. Выçăскерсем сана çывăрса кайнă-кайманах тĕп туса хума пултараççĕ. Çын вара, фашист пулсан та, пачах çывăрмасăр пурăнаймасть...

Н. Илпекĕнех "Карпатра" ятлă очерк пур. Ĕнтĕ виççĕмĕш кун Карпат тăвĕ тăрăх пыратпăр, тесе пуçлать вăл ăна. Унта вĕсем фашистсен ушкăнне тыткăна илнĕ. Нимĕçсем хăть ăçта — ту хушăкне-и е унти чулсен купи хыçне пытанаççĕ — пур çĕрте те "паттăр" тăшмана шыраса тупаççĕ. Çавăнпа дивизи хаçачĕн редакторĕн кăмăлĕ уйрăмах çĕкленӳллĕ, ăшĕнче унăн хăйне майлă шухăш-монолог янăрать.

... Салтакăмсем, тесе пуçланать вăл. «Çакăн пек çулпа иртнĕ чух эпĕ вĕсене йĕрке тытса пыма та хистеместĕп, çапах вĕсем йĕркеллĕ пыраççĕ. Пăхатăп та вĕсем çине, мана иртнĕ кунсем аса килеççĕ. Мĕн кăна чăтса ирттермен пуль, епле çапăçусенче пулса куртăмăр пуль эпир пĕрле. Хĕрĕх пĕрмĕшĕнче чакса пынă чухнехи çапăçусем те тусанлă çулсем, тăварлă тар та юн кĕвелнĕ суран, инçетри госпитальсенчи салхуллă та пĕр евĕр иртекен кунсем, ыйхăсăр каçсем, уй варринчи йă-

лăхтармăш йĕпе-сапа, тăвăр окопсемпе траншейăсем тăрăх ши! те ши! уласа иртекен çил-тăман; аса илетĕп Сталинградри сакăр вун икĕ талăк хушши çĕрне-кунне хисеплемесĕр ирттернĕ манăçми çапăçусене те; çавăн хыççăн тин сывлăш çавăрса, хĕвел анăçнелле аслă çул хывса, Дон çеçен хирне тухрăмăр, Донбасс урлă каçрăмăр, пĕтĕм Украинăпа Молдави урлă иртсе чикке çитрĕмĕр, пĕр чарăнса тăмасăр малалла килтĕмĕр. Акă халь эпир ют çĕршывра, Румынире, таçта шала кĕрсе кайрăмăр. Халăх пур çĕрте те пĕр пек пулсассăн та, кунта ют çĕршыв çыннисем. Вĕсем мĕнле майлаштарса та йӳнеçтерсе пурăнаççĕ — эпир пĕлместпĕр. Тепĕр тесен, ĕç те çук пирĕн вĕсен çумĕнче, хамăра кăтартма килмен кунта эпир. Çавăнпа хамăр çине тинкерсе пăхакан куçсене — вĕсем тĕлĕнсе пăхаççĕ-и, хапсăнса-и, кураймасăр йышăнаççĕ-и пире, тăванла-и — пурпĕрех асăрхасах каймастпăр».

Писатель вăрçă çулĕсене хăйĕн очеркĕсенче час-часах аса илнĕшĕн вулакан умĕнче именмест. Мухтанмасть те вăрçăн вăрăм çулĕсемпе тусан çĕклесе утнăшăн. Чăн малтан вăл нумай халăхлă çĕршывăн салтакĕсен ятне Европа умĕнче чаплантарать, çӳлелле çĕклет, мăнаçлăхне ӳстерет, паттăрлăх уйрăмшарăн та, ушкăнпа та çуралса хăйне валли тивĕçлĕ вырăн йышăннине кăтартать. Вăрçă çулĕсенчи очерк пире йăлкăшса тăракан е ыттисенчен уйрăлса çуталма юратман геройсене йĕрки-йĕркипе сăнласа пачĕ, çынсен чĕрисенче "çĕнтерӳ çимĕçĕ" сарăлса çирĕпленнине уçса кăтартрĕ, гражданла курайманлăхпа гражданла юрату туйăмĕсене вăратрĕ. Вырăссен паллă писателĕсен Шолоховпа Эренбургăн, Фадеевпа Гроссманăн, Симоновпа Леоновăн тата ыттисен ячĕсемпе юнашар пĕр вăтанмасăр Хусанкайпа Ухсай, Агаковпа Петокки, Данилов-Чалдунпа Элкер, Алагерпа Талвир, Урдашпа Ржанов тата ытти нумай-нумай писательсен ячĕсене асăнмалла.

Çар очеркĕсенче кашни писатель пултарулăхĕн хăйне евĕрлĕхĕ питĕ курăмлăн та ĕненмелле палăрчĕ, публицистикăн тĕрлĕ жанрĕсем аталанса вăй илчĕç. Вун-вун писатель творчествинче илемлĕ публицистика

малти рете вăйланса тухрĕ.

Вăрçă çулĕсен очеркĕ хăйĕн аталану çулĕ çинче темиçе тапхăр витĕр ăнăçлăн утса тухса чи çӳллĕ шая çĕкленме пултарчĕ. Малтан, вăрçă пуçламăш кунĕсенче, пирĕн салтаксем чикĕ патĕнчен çĕршыв ăшне чакса пынă вăхăтра, публицист-писатель сăмахĕ çынсен чĕрисене тăшмана тапăнса пыма чарса хăватлă контрнаступленине куçма пĕрлештерчĕ. Унтан очерксенче фашизм пусмăрĕнчен ирĕкленнĕ Европа çĕршывĕсем курăнса кайрĕç. Очерк аталанăвĕн кашни тапхăрĕнчех унăн тĕп вырăнĕнче герой-паттăрсем пулчĕç. Çак пулăм фашистсем пирĕн çĕршыва вăрă-хурахла тапăннинчен пуçланчĕ те ун хыççăнхи очеркпа пĕтĕм литературăна йышăнчĕ. Вăрçă вăхăтĕнче, тĕпрен илсен, паттăрла портрет жанрĕ уйрăмах вăйлă аталанчĕ. Унăн тымарĕсем Граждан вăрçин вутлă çулăмĕсенче шăтса 30-мĕш çулсенче вăйланса çирĕпленчĕç. Фурманов халăха Чапаев сăнарне калăпласа кăтартрĕ те, легендарлă комдив, Чăваш çĕрĕ çинче çуралса ӳснĕскер, ĕмĕрлĕхе асне кĕрсе юлчĕ. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсенче очеркистсем, геройла сăнарсен ăстисем тăрăшнипе Зоя Космодемьянскаяпа çамрăк гвардеецсен, Александр Матросовпа Лиза Чайкинан, Клочков политрук ертсе пынă 28 панфиловец, Константин Заслонов ячĕсене пĕтĕм çĕршыв пĕлчĕ. Çак чаплă паттăрсем çинчен çырнă илемлĕ очерк-портретсем халăха таса нравственнăçпа тата пуян ăс-тăнпа анлăраххăн пуянлатма, çав хушăрах ун чухнехи литературăн идейипе илемлĕхне ӳстерме пулăшрĕç.

... Румынсен ялĕ.

Ту леш енче çапăçусем пынă вăхăтра çакăн пек ялсем тăрăх пайтах иртнĕ пулсан та, эпир вĕсене тĕсесех пăхман, тесе пĕлтерет очеркист-калуçă. Сахал пулнă-и унта ишĕлнĕ те çуннă çуртсем, ĕннĕ садсем, таптаннă пахчасемпе йăтăнса аннă картасем, хӳмесем. Ку тавраша вăрçă пулман, ялĕ çапах та туснă пек курăнать. Урамăн икĕ енĕпе тайлăк-тайлăк çуртсем ларса тухнă. Çак пӳртсене темле асамлă вăй-хăват çĕклесе пынă та, тăвалла васкаса иртнĕ чух, кăмăлне кайманнисене епле май килнĕ — çавăн пек алă вĕççĕн ларта-ларта пынă

тейĕн. Пӳртсем тавра хуралтă тавраш курăнмасть, сыпăк-сыпăкăн тытнă хӳмесем хăйсене уйрăм лараççĕ, умĕнчи хапхи çук, чӳречисем вара хăш-пĕр пӳрчĕн хăрах куçăн урамалла пăхса лараççĕ. Ялăн тепĕр хĕрринче хура мăрьесем курăнаççĕ, ахăртнех унта иртнĕ кунсенче пушар пулнă пулмалла. Сад тавраш сахал курăнать, çырма тăрăх çеç парка ашкăрнă йывăççем лараççĕ.

Тĕксĕм ял, тĕксĕм пурнăç... Шăпах çакăнта çитсе кĕреççĕ те ĕнтĕ виççĕмĕш кун Карпат тăвĕсем хушшипе иртсе пынă совет салтакĕсем. Маларах куртăмăр: ăçта Совет çарĕ çитет, унта сывлăш тасалать, ялсем тасалаççĕ, пурнăç çуталать. Н. Илпекĕн очеркĕнче совет салтакĕсем çӳллĕ тусем хушшинче ларакан тĕттĕм румын ялне епле улшăнусем, çĕнĕлĕхсем илсе çитернине юриех ерипен, нимĕн сиктерсе хăвармасăр тенĕ пек сăнаса тухар-ха.

— Хирте халь шăп кăна хĕрсе ĕç пымалли вăхăт, анчах кунта пĕр çын та курăнмасть. Ăçта-ши халăхĕ?..

Шофер хĕрнĕ мотора кăштах сивĕтесшĕн пулать, чарăнаççĕ салтаксем. Салтаксене курсан, мĕскĕн сăнлă старик лавне пăрахса тарать. Ватă румына пирĕннисем аран каялла тавăраççĕ. Пуян çĕр хуçисемпе влаçсем çынсене Совет çарĕн "тискерлĕхĕсемпе" хăратса пĕтернĕ иккен.

Старик сасси тинех янăравлăн илтĕнет, хутланса кĕнĕ хулĕсене сарарах тытать. Офицер сĕннĕ пируса илет, унтан ăна тĕрлĕ май çавăркалать те васкамасăр тивертсе ярать, унтан ăна, темиçе кун хушши туртман пек, тĕтĕмне кăлармасăр, çине-çине ĕмет.

Старик мăнукне, пĕр класс шкулта вĕренмен Елена, салтаксем çăкăр параççĕ. Хĕр ача, ырханкка аллине тăсса, çавăнтах чĕлле ярса тытать. Çав татăка пĕчĕк аллисемпе тĕрлĕ майлă çавăркаласа çурмаран хуçать, çуррине аслашшĕне парать. Старик те çăкăр татăкне илет, ăна вĕçертес мар тенĕ пек, хыттăн чăмăртать.

Вĕсем икĕ кун çăвара нимĕн те яман иккен. Новиков салтак старике хĕрлĕ питлĕ çемçе çăкăр çурăм хутаçинчен кăларса тыттарать. Старик пĕр кана юпа пек хытса тăрать, унтан унăн сăнĕ уçăлать, тинех ăна чун килсе кĕрет, тытнă çăкăрне кăкăрĕ çумне хĕссе пăчăртать.

Старик салтаксене хăйсем патне кĕме чĕнет: «Турă пулăр, кĕрĕр хамăр пата, господасем... Сирĕн ырă кăмăлăра манас çук... Хăна тума хамăрăн нимĕн те çук пулсан та, ырă сунса кĕрекене канăç кĕтесĕ те пулин тупăнĕ».

Хĕр ача пĕвĕпе пысăк мар, анчах сăнĕ пысăк çынăнни пек курăнать, куçĕсем путарах кĕнĕ. Шкула çӳремен. Амăшĕ вĕренткеленĕ пăртак: çырма пĕлет, кĕнеке вулакалать. Аслашшĕ каланă: «Укçа кирлĕ, — тенĕ, — килте пулăшакан кирлĕ, вĕрентейместĕп...»

Шел пĕчĕк хĕр ачана.

Старик чĕнсе кĕртнĕ килĕн пуян сад. Çурчĕ чаплă теме те пулать. Анчах хуçи старик мар имĕш. Пĕр пуян лавккаçă. Хăй вăл управляющийĕпе пĕрле хулара пурăнать, çуллахи вăхăтне кунта ирттерет. Халь ăçти паллă мар. Лавккисене сутнă, укçисене Швейцарине куçарнă, теççĕ. Хулара унăн икĕ пӳрт пулнă. Фронтри ĕçсем вĕсене майлă çаврăнманран, мĕн пур пурлăхне сутма васканă. Ялти çуртне те сутасшăн пулнă вăл. Халĕ таçта? Мурĕ пĕлет-и вăл ăçта кайнине... Тĕнче хĕррине, тата ăçта та пулин ăшă кĕтес шырама пулĕ.

— Пирĕн пекки тесен, тăван кĕтесрен лайăх çĕршыв çук та, — тет старик. — Çӳрет-ха кунта Раççейрен тахçан тухса килнĕ пĕр мĕскĕн Вершинеску.

Хушамачĕ румынла тата, тĕлĕнет пирĕн капитан. Вырăс тенипе мухтанать хăй, хисепсĕррĕн пĕлтерет старик.

— Эпĕ ĕмĕрех çакăнта пурăннă, хушса хурать унтан старик. — Тарçă кунта эпĕ. Эпĕ те тарçă, мăшăрăм та тарçă, ывăлăм та тарçă, йывăр тăпри çăмăл пултăр унăн. Кинĕм те, мăнукăм та çакăнтах тарçă пулать пуль.

«Кам вара эп сирĕншĕн, — тет старик. — Румын!.. Пирĕн çынсем сире хирĕç çапăçнă. Ман пек мĕскĕне эсир хамăра çилленнипе ним мар персе пăрахма пултаратăр. Шăлăма çыртса пырса тăтăм сирĕн умăра. Пытăм та — пире эсир çăкăр патăр! Çăкăр вăл выçă çынна кăна мар, туттине те таса чĕререн кун-çулпа туслăх сунтарать». Старик хăй те сисмест куçĕнчен вĕри куççуль шăпăртатса аннине.

Очеркист-калуçăна ватă румын вĕсен ялĕнче фашистла румынсен отрячĕ тискерленни çинчен пĕлтерет. Вĕсем Совет çарĕн салтакĕсем çинчен темĕн тĕрлĕ элек сараççĕ. Румын хресченĕсене вырăссене хирĕç тăратма пикенеççĕ. Вершинеску текенни те çав тискер отрядах хýтĕлет. Çавăнпа халăх, совет салтакĕсем килсе кĕрсе, пире чикме, пусма тытăнаççĕ тесе, пĕтĕмпе вăрмана та уй-хире тара-тара пытаннă.

Совет салтакĕсен таса чунĕсене, вĕсен ырă кăмăлне, ют халăха пулăшма ýркенменнине, вĕсем совет çыннин ятне фашистсене хăваласа чикĕ урлă каçсан та çýлте тытнине Ковалев лейтенант, Ибраевпа Агеев, Новиков тата ыттисен сăнарĕсем лайăх кăтартса параççĕ.

Тарса пытаннă румын хресченĕсем ерипен яла таврăнма тытăнаççĕ, Совет çарĕн салтакĕсен хисеплĕ ĕçĕсене курса вĕсемпе калаçма, канашлама, ăнланманни çинчен ыйта-ыйта пĕлме пуçлаççĕ, вĕсемех вăрă-хурахланса çýрекен, пирĕн çинчен элек саракан румынсен ушкăнне хупăрласа тытма, усал ĕçĕсемшĕн явап тыттарма, тискерлĕхĕсене тăрă шыв çине кăларма пулăшаççĕ.

Румын çарĕсем фашистла Германие хирĕç çапăçма тытăнасси çинчен пĕлтерни пирĕн салтаксене, румын халăхне те хавхалантарать. Вĕреннĕрех çын çапла калать: «Нимĕçсем пире, măшкăлласа каланă пек, союзниксем тетчĕç. Вĕсем чухне пирĕн халăх кăнтăр варринче те урама тухма хăраса тăнă. Кусем акă, Тухăçран килнисем, малтанхи кунхинех хăйсене хамăр çынсем пек чипер тыткаласçĕ. Тĕлĕнмелле!..»

...Татах Вершинеску курăнать. Вăл çара пуçăнах, тĕллĕн-тĕллĕн кăвакарнă çýçне пĕр айккинелле тураса янă, çăра кăвак мăйăхĕ усăнарах тăрать, куç айĕнче хăмпăлчăланнă пек тухса тăран пĕркеленчĕксем пур, тĕсĕ кайнă костюмпа хăй, шýреке сăмсаллă хура пушмакне мĕлке курăнса тăмалла çутатнă — вĕсен çинче хĕвел çути йăлкăшса тăрать. Ку румын мар иккенне çавăнтах тавçăрса илетĕн.

"Э-э, хамăр земляксем! Савнă çыннăмсем ... Телей те ырлăх сунатăп чап сарнă маттурсене! — тет вăл таса вырăс чĕлхипе, хăй савăнăçлăн кулкалать. Çавăнтах ве-

ранда çине çăмăллăн утса хăпарать. — Александр Петрович Вершков ... Паллашнă пулăпăр, — тет те вăл аллине тăсать".[72]

Ку хайхи Вершинеску господин иккен. Шурă эмигрант пулнă. Таçта та çитсе курнă вăл çирĕм пилĕк çул хушшинче. Румынирен Грецие, унтан Китая çитнĕ. Кайран Гонконг урлă — Аргентинăна. Çурçĕр Штатсенче, унтан Испанире, Францире пулнă. Халĕ акă миçе çул хушши Румынире пурăнкалать. Чăнах та, таçта-таçта та çитнĕ вăл, çапах та тăван çĕршыва çул тупайман. Çавна пула ятне те тĕрлĕ май улăштарса хăтланнă. Кунта вăл — Вершинеску, Польшăра — Вершковский, Америкăра — Веркофсен, Испанире — Александр Дон-Веркофф, Венгрире — Шандор Верешков ... Темĕн те курнă, тӳснĕ. Хăй чăваш иккен, тĕрĕсрех — чăваш пулнă, Чăнлă енчен, Чĕмпĕр патĕнчен. Совет салтакĕсем патне тăлмача вырнаçасшăн, анчах ун пекки пире кирлĕ мар, тесе пĕлтерет ăна очеркист-калуçă. Халăх салтаксемпе пĕрре курнăçсанах вĕсемпе пĕр чĕлхе тупать. Çапла... Ăçта çитнĕ унта çитсе кĕскетет ĕнтĕ вăл хăйĕн сумсăр кунĕсене. Тăван халăха, тăван чĕлхене сума суман çын — çын та мар. Румын старикĕ те çапларах шутлать.

Ют халăхăн ялĕнче, наступлени ерипенленнипе усă курса, вырăс каçĕ ирттерме шутлаççĕ. Унта Вершинеску Стенька Разин çинчен юрласа парать, анчах кĕввине вăл самай манни сисĕнет. Вара рояль умне хытканрах чăваш салтакĕ Васильев ларать. Вăл вăрçăччен музыка училищинче вĕреннĕ (тен, консерваторирех те пуль), анчах пĕтереймен, фашистсене хирĕç çапăçма тухса кайнă. Халĕ ак румын ялĕнчи пуян çын килĕнче (хуçи тухса тарнă) рояль умне ларать. Майĕпен-майĕпенех унăн кашни хĕлĕхĕ ушкăн сасăра хăй шайне виççе-тупса шăпах кирлĕ вăхăтра туртăнса чĕтренет те, вара пĕр сасă пин сасăпа пĕрле шăранса, пĕтĕм чĕрене çĕклентерекен музыка пулса тăрать; ĕнтĕ çакăнта пухăннă çынсем те пĕр пек сăнарлăн курăнаççĕ — пулма пултарать-им вара çакăн пек? — пурте пĕр пек сăнарлă та, кашни ырă кăмăллă, пирĕшти пек таса чĕреллĕ çынсем, хăйсем пурте пĕр пуçланă юрра юрлаççĕ

пек. Ёнтӗ лӑпкӑ пукансем те ташлаççӗ пек, чӳрече карӑмӗсем чӑштӑртатса чӗтренеççӗ те юрлама пулӑшнӑ пек илтӗнеççӗ, кантӑк витӗр пӑхакан лапсӑркка чечексем юрлаççӗ, ешӗл йывӑҫсен çулçи çупать, улми ташлать, пӗтӗм урам, пӗтӗм тавра, пӗтӗм çут тӗнче çак пуçланӑ çемме пӗр харӑссӑн та хӑюллӑн хутшӑнать. Çук, пӗр самантлӑха та ирттерсе ярас килмест çак вӑхӑта, ӑна ирттерсен каялла та тавӑраймӑн. Пӗртен-пӗр Васильев çеç, пӗтӗм чунӗпе хӗрсе кайнӑскер, çаплах пӗр чарӑнмасӑр калать.

Эпӗ ас тӑватӑп-ха, тет калуçӑ, виçӗм çулхине Сталинградшӑн çапӑçнӑ хыççӑн пирӗн боецсен концерчӗ пулчӗ, çавӑнта Васильев шӑпах халь калакан кӗвве каласа кӑтартрӗ. Вӑл унӑн çырса ӗлкӗреймен произведенийӗ. Çакна каланӑ чух унӑн пӗтӗм кӑмӑлӗ çӗкленсе каять. Тинех ӑна нимӗнле вак-тӗвек шухӑш та илӗртеймест, сӑхлантараймасть, хӑй çине мӑшӑр-мӑшӑр куçсем тинкерсе пӑхнине асӑрхамасть. Асӗнче пӗртен-пӗр хӑйӗн кун-çулӗ, хӑйӗн çамрӑклӑхӗ тӑрать. Васильев, рояль каланӑ май, чӳрече еннелле пӑхать. Кантӑк çинче анӑç хӗвелӗн йӑваш çути ылтӑнӑн ялкӑшса çӑвӑнать, çамрӑк музыкантӑн чи хӗрӳллӗ туйӑмне сӑваплӑн çупӑрлама юри пӳлӗме кӗрсе тӑнӑ пек вӑл, — çавӑн майлӑ вара кӑвак кӑвакарчӑн хӑйӗн вӑй илен чӗпписене вӗçме вӗрентнӗ чух çунат çапса саламлать, хӗтӗртсе тӑрать... Кашни çыннӑн хӑйӗн çамрӑклӑхӗ пур, вӑл нихçан та, никамӑн та пӗр пек мар, вӑл никамӑн та манӑçмасть. Хальхинче музыкӑра –- ӑна çыраканӗн çамрӑклӑхӗ. Унӑн çулне ют çынсем таптаса янратман, ал вӗççӗн сарса-якатса тухман, ытти çын утса çӳремен унпа; çулӗ унӑн юмахри тӗлӗнмелле тӗрӗсемпе шӑрçаланса сенкер тӳпе патнелле кармашать, вӑй хунӑн çамрӑклӑх çавӑнталла васкать. Сарпикесен йӑлтӑр куçӗсем ӑна вӑхӑтлӑха та пулин чарса тӑрасшӑн, чунтан-вартан тухакан чи ачаш та тӳрӗ сӑмахсем ӑна сума суса ӑстасшӑн, пӗр-пӗччен япшар чӗлхесем унӑн тивлетлӗ çулне пӳлтерес марччӗ тесе асран кайми шухӑшсем хускаттараççӗ, вӑл çаплах мӑнаçлӑн малалла иртет. Тӗле килнӗ ырӑ курнӑçусенчен, яшлӑхпа саламсен тав тӑвас тулли куркисенчен, шан-

таракан ӗмӗтсенчен малалла иртсе, ҫитес ҫӗре ҫитсе васканӑ пек, тусан варкӑштаракан ҫиле лӑплантарса, пӳлме хӑякан хушка хумсене сире-сире, пӗрмай ҫӳлелле те ҫӳлелле талпӑнать. Ӑна ҫул паракан уҫӑ саслӑ ача ачашланса юрла-юрла ӑсатать, тав-шуйлӑ ҫамрӑк чухнехи кунсем вут та хӗм витӗр кӗрсе тухаҫҫӗ, асапне тӗл пулсан — нӑйкӑшса тӑмасть вӑл, савӑнӑҫ ҫитсен — вӑхӑтсӑр хӗпӗртемест, ҫирӗп вӑй-хӑвачӗ ҫитеймесен хевтине те пулин пуҫтарса, ҫав ӗмӗтленнӗ таса ҫӗнтерӳ патнелле парӑнмасӑр та чарӑнмасӑр васкать; унтан хӑйӗн асне килнӗ тӗлӗнӳсем ун чӗрине кӑштах кӑтӑклантарса та йӑпатса хӑвараҫҫӗ, вара пире те лӑпкӑ юрӑ илтӗнекен пулать, тет автор-калуҫӑ. Кӑштах наянлантарать вӑл пире, тесе пӗлтерет вӑл малалла, анчах ҫавӑ та пулин пӗр самантлӑха ҫеҫ, тепӗр хут ҫӗкленсе хӑпариччен ҫеҫ. Каярахпа тинех ертсе пыракан пӗр сасӑ вӑй илнӗҫем вӑй илет, вӗҫне ҫитеспе тӗрлӗ май вариациленсе пӗр кӗвве пуҫтарӑнать, татах та вӗресе, тилӗрсе тенӗ пек, ҫӳле-ҫӳле ҫӗкленсе ҫитет, унтан лӑпланнӑҫем лӑпланать. Шӑпах. Пӗр илтнӗ кӗвӗ ҫеҫ шухӑшра ҫаплах асран кая пӗлми янӑраса тӑрать.

Минут хушши пуль — пӗри пӗр сӑмах чӗнмест. Васильев ҫеҫ хӑй ларнӑ ҫӗртен ҫӗкленсе, тар тапса тухнӑ ҫамкине тутӑрӗпе шӑлса илет, ӗнсине шӑлать, никам ҫине пӑхмасӑр тенӗ пек, аллисене сӑтӑркалать, вара тин хӑйне пӑхса тӑракансем еннелле ҫаврӑнать. Йышлӑнах пуҫтарӑннӑ иккен халӑх кунта! Паҫӑр ҫеҫ ултӑ-ҫичӗ ҫынран ытла марччӗ, халӗ темӗн чухлӗн: паллакан салтаксемпе командирсем, ял ҫыннисем пуҫтарӑннӑ, ваттисем, ачасем, яш-кӗрӗмсем ... Мухтаҫҫӗ вӑл каланине, тӗлӗнеҫҫӗ совет салтакӗ хӑйсем ирӗке кӑларнӑ халӑх умӗнче ҫавнашкал чаплӑ музыка каласа кӑтартнӑшӑн. Ӑна кам ҫырнине пӗлесшӗн.

Фантази, хамӑн ҫамрӑклӑх ҫинчен шухӑшлани, тет Васильев. Фашистсем ӑна вӗренсе пӗтерме паман. Васильевӑн, музыка инструментне хӑварса, алла пӑшал тытма тивнӗ. Ҫапах та унӑн пӳрнисем хытман-ха, хӑй кӗвӗленӗ музыка та тӑван халӑх чунне ҫеҫ мар, ют халӑх чӗрине те хускатма пултарать иккен. Хӗрӳ ҫапаҫусем хыҫҫӑн ҫак тусем хушшинче пӑртак канса, ҫӗнӗ наступ-

ление хускатса яма вăй пухрĕç вĕсем.

Çав хушăрах тĕттĕм румын ялĕнче хăйсем сисмесĕрех пысăк политика ĕçĕ туса ирттереççĕ. Тĕслĕхрен, типографи машинин шоферĕпе Шкурупипе мĕн пулса иртни. Бензин илме хулана кайнă шофер çул çинче, яла таврăннă чухне, çул хĕрринче пĕр хĕрарăм мĕкĕлтетсе выртнине курать. Чечеклĕ тутăрпа витĕннĕ хăй. «Мĕн пулчĕ?» — ыйтать Шкурупий — хĕрарăм чĕнмест: çав вăхăтра вăл тăнран кайнă-мĕн. Тинех тавçăрса илет шофер — румын хĕрарăмĕ ача çуратма аптăранă. Хĕрхенсе каять ăна: «Мĕнпе пулăшмалла, мĕн тума пултарăп», — тет Шкурупий. Вăл тухтăр мар, халиччен ача çураттарса курман, йĕркине пĕлмест. Ача çуралсанах кăвапине касмалла тенине çеç илтнĕ. Унсăрăн вăл, сывлаймасăр антăхса, вилсе кайма та пултарать имĕш. Хайхискер унта пăхать, кунта пăхать, — алли айĕнче пĕкĕ тавраш та çук. Чупса каять машина патне, унта самозарядка штыкĕ çеç. Юрамасть унпа. Пăхать те — саперсен кĕске кĕреçи выртa парать. Ăна алла илет — вăл та пулин тутăхнă, унпа кассан, пĕчĕкскере чир-чĕр ерттерме пулать, çамрăк пурнăç умĕнче айăпа кĕриччен, çĕре кĕрсе выртa ... Хĕрарăм çав вăхăтра йывăррăн йынăшса кăшкăрса ярать. Чупса пырать ун патне, тутăрне сирет — çуратнă иккен мĕскĕн. Шкурупий хăвăртрах тутăр çŭçине татса илет, кăвапине тытать. Вара Максим Горькин пĕр калавне аса илет те хăй те çавăн пек тăвать — шăлпа çыртса татать. Ачи тинех шари-и! кăшкăрса ярать. Вара Шкурупий тутăр çŭçипе кăвапине туртса çыхать... Пăхать, амăшне те кăштах чун кĕрет, сывлăшне ирĕкрех сывласа ярать, аптрамасть. Çапла... темĕн те тума тивет совет салтакĕн. Ача амăшне чиперех яла, унăн килне илсе çитерет. Кун пек ырă ĕçсем те Совет çарĕн сумлăхне Гитлер пусмăрĕнчен хăтарнă халăхсем хушшинче нумай ŭстереççĕ. Пăхса астăвайманнишĕн çеç ŭкĕнсе çŭрет Шкурупий: ачи ывăл-ши, хĕр-ши?.. Кайран румынсем савăнса пĕлтереççĕ: ывăл, питĕ чипер ывăл!

Пур халăха та вăрçăшăн айăплама çук, çакна румын ялĕнче аван ăнланаççĕ совет салтакĕсем. Акă ăçта вăл халăх! Румынсем кăмăллă та ырă, ăслă çынсем. Ха-

личчен вĕсене автор-калуçă пĕлнĕ пулсан та фронтра, çапăçу вăхăтĕнче хамăр енне куçса килнĕ румын салтакĕсемпе кăшт калаçкаланинчен çеç пĕлнĕ. Вĕсем ăна ун чухне те уçă .ˇмăллăн курăннă. Очеркист вĕсене хăш-пĕр писателĕсемпе композиторĕсем çырнă произведенисем тăрăх пĕлме тăрăшнă. Акă халь вĕсен хрестенĕсемпе пĕр сĕтел хушшинче пĕрне-пĕри танлăн тытса, чĕре патĕнчи сăмахсемпе калаçса лараççĕ те, вĕсем мĕнле маттур халăх иккенне ыттисем те тĕплĕрех чухла пуçлаççĕ. Мĕскĕнсем те мухтанчăксем мар вĕсем, таса чĕреллĕ çынсем. Вĕсем хăйсен тус-тăванĕсемпе юлташпĕлĕшĕсене чун хавалĕпе хисеплеме пĕлеççĕ, кансĕр вăхăтра хăйсен хутне кĕрекенсене тивĕçлипе хаклама пултараççĕ. Хальхинче, сăмахран, тав тумалли сăлтав — Шкурупий ача çуратма пулăшни çеç — вĕсем çапах та пурте савăнаççĕ, хĕпĕртеççĕ, совет водительне чунтан-вартан тав тăваççĕ...

Нумай халăха ирĕке кăларнă фашизм пусмăрĕнчен Совет çарĕ — грексене, албансене, венгрсене, чехсене, словаксене, словенсене, сербсене тата ыттисене те — вĕсем совет паттăрĕсене нихçан та манмĕç, ĕмĕр-ĕмĕр тав туса пурăнĕç. Чăваш салтакĕсем вара, Васильев композитор пеккисем, ытти халăхсен ывăлĕ-хĕрĕсемпе пĕрле Берлина çитсе хăйсем чаплă Çĕнтерӳшĕн ăс-тăнпа юлашки вăя та шеллеменни çинчен рейхстаг çине чăвашлах çырса хăварĕç.

Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçăра çĕр-çĕр пин чăваш салтакĕпе командирĕ пуçне хунă, чаплă Çĕнтерĕве паллă тумашкăн та Берлина çĕр-çĕр пин паттăр салтакпа командир çитнĕ.

[1] Чăваш писателĕсен архивĕ. 1941. – 5 п. 4№ протокол.
[2] Чăваш писателĕсен архивĕ. 1941. – 5 п. 5№ протокол.
[3] Ухсай Я. Вăрçă хирĕнче / Я. Ухсай. – Шупашкар, 1943. – 14 с.
[4] Чăваш коммуни. – 1942. – Февраль, 10.
[5] Толстой А. Кам вăл Гитлер тата вăл мĕн тăвасшăн? / А. Толстой. – Шупашкар, 1941. – 7 с.
[6] Чăваш коммуни. – 1941. – Декабрь, 8.
[7] Дедушкин Н. Чувашская литература периода Великой Отечественной войны / Н. Дедушкин. – Чебоксары, 1962. – С. 12.
[8] Çавăнтах. – 11–12 с.
[9] Чăваш коммуни. – 1941.– Июль, 8.
[10] Дедушкин Н. Чувашская литература периода Великой Отечественной войны / Н. Дедушкин. – Чебоксары, 1962. – С. 12.
[11] Çавăнтах. 11–12 с.
[12] Чăваш коммуни. – 1944. – Август, 20.
[13] Чăваш коммуни. – 1941. – Ноябрь, 20.
[14] Чăваш коммуни. – 1941. – Декабрь, 2.
[15] Чăваш коммуни. – 1941. – Ноябрь, 18.
[16] Çавăнтах.
[17] Дедушкин Н. Чувашская литература периода Великой Отечественной войны / Н. Дедушкин. – Чебоксары, 1962. – С. 13.
[18] Çавăнтах. – 14 с.
[19] Çавăнтах. – 17 с.
[20] Павленко П. Собрание сочинений / П. Павленко. – Т. 6. – М., 1955 .– С. 482.
[21] Тамарченко. Эпика // Теория литературы. – Т. 3. – М., 2003. – С. 229.
[22] Федин К. Сочинения / К. Федин. – М., 1954. – Т. 6. – С. 64.
[23] Алга А. Пурнăçпа вилĕм / А. Алга. – Шупашкар, 1966. – 5-6 с.
[24] Çавăнтах. – 6 с.
[25] Илпек Н. Вăрçă калавĕсем / Н. Илпек. – Шупашкар, 1985. – 48–49 с.
[26] Çавăнтах. – 51 с.
[27] Çавăнтах. – 60 с.
[28] Алга А. Пурнăçпа вилĕм / А. Алга. – Шупашкар, 1966. – 101с.

[29] Çавăнтах. – 98-99 с.
[30] Çавăнтах. – 100 с.
[31] Çавăнтах. – 107 с.
[32] Çавăнтах. – 108 с.
[33] Çавăнтах. – 111 с.
[34] Алга А. Малтанхи кун / А. Алга // Пурнăçпа вилĕм. – Шупашкар, 1966. – 41 с.
[35] Белинский В.Г. Собрание сочинений / В.Г. Белинский. – В 3 т. – М., 1948. – Т. 3. – С. 805.
[36] Чернышевский Н.Г. Избранные философские сочинения / Н.Г. Чернышевский. – М., 1949. – Т. 1. – С. 165.
[37] Горький М. Собрание сочинений / М. Горький. – В 30 т. – М., 1933. – Т. 27. – С. 468.
[38] Келлерман В. Новый русский человек / В. Келлерман // Ленинградский альманах. – 1937. – Июнь. – С. 244.
[39] Дедушкин Н.С. Чувашская литература периода Великой Отечественной войны / Н.С. Дедушкин. – Чебоксары, 1962. – С. 19.
[40] Çавăнтах. – 19 с.
[41] Защитник Родины. – 1943. – Октябрь, 23.
[42] Ситта Ф. Паттăр салтак / Ф. Ситта // Илемлĕ литература. – 1944. – 17 №. – 37—40 с.
[43] Çавăнтах.
[44] Бусыров А. Писатель-воин / А. Бусыров // Ялав. – 1949. – 2 №.
[45] Элкер С. Вăл вилĕмсĕр / С. Элкер // Тăван Атăл. – 1944.
[46] Эльгер С. Поэма о патриоте / С. Эльгер // Сов. Чувашия. – 1946. – Август, 25.
[47] Агаков Л. Чаплă поэма / Л. Агаков // Ялав. – 2№. – 1945. – 47 с.
[48] Хусанкай П. Тăван çĕршыв / П. Хусанкай // Хĕрлĕ ялав. – 1941. – Ноябрь, 2.
[49] Красноармейская газета «Сталинец». – 1943. – Сентябрь, 2.
[50] Илпек Н. Юлташ тăпри / Н. Илпек // Вăрçă калавĕсем. – Шупашкар, 1985. – 62 с.
[51] Ржанов В. Своими глазами / В. Ржанов. – Чебоксары, 1970. – С. 6.
[52] Çавăнтах. – 8 с.
[53] Çавăнтах. – 10 с.
[54] Çавăнтах. – 269 с.
[55] Çавăнтах. – 49 с.

[56] Çавăнтах. – 52 с.
[57] Чăваш коммуни. – 1943. – Июнь, 30.
[58] Чăваш коммуни. – 1943. – Июль, 7.
[59] Сироткин М. Очерк истории чувашской советской литературы / М. Сироткин. – Чебоксары, 1956. – С. 2—3.
[60] Илпек Н. Шипка таврашĕнче / Н. Илпек // Вăрçă калавĕсем. – Шупашкар, 1985. – 85—86 с.
[61] Френкель М. Чăваш çăкăрĕ / М. Френкель // Ялав. – 1950. – 12№. – 23 с.
[62] Алга А. Пурнăçпа вилĕм / А. Алга. – Шупашкар, 1966. – 138—139 с.
[63] Çавăнтах. – 145 с.
[64] Çавăнтах. – 205 с.
[65] Çавăнтах. – 119 с.
[66] Çавăнтах. – 121 с.
[67] Çавăнтах. – 123 с.
[68] Çавăнтах. – 237 с.
[69] Çавăнтах. – 238 с.
[70] Илпек Н. Вăрçă калавĕсем / Н. Илпек. – Шупашкар, 1985.
[71] Çавăнтах. – 136-137 с.
[72] Çавăнтах. – 236 с.

Виҫҫĕмĕш пайĕ

ТЫЛРА ТА ФРОНТРИ ПЕКЕХ ХĔРӲЛЛĔ

Фронтра чăваш халăх ывăлĕсем ытти халăхсен ывăлĕсемпе пĕрле паттăрăн çапăçнă пулсан, тылра фронтри пекех пурнăç хĕрӳллĕн вĕресе тăнă: вăрă-хурахла килсе тапăннă тискер фашистсемпе çапăçма тухса кайнă арçынсен (хĕрсемпе хĕрарăмсем те сахал мар пулнă вĕсемпе пĕрле) ĕç вырăнне хĕрарăмсемпе ватă çынсем, ачасем йышăнаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи илемлĕ публицистикăн произведнийĕсен шутĕнче «Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çыру» пулнине çӳлерех палăртнăччĕ ĕнтĕ.

«Чăваш халăхĕн ывăлĕ, васка! Пирĕн Тăван çĕршыври ытти халăхсен мухтавлă ывăлĕсемпе — Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе пĕрле пулса, хамăрăн çĕре тăшманран хăвăртрах тасат! Çапăçу хирĕнче Улăп-паттăр пул! Санпа юнашар алла-аллăн тăрса вырăс, украинец, белорус, грузин, тутар тата пирĕн тăван çĕршыври ытти халăхсен воинĕсем çапăçăва кĕреççĕ. Сан чĕрӳнте пирĕн паттăр ентешĕн Василий Иванович Чапаевăн хăвачĕ сӳнме пĕлмесĕр çунса тăрать. Санăн юнунта — аслă Атăл хăвачĕ.

Герой пул, чăваш халăхĕн ывăлĕ! Тăшмана çапса аркат! Киле çĕнтерӳпе таврăн, кунта сана пĕтĕм халăх чунчĕререн юратса кĕтсе тăрать!».[1]

Çырури çак сăмахсене тылра юлнă хĕрарăмсемпе ватăсене, ĕçе кӳлĕннĕ ачасене те калама пулать. Чăваш писателĕсем çакна лайăх ăнланнă, тылра та пурнăçпа ĕççем фронтри пекех хĕрӳллĕ пулни çинчен «Чăваш коммунипе» «Красная Чувашия» хаçатсенче, «Илемлĕ литература» альманахра, чăваш патшалăх кĕнеке изда-

тельствинче илемлĕ очерксем, тĕрленчĕксем пичетлесе кăларнă. Куçма Пайраш, вăрçă çулĕсенче Хĕвел тухăçĕнчи Иккĕмĕш фронт чаçĕсенче хирургра ĕçленĕ май, ытларах медицина ĕçченĕсем çинчен очерксем çырать: «Катерина Ларина», «Тĕл пулу» тата ыттисем. Çав хушăрах унăн тылри хастарлă ĕçченсем çинчен хайланă «Пуçламăшĕ», «Тăван ял» очеркĕсем те пысăк пĕлтерĕшлĕ. Пайраш хăйĕн очеркĕсене час-часах геройсен портречĕсене çырса кăтартнинчен пуçлать, унтан вара эпир вĕсен шухăш-кăмăлне, хуйхи-суйхине, савăнăçне пĕлсе çитетпĕр те пĕтĕмпех çав сăнарсен «тĕнчинче» пурăнма тытăнатпăр».[2]

Хветĕр Уяр «Шурлăхри вилĕм» (1942), «Тăвансем кĕтеççĕ», «Сунарçă» (1943), «Сук хĕрринче» (1944) очеркĕсенче фронтри кĕрешӳпе тылри пурнăçăн ӳкерчĕкĕсене ăста художник куçĕпе курса ӳкерсе кăтартать. Тĕслĕхрен, «Шурлăхри вилĕм» — чăн-чăн сатирăллă очерк. Унта Совет çарĕн салтакĕн тумне тăхăнса кăмăлне тултарнă нимĕç парашютисчĕ çăмăл приключени шыраса Совет çарĕсен тылне анса ларнине сатира меслечĕсемпе усă курса сăнласа панă.

Ăна часах кĕреçе сухаллă вырăс çыннисем ун умне сенĕксем çĕклесе сиксе тухассăн туйăннă. Шульц шучĕпе (нимĕçе çапла чĕннĕ), вăхăт нумай та иртмест, вăл сенĕклĕ стариксемпе хăюллăн тытăçса кĕрешсе илет те çав кĕреçе сухаллă ватăсене çăмăллăнах çĕнтерет, ун хыççăн малтанхи çитĕнӳпе кăмăлне çĕкленĕскер хăйĕн заданине пурнăçлама малалла çул тытать. Кайран вара ĕмĕтре — килти савăнăçлă тĕл пулу, тăванĕсене халиччен курман экзотикăлла çĕршыври темĕн тĕрлĕ тĕлĕнтермĕшсем çинчен каласа панисем...

Çапларах шухăшланă фашистсем пирĕн Тăван çĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăннă вăхăтра. Анчах совет халăхĕ тискер фашистсенчен хăраса ӳкмерĕ, тăшмана хаяр кĕрешӳсенче çĕнтере-çĕнтере унăн вăйне чакарнăçемĕн чакарса пычĕ, юлашкинчен ăна каялла çавăрса Берлина çитичченех, рейхстаг çинче Çĕнтерӳ ялавĕ мăнаçлăн вĕлкĕшме пуçличченех хăваларĕ. Пирĕн тыла парашютпа сикнĕ Шульцпа та çаплах пулса иртет.

Вăл вăрманта ирхи апат çиет те малалла кайма тапранать, темиçе çĕрте вăрмана вут чĕртме хăтланса пăхать. Тискертен те тискер ĕç тăвать — пĕчĕкçĕ хĕр ачана пăвса вĕлерет. Фашист парашютисчĕ хăйне ют çĕрте, пĕччен пулсан та, хуçа пек тытма хăтланать, çапах та чĕри лăпкă мар унăн, чунĕ, тен, хăйĕнчен те вăрттăн пăлханать, хăравçă туйăмсем хупăрлаççĕ ăна, çавăнпа хăй шурлăха путса виличчен хăйне хыçалтан лăпкă та вăйлă старик йĕрлесе пынине асăрхать. Çав старикĕн сăнарĕпе автор вăрçа мĕн çĕнтерӳпе вĕçличченех тăшманпа çапăçма хатĕр совет халăхне ытарлă сăнарласа панă.

Хветĕр Уяр — геройсен шухăш-кăмăлĕпе туйăмĕсене ытлашши сăмахсăр уçса пама пĕлекен художник. Унăн очеркĕсенче персонажсем нумай калаçмаççĕ, вĕсен туйăмĕсем сăнран, хусканусенчен е тата пĕр сăмах шарламасăр та лайăх палăраççĕ. Тĕслĕхрен, акă, «Шурлăхри вилĕм» очеркри старик, Шульцпа пачах калаçмасть пулин те, унăн шухăшĕ вулаканшăн уççăнах палла пулса тăрать».[3]

Сатирăллă очерксем çинчен сăмах хускатнă май, Иван Мучи очеркĕсене асăнмасăр иртме çук. Вăл пысăк ăсталăхпа çырнă очерксем шутне «Салтыков-Щедрин тата Вильгельм Эльман», «Элек ăстисем», «Ырă старик», «Итем çинче», «Ыран», «Фотограф» тата ыттисем те кĕреççĕ. «Салтыков Щедрин тата Вильгельм Эльман» очеркра фашистла режима, Гитлер офицерĕсемпе салтакĕсен тискерлĕхĕпе ăссăрлăхне, культурăсăрлăхне çивĕччĕн питленĕ. Эльман ефрейтор салтаксен сумкинче М.Е. Салтыков-Щедрин кĕнекисене тупать, салтаксем çав кĕнекесене пуçелĕк вырăнне усă кураççĕ. Аслă вырăс писательне пĕлмен Эльман унăн произведенийĕсене вулать, çав хайлавсенче писатель пруссаксен тискерлĕхĕпе тĕттĕмлĕхне критикленĕ пулнă. Эльман Салтыков-Щедрин хальхи вăхăтри Германипе унăн фюрерне лайăх пĕлнĕшĕн тĕлĕнет. «Сиенлĕ» литературăна вуланăшăн салтаксене явап тыттарма хатĕрленет çеç вăл, — ăна аллинчи кĕнекепе рота командирĕ асăрхать. Тепĕр виçĕ кун иртсен Европăри «çĕнĕ йĕркене» сивлекен кĕнеке-

сем вуланăшăн Эльман ефрейтора суд çакса вĕлерме йышăнать.

«Элек саракансем» сатирăллă очеркра вăрçă вăхăтĕнче гитлерла пичет пирĕн çĕршыв çинчен тĕрлĕ элексемпе суя хыпарсем сарнине хытă сивленĕ. Акă, «Фелькишер беобахтер» хаçат. Унăн сотрудникĕсен аллинче Мускав картти. Унта вĕсем: «Кузнецк кĕперĕ», — тесе вулаççĕ те çапла çыраççĕ: «Ĕнер пирĕн самолетсен ушкăнĕ Кузнецк кĕперĕ çине бомбăсем пăрахнă та, юхан шыв тăрăх вилесем нумай юхнă». Мускав картти çинче Большевиксен урамне тата Дьяконовсен тăкăрлăкне тупаççĕ. Çакăн хыççăн çĕнĕ элек çуралать: «Урамра тата тăкăрлăкра пурăнакансем хушшинче хĕç-пăшаллă харкашу пулса иртнĕ, тавлашура большевиксене нумай вĕлернĕ». Инвалидсен урамĕ пур, ун çинчен те заметка хатĕрлеççĕ: «Халĕ ку урамра никам та пурăнмасть. Пур инвалидсене те самолетсемпе фронта пире хирĕç çапăçма лартса янă...» Элекпе суя машини çинчен калакан очерк сывлăш тревоги янăраса кайнипе вĕçленет: «Совет самолечĕсем Берлин çине бомбăсем пăрахаççĕ. Хăвăртрах бомбоубежищĕне васкăр!»

Иван Мучи совет тылĕнчи обществăпа килти пурнăçри çитменлĕхсене питлекен сатирăллă тата кулăшла очерксем те çырнă. «Ыран» очеркра вăл, сăмахран, хăйĕн тата общество ĕçĕсене ырана хăваракан, хăй мĕн тумаллине вăхăтра пурнăçлайман çынран кулать. Хут листи çине çавăн пек çын ыран мĕн тумаллине яланах питĕ тĕплĕ çырса хурать, анчах та «ыран» çитет те, пĕтĕмпех нимĕн улшăнмасăр юлать.

Тепĕр пысăках мар очеркра («Фотограф» ятлă вăл) тылри пĕр учрежденин вырăнти комитечĕ фронтовиксен çемйисене пулăшас тĕллевпе ятарлă фонд тума выр-сарни кун ĕçлени çинчен каласа панă. Вырăнти комитет членĕсенчен пĕри витрина çинче ĕçченсене тата юлхавсене кăтартас тĕллевпе воскреснике ӳкерсе илме хавхалансах килĕшет. Çак активист палăртнă вăхăтра ĕç вырăнне çитет те меллĕ вырăн йышăнать, воскреснике хутшăнакансене кĕтме пуçлать. Кĕтет, кĕтет — никам та килмест. Кайран пĕлет: çынсем воскреснике палăртнă

вăхăтринчен чылай малтан килнĕ те пурте хастарлăн ĕçленĕ, хушнă ĕçе туса пĕтернĕ те килĕсене саланнă. Шухăшласа пăхăр-ха, витринăна кам сăн ӳкерчĕкне çакмалла? Камран кулмалла?

Çынсен çакнашкал сиенлĕ енĕсене питлесе, писатель пурнăçа активлăн хутшăнать, кахалсемпе, сӳпĕлтисемпе, общество ĕçĕсене ăнăçлă пурнăçлама чăрмантаракансемпе кĕрешет.

Иван Мучи очеркĕсен чĕлхи çивĕч, вăл метафорăсемпе, танлаштарусемпе, литотăсемпе, гиперболăсемпе пуян. Тĕрлĕрен синтаксис эрешĕсем те унăн чĕлхине илĕртӳлĕх кĕртеççĕ. Хăш-пĕр очерксен композицийĕсене çĕнĕлле йĕркелеççĕ авторсем. Тĕслĕхрен, Хветĕр Уяр. Вăл «Сук шывĕ хĕрринче» тата «Çыру» очерксенче Чехов тĕслĕхĕпе «калаври калав» меслетпе усă курать. Ку очерксен геройĕсен кăмăл-туйăмне лайăхрах уçса кăтартма май парать.

Пĕрремĕш очерк геройĕ Хветĕр салтак каннă вăхăтра юлташĕсене хăйĕн пĕрремĕш юратăвĕ, учительсен туслă коллективĕ, хăй вĕренӳ практики вăхăтĕнче пĕр çамрăк учительницăпа паллашни çинчен каласа парать. Кашни атака умĕн Хветĕр çав хĕр-учителĕн çепĕç те ачаш куçĕсене аса илет, çакă ăна тăшманпа кĕрешнĕ вăхăтра çĕнĕ вăй хушса пулăшать, хăюлăхне ӳстерет.

Чăваш колхозникĕсен ĕçри героизмĕ, тыл çирĕплĕхĕпе шанчăклăхĕ çинчен писатель «Çыру» очеркра интереслĕ отчет-хурав формипе пĕлтерет. Çыруне ял çыннисем хăйсен герой-ентешĕ кăтартнă паттăрла ĕçне ырласа, унăн савăннине палăртса çыраççĕ, çĕнĕ çитĕнӳсем туса фашистсене нумайрах пĕтерме çирĕп сывлăх сунаççĕ. Очеркра Хв. Уяр кулăшпа, чĕлхене илемлетекен сăнарлă сăмахсемпе питĕ пĕлсе усă курнă, çавăнпа ăна вулама та çăмăл, интереслĕ.[4] Тĕслĕх вырăнне очеркăн пĕр-икĕ сыпăкне илсе пăхар-ха. Радио пĕлтернĕ хыпара илтсен: «... пӳртри çынсем тĕлĕннипе пĕр вăхăта нимĕн те чĕнмерĕç, — тет писатель. — Тарас Ивановичăн чĕлĕмĕ шăкăрт туса урайне ӳкрĕ. Кулине мăнакка васкаса кутник çине кайса ларчĕ.

— Тур çырлахах! — терĕ те вăл, сывлăшĕ питĕрĕнсе

ларнипе шăппăн, йĕри-тавралла пăхкаласа илчĕ. — Ара, ку тăлăх Иван вĕт? Эрхип кум, Тарас мучи, итлĕр-ха, кăна Иван çинчен каларĕç вĕт?..

Тарас Иванович урайĕнчен чĕлĕмне илчĕ те сĕтел хушшине пырса ларчĕ... Унăн та, Кулине мăнаканни пек, аллисем чĕтреççĕ, çаварĕнчи чĕлĕмĕ тăтăшах тĕтĕм кăларать.

Тарас Ивановича кура Кулине мăнакка та кăштах лăпланчĕ:

— Чăнах-ши ку? Çав тăлăх Иванах Герой пулнăши?..

— Молодец! — терĕ халиччен сăмах чĕнмесĕр тăнă Эрхип мучи те. — Хамăр ял ятне ямарĕ иккен.

— Пĕчĕккĕ чухнех питĕ пултаратчĕ те...

— Çыру ярас мар-и ун патне? — терĕ Тарас Иванович.

— Çыраканĕ çук-ха...

— Чухлаканччĕ-çке эпĕ кăштах...»

... Пĕр сехет иртсен, Тарас Иванович çамки çинчи тарне шăлса илчĕ те кăранташ таткин вĕçне чĕлхипе йĕпетсе, малалла çырма тытăнчĕ.

«... Петр тухтăра тухрĕ. Хĕлип ывăлĕсем виççĕшĕ те салтакра. Раман арăмĕн ĕни икĕ пăру туса пачĕ. Тата хамăр колхоз вăйĕпех икĕ ятташлă шкул туса лартрăмăр»...

Çутăличчен ларнă вĕсем, анчах ялти хыпарсене çуррине те çырайман. Çавăнпа та, çырăвĕ ытла вăрăм ан пултăр тесе, цифрăсемпе çырма тытăннă.

«Ирхи апат тĕлнелле тин Тарас Иванович пысăк хут тĕркемĕ çине «Действующи Çар, И.Т. Сироткин Героя» тесе çырса хучĕ те районаллах тухса утрĕ».[5]

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи çапăçу хирĕсемпе тылри анлă уйсене уйăрма çук. Вĕсем пĕрпĕринпе пĕр организм пек пĕрлешсе ĕçлемен пулсан, халăх тăшмана çĕнтереймен те пулĕччĕ. Аслă Çĕнтерӳ фронтра та, тылра та пĕр пекех туптаннă. Çав Çĕнтерӳре хĕрарăмсен тӳпи калама çук пысăк. Фронтра арçынсемпе юнашар улт çĕр пин хĕрарăм фашистсене хирĕç кĕрешнĕ. Ашшĕсемпе упăшкисем, пиччĕшĕсемпе

шăллĕсем вăрçа тухса кайсан вĕсен вырăнне станоксемпе домна кăмакисем умне хĕрарăмсем тăнă, ялсенче вĕсемех тракторсем çине куçса ларнă. Хĕрсемпе ачаллă хĕрарăмсем çĕнĕ заводсем тунă, пăравуссен машинисчĕсем вырăнне йышăннă.

1941 çулта, ноябрь уйăхĕнче, фашистсем Мускава çавăрса илессишĕн пынă хаяр çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн республикăра Хĕрлĕ Çар валли хăватлă техника тума укçа-тенкĕ пухма тытăнаççĕ. Çак пархатарлă ĕçе республикăн кашни ĕç çыннийĕ хутшăнать. Вĕсем оборона фондне укçа-тенкĕ, патшалăх заемĕн облигацийĕсем, хаклă та илемлĕ япаласем хывнă. «Большевик» промысла артель çамрăкĕсем «Комсомол Чувашии» бронепоезд тума укçа-тенкĕ пухма чĕнсе калаççĕ. Кĕске вăхăтрах пĕр миллион тенкĕ ытла пухăннă, тесе пĕлтерет Степан Аслан «Чăваш бронепоесчĕ фронта çул тытать» очеркра.[6]

Ăна Канашри вагонсем юсакан заводра тума йышăнаççĕ. Унччен боеприпассем тăвассине йĕркеленĕ пулнă, унтан фронтран килекен «Т-34» танксем юсама тытăнаççĕ. Бронепоезд тунă çĕре завод хăй те 200 пин тенкĕ ытла парать. Анчах бронепоездне мĕнле тумалла-ха? Уйрăмах броня çукки чăрмантарать. Ăçтан тупмалла ăна? Завод дирекцийĕ 14-мĕш цех начальникĕн çумне В. Ямпольскине Томск мателлурги заводне, Уласовец инспектора Свердловскри «Уралмашзавода» ярать. Çĕршывшăн чи хĕрÿ вăхăтра çак задание пурнăçлама та çăмăл пулман, çапах та икĕ эрнеренех Канаша Свердловскпа Томскран паха броня килме пуçлать. 1942 çулхи март уйăхĕнче «Комсомол Чувашии» бронепоезда срокпа палăртнинчен малтан туса пĕтереççĕ. Унăн командирне Н. Шильникова, Ф. Логинова — комсорга лартаççĕ. Экипаж составĕнче пурте тенĕ пекех чăваш çамрăкĕсем. Писатель вĕсем фронта кайма мĕнле хатĕрленнине, çар ĕçне фронтран бронепоезда илме ятарласа килнĕ боецсенчен тăрăшса вĕреннине çырса кăтартатать. «Хăвăртрах фронта çитсе тăшманпа çапăçма тытăнасчĕ, — тет Иван Васильев комсомолец. — Пĕтĕм бронепоезд экипажĕ çапла шутлать».[7]

1943 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче республика ĕç çыннийĕсен укçи-тенкипе тунă иккĕмĕш бронепоезд (ăна «За Родину» ят параççĕ) Канашран фронта васкать. Унăн командирĕ Н. Буранбаев аса илнĕ тăрăх, ку бронепоезда малтанхинчен вăйлăрах, хăватлăрах тунă. Вăл фашистсене Курск, Сталинград, Кенигсберг патĕнче пысăк çухатусем тӳстерет. Малтанхи ăнăçлă опытпа хавхаланса, заводра бронепоездсемпе бронетранспортерсем тăвакан ятарлă комплекс йĕркелеççĕ. Деталĕсене пурне те Канаш завочĕн цехĕсенчех хатĕрлеççĕ. Кунтах чăваш ялĕсенчен килнĕ пуçаруллă çĕнĕ кадрсем ӳсеççĕ, ĕç тухăçлăхне ӳстерме сĕнӳ хыççăн сĕнӳ параççĕ. «Эпĕ броньăна кислород пулăшнипе касассине çĕнетес енĕпе кашни кун, кашни каç шутлаттăм, — ăнлантарать чĕкеç шатриллĕ питлĕ, кăвак таса куçлă Олег Алтунин электросварщик, — мĕншĕн тесен кислород сахалтарахчĕ, юлашкинчен çĕнĕ меслет тупрăм-тупрăмах, вара броньăна электрод пулăшнипе касма тытăнтăмăр. Ĕç тухăçлăхĕ те икĕ-виçĕ хут ӳсрĕ».

1943 çулта «Чăваш коммунин» октябрь уйăхĕнчи пĕр номерĕнче С. Элкерĕн «Ăçта эпĕ, мĕн пулнă манпа?» очеркĕ пичетленет. Унта писатель заводсенче ĕçлекенсене йывăр пулнине, çапах та вĕсем нормăна темиçе хут ирттерсе тултарнине, Тăван çĕршыв çĕнтерĕвĕшĕн цехран тухмасăр, киле каймасăр ĕçленине сăнласа парать. Хăш-пĕр пулăмсене хальхи вăхăтра ĕненме те йывăр, анчах писатель сăнарсене пуçран шутласа кăларман, пурнăçри çынсене, ĕçсене, типласа çырнă. Унăн очеркĕнче çакăн пек ĕç пулса иртнине ӳкерсе кăтартнă.

Пĕррехинче кăнтăр кунĕнчех станок умĕнче ĕçлекен хĕрарăм тăнне çухатса урайне тĕшĕрĕлсе анать. Çав самантрах ун патне цех начальникĕ чупса пырать, рабочисем пулăшнипе ăна тула, уçă сывлăша çĕклесе тухаççĕ, симĕс курăк çине выртгараççĕ. Кăшт вăхăт иртсенех вăл куçне уçать те йĕри-тавралла тĕлĕнсе пăхать, тĕлĕнсе ыйтать: «Ăçта эпĕ, мĕн пулнă манпа?» Унтан, кăштах тăна кĕрсен, тăрса ларать: сăнĕ шап-шурă, юн тумламĕ юлман евĕрлех. Ăна медпункта пулăшу ыйтма кайма сĕнеççĕ, паян ĕçлемесен те пултаратăн, теççĕ. Вăл

вара ерипен тăрать те çи-пуçне йĕркелет, пĕр сăмах каламасăр хăйĕн станокĕ патне утать. Вăл Дарницăран эвакуаци йĕркипе килнĕ пулнă, тăвăр хваттерте хĕр ачипе пурăннă, фронтри упăшкинчен тахçантанпах хут илмен. Вăйĕ те пĕтсе килнĕ унăн, чунĕ те тăвăнса çитнĕ, чăтайман вара...

Тепрехинче цех начальникĕ ир-ирех цех тăрăх пынă та курать: пĕр ача станок умĕнче вăр-варах ĕçлеймест. Патне пырать. Мĕн пулнă? Ача пуçне çĕклет, сăнĕ кăвакарса кайнă, пĕлтерес теменнине каласа ярать: «Анне ĕçрен питĕ кая юлса таврăнчĕ те ирхи апат пĕçерме ĕлкĕреймерĕ...» Ача ĕçе выçах пынă. Цех начальникĕн кĕсйинче хаçатпа чĕркенĕ бутерброд пулнă: çӳхе çăкăр чĕллипе çĕр улми котлечĕ. Кăларать те ăна парать... «Тав сире, — тесе хуравлать ача, — куншăн фашистсене çунтарма детальсене икĕ хут нумайрах тăватăп». Ячĕшĕн тенĕ пек интересленет цех начальникĕ смена вĕçĕнче. Хайхи çамрăк слесарь чăнах та хăйĕн сăмахне тытнă, кĕлетки çаплах станок умĕнче мĕлтлетет. Вăйпа тенĕ пекех килне хăваласа ярать ăна. Ыран та паянхинчен сахал мар ĕçлемелле, кантăр!

Цехра 120 мм минăсем туса кăларнă. Коллектива нормăна тултарса пыма çăмăл пулман, анчах ăна пурнăçламанни те нихçан та пулман. Çав хушăрах йывăрлăхсем те сахал мар чăтма тивнĕ. Тĕслĕхрен, çирĕп сплавлă инструментсем çителĕксĕрри аптăратнă. Заготовкăсене Новосибирскран илсе тăнă, вĕсене унта хурçăран хатĕрленĕ. Вĕсене якатма вăй та, вăхăт та нумай кайнă. Коллектив умне çĕнĕ задача лартаççĕ: йывăр лару-тăруран тухма май тупмалла, фронта кулленех боеприпассем нумайрах ăсатмалла. Рационализаторсем çĕнĕ меслет тупнă-тупнах: заготовкăсене Шупашкартах чугунран хатĕрлеме тытăннă.

Элкер очеркĕнче пĕр рабочи сăнарĕ уйрăмах асра юлать. Валя Фирсов ыттисенчен хыткан та лутра кĕлеткипе уйрăлса тăнă. Амăшĕ унăн цеха çӳп-çапран тасатса тăнă, Валя унпа пĕрле пĕчĕк пӳлĕмре пурăннă. Ашшĕ — фронтра. Унăн çăмăл та çаврăнăçуллă аллисем теменле автомат ĕçленĕ пек пилĕк тĕрлĕ операцие те

пĕрин хыççăн тепринe çав тери хăвăрт та тĕлĕнмелле тĕрĕс пурнăçласа пынă. Детальсем пурте пахалăхĕпе те, тĕрĕслĕхĕпе те, йышĕпе те (вăл кашни сменăрах нормăна икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарнă) ОТК специалисчĕсене, темĕн тĕрлĕ тĕрĕслесен те, яланах тивĕçтернĕ. Плана çапла пурнăçласа пынăшăн Валя Фирсова апат талонĕ хушса тыттарнă, унпа завод столовăйĕнче 100 грамм çăкăр тата пĕр турилкке шӳрпе ытларах панă.

Писатель очеркра ачасем мĕнле ĕçленине уйрăмах юратса çырать. Ашшĕсем вăрçăран çĕнтерӳпе тавăнасса çирĕп шаннă вĕсем, çавăнпа, вĕсемпе хăвăртрах тĕл пулса калаçас тесе, мĕн пултарнă таран хастарланса ĕçленĕ. «Тĕлĕкре те атте Çĕнтерӳпе тавăннине куратăп. Мана япăх ĕçлеме юрамасть, атте умĕнче пите хĕретес марччĕ», — тет Валя Фирсов.

«Пурте фронт валли, пурте çĕнтерӳшĕн!» — çак чĕнӳ мĕнле пурнăçланса пынине вулакансене пĕлтерсех тăма тăрăшнă фронтпа тыл хушшинчи татăлми çыхăну çинчен çыракан писательсем. Иван Мучи пысăках мар «Кăмăллă старик» (1944) очерк çырать. Унăн геройĕсем Захар Андреевичпа Сидор Иванч. Çамрăк çынсем мар вĕсем, утмăлтан иртнĕ. Гудок хыççăн, смена пĕтнине пăхмасăрах, завод цехне каялла тавăнаççĕ. Малтан Сидор Иванч станокне тимлĕн пăхса çаврăнать, пĕр тĕлте гайка пушаннине асăрхаса хытарать, унтан электричество кнопки çине пусать. Станок кĕрлеме те пуçлать, тимĕр çункавĕ кирлĕ çĕре тăкăнма тытăнать. Кашни деталĕ пирĕн завод кăларакан самолет çунаттисене çирĕпрех те çăмăлтарах тума май патăр. Çирĕп çунатлă совет самолечĕ фашист самолетĕнчен хăвăртрах вĕçет, сывлăшра пирĕн летчика хуçа пулма пулăшать, тесе шухăшлать Захар Андреевич, хăй çав хушăрах Сидор Иванч еннелле пăхса илет, вăл та станокне кĕрлеттерме тытăннăран чунĕ çĕкленет, асăрхама та ĕлкĕрет: вăр-вартарах тытать хăйне Сидор Иванч станок умĕнче, тимĕр çункавĕсем чугун валашкана унăн сахалтарах тата хăвăртрах тăкăнаççĕ. «Тимĕр перекетлет, нормăна манран нумайрах ирттерсе тултарасшăн, — вĕлтлетет унăн

пуҫĕнче кăштах кĕвĕҫӳллĕ шухăш. — Хамран малах ярас мар-ха, ку таранччен унран юлманнине паян юлатăпи?» Вăл куҫлăхне тӳрлетет, электроток юххине ӳстерет: ĕҫ тухăҫлăхĕ иккĕшин те пысăклансан, кама усă пулать? Паллах, завода. Завод паян ĕнерхинчен те лайăхрах ĕҫлесен тата кама? Паллах, фронта. Ăмăрту-и ку? Паллах, ăмăрту! Патриотсен ăмăртуллă ĕҫĕ. Вĕсен хастарлăхĕ, сăнарĕ — тылри пин-пин рабочи паттăрлăхĕ. Нимĕҫ фашисчĕсем пирĕн ҫĕршыва тапăннă чухне совет халăхĕ кĕрешĕве пĕр ҫын пек кар-р! тăрасса шутлама пултарнă-и? Ҫук, пултарайман. Европăн нумай ҫĕршывĕсем тăрăх оркестр маршĕпе ҫĕнтерӳллĕн утса тухнăскерсем, вĕсем Раççей ҫĕрĕ тăрăх та Урал таранах маршпа пуҫĕсене каҫартса утса ҫитме планланă, анчах кăна тума халиччен те тăшман пусмăрĕнче пурăнман, пурăнма та килĕшмен пĕчĕк кĕлеткеллĕ Валя Фирсов та, утмăлтан иртнĕ стариксем Захар Андреевичпа Сидор Иванч та хытă чăрмантарнă.

Амăшĕсен сăнарне чăвашсем ялан тенĕ пекех чи хаклă, чунĕсене ҫывăх чи илемлĕ те ҫепĕҫ юрăсенче упраса хăварма тăрăшнă. Авалтан пыракан ҫак ырă йăла пирĕн хальхи пурнăҫра та лайăх сисĕнет: юратнă амăшĕсене ҫуралнă кунĕсем ячĕпе ачисем пĕтĕм республика илтмелле Чăвашрадио е телевидени урлă саламлаççĕ, амăшĕсен вĕсене мĕн тери асаплă та тертлĕ пурнăҫпа пăхса ӳстерме тивнине кĕскен те пулин каласа пама тăрăшаççĕ. Ҫавăн пек ҫырусен авторĕсен хушшинче Раççей ҫарĕн аслă офицерĕсем, ученăйсем, директорсем, халăх хуҫалăхĕн паллă специалисчĕсем, учительсем, ĕҫре ыттисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăман ахаль ҫынсем. Вĕсемпе пĕрле Лев Пантелеймонович Кураков академике, И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн ректорне, асăнмасăр ниепле те хăварма ҫук. Ăна пурнăҫăн аслă ҫулĕ ҫине кăларма мĕнле кăна тăрăшман пулĕ унăн амăшĕ Татьяна Федоровна. Хаяр вăрҫă ҫулĕсенче вăл пĕртен-пĕр ачине ялти ытти ачаран кая мар вĕрентес, ыттисенчен ăпăх тумлантарас мар тесе выльăхчĕрлĕх ферминче ырми-канми ĕҫленĕ. Халĕ Татьяна Федоровна пирĕнпе пĕрле ҫук ĕнтĕ. Вăл ывăлĕ 25 пин

çынлă университет коллективне ăнăçлă ертсе пынăшăн чунран савăнатчĕ. Ахальтен мар ăна аслă шкул вĕрентĕвĕнчи çитĕнӳсемшĕн РФ Правительствин премине пачĕç, орденпа наградăларĕç, РФ Вĕрентӳ академийĕн чăн членне, Нью-Йорк академийĕн чăн членне суйларĕç. Амăшĕ ывăлĕн пĕр сумлă ĕçне уйрăмах питĕ ырлатчĕ: Лев Пантелеймонович хăйĕн вăйăпе тăван ялĕнче, Патăрьел районĕнчи Чăваш Ишекĕнче чаплă часавай туса лартрĕ-çке-ха. «Турра манмарăмăр, таса чунпа ун патне кĕрсе куратпăр, канашлатпăр, сĕнӳсем ыйтатпăр, — асăнатчĕ Татьяна Федоровна. — Пирĕн чĕресенче шанчăк çуратать вăл, вăй-хал хушать». Амăшĕпе пĕр шухăшлă пулнăран академик Канаш хулинчи инвалид ачасен сывлăхне çирĕплетме хăйĕн кĕнекисемшĕн илнĕ гонорартан 200 пин тенкĕ панă.

Чăваш хĕрарăмне чысласа лартнă палăк умĕнче Лев Пантелеймоновичпа амăшĕ Татьяна Федоровна пĕрле пулнăччĕ. Академик амăшне килĕшрĕ вăл, унтан тавăнсан, хавхаланнăскер (палăка унăн ячĕпе те лартнăçке-ха), çамрăклăхĕнчи юратнă юррине те аса илчĕ:

Çивĕч çава лайăх утă çулма,
Çинçе пӳçĕм лайăх та сулăнма.
Айван ăсăмпала шухăшлатăп:
Хамăр тăван лайăх та пурăнма.
Халь шурăччĕ çырланăн çеçкисем,
Сисмерĕмĕр çырлисем пиçнине.
Халь ачаччĕ эпир, халь ачаччĕ,
Сисмерĕмĕр çынна та çитнине.[8]

...Шупашкарта çуралса ӳснĕ Боголюбов генерал-полковник амăшĕпе Надежда Ивановнăпа 1970 çулта курса калаçни аса килет. 90 çулалла çывхарса пыратчĕ ун чухне вăл. Надежда Ивановна 1882 çулта çуралнă, 8 ачаран чи асли пулнă. Пурнăç йывăр пирки темиçе класс çеç пĕтернĕ. 17 çултах Çĕрпӳ районĕнчи Патăрьел çыннине Николай Боголюбова качча тухнă. Атăл пăрахучĕн машинистне пулăшаканĕнче ĕçлекенскер, вăл çамрăклах вилнĕ. Пĕрремĕш ывăлне, пулас генерала, Надежда Ивановна 18 çулта çуратнă. Ăна тата ун хыççăн çуралнă

Иванпа Бориса, Машăна лайăх пăхса ӳстерессишĕн темĕнле ĕçре те асапланма тивнĕ унăн. Аслă ывăлĕ Александр Шупашкарти пуçламăш аслă училищĕрен вĕренсе тухсан почтăпа телеграф кантурĕнче ĕçлет, 18 çулта хăй ирĕкĕпе çара каять. Çар курсĕнчен вĕренсе тухсан взвод, рота, батальон командирĕ пулать, малтан — Фрунзе ячĕллĕ академирен, 1936 çулта Генеральнăй штаб академийĕнчен вĕренсе тухать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçине арми штабĕн пуçлăхĕнче кĕтсе илет, унтан Генштабăн оперативлă управленийĕн пуçлăхне пулăшаканĕ пулса тăрать. 1943 çулта Боголюбов генерала — Пĕрремĕш Украина фрончĕн штаб пуçлăхне, 1944 çулта Иккĕмĕш Беларуç фрончĕн штаб пуçлăхне лартаççĕ. Аслă Çĕнтерӳ́ченех вăл фашизма хирĕç фронт командующийĕпе Конев маршалпа пĕрле çапăçать, Совет Союзĕн Геройĕн ятне тивĕçет. 1952 çулта Александр Николаевич амăшĕ 70 çул тултарнине палăртма тăван Шупашкара килме хатĕрленет, анчах яваплă ĕçсенчен ниепле те пушанма май килмест. Çавăнпа чаплă генерал амăшĕ Надежда Ивановна патне çавăн чухне янă çырăва илсе кăтартасшăн. Çырура паллă генерал хăйĕн амăшне чунран-вартан юратни, уншăн вăл темĕн тума та хатĕрри, амăшĕ уншăн чи таса, чи ырă кăмăллă çын шутланни курăнать: «Хаклă, тăванран та тăван аннеçĕм! Эсĕ 70 çул тултартăн. Сана, манăн чи юратнă аннене, çепĕççĕн ыталаса, хĕрӳ́ллĕн чуп тума тата нумай çул пурăнмашкăн çирĕп сывлăх сунма ирĕк парсам. Эпĕ, аннем, эсĕ вăрăм çул пурăнса ирттернĕшĕн питĕ ăмсанатăп. Анне, эпĕ сан пекех ĕçе юратма, сан пекех ыттисене ырă тăвассишĕн вăй хума, сан пекех чăтăмлă пулма, тăвансемшĕн сан пекех тăрăшма ĕмĕтленетĕп. Сан юбилейне пырайманшăн чунран ӳкĕнетĕп, çапах та паянхи кун эпĕ те шухăшсемпе те пулин санпа, тăвансемпе пĕрле сан уяв кĕрекине ларатăп. Анне, эпир, сан ачусем, пурте сан умра пысăк парăмра, пурте саншăн пăшăрханатпăр. Эсĕ халĕ те, анне, хăвăн ачусене питĕ кирлĕ».

Мухтавлă генерал сăмахĕсене ниепле те пăлханмасăр вулама çук: «Манăн аннеçĕм! — тет вăл. — Юрататăп

сана, ялан сан çинчен шухăшлатăп, мухтанатăп санпа. Анне! Чухăнлăха, пурнăç йывăрлăхĕсене парăнмасăр мĕн тери ĕçчен, ырă чунлă аннеçĕм пулнă эсĕ! Тата хыттăн ыталаса чуп тăватăп. Санăн ывăлу Александр».[9]

Надежда Ивановна 90 çула çитсе вилнĕ, генерал вара пирĕнтен ытла та ир уйрăлса кайрĕ — 56 çултах. Хаяр вăрçă асапĕсем ахальлĕн, сисĕнмесĕр иртмерĕç пулĕ çав. Иккĕшĕн те, амăшĕпе ывăлĕн сăнарĕсем ĕмĕр-ĕмĕрех пирĕн асра упранĕç.

Тылри паттăрлăх çинчен каласа панă чухне Етĕрне (халĕ Муркаш) районĕнчи Исетеркке ялĕнче мĕн вăрçă пуçланнăранпа вăл чаплă Çĕнтерӳпе вĕçленичченех колхозри тĕрлĕ ĕçре пуçа çĕклемесĕр вăй хунă Татьяна Николаевна тата Алексей Илларионович Николаева асăнмасăр май çук. 1944 çулта «Красная Чувашия» хаçатăн пĕр номерĕнче пичетленнĕ Яков Сигайăн очеркĕнче çапла çырнă:

«Çав çул, Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионович Хĕрлĕ Çартан тăватă ывăлĕ тавраналасса кĕтнĕ çул, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçланнă. Сăпайлă та ырă кăмăллă амăшĕ тата тăватă ывăлне вăрçа ăсатма хатĕрленнĕ. Чи аслă ывăлĕ Григорий ун чухне вăтăр çичĕ çул тултарнă. Ашшĕ-амăшĕн ăсату сăмахĕсем кĕске те çулăмлă пулнă:

— Ачамăрсем, пирĕн ята ан ярăр. Пурнăçри йывăр самантсенче пире, ватă çынсене, аса илĕр. Тăшмана курăпми пулма вĕренĕр. Эсир Исетеркке ялĕнчи ахаль колхозник ачисем мар, сирĕн аçу — ватă салтак. Вăл Буденнăйăн утлă çарĕ тунă çĕнтерӳсене лайăх пĕлет.

Эпир сире Тăван çĕршыва хӳтĕлеме ăсататпăр. Тен, сирĕнтен хăшĕ те пулин тăван кĕтесе те тавраймĕ, тăван çуртăн стенисене те курăпмĕ. Сире ăсатса ямашкăн пире питĕ йывăр. Эсир, акă, аçун шывлă куçне куратăр, аннӳн йывăр хуйхине туятăр, анчах Тăван çĕршыва сыхласси — чи пысăк тивĕç, — тенĕ Алексей Илларионович.

1941 çулта Алексеевсен çемйи пĕтĕм çĕршыв тăрăх саланса кайнă. Çав çулхине кăнтăрта та, çурçĕрте те, хĕвел анăçĕнче те Алексеевсене курма май пулнă. Са-

май пуянлатнă вĕсем Хĕрлĕ Çара. Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионовичăн тăватă ывăлĕ Мускава хŭтĕлеме хутшăннă. Григорий — артиллерист, Иван — авиатор, Александр, Родион тата Фрол — автомашина водителĕсем, Михаилпа Егор — пехотăн кĕçĕн командирĕсем, Павел пехотинец пулнă.

Алексей Илларионовичăн ывăлĕсем çырнă çырăвĕсем упранаççĕ. Вĕсем ашшĕ-амăшне манмаççĕ, çырусем вăхăтра çыраççĕ. Кашни çырăвĕ телейлĕ ашшĕ-амăшне савăнтарать, колхоз уй-хирĕнче пысăк çитĕнŭсем тума хавхалантарать...»

Малалла очеркра Алексеевсен ывăлĕ Григорий çырнă çырури йĕркесене илсе кăтартнă:

«Хаклă аннепе атте! Украина çĕрĕ çинче çапăçатпăр. Çырасса çапăçу хирĕнчен çыратăп. Хам умра нимĕç фашисчĕсен чуралăхĕнче пурăннă совет çыннисен куççульне куратăп. Çак Украинăри каçсенче эпĕ тĕрлĕ шухăшсемпе пуçа вататăп. Тăшман ишсе çĕмĕрнĕ çĕр тăрăх нумай утрăм эпĕ. Чăн та, пирĕн халăха пысăк инкек кŭчĕ вăл. Енчен те ăна Хĕрлĕ Çар Мускав патĕнче тытса чарман пулсан, унăн тискер те вăрăм аллине Сталинград патĕнче касса татман пулсан, тăшман пирĕн Чăваш çĕршывне те вут айне тăвĕччĕ, пысăк инкек кăтартĕччĕ».

Тепĕр темиçе кунтан Исетеркĕне Григорий Алексеева Совет Союзĕн Геройĕ ятне пани çинчен хыпар çитнĕ. Вăл çак хисеплĕ ята Днепр урлă каçса юхан шывăн сылтăм çыранĕнче плацдарм çирĕплетсе хăварнăшăн тивĕçнĕ. Анчах та тан мар çапăçура герой хăй те пуçне хунă.

Ун хыççăнах ял-йыш Егор Алексеевăн паттăрлăхĕ çинчен илтнĕ. Житомир хулишĕн пынă çапăçура тăшман пулемечĕ пирĕн подразделенисене малалла кайма чарса лартнă. Егор Алексеев вара, дзот патне шуса пырса, ăна хăйĕн ŭчĕпе хуплана.

Илларионовсем патне тĕрлĕ фронтсенчен боецсемпе командирсем çырусем çырса тăнă. Вĕсем унта пĕр тăван Алексеевсен паттăрла ĕçĕсемпе мухтанни çинчен çырса пĕлтернĕ, ашшĕпе амăшне çирĕп сывлăх суннă.

Татьяна Николаевнăпа Алексей Илларионович та хăйсен ĕçри паттăрлăхĕпе кая юлман. Ватлăха пăхмасăр колхозра ĕçленĕ, ялти общество ĕçĕсене хастарлă хутшăннă.

Пĕррехинче нихçан хирĕçмен, ялан мирлĕн те татуллăн пурăннă ватă мăшăр хушшинче ĕç пирки çакнашкал тавлашу та пулса иртнĕ. 1941 çулхи шартлама сивĕре Алексей Илларионович килне лаша кӳлнĕ çунапа пырса кĕнĕ те сасартăк çапла пĕлтернĕ:

— Татьян, çимелли пуçтар. Эрнелĕхе. Халех! Кĕтме пултараймастăп!

— Мĕн пулнă? Ăçта каятăн? Эсĕ, ват супнăскер, ăçта кирлĕ?

— Пĕтĕм халăх тенĕ пек Етĕрнене çул тытать. Унта, Сăр хĕрринче, тăшман ку енне çитсен, çав тĕлте Мускав еннелле куçса пыма чармашкăн оборона линийĕ тăваççĕ. Вара Хĕрлĕ Çара сакăр ывăл ăсатнă ашшĕ çавăн пек вăхăтра килте лăпкăн ларма пултарать-и? Çылăх пулать мана, Татьян, çакăн пек вăхăтра килте лăпланса ларсан. Ывăлсем Çĕнтерӳпе таврăнсан, мĕн тейĕпĕр вĕсене?

— Апла пулсан çеç.., — кăшт иккĕлене пуçлать Татьяна Николаевна.

— Çапла, Татьян... Сăр юхан шывĕн çыранĕ хĕррипе пулеметсем лартса вырнаçтарма ятарлă шăтăксем чаваççĕ, çирĕплетеççĕ. Кĕпер те хăвăртрах туса пĕтересшĕн ... Ман валли ĕç тупăнмасть-и вара? Тупăнать!

— Тупăнать, Элекçей, ăнлантăм. Анчах асту, асăрханарах çӳре унта, сыхăрах тыт хăвна.

Çак тĕлĕнмелле хастар та ĕçчен чăваш çемйи çинчен Антип Николаев писатель «Паттăрсен çемйи» кĕнекере илемлĕн çырса кăтартнă. Тăван халăх паттăрсене манмасть, ĕмĕр-ĕмĕрех чĕрере упрать. Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче чаплă Çĕнтерӳ тунăранпа вăтăр çул тултарас умĕн Муркаш район совечĕн ĕçтăвкомĕ йышăннă тăрăх Исетеркке ялĕнчи пĕр урама пĕр тăван Алексеевсен ятне панă. Ун чухнех Совет Союзĕн Геройĕ Григорий Алексеев çуралнă, ачалăхпа çамрăклăх çулĕсене пурăнса ирттернĕ çурт çинче асăну хăми уçнă. Урам

вĕçĕнче, сакăр ывăл амăшне, хĕрӳ чĕреллĕ колхоз ĕçченне Татьяна Николаевна Николаевăна асăнса палăк лартма чул хывнă.

«Паян пĕр тăван геройсен урамĕ тулли пурнăçпа пурăнать, — тесе çырать кĕнеке авторĕ Антип Николаев. — Урамăн икĕ енĕпе кермен пек хăтлă çуртсем лараççĕ. Укăлча хапхинчен тухсанах тырă пусси инçете-инçете тăсăлать. Урам тăрăх кăвак çӳçлĕ ватăсем — вăрçăпа ĕç ветеранĕсем, вĕсен ачисемпе мăнукĕсем — иртсе çӳреççĕ...

Пĕр тăван Алексеевсен урамĕнче пурнăç малалла пырать».[10]

Хĕрӳ чунпа, çивĕч те илемлĕ чĕлхепе çырнă А. Эсхель «Сарсков колхозник самолечĕ» очерка. Писатель ку произведенире Сарсков колхозник хăй укçипе туяннă самолета Совет Союзĕн Геройне Федот Орлова халалласа панине хавхаланса каласа кăтартать. Улатăр колхозникĕ фронта кайни, унти çар аэродромĕнче паттăр летчиксемпе тĕл пулса калаçни, хăй туяннă самолета хамăр республикăра çуралса ӳснĕ кăйкăра Федот Никитич Орлова парнеленине вулама питĕ интереслĕ. Пысăках мар очеркрах писатель маттур летчиксен, кашни кун сывлăша улăхса фашист самолечĕсене пере-пере антаракан совет «ăмăрт кайăкĕсен» сăнарĕсене кăмăллăн сăнласа парать.

Чăвашпа тутар колхозĕсен, хĕрарăмсемпе ачасен патриотла ĕçĕсене П. Хусанкай «Тăван çĕршыв», Л. Агаков «Фронтран таврăнсан» очерксенче туллин сăнласа панă.

А. Эсхелĕн «Шартлама сивĕре» (1942), «Çĕр илемĕ», «Пĕр каç» (1944) очеркĕсенчи тĕп геройсем те — тылри ĕçре çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тăвакан çынсем. Вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕн тĕллевне, общество умĕнчи тивĕçне питĕ аван ăнланаççĕ, çавăнпа нимĕнле йывăрлăхран та хăрамаççĕ.

«Шартлама сивĕре» очеркра, сăмахран, колхозниксем фронт заказĕпе ĕçлекен завод валли вăрман касса турттараççĕ. Ял çыннисем мĕн чухлĕ тухăçлăрах ĕçлеççĕ, фронта та тылран çавăн чухлĕ ытларах хаклă продукци

ăсанать. Апла тăк ĕç хăвăртлăхĕ, çынсем хăйсен тивĕçне лайăх ăнланни писательшĕн малти вырăна тухса тăрать. Вăрман касакансен хастарлăхĕ çак ӳкерчĕкрен аван курăнать.

Лариван мучи вăрмана хăйпе пĕрле Хветĕр ятлă ачана илсе пынă. Кĕлетки пăртак хавшакрах Хветĕрĕн, çавăнпа пурнăçра нумай курнă çын малтан кăшт иккĕленет те: пултарайĕ-ши? Лариван мучин урăх мел çук: унăн Хветĕрпех ĕçлемелле, ăна мĕн кирлине вĕрентмелле. Çак тĕллевпех вăл касма чи тĕреклĕ ватă юмана суйлать. Анчах Лариван мучи хăй ахалех иккĕленнине çийĕнчех чухласа илет: Хветĕр хăйне ӳссе çитнĕ çын пекех тыткалать. Ăнланать вăл: фронтра кунтинчен темиçе хут йывăртарах, хăрушăрах, çавăнпа уншăн тылра та, вăрман каснă çĕрте, фронтри пекех, хăйне ӳрĕк-сӳрĕк тытма юрамасть. Акă вăл мучипе пĕрле, писатель кăтартнă тăрăх, мĕнлерех ĕçлет: «Лариван мучипе пĕчĕк Хветĕр аллинчи пăчкă шыв пек юхса тăрать. Çук, шыв пек те мар, сĕрме купăсăн сĕркĕчи пек! (Еплерех хитре деталь!). Çав сĕркĕчĕ айĕнчен вара тĕлĕнмелле илемлĕ, чуна хăпартлантарса, çунатлантарса яракан кĕвĕ шăранса тухать. «Лариван мучи, яра пар! Хветĕр, çĕмĕрттер, çĕмĕрттер!» тесе юрланă пек туйăнать пăчкă. Чăн та, Лариван мучипе Хветĕр пăчки чи малтанхи юман çине пырса лартсанах çак кĕвĕ çине ӳкрĕç те, вĕсен иккĕшĕн те чунĕсем çĕкленсе кайрĕç».[11]

«Çĕр илемĕ» очеркра А. Эсхель геройсене хĕрӳ ĕçре сăнласа кăтартать. Хрисан мучие те, ачасене те. Çак пĕчĕк ушкăн очеркра пысăк ĕç тăвать — хирте иртен пуçласа каçчен ĕçлет. Хрисан мучи ачасене ăшĕнче шеллет те, анчах урăхла нимĕнле май та çук: тăшмана çĕнтерес тесен, хĕвелпе пĕрле ĕçе тăмалла, хĕвелпе пĕрле ĕçрен уйрăлмалла. Вăл пулас çĕнтерĕве шанать, çав çĕнтерӳшĕн юлашки вăйне те шеллемест, çав вăхăтрах хăй вырăнне тăма çамрăк ăрăва майĕпен хатĕрлет, ĕçре пиçĕхтерет. Колхоз хирĕнче кĕлте турттарса капан тума пулăшакан ачасене — Алюшпа Ванюша — вăл хĕрхенет те, мухтать те. Капан мĕнле тунинчен тырă епле упранасси килет. Лайăх ĕçлетĕн, лайăх тырă кĕлете

кĕртетĕн. Патшалăха та вара лайăх тырă ăсанать. Фронтри ашшĕсене те лайăх тырăран лайăх çăкăр пĕçерсе çитереççĕ. Лайăх çăкăртан кăмăл та çĕкленет. Тăшмана çĕнтерме çĕнĕ вăй хушать. Çамрăк Алюшпа, Ванюшпа Хрисан мучи ӳссе çитнĕ арçынсемпе каласа пекех калаçать, хăйĕн вăрăм пурнăçĕн опытне, ĕç ăсталăхне вĕсене пама тăрăшать.

Ку очеркра писатель ăрусен çыхăнăвне лайăх кăтартнă. Çав çыхăну мĕн чухлĕ çирĕпрех, тăшмана пирĕнпе çапăçма çавăн чухлĕ йывăртарах. Ăрусен çирĕплĕхĕ пулас çĕнтерӳ никĕсĕ. Хрисан мучи çакна аван пĕлет. Писатель çак шухăша очеркра уйрăмах уççăн палăртать: «Чăваш çĕршывĕ. Вăйпитти çынсем вăрçăра. Вĕсем пурте шăкăлтатса ĕçлес пулсан, пурнăç тата илемлĕрех те савăнăçлăрах пулĕччĕ, тесе шухăшлать ватă çын. «Сакăр çынна вăрçа ăсатрăм, виççĕшне çухатрăм. Çапах та этем тӳсет, ыррине кĕтет», — тет вăл хăйпе пĕрле хирте ĕçлекен шкул ачисене. Ватă колхозник тăлăх ачасене шеллесе, ĕмĕрхи çĕр ĕçĕпе хытăрканă аллисемпе хĕвел анăçнелле хыттăн юнаса фашистла Германие ылханать. Ун ылханĕ — халăх чĕринчен тăвăнса тухакан хаяр сăмахсем. Пĕт эс, ылханлă йăх. Эс пĕтсен сана çĕр те, шыв та ан йышăнтăр. Çĕрсе выртăр эс хăвăн карту хыçĕнче! Сана çуратса яраканни, санăн арăму, санăн ачупăчусен юнлă куççуль тăкса макăрмалла пулĕ-и? Ирсĕр фашист, виттĕр халăх ылханĕ, виттĕр сан сĕмсĕр пуçна!.. Ĕмĕр-ĕмĕр ылхан сана!.. Урнă йытă, урнă кашкăр вилĕмĕпе вил эсĕ. Эпĕ каламастăп çак сăмаха, мана çуратнă çĕр, пĕтĕм аслă çанталăк калать. Çĕр илемне пăсма килтĕн пулсан, эпир мар сана, санăн юнлă ĕçӳсемшĕн аслă çĕр, пирĕн аннемĕр тавăрать».[12]

«Пĕр каç» очеркра А. Эсхель çынсен вăхăтпа, хуйхăсуйхăпа, уйрăлупа тĕрĕсленнĕ пысăк та таса юратăвне кăтартать. Çамрăк та хитре хĕр Таня, колхоз бригадирĕнче ĕçлекенскер, хăйĕн савнă каччинчен çырусем илме чарăнать. Мĕн пулнă унăн савнă каччине Павăла? Нивушлĕ фашистсен тыткăнне лекнĕ? Е юлташĕсем, асăрхамасăр унăн виллине çапăçу хирĕнчех пăрахса хăварман-ши? Тен, аманнă? Тен, ун çинчен пĕлтерес мар

тесе çыру çырмасть? Пин тĕрлĕ шухăш явăнать хĕр пуçĕнче. Тепĕр чухне иккĕленӳ те çуралать хĕр чĕринче, анчах Таня унашкал шухăшсене яланах сирсе яма тăрăшать. Вăл Павăла манма пултараймасть, ăнах шанать, çырусем те килме пуçлĕç-ха, тет. Ку йывăр, çав тери йывăр, мĕншĕн тесен хĕре ялта темĕн калакан та пур — Павăл вилнĕ тесе ĕнентерме хăтланакансем те тупăнаççĕ. Анчах Таня йывăр шухăшсене парăнмасть. Пĕлет вăл, курать, вулать: çĕршер пин хĕрарăм, Таня пекех, хăйсен çывăх çыннисене тĕмсĕлсе кĕтсе пурăнать, çакă вăл вăрçă йывăрлăхĕсене чăтăмлăн тӳссе-ирттерме вăй парать. Кĕтме пĕлекенсем телейлĕ, теççĕ. Чăнах та, пĕр каçхине, хĕр уйрăмах хуйхăрса асапланнă вăхăтра, яла кĕтмен çĕртен Павăл таврăнать. Мĕншĕн çырайман, мĕншĕн çыхăну татăлнă икĕ çамрăк чĕре хушшинче? Павăл партизансен отрядĕнче пулнă-мĕн, суранланнă хыççăн ăна отпуск панă, кăштах канса вăй пухма тăван ялне янă.

Очеркра çамрăксен таса чун-чĕрине, вăйлă туйăмне, çирĕп туслăхне, тăшманпа пур çĕрте те хастарлăн кĕрешнине ĕненмелле çырса кăтартнă.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи чаплă Çĕнтерӳпе вĕçленчĕ. Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн, хамăр халăхăн телейлĕ пурнăçĕпе çутă пуласлăхĕшĕн унăн вăй-хăватне нимĕç фашисчĕсене хирĕç кĕрешме мобилизацилес тĕлĕшпе чăваш литератури те, пĕтĕм совет литератури пекех, калама çук пысăк ĕç турĕ, халăх ывăлĕ-хĕрĕсене тăшмана çапса аркатма хавхалантарса тăчĕ.

Хăйĕн хăюллă та ĕçчен халăхĕпе пĕрле чăваш совет литератури фашизма хирĕç кĕрешнĕ хаяр вăрçă çулне мухтавлăн утса тухни савăнтарать, малашне ăна татах та илемлĕрех, витĕмлĕрех, тарăнрах тăвас тесе, пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме хавхалантарать.

Эпир ку монографире ятарласа çар очеркĕсене пăхса тухрăмăр. Ку вăл çак пысăк ĕçĕн пуçламăшĕ çеç-ха. Çарпа патриотизм темипе çырнă илемлĕ очерксем чăваш литературинче, ытти жанрсемпе хайланă пысăк та анлă произведенисем пекех, чаплă Çĕнтерӳ хыççăнхи çул-

сенче те чыслă пулчĕç. Юлашки çулсенче чăваш писателĕсем, вăрçă çинчен çырнă чи лайăх произведенисене пухса, виçĕ кĕнеке кăларнă: «Вăрçă калавĕсем» (1958), «Халăх хăвачĕ» (1966) тата «Вăрçăра» (1968). Виççĕшĕнче те илемлĕ вăрçă очеркĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ.

Иртнĕ вăрçа асăнсан, çакна манмалла мар: пирĕн планета çинче унта та кунта тăнăç пурнăçа йывăрлатакан вучахсем чĕрĕлеççĕ. Çавăнпа та пирĕн яланах сыхă пулмалла, мир вăйĕсене куллен-кун çирĕплетмелле, çамрăк ăрăва патриотла воспитани парассишĕн ырмиканми тăрăшмалла. Ку тĕлĕшпе чăваш писателĕсем хăйсен пархатарлă тивĕçне яланах лайăх туйса тăрĕç, çарпа патриотизм темипе çĕнĕрен-çĕнĕ произведенисем, çав шутра илемлĕ очерксем те, çырĕç.

ЛИТЕРАТУРА

[1] Чăваш халăхĕ хăйĕн фронтри ывăлĕсем патне янă çыру // Чăваш коммуни. – 1943. – Июнь, 7.

[2] Дедушкин Н. Аслă Çĕнтерӳ çулĕпе / Н. Дедушкин. – Шупашкар, 1985. – 106 с.

[3] Çавăнтах. – 107-108 с.

[4] Çавăнтах. – 119 с.

[5] Дедушкин Н. Пăшалпа та, перопа та / Н. Дедушкин. – Шупашкар, 1970. – 134 с.

[6] Уяр Х. Çыру / Х. Уяр // Тăван Атăл. – 1944. – 18 №.

[7] Чăваш коммуни. – 1942. – Март, 30.

[8] Краснов Г.В. Аннесен сӳнми сăнарĕ / Г.В. Краснов // Хыпар. – 2004. – Март, 24.

[9] Çавăнтах.

[10] Николаев А. Паттăрсен çемйи / А. Николаев. – Шупашкар, 1979. – 68 с.

[11] Эсхель А. Пурнăç илемĕ. Калавсемпе очерксем / А. Ĕсхĕл. – Шупашкар, 1948. – 117 с.

[12] Эсхель А. Çĕр илемĕ / А. Ĕсхĕл. // Тăван Атăл. – 1946. – 20 №.

ТУПМАЛЛИ

Кӳртӗм 3
Пӗрремӗш пайӗ. Вӑрҫӑ умӗн 10
Иккӗмӗш пайӗ. Вӑрҫӑ ҫулӗсенче 93
Юратнӑ Тӑван ҫӗршывшӑн 93
Малти окопсенчен килнӗ очерксем 123
Геринг рейхсмаршал Шупашкар ҫине бомбӑсем пӑрахтарать 180
Европа халӑхӗ те ирӗке юратать 210
Виҫҫӗмӗш пайӗ. Тылра та фронтри пекех хӗрӳллӗ . 260

Научное издание

Краснов Георгий Васильевич

ОЧЕРКИ О ВОЙНЕ
В ЧУВАШСКОЙ ЛИТЕРАТУРЕ
Монография

Отв. за выпуск *Р.П. Прокопьева*
Компьютерная верстка *Е.Е. Фоминой*

Подписано в печать 05.04.07. Формат 60x84/16.
Гарнитура Times. Бумага газетная. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 16,27. Уч.-изд. л. 14,19. Тираж 200 экз. Заказ № 184.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15